5548448

С. П. ЮШКОВ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИН СИНТАКСИСНЕ ВĔРЕНТЕССИ

Методика пособийĕ

ЧАВАШГОСИЗДАТ — 1961

Национальная библиотека ЧР
4-005548
5548 чув
ч. з.

8/(чув)
1096

С. П. ЮШКОВ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИН СИНТАКСИСНЕ ВĔРЕНТЕССИ

Методика пособийĕ

*Чăваш АССР Çутĕç министерстви шкулсенче усă курма ырланă*

Чăваш АССР Государство издательстви
Шупашкар — 1961

2 10 08 ИЮН 2017
5548-чув
ЧУВАШСКАЯ
РЕС... СКАЯ
БИ... КА
им. ...

## УМСАМАХ

Чăваш чĕлхин синтаксисне, Н. И. Ашмарин профессорăн «Опыт исследования чувашского синтаксиса» кĕнекисĕр пуçне, ăслăлăх тĕлĕшпе тĕпчесе çырнă ĕçсем пирĕн çук-ха. Чăваш чĕлхи грамматикин синтаксисне шкулсенче вĕрентме пулăшакан кĕнекесем те çукпа пĕрех. Кунта эпир А. И. Васильевăн хутсăр предложени синтаксисне вĕренмелли хăнăхтарусен кĕнекине çеç асăнма пултаратпăр[1].

Çавсене шута илсе, эпĕ ятарласа кĕнеке çыртăм. Çырнă чух чăваш синтаксисĕн йывăртарах ыйтăвĕсем çинчен ăнлантарса пама тата учитель валли методикăлла кăтартусем пама тăрăшрăм.

Паллах, пĕр кĕнекере çак икĕ тĕллеве те кирлĕ таранах татса пама çук. Анчах чĕлхе ăслăлăхĕ тĕлĕшпе учитель тавракурăмне, унăн пĕлĕвне ӳстерме кирлине асра тытнипе чылай ыйтусем çинче чарăнса тăма тиврĕ.

Ку кĕнекен тĕп тĕллевĕ — VI—VIII-мĕш классенче чăваш чĕлхине вĕрентекен учительсене чăваш синтаксисне мĕнле меслетсемпе вĕрентмеллине кăтартса парасси.

Чăваш чĕлхин синтаксисĕнче те кăткăс ыйтусем йышлă. Уйрăмах фразеологипе сăмахсен çыхăнăвĕ, пăхăнуллă хутлă предложенисемпе предложенилле членсем çинчен вĕрентесси чылай йывăр ĕçсем пулса тăраççĕ.

Ку темăсене чĕлхе ăслăлăхĕнче те халиччен уççăн татса паман-ха. Çавна май шкулсенче ачасене вĕрентесси те çăмăлах мар. Çаксене шута илсе, кĕнекере чĕлхе тĕлĕ-

---

[1] А. И. Васильев. «Чăваш чĕлхине вĕренмелли упражненисем». Синтаксиспа пунктуаци. Чăвашгосиздат, 1959 ç.

шĕнчен татса паман хăшпĕр ыйтусене те хускатнă. Ку ыйтусене Н. И. Ашмаринпа Н. К. Дмитриев тата С. П. Горский профессорсем вĕрентнине шута илсе пăхса тухнă.

Методика пайĕнче чăваш чĕлхи программине кĕрекен кашни тема çинче уйрăммăн чарăнса тăнă, кашни çĕнĕ темăна мĕнле вĕрентмеллине ăнлантарса панă. Ăнлантарас çĕрте тĕрлĕрен майсем сĕннĕ, учитель вĕсенчен чи ăнăçлăраххине, çак урокшăн чи кирлине суйласа илме пултарать.

Ачасене вĕрентесси вăл творчествăллă ĕç пулса тăрать. Ăна хăйне май искусство теме пулать. Çавăнпа та учителĕн хăй ĕçĕ çине яланах творчествăллă пăхмалла. Тепĕр чухне эпир кĕнекере сĕннĕ меслетсем килĕшӳллĕ те пулмĕç. Ун пеккисем палăрсассăн учителĕн урăх меслетсем шыраса тупма пĕлмелле е хăйĕн сăнавлă ĕçĕсемпе усă курмалла.

Кĕнекере учитель ĕçне çăмăллатас шутпа вĕрентӳ ĕçĕнче усă курма чылай тĕслĕхсемпе кăтартусем пама тăрăшнă, пособисемпе мĕнле усă курмаллине те ăнлантарса хăварнă. Чылай темăсене вĕрентессине пуçламăш шкултах хăнăхтарнă ыйтусемпе тата фонетикăпа морфологине вĕрентнипе çыхăнтарса пынă.

Кашни темăна вĕреннĕ май грамматикăлла разбор тума тĕслĕхсем панă, ĕçе мĕнле йĕркепе туса ирттермеллине кăтартнă. Темăна вĕренсе пĕтернĕ хыççăн çирĕплетме тĕрлĕрен творчество ĕçĕсем сĕннĕ.

Грамматика вĕрентĕвне пурнăçпа, ĕçпе таччăн çыхăнтармаллине асра тытса, учителĕн вĕренекенсене ĕç хучĕсем, заметкăсем, статьясем, рецензи çырма хăнăхтарса пымалла. Кашни темăпах практика ĕçĕсем туса ирттермелле. Предложенисене тĕрĕс йĕркелемелли, илемлĕ вуламалли майсене те кăтартнă.

Вĕренекенсене чарăну паллисем лартма, предложенисене стиль тĕлĕшĕнчен тĕрĕс йĕркелеме хăнăхтаракан тĕслĕхсем те кĕнекере чылаях.

Ку кĕнекене VI—VIII-мĕш классенче тăван чĕлхепе ĕçлекен учительсем валли çырнă. Вăл Чăваш пединститучĕн филологи уйрăмĕнче вĕренекен студентсемшĕн те, ытти педагогикăпа культура шкулĕсенче вĕренекенсемшĕн те кирлĕ кĕнеке пулмалла.

Кĕнекене çĕнĕ программа тăрăх йĕркелесе çырма тăрăшнă, анчах та хăнăхтарусенчен чылайăшне, уйрăмах

килте туса килмелли çыру éçĕсен тексчĕсене, çĕнĕ учебник хатĕр мар пирки, халиччен усă куракан синтаксис учебникĕнчисенех туса пыма сĕннĕ.

Кĕнекене çырнă чухне тата сӳтсе явнă май кирлĕ сĕнӳсем парса пулăшнăшăн филологи наукисен докторне С. П. Горский профессора, Педагогика институтĕнчи чăваш чĕлхипе литература кафедрин членĕсене, Шупашкар районĕнчи чăваш чĕлхипе литература вĕрентекен учительсене, Çĕрпӳри çичĕ çул вĕренмелли шкулти З. Е. Егоров учителе чĕререн тав тăватăп.

Кĕнекепе мéнле усă курни çинчен тата асăрханă çитменлĕхсемпе унăн кăлтăкĕсем çинчен çак адреспа çырса пĕлтерме ыйтатăп: Шупашкар, К. Маркс урамĕ, 38 №-лĕ çурт, Чăваш педагогика институчĕ.

Чăвашгосиздат адресĕпе те çырма юрать: Шупашкар, Володарски урамĕ. Пичет çурчĕ, 42 пӳлĕм, Учебниксемпе вĕренӳ пособийĕсен редакцийĕ.

*Автор.*

## Кӗскетсе ҫырнӑ хушаматсем, сӑмахсем.

*Айз.*— Айзман Н. С.
*Алент.*— Алентей В. С.
*Алка* — Алка А. Е.
*Ашм.*— Ашмарин Н. И.
*Арт.*— Артемьев А. С.
*Аслан* — Аслан С. С
*Бурн.*— Бурнаевский В. Г.
*Ваҫ.*— Ваҫанкка Н. Т.
*В. Митта* — Митта В. Е.
*Ват. сӑм.*— Ваттисен сӑмахӗ
*Гриб.*— Грибоедов А. С.
*Гр. Кр.* Краснов Г. И.
*Дав.*— Давыдов В. И.
*Дж.*— Джамбул Джабаев
*Долг.*— Долгов В. А.
*Еҫх.*— Еҫхӗл А. А.
*Ив.*— Ивник И. Н.
*Илп.*— Илпек Н. Ф.
*Ис. М.*— Исаев Мӗтри
*Кӑлк.*— Кӑлкан А. Д.
*К. Ив.*— Иванов К. В.
*Ком. ял.*— «Коммунизм ялавӗ»
*Корол.*— Короленко В. Г.
*Кр. Асл.*— Краснов-Асли В. И.
*Лерм.*— Лермонтов М. Ю.
*М. Г.*— Максим Горький
*М. Дж.*— Муса Джалиль
*М. Фӗд.*— Фӗдоров М. Ф.
*М. Ухс.*— Ухсай М. Д.
*Мучи* — Иван Мучи
*Н. Остр.*— Островский Н. А.
*П.*— Пушкин А. С.
*Сад.*— Садай В. А.
*Санд.*— Александров Н. А.
*Ҫ. М.*— Ҫеҫпӗл Мишши.
*Труб.*— Трубина М. Н.
*Тукт.*— Тукташ И. С.
*Турх.*— Турхан К. С.
*Тург.*— Тургенев И. С.
*Уяр* — Уяр Ф. Е.
*Ф.*— Фадеев А. А.
*Харл.*— Харлампьев Г. Д.
*Х. Ҫ.*— Хумма Ҫеменӗ
*Хус.*— Хусанкай П. П.
*Чалд.*— Д.-Чалдун М. Н.
*Шав* — Шавли С. А.
*Шупуҫ*— Шупуҫҫынни Н. В.
*Элк.*— Элкер С. В.
*Я. Ухс.*— Ухсай Я. Г.

# ХУТСĂР ПРЕДЛОЖЕНИН СИНТАКСИСĔ

## ПРЕДЛОЖЕНИ ÇИНЧЕН ПĔТĔМЕШЛЕ АНЛАНТАРАССИ.

Вĕренекенсене чи малтан синтаксис сăмах мĕне пĕлтернине ăнлантармалла. Синтаксис — грек сăмахĕ, вăл çыхăнтарни, пĕрлештерни тенине пĕлтерет. Чăнах та, синтаксисра сăмахсем пĕр-пĕринпе шухăш тĕлĕшĕнчен мĕнле çыхăнса тăнине кăтартса параççĕ.

Тĕслĕхрен: *Йăмăк кĕнеке вулать* предложение пăхса тухар. Предложенири сăмахсене уйрăммăн илсен, калакан сана мĕн пĕлтерме шутланине ăнланаймастăн та. Виçĕ сăмаха кирлĕ вырăна лартса çыхăнтарсан, калаканăн шухăшне тӳрех ăнланса илетĕн.

Çапла вара синтаксис грамматикăн сăмахсен çыхăнăвне, предложенисен тĕсĕсене вĕрентекен пайĕ пулса тăрать.

Сăмахсен çыхăнăвĕ çинчен вĕрентесси çеç мар, предложенисен тĕсĕсене вĕрентесси те синтаксис курснех кĕрет. Сăмахран, учитель хутсăр предложенипе хутлă предложение илсе, танлаштарса кăтартма пултарать.

Тĕслĕх: *Хĕвел ăшшăн пăхрĕ.*

*Хĕвел ăшшăн пăхрĕ те, юр васкасах ирĕлме тытăнчĕ.*

*Хĕвел пăхрĕ пулин те, тулта ăшă мар.*

Малта панă тĕслĕхсене тишкернĕ май вĕренекенсем тĕрлĕ предложенисен тĕсĕсемпе пĕтĕмĕшле паллашаççĕ. Синтаксис предложенисен тĕсĕсем çинчен те вĕрентни ачасемшĕн паллă пулать.

Синтаксис терминпа паллаштарнă хыççăн «предложенисем» тема çине куçмалла, вĕсен пĕлтерĕшне уçса памалла, интонаци тĕлĕшĕнчен мĕнле предложенисем пуррине кăтартса хăвармалла.

Вĕренӳ материалне ăнлантарас çĕрте плакатпа схема кирлĕ вырăн йышăнаççĕ.

Плакат çинче çакăн пек тĕслĕхсем пулма пултараççĕ:

1. *Эпĕ Тăван çĕршыва юрататăп.*

2. *Вĕренни сая каймасть, теççĕ.*

3. *Тӳперен сарă хĕвел йăлтăртатса кулать. (Ив. Мучи.)*

4. *Çĕр пăсланма тытăнчĕ. Шурă тĕтре çаранпа шыв çине сарăлчĕ. Юханшыв та лăпланчĕ. (И. Гончаров.)*

Учитель умĕнче предложени пĕлтерĕшне уçса парас, вĕренекенсене тĕслĕхсем туптарас задача тăрать.

— Мĕне эпир предложени тетпĕр? — тесе ыйту памалла та çак ыйту çине ответ парас тĕлĕшпе ачасене ытларах ĕçлеттермелле.

Учитель калаçу меслечĕпе ачасене предложенин определенийĕпе паллаштарать. Пĕрремĕш предложение ачасене вулаттармалла, унăн содержанине ыйтмалла.

Учитель: Вĕренекенсем, пĕрремĕш предложенире мĕн çинчен каланă?

Вĕренекен: Калаканĕ Тăван çĕршыва юратни çинчен каланă.

Учитель: Çак предложение вуланă хыççăн калаканăн шухăшне ăнланмалла-и?

Вĕренекен: Ăнланмалла.

Учитель: Калакан хăй шухăшне вĕçленĕ-и е ăна каласа пĕтереймен?

Вĕренекен: Калакан хăй шухăшне татăклăнах каланă.

Учитель: Тĕрĕс. Çак предложенире калаканăн шухăшĕ вĕçленнĕ.

Çапла вара, ачасем, мĕне эпир предложени тетпĕр?

Вĕренекен С.: Вĕçленнĕ уйрăм шухăша пĕлтерекен сăмахсен майлашăвне предложени тетпĕр.

Определение учитель хăй туллин каласа парать.

**Вĕçленнĕ уйрăм шухăша пĕлтерекен сăмахсен майлашăвне е пĕр сăмаха предложени теççĕ.**

Кунта пĕр сăмахран тăракан предложенисен тĕслĕхĕсене те илмелле: *Тĕттĕмленет. Чĕтретет. Сивĕтет. Çуркунне. Савăнăçлă вăхăт.*

Вĕренекенсене тĕслĕхсем туптармалла. Предложенин определенине темиçе ачаран ыйтса çирĕплетмелле.

Çав сехетрех интонаци енĕпе предложенисем висĕ тĕрлĕ пулни çинчен каламалла.

Темăна ăнлантарма çакăн пек предложенисем илме юрать.

1. *Вĕренекенсем шкул пахчинче ĕçлеççĕ.*

2. *Тата ăçта пур-ши кун пек тивлетлĕ кĕтес? (Тукт.)*

3. *Çут тĕнчере йывăр хурлăх кам ытларах тӳснĕ? (Ç. М.)*

4. *Ирĕклĕ кун-çул тумашкăн тăрăр пурте харăс! (Ç. М.)*

5. *Сывă пултăр Тăван çĕршыв!*

Кашни предложени çинче чарăнса тăнă май подлежащипе сказуемăйне туптармалла. Ун хыççăн кашни предложение каланă чух сасă епле аталанса пынине тата хăш сăмах çинче чи çӳлти пусăмра пулнине паллă тумалла.

Калуллă предложенире сасă логика ударенинче тăракан сăмах çинче чи çӳле хăпарса çитет те малалла майĕпен анса пырать, предложени вĕçĕнче пачах анса ларать.

Калуллă предложенин интонацине схемăпа кăтартса памалла.

*Вĕренекенсем шкул пахчинче ĕçлеççĕ.*

Учитель схемăна доска çине çырса кăтартать. Малалла ыйтуллă предложени çине куçаççĕ. Ыйтуллă предложенисенче интонаци ыйту сăмахĕсемпе ыйту татăкĕсем çинче ытларах пулать, сасă та çав сăмахсене каланă чух майĕпен анса пырать, предложени вĕçĕнче пачах анса пырать. Ыйтуллă предложенисен схемине туса памалла.

*Çут тĕнчере йывăр хурлăх кам ытларах тӳснĕ?*

*Тата ăçта пур-ши кун пек тивлетлĕ кĕтес? (Тукт.)*

Ыйту сăмахĕсем: *кам? мĕн? хăçан? ăçта? епле? мĕнле? мĕскер? миçе? хăшĕ?*

Ыйту татăкĕсем: *-и, -ши, -шим, -им.*

**Вăйлăн хумханса, тĕлĕнсе, хăраса, çиленсе, савăнса каланине пĕлтерекен предложение кăшкăруллă предложени теççĕ.**

Кăшкăруллă предложенисенче логикăлла ударени кăшкăру сăмахĕсем (междометисемпе хушу наклоненийĕнчи глагол) çинче пулать, вĕсене каланă чух сасă çĕкленет. Учитель кăшкăруллă предложени схемине туса кăтартать.

*Эх, илемлĕ-çке Шупашкар!*

Материала ăнлантарнă май хушу наклоненийĕпе

междометисем çинчен аса илмелле, вĕренекенсене тĕслĕхсем туптармалла, интонаци схемине тутармалла.

Вĕреннине çирĕплетнĕ чух предложенисене интонаци тăрăх уйăрса илме тата интонацин схемине тума çакăн пек тĕслĕхсем памалла.

1. Ачасем пурте шăп пулчĕç. Павлуш вут çине пĕр ывăç типĕ туратсем пăрахрĕ. (Тург.)
2. Ман хĕр пекки камăн пур?
Кама пӳрнĕ ун пек хĕр?
Пушмак çук-и хĕрĕмĕн?
Çӳрет-и вăл тенкĕсĕр? (К. Ив.)
3. Çеçенхирсем, итлĕр акын Джамбула! (Д. Дж.)
4. Пире пăхан Пихампар, ху йыттуна хăвах чар! (М. Фед.)
5. Шăвик! шăхăрать çын пекех... (М. Фед.)

Киле валли ĕç: 1-мĕш параграфа вуласа ăнланмалла, 4-мĕш хăнăхтарăва туса килмелле.

## ЛОГИКА УДАРЕНИЙĔ

Каланă чухне предложенири сăмахсене пĕр пек сасапа, пĕр пек пусăмпа каламастăн. Калаканĕ предложенири пĕр-пĕр сăмаха ыттисенчен вăйлăрах сасăпа, пусăм туса калать. Сăмаха уйăрса, палăртса, кирлĕ пусăм туса каласси мĕнрен килет-ши?

Вăл калаканăн паллă шухăшĕпе çыхăннă. Çавна калаканĕ ытти сăмахсенчен палăртса, асра тытмалла калама тăрăшать. Ун пек калани итлекене ăнланма çăмăллатать, калаканăн тĕп шухăшне часах тĕшмĕртме пулăшать.

Калаканăн тĕп шухăшĕпе çыхăннă пусăмри сăмах предложенири ытти сăмахсенчен эмоци тĕлĕшĕпе те витĕмлĕ палăрать. Пусăмри сăмаха каланă чух тĕрлĕрен кăмăл-туйăмпа калани пуринчен ытла сисĕнет. Калаканĕ çак сăмаха мĕнле кăмăл-туйăмпа калать: ăна çиленсе е савăнса, кĕвĕçсе е пăшăрханса, тăрăхласа е тĕртсе, хĕрхенсе е вăлтса, вĕрентсе е тиркесе — çакна эпир лайăх туйса илетпĕр.

Логика ударенине калаканăн тĕп шухăшĕпе таччăн çыхăннă сăмах çинче тăваççĕ. Шухăшне кура, предложенин кашни сăмахех логика ударенинче пулма пултарать. Анчах предложенири пĕр шухăша каланă чухне темиçе логика ударенийĕ пулмасть. Хутлă предложенисенче кашни хутсăр предложениех логика ударенийĕ йышăнма

пултараççĕ. Логика ударенийĕн вырăнĕ предложени тĕсĕнчен тата ăна мĕнле интонаципе каланинчен килет.

Қалуллă предложенире логика ударенийĕ палăртса каланă сăмах çинче пулать.

*Петĕр шкулта тăрăшса вĕренет.*

Çак предложение каланă чух логика ударенине кирек хăш сăмах çине те тума пулать. Қам тăрăшса вĕреннине кăтартас тесе, *Петĕр* сăмаха палăртса каламалла.

*Пе́тĕр* шкулта тăрăшса вĕренет.

Вĕреннин вырăнне пĕлтернĕ чухне *шкулта* сăмах çине логика ударенийĕ тумалла.

Петĕр *шкулта́* тăрăшса вĕренет.

Мĕнле вĕреннине пĕлтернĕ чухне *тăрăшса́* сăмаха палăртса каламалла.

Петĕр шкулта *тăрăшса* вĕренет.

Вĕренекен Петĕрĕн ĕçне, вàл мĕн тунине палăртас пулсан, *вĕренет* глагол-сказуемăй çине логика ударенийĕ тумалла.

Қалуллă предложенири логика ударенийĕн пулăвне вĕренекенсене çак йĕркепе кăтартмалла.

Малтанах, ачасене логика ударенийĕпе паллаштариччен, грамматика ударенийĕ çинчен аса илмелле.

Вĕренекенсене çакăн пек ыйтусем памалла.

1. Мĕн вăл ударени?

2. Ударени хăçан сăмахăн кайри сыпăкĕ çинче пулать?

3. Ударени сăмахăн малти сыпăкĕ çинче хăçан пулать?

4. Сăмахăн юлашки сыпăкĕнче *-ă, -ĕ* пулсан, ударени хăш сыпăк çине ӳкет?

5. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче ударени мĕнле пулать?

Çак ыйтусем тăрăх калаçса иртернĕ хыççăн учитель ударени çинчен кĕскен пĕтĕмлетет те логика ударенийĕ çинчен схемăпа ăнлантарса парать.

Қалуллă предложенири логика ударенийĕ вырăнĕпе, пулăвĕпе паллаштарнă хыççăн вăл вĕренекенсене тĕслĕхсем туптарать, логика ударенийĕ хăш сăмахсем çинче пулнине ыйтать.

Малалла логика ударенийĕ ыйтуллă, кăшкăруллă предложенисенче мĕнле пулни çинче чарăнса тăмалла. Ачасене ăнланма çăмăлтарах пултăр тесе, схемăпа, таб-

лицăпа усă курмалла. Ăна валли темиçе тĕслĕх илсе памалла.

1. Аçта пур-ши кун пек тивлетлĕ кĕтес? (*Тукт.*) 2. Қам килес ăрушăн çул уçрĕ чи телейлĕ, хĕвеллĕ куна? — Ленин! (*Тукт.*) 3. Сывă пултăр ĕçпеле çĕнтерӳ! (*Тукт.*) 4. Пурăнмашкăн тулăх пултăр советсенĕн çĕрĕнче! (*Тукт.*) 5 Ĕçпе çеç этем хитре çакă çутă тĕнчере! (*Санд.*)

Малтан учитель ыйту предложенийĕнчи логика ударенийĕ пирки ăнлантарса парать. Ыйту предложенийĕсенче логика ударенийĕ ыйту сăмахĕсемпе, ыйту татăкĕпе пĕрле тăракан сăмахсенче пулать, вĕсене каланă чух сасă чи çӳлти пусăма çĕкленет.

Паллах, учитель çак икĕ ыйту предложенири логика ударенийĕ хăш сăмахсем çинче пулнине малтанах хăй каламасть, вĕренекенсене тупма хушать. Ачасем пăтраштараççĕ пулсан çеç хăй каласа парать.

Пĕрремĕш предложенири логика ударенийĕ *пур-ши* сăмах çинче пулать. *Пур-ши* сăмах ыйту татăкĕпе çыхăннă. Қалаканĕ çак сăмаха нимрен ытла палăртса ыйтать; ун пек паха кĕтес урăх пурри çинчен пĕлес тĕллевпе çеç мар, ун пек кĕтес урăх ниçта та çуккине палăртасшăн калать вăл.

Учитель ыйту предложенири логика ударенийĕпе интонаци мĕнле пулса пынине кăтартас тĕллевпе схема туса парать.

↓
пур-ши

Аçта кун пек

тивлетлĕ

кĕтес?

Иккĕмĕш ыйтуллă предложение ăнлантарнă чух çакна асăрхаттармалла: логика ударенийĕ *кам* ыйту местоименийĕн *чи телейлĕ, хĕвеллĕ куна* сăмах майлашăвĕ çине ӳкет. Çапла май ку предложение каланă чух сасă тӳрех çӳлти пусăмран пуçланать те *уçрĕ* глагол патне çитиччен анса пырать, малалла *чи телейлĕ, хĕвеллĕ* паллă ячĕсене логика ударенийĕ туса калать. Қалаканĕ çав сăмахсене палăртарах ыйтать. Кунта Тукташ риторикăлла ыйту парать те ăна хăех ответлет: *Ленин!*

↓ Кам ↓ лейлĕ, ↓ хĕвеллĕ

килес чи те куна?

ăрушăн

çул уçрĕ

Малалла кăшкăрулла предложенири логика ударенийĕ çине куçмалла. Кăшкăрулла предложенире логика ударенийĕ кăшкăру сăмахĕсем — ытларах хушу наклоненири глаголсем çинче пулать. Ку сăмахсене калакан вăйлă сасăпа хыттăн палăртса калать. Кăшкăрулла предложенире глагол пулмасан, логика ударенийĕ ытти палăртса каланă, шухăшпа **таччăн çыхăннă сăмахсем** çине ӳкет.

Учитель вĕренекенсенчен кăшкăрулла предложенисенче логика ударенийĕ ăçта пулни çинчен ыйтать, тупма хушать. Унтан хăй ăнлантарса парать, çавăн пекех схема туса парать. *Сывă пултăр ĕçпеле çĕнтерӳ!* предложение илер. Кунта логика ударенийĕ — *сывă пултăр* сăмахсем çинче пулать. Калаканĕ ĕçпеле çĕнтерĕве яланах ырласа калать, çавăнпа та *пултăр* глагола пуринчен ытла палăртса, пысăк пусăм туса калать. Предложенири сасăсен вырăнне схемăпа кăтартма пулать.

↓ Сывă *пӳл-*

*тăр*

*ĕçпеле çĕнтерӳ!*

Çак меслетпех ытти предложенисене те пăхса тухаççĕ, логика ударенине палăртса хăвараççĕ, доска çине схема тăваççĕ.

Пиллĕкмĕш предложение ăнлантарнă май учитель логика ударенийĕ хăш сăмах çинче пулнине хăй кăтартса хăварать. Кунта логика ударенийĕ — *ĕçпе çеç* сăмахсенче пулать, анчах сасă *хитре* сăмах çинче те çĕкленет, ăна та палăртсарах каламалла.

Хушу предложенийĕнче логика ударенийĕ ытларах хушу сăмахсем çинче пулать.

Тĕслĕхсем илсе пăхар.

*Кине кáлăр-ха: алшăлли илсе килтĕр!*

*Юрать, ачам, пĕрле кайăпăр, эсĕ ялан Синюкпа пĕрле çӳретĕн иккен те, шкул кĕнеки çине те хушаматăрсене юнашар çыртарăпăр. Тăрăшса вĕренĕр вара.*

*Ну, Иванов, шутласа кăтáрт-ха.*

Хушу предложенийĕсенче калаканĕ теприне ĕç тума ыйтать, хушать, хавхалантарать. Ун пек предложени ытларах 2-мĕш сăпатри хушу наклоненинчи глагол форминчен пулать. Паллах, хушу предложенийĕ инфинитив, причасти, деепричасти, татăксенче те пулма пултарать.

Сирĕн паян ĕçе **тухмаллáччĕ.** *(Ĕçх.)* Каламалла **марччĕ.** Ну, юрĕ, **кĕр** çакăнтан! Эпĕ халех, эсĕ **çавăнтах** тăр-ха!— тесе хăварчĕ Валя. Çитĕ сире *тавлашмá!*— терĕ çав хушăрах Ванюк.

Хăвăртрах, **хăвăртрáх!**

**Атьăр** урама!

**Чим-ха!**— терĕ сасартăк Алĕша. (*Д.-Чалд.*)

Логика ударенийĕ çинчен вĕреннине учитель вĕренекенсене пĕтĕмлеттерет те к и л е ĕç парать: 25 § вуласа ăнланмалла, 66-мĕш хăнăхтарăва килте туса килмелле.

Тепĕр сехетĕнче предложенири логика ударенийĕ темăпа творчество ĕçĕ туса ирттерет.

Вĕренекенсен умĕнчи ĕç — логика ударенине схемăпа туса кăтартасси.

Учитель творчество ĕçĕн текстне «Тăван литература» хрестоматирен е пĕр-пĕр илемлĕ литература кĕнекинчен илме пултарать. Творчество ĕçĕ валли пысăк текстах кирлĕ мар, анчах суйласа илнĕ предложенире пур членсем те, логика ударенийĕ валли пур тĕрлĕ хутсăр предложенисем те пулччăр. Т ĕ с л ĕ х:

Унтанпа ĕнтĕ темиçе çул иртсе кайрĕ. Пĕрре манăн пионерсен лагерĕнче пулмалла пулчĕ. Эпир лутра хăвасем хушшипе утса пыратпăр.

— Аха, лекрĕн-и: шкула валли епле чаплă парне тытрăм,— тет савăнăçлăн хăва хушшинчен тухакан Галя.

Ун аллинчи çĕлен тыткăнран çăлăнасшăн мĕнпур вăйĕпе авкаланать. Ачасем пурте çак шиклентерекен чĕрчуна ачашласшăн.

Лагере çитиччен çĕлентен хăраканни никам та пулмарĕ. Лагерьте кухньăра ĕçлекен хĕрарăмсем çĕлентен шикленеççĕ. Ачасем çĕлене кĕленче кăкшăм ăшне хучĕç. Хĕрарăмсем вара Галя патне пуçтарăнчĕç. Вĕсем Галя хăюлăхĕнчен шалт тĕлĕнсе кайрĕç.

— Мĕнле эсĕ сăхасран хăрамастăн?

— Çĕленсем сăхмаççĕ. Хура çĕлен çеç сăхма пултарать. Хурăн пуçлă çĕлентен эпир хăрамастпăр. Вăл тивмест. Эпир ăна çутçанталăк çинчен вĕреннĕ чухне пĕлнĕ,— хĕрарăмсене ăнлантарать Галя. Хĕрарăмсем ĕненмеççĕ.

Галя çĕлене кăкшăмран илчĕ те мăйĕ тавра явăнтарчĕ.

— Пыр та калаç хальхи ача-пăчапа!

Кайран Галя çĕлене шкулти чĕрчунсен кĕтесси валли илсе кайрĕ (В. Андреева «Галя парни».)

Текстра 132 сăмах, 22 предложени. Паллах, текста пĕтĕмпе çыртарма кирлĕ мар, учитель, вĕренекенсен пĕлĕвне шута илсе, хăшпĕр предложенисене сиктерсе хăварать, тĕрлĕ тĕслĕ прелложенисене çыртарма тăрăшать.

Çак текст тăрăх та вĕренекенсен логика ударенине лартма хăнăхмалла.

ОДЕССА ÇЫРАНĔНЧЕ.

Сарлака тинĕс çийĕн капмар хумсем йăваннă. Броненосец тăрринче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшнĕ. Çырана çывхарнă броненосецпа миноносец Одессăри мĕнпур халăха хăйсем еннелле пăхтарнă.

Хăраса ӳкнĕ буржуази хуларан çĕршерĕн тухса тарнă. Хĕрлĕ ялав пĕрисемшĕн хăрушлăх, теприсемшĕн шанчăклă ĕмĕт хускатнă.

Броненосец çинчи Левентей матросăн чĕрн иксе тухас пек тапнă. Вăл хăйсене хулари ĕççыннисем мухтавлăн кĕтсе илнишĕн хĕпĕртенĕ.

— Рабочисем пире саламлаççĕ!— тенĕ матроссенчен тахăшĕ.

— Портри рабочисен делегацийĕ килнĕ!

— Хулари ĕççыннисем кучченеçсем парасшăн... Мĕн тумалла?— илтĕннĕ Атамасовăн хулăн сасси.

— Юлташсем, шăпланăр! Комисси председателĕ каласа парать. Итлĕр!

Левентей тăнă çĕре Алексеев пырса тухнă та çавăнтах унăн пăлханчăк сасси янăраса кайнă.

(«Потĕмкин» геройĕ» кĕнекерен)

**АНСĂР ТАТА АНЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.**

Вĕренекенсем предложенин тĕп членĕсемпе пуçламăш шкултах кĕскен паллашаççĕ, подлежащипе сказуемăя тупма вĕренеççĕ. Предложенири ытти сăмахсене кĕçĕн членсем тенине те пĕлеççĕ.

Ансăр тата анлă предложени çинчен вĕрентиччен предложенири тĕп членсемпе кĕçĕн членсем çинчен аса илмелле, вĕренекенсене тĕслĕхсем туптармалла. Унтан мĕнле предложенисене ансăр, мĕнлисене анлă предложени тенине, вĕсен пĕлтерĕшне уçса памалла. Ăна вĕренекенсем тупса панă тĕслĕхсемпех ăнлантарса пама пулать.

*Ачасем ĕçлеççĕ.*

Ку предложени тĕп членĕсенчен кăна тăрать: *ачасем* — подлежащи, *ĕçлеççĕ*— сказуемăй. Анлăш енчен илсен, çакна мĕнле предложени теме пулать?

— Вăл ансăр предложени.

Мĕнле предложенисене ансăр предложенисем теççĕ?

**— Тĕп членсенчен, подлежащипе сказуемăйран, çеç тăракан предложенисене ансăр предложенисем теççĕ.**

Выводне вĕренекенсене тутармалла.

Вĕренекенсене тĕслĕхсем туптармалла е учителĕн хăйĕн плакатри тĕслĕхсенчен хутсăр предложенисене уйăрса илме вĕрентмелле.

Ун хыççăн малтан илнĕ ансăр хутсăр предложенирен анлă хутсăр предложени туса кăтартмалла, ку ĕçе вĕренекенсене хăйсене те тимлĕн явăçтармалла.

*Пирĕн шкулти ачасем мастерскойра тăрăшса ĕçлеççĕ.*

Тĕп членсем çумне мĕнле членсем хушрăмăр-ха? — Кĕçĕн членсем: *пирĕн шкулти* — определени, *мастерскойра* — ăçта?— вырăн обстоятельстви; мĕнле ĕçлеççĕ? — *тăрăшса* — мĕнлелĕх обстоятельстви пулать.

Тĕп членсемпе кĕçĕн членсенчен тăракан предложение вара мĕнле предложенисем темелле-ши?

— Анлă предложени. Тĕп членсемсĕр пуçне пĕр-пĕр кĕçĕн член пулсанах предложени анлă предложенисен шутне кĕрет. Сăмахсем хушса тунă предложенире определени те, дополнени те, обстоятельство та пур — ку анлă предложени пулать.

Учитель вĕренекенсене килти тетрадьсем çине çакăн йышши тĕслĕхсем çыртарать, вĕсем мĕнле предложени пулнине (анлипе ансăррине) ăнлантарса парать.

Т ĕ с л ĕ х с е м. 1. Шкулсем ĕçе тытăнчĕç. Кĕркунне çитрĕ. Вăрман саралчĕ. Çанталăк сивĕте пуçларĕ. Вĕренекенсем шкула çӳреççĕ Уй-хирсем пушанчĕç. Колхозниксемваскасах çĕрулми кăлараççĕ Уй-хир ĕçĕ пуçтарăнсах пырать. Колхоз пӳлми ылтăн тĕшĕллĕ тырăпа тулать. Чун-чĕре савăнать.

Унтан çакăн пек ĕç памалла: вĕренекенсен ансăр предложенисенчен анлă предложенисем туса çырмалла. Ку практика ĕçĕ пулать.

Пӳлĕм. Сĕтел ларать. Кĕнеке выртать. Хĕрача вулать. Шăллĕ пырать. Шăллĕ ыйтать. Аппăшĕ каласа парать. Вĕсем туслă. Иккĕшĕ те савăнаççĕ.

Вӗренекенсем анлӑ предложенисем туса ҫырма пӗлеҫҫӗ пулсан, вӗсене киле ӗҫ парса яма кирлӗ мар. Анланнӑ темӑпах киле ӗҫ парса яни вӗренекене ытти кирлӗ ӗҫсене тума чӑрмантарать. Учителӗн киле ӗҫ хӑҫан пама кирлипе кирлӗ маррине яланах тӗплӗн шухӑшласа пӑхас пулать. Киле ӗҫ парассине малалла сахаллатса, чакарса пымалла. Вӗреннӗ темӑна класрах, хӑнӑхтару ӗҫӗсемпе грамматика разборӗ туса, ҫирӗплетсе пыма тӑрӑшас пулать.

## ПРЕДЛОЖЕНИРИ СӐМАХСЕН ҪЫХӐНАВӖ

Темӑна вӗрентиччен сӑпатсемпе хисепсем ҫинчен аса илмелле. Вӑл подлежащипе сказуемӑй согласовани йӗркипе ҫыхӑннине вӗрентме кирлӗ пулать. Унтан япала ячӗн, паллӑ ячӗн, хисеп ячӗн, местоименисен, глаголӑн, наречин ыйтӑвӗсене тепӗр хут аса илмелле. (Вӗсем предложени членӗсем ҫинчен вӗрентнӗ чух кирлӗ пулаҫҫӗ.)

Предложенири сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ ҫинчен индукци, е дедукци меслечӗпе те вӗрентме пулать. Дедукци меслечӗпе ӗҫлес пулсан, вӗренекенсене предложенири сӑмахсем виҫӗ ҫыхӑнура тӑнине тӳрех ӑнлантарса памалла. Ӑнлантарнӑ чух йышӑннӑ паллӑсем те, схема та, таблица та пулма пултарать.

Йышӑннӑ паллӑсем: согласовани ҫыхӑнӑвне икӗ пуҫе те сӑналлӑ тӳрӗ йӗр ←→, управлени ҫыхӑнӑвне, пӗр пуҫӗ сӑналлӑ тӳрӗ йӗр →, примыкани ҫыхӑнӑвне татӑк йӗр - - - - - кӑтартса парать.

Ку темӑна индукци меслечӗпе вӗрентме сӗнетпӗр.

Индукци меслечӗпе вӗрентнӗ чух малтан пысӑк мар предложени илмелле те подлежащипе сказуемӑй пӗрпӗринпе килӗшсе тӑрса ҫыхӑннине уҫса памалла. Т ӗ с л ӗ х р е н: *Йывӑҫ ӳсет. Ачасем колхозра ӗҫлеҫҫӗ.*

Предложенири подлежащи хӑш сӑпатра, хӑш хисепре пулать, сказуемӑй та ҫав сӑпатра, ҫав хисепре пулать.

**Пӑхӑнакан сӑмах пӑхӑнтаракан сӑмахпа хисеп тата сӑпат енчен килӗшсе ҫыхӑннине согласовани теҫҫӗ.**

*Йывӑҫ* пӑхӑнтаракан сӑмах *ӳсет* пӑхӑнакан сӑмаха пӗрреллӗ хисепре, виҫҫӗмӗш сӑпатра туса килӗшсе ҫыхӑнса тӑрать.

*Ачасем ӗҫлеҫҫӗ* сӑмахсем те ҫав ҫыхӑнурах.

Учитель ҫак ҫыхӑнӑва йышӑннӑ паллӑпа туса кӑтартать.

Ачасем ←→ ӗҫлеҫҫӗ.

Чăваш чĕлхинче вĕçленекен пуплев пайĕсем сăпатланакан формăри глаголпа тăнă чух согласовани йĕркипе çыхăнаççĕ. Ытти пуплев пайĕсем пĕр-пĕринпе согласовани йĕркипе çыхăнмаççĕ.

Сăмахсем согласовани йĕркипе çыхăннă чухне пăхăнакан сăмах пăхăнтаракан сăмах улшăннă май улшăнса пырать.

*Йывăç ÿсет. Йывăçсем ÿсеççĕ.*

*Эпĕ ĕçлетĕп. Эсир ĕçлетĕр. Вăл ĕçлет т. ыт. те.*

Согласовани çыхăнăвĕ çинчен вĕрентнĕ чухне подлежащипе сказуемăй мĕнле сăпатра, мĕнле хисепре пулнине яланах танлаштарса кăтартса памалла. Кунта подлежащипе сказуемăй хисеп тата сăпат енчен килĕшсе тăнине яланах паллă тумалла.

Управлени çыхăнăвĕ çинчен вĕрентмелли тĕслĕхсем:

*Колхоз пиччене пулăшрĕ. Атте заводра ĕçлет.*

Вĕренекенсем кашни тĕслĕхрен подлежащипе сказуемăя тупаççĕ, вĕсем мĕнле çыхăнура тăнине калаççĕ.

Пĕрремĕш предложенири *пиччене* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулнине, унăн ыйтăвне тата вăл хăш сăмахпа çыхăннине палăртаççĕ.

Учитель: *Пиччене* япала ячĕ пару падежĕнче тăрасси мĕнрен килнĕ-ши? Кам пĕлет?

Вĕренекен: Предложенири сказуемăй *пулăшрĕ* глагол *пиччене* япала ятне пару падежĕнче пăхăнтарса тытса тăрать. *Пичче* япала ячĕ пару падежĕнче пуласси пĕтĕмпех *пулăшрĕ* глаголран килнĕ.

Учитель: Апла пулсан, *пиччене* япала ячĕ *пулăшрĕ* глаголпа мĕнле çыхăнура тăрать?

Вĕренекен: Пăхăнтаракан çыхăнура, ăна управлени çыхăнăвĕ теççĕ.

Учитель вĕренекен каланипе килĕшет, управлени çыхăнăвĕн определенине хăй каласа ăнлантарать, схема туса кăтартать.

Колхоз ←——→ пулăшрĕ.
↑
пиччене

Глагол тата глагол тĕпĕнчен тăракан улшăнман сăмахсем, предложенири вĕçленекен сăмахсене ят мар падежĕнче лартса, управлени йĕркипе çыхăнтараççĕ.

Хыççӑмахӗсем те управленипе çыхӑнаççӗ, вӗсене хыççӑмахлӑ управлени теççӗ.

Учитель картинӑсемпе усӑ курма пултарать. Картинӑсем айне çакӑн пек çырнӑ:

1. *Кӗнеке сӗтел çинче выртать.*

2. *Кушак сӗтел айӗнче ларать.*

3. *Ял вӗçӗнче колхоз клубӗ ларать.*

4. *Учитель мана хирӗç утса пырать.*

Пӑхӑнтаракан (тытса тӑракан) сӑмах хӑй формине улӑштарсан та, тытӑнса тӑракан сӑмахӑн форми (кӳлепи) улшӑнмасть, çав падежрах юлать.

Уйрӑм тӗслӗхсемпе çирӗплетсе памалла.

*Эпӗ пахчара ӗçлетӗп.*
*Эсӗ пахчара ӗçлетӗн.*
*Вӑл пахчара ӗçлет.*

*Эпир пахчара ӗçлетпӗр.*
*Эсир пахчара ӗçлетӗр.*
*Вӗсем пахчара ӗçлеççӗ.*

Ачасене те çавӑн пек тӗслӗхсем туптармалла.

Юлашкинчен вӗренекенсене примыкани çыхӑнӑвӗпе паллаштармалла. Примыкани çыхӑнӑвӗ çинчен ачасем йывӑртарах ӑнланаççӗ. Вӗренекенсене ӑнлантарма çакӑн пек тӗслӗхсем памалла.

*Кӗркуннехи çанталӑк ӑшӑ тӑчӗ. Çамрӑк хӗрача фермӑра тӑрӑшса ӗçлет.*

Предложенисене пӑхса тухнӑ май вӗренекенсем сӑмахсен çыхӑнӑвӗ çинчен те чарӑнса тӑраççӗ, анчах хӑшпӗр сӑмахсем мӗнле çыхӑнура тӑнине калама пӗлмеççӗ-ха.

Пӗрремӗш предложенире *кӗркуннехи* сӑмах *çанталӑк* сӑмахпа, *ӑшӑ — тӑчӗ* сӑмахпа мӗнле çыхӑнура тӑни çинчен каласа памалла. Малта асӑннӑ сӑмахсем пӗр-пӗринпе хисеппе сӑпат енчен килӗшсе те, пӗр сӑмахӗ теприне тытса тӑрса та çыхӑнмаççӗ. Кунта пачах урӑхла çыхӑну: пӑхӑнакан сӑмах пӑхӑнтаракан (тытса тӑракан) сӑмахпа шухӑш тӑрӑх çеç çыхӑнса тӑрать, çавӑн пек çыхӑнӑва **примыкани çыхӑнӑвӗ** теççӗ.

Примыкани йӗркипе паллӑ ячӗпе япала ячӗ, хисеп ячӗпе япала ячӗ, хӑшпӗр местоименисемпе япала ячӗ, наречи, деепричасти, инфинитив глаголсемпе çыхӑнса тӑраççӗ.

**Пуплев пайĕсем примыканипе çыхăннине кăтартакан таблица.**

| Мĕнле пуплев пайĕсем примыканипе çыхăнаççĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Паллă ячĕпе япала ячĕ | Эпир телейлĕ **вăхăтра** пурăнатпăр. |
| Хисеп ячĕпе япала ячĕ | Пирĕн класра **вăтăр пилĕк пионер.** |
| Местоименипе япала ячĕ | **Çакă çутă тĕнчере вăйли çук** та этемрен. (К. Ив.) |
| Причастипе япала ячĕ | **Ĕçлекен çын** выçă вилмест. (Ват. сăм.) |
| Инфинитивпа глагол | Эпĕ завода **ĕçлеме çӳретĕп.** |
| Деепричастипе глагол | Вĕренекен пур ĕçе те **юратса тăвать.** |
| Наречипе глагол | Анне пирĕнпе **ăшшăн калаçать.** |
| Междометипе глагол | Каçхи çиçĕм **йăлтăрт! турĕ.** |
| Еверлев сăмахĕпе глагол | Тӳпери хĕвел **йăл-йăл кулать.** |

Таблица примыкани çыхăнăвĕ çинчен вĕреннине çирĕплетме пулăшать, унпа усă курма тăрăшмалла.

Темăна вĕреннĕ май тата çакăн пек схема та пама пулать.



Темăна вĕренсе пĕтернĕ хыççăн шкул ачисене предложенисем памалла та сăмахсен çыхăнăвĕн разборне тутармалла. Разборта йышăннă паллăсене шута илсе ĕçлеттермелле.

*1. Кашни пионер шкул пахчине вуншар йывăç вăрмантан кăларса килсе лартма сăмах пачĕ.*




*2. Ирхи сарă хĕвел хăйĕн ылтăн хĕлхемĕсене пĕтĕм таврана хĕрÿллĕн сапалама тытăнчĕ.*



Сăмахсен çыхăнăвне разбор тăвассипе ĕçлеме панă тĕслĕхсем.

1. Пĕр ирхине шкул çурчĕ çинче пĕрремĕш курсра вĕренекенсем çакнă хĕрлĕ ялав çурхи ăшă çилпе вĕлкĕшнĕ. (Я. Ухс.) 2. Ирхи шĕвĕ йăваш çил тин вăраннă çĕр çинче вăркăштарса çÿреме пуçларĕ. (Тург.) 3. Тарас Шевченко çирĕм ултă çулта чухне хăйĕн «Кобзарь» ятлă сăвă кĕнекине пичетлеттернĕ. 4. Анăçри хĕвел ярăмĕсем пĕтĕм пĕлĕте ыталаса илме хăтланнăн аякка-аякка тăсăлса кайнă. 5. Ахмет ултă çул хушшинче тайгапа Амур шывĕн мĕнпур çырман законĕсене вĕренсе çитрĕ. (Тукт.) 6. Ирхи хĕвел куçа ытлашши шартарнăран Левентей чÿречене хаçатпа хуплать. (Турх.)

## КАЛУЛЛĂ, ЫЙТУЛЛĂ, КĂШКĂРУЛЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМПЕ ПРАКТИКĂЛЛĂ ĔÇ ТУСА ИРТТЕРЕССИ.

Учитель вĕренекенсене çак тема çинче чарăнса тăнă май хăнăхтару ĕçĕсем тутарать. Хăнăхтару ĕçĕсене чăваш чĕлхине тарăнрах ăнланса илме, тăван литература чĕлхипе тĕрĕс калаçма, çырма вĕрентес тĕллевпе ирттермелле.

Калуллă, ыйтуллă, кăшкăруллă предложенисене каласси вăл тĕрлĕ туйăмпа çыхăннă. Çавна шута илсе, предложенири тĕп шухăшпа çыхăннă сăмахсене вăйлă пусăмпа, уйрăммăн палăртса каламалла. Пусăмри сăмахсене каланă чухне вăйлă тата кирлĕ эмоциллĕ сасăпа калама пĕлмелле. Эмоци тĕрлĕрен пулать, вăл персонажа автор мĕнле туйăмпа калаçтарнинчен килет. Произведенири герой тĕрлĕрен туйăмпа та калама пултарать: кÿренсе, питлесе, тарăхса, вăрçса, кăмăлласа, юратса, тăрăхласа, кулса, ăшшăн, сиввĕн, кураймасăр, ырласа, мухтаса, хавхаланса т. ыт. Уйрăмах ыйтуллă тата кăшкăруллă предложенисене каланă чухне тĕрлĕ туйăмпа каласси питĕ вăйлă палăрать, çакна учителĕн яланах асра тытса ĕçлемелле. Малтанах вĕренекенсене калуллă предложенисене тĕрĕс калама хăнăхтармалла. Ана валли илемлĕ литература хрестоматийĕнчен пысăк мар произведени (тепĕр чух произведенисен сыпăкне) илмелле те кирлĕ çĕре малтан логика ударенисемпе пауза тумалли вырăнсене лартса тухмалла, кирлĕ туйăмпа, интонаципе, пусăмпа, чарăнусем туса, илемлĕ вулама хăнăхмалла.

Класра вара вĕренекенсене текстри хăш сăмахсем çинче логика ударени, ăçта пауза (пысăк е пĕчĕк чарăну) пулмаллине палăртса вулама вĕрентсе пымалла. Малтанах лайăхрах вĕренекен ачасене вулаттармалла, вĕсем

вулани ытти ачасемшӗн те кӑтартуллӑ пултӑр. Вара тин тӗрӗс вулама вӗрентес ӗҫе ыттисене явӑҫтарса пымалла.

Калуллӑ предложенисемлӗ текста вуланӑ чухне те мӗнле сасӑпа вулассине каллех шута илмелле. Калуллӑ предложенисем те тӗрлӗрен каласа панипе ҫыхӑннӑ: автор пӗр ӗҫсем ҫинчен, ытларах описанисене, лӑпкӑн, юхӑмлӑ каласа парать; хӑвӑрт улшӑнакан событисене, явленисене, ҫӳренисене хӑвӑртрах та вӑйлӑрах калать; хӑрушӑ самантсене хӑрушлӑха палӑртакан сасӑпа, туйӑмпа, пит-куҫ улшӑнӑвӗпе, алӑ хусканӑвне кӑтартнипе уҫса парать; хуйхӑллӑ вӑхӑта сасса антарнипе, хуйхӑллӑ сасӑпа палӑртса хӑварать т. ыт. те.

Акӑ Трубина Марфи ҫырнӑ «Мучар» повеҫӗн иккӗмӗш сыпӑкне илер. Кунта авторӑн описанине лӑпкӑн вуламалла, анчах ҫак сӑмахсем ҫине логика ударенийӗ тӑвассине манмалла мар.

Хуллен-майӗпен вӑхӑт *шӑватех. Ҫур* ҫывхарчӗ. Юр *кайса* пӗтрӗ. Хӗвел хӗртнӗҫем *хӗртсе* ҫӗре типӗтрӗ. Ҫуртырри *акма* вӑхӑт ҫитрӗ. Колхозниксем ҫуракине *чӑн малтан* тухрӗҫ. Пӗччен хуҫалӑхсем хӑшӗ-пӗри *акма та* тухайман-ха, *колхоз* акса та ӗлкӗрнӗ: *машинӑпа* акнӑ.

Курсивпа ҫырнӑ сӑмахсем ҫинче логика ударенийӗ пулмалла, учителӗн ҫакна шута илсе ӗҫлес пулать.

Малалла М. Горький ҫырнӑ «Тӑвӑл хыпарҫи» ятлӑ произведенин пӗр пайне илмелле. Ана та автор калуллӑ предложенисемпе ҫырнӑ. Илсе панӑ сыпӑкри ӗҫ хӑвӑрт пулса пынине тата хӑрушлӑ йывӑр тапхӑр ҫитсе килнине кӑтартать. Ҫавна май вуласса та хӑвӑртрах, хулӑн та хӑрушлӑха витекен сасӑпа вуламалла, логикӑлла ударенисене питӗ хытӑ палӑртса пымалла, чарӑнусене те витӗмлӗ тумалла.

Пӗлӗтсем *хуралнӑҫемӗн хуралса* кӑна пыраҫҫӗ, тамӑкри пек тинӗс ҫийӗн *аялтан аялараххӑн* капланса шуса килеҫҫӗ; хумӗсем *вӑйланнӑҫемӗн* вӑйлӑрах *саспа* юрлаҫҫӗ, аслати патнех ҫитесшӗн *пӗлӗтелле* ыткӑнаҫҫӗ.

Пӗлӗте кисретсех *ак* аслати кӗрлет хӑватлӑн. Хаяр ҫилӗллӗ *хумсем те* шап-шур кӑпӑк кӑларсах ав, ҫилпеле *тавлашнӑ* майӑн, йынӑшса *кӑна* чупаҫҫӗ.

Ыйтуллӑ предложенисенче ыйту сӑмахсемпе **ыйту** татӑкӗсем ҫинче логика пусӑмӗ (ударенийӗ) пулать; ыйту сӑмахӗ предложени варринче пулсан, сасӑ предложени вӗҫӗнче тӳрех татӑлать.

— Аҫталла тарчӗ вӑл?— терӗ Трофимов. *(Труб.)*

— **Мĕншĕн** паçăрах каламарăн тата?—терĕ Трофимов сиввĕн. *(Труб.)* **Ăçта** пытаннă? **Хăш** тĕлте?! **Кам?**— теççĕ чупса килнисем. *(Труб.)*

Кăмăлласа çемçен е тилмĕрсе ыйтнă чухне предложени вĕçĕнче сасă ерипен анать те вĕçленет, татăлмасть.

К и р у к: **Камсем** хăтарчĕç мана? *(Кăлк.)*

А н и с с а: **Мĕнле** пурăнăн эсĕ ĕнтĕ капла? *(Кăлк.)*

А н и с с а: **Мĕншĕн? Мĕншĕн** ман çамрăк пурнăçа туртса илетĕр? *(Кăлк.)*

Предложенире ыйту татăкĕсем пулсан, вара сасă предложени вĕçĕнче кăшт тăсăлса илсе вĕçленет, логика пусăмĕ ыйту татăкĕпе тăракан хăй пĕлтерĕшлĕ сăмах çинче пулать.

— Вăл кружока пире çӳреме **юрать-и?**— учителе пӳлсех ыйтрĕ Арçук. *(Турх.)*

— Марк Васильевич, пирĕн ялта чăнласах ГЭС **тăваç-çĕ-ши?**— терĕ Вера. *(Турх.)*

Кăшкăруллă тата хушуллă предложенисенче пусăм чи вăйлăн хумханса каланă сăмах çинче пулать, ун пек сăмахсенчен глагол форминчи сăмахсем нумайрах пулаççĕ.

Кăшкăруллă предложенисен шутне тĕрлĕрен туйăмпа: чĕнсе, тарăхса, хăратса, пăлханса, вăрçса, ылханса, йăлăнса, тилмĕрсе, хушса, хавасланса, çĕкленсе, васкатса каланине кĕртме пулать.

Учитель вĕренекенсене кăшкăруллă предложенисемпе ĕçленĕ май мĕнле туйăмпа, мĕнле сасăпа калани çинче ытларах чарăнса тăрать тата вĕсене тĕрĕс калама хăнăхтарса пырать.

— Пĕтĕм тĕнчери ĕçлекен çынсем **сывă** пулччăр!— кăшкăрчĕ каллех Павел *(М. Г.)*. Кунта чĕнсе, хавхаланса каланине кăтартнă.

— Сирĕлĕр! **Сирĕлĕр!**— çывăхрах та çывăхрах илтĕнчĕ жандармсен сасси. (*М. Г.*) Кунта хăратса, тарăхса каланине пĕлтерет.

— Сывă пул, Петр Андреевич. *(Пушк.)* Кунта ыррăн, ăшшăн сывлăх суннине кăтартнă.

— Эпĕ çĕнтертĕм!.. **Çĕнтертĕм!**— тенĕ пекех çутăлать унăн сăн-пичĕ. *(Х. Ç.)* Ку предложенире хавасланнине, савăннине кăтартса панă.

— Пĕтсен пĕтем, пе́т, тăшман! (*К. Ив.*) Питĕ пысăк курайманлăха кăтартнă.

Хаяррӑн ылханнине, вилӗм суннине кӑтартакан текстсене вуланӑ чухне хаяр сасӑпа вуламалла, логикӑлла пусӑмри сӑмахсене ҫав тери вӑйлӑн палӑртса каламалла, кашни логика ударенири сӑмах хыҫҫӑн пысӑк чарӑну (пауза) туса та́малла.

Малалла, вӑхӑт пулсан, ҫак темӑпа тепӗр тӗрлӗ творчество ӗҫӗ тума пулать. Калуллӑ предложенисенчен ыйтуллӑ тата кӑшкӑруллӑ предложенисем, кӑшкӑруллӑ предложенирен калуллӑ е ыйтуллӑ, ыйтуллӑ предложенирен калуллӑ е кӑшкӑруллӑ предложенисем тӑвассипе ӗҫлемелле.

Ак тӗслӗх илсе парӑпӑр.

1. Ҫамрӑк ӑру **тӑрӑшса** вӗренет.
2. Ҫамрӑк ӑру, **тӑрӑшса** вӗрен!
3. Ҫамрӑк ӑру **тӑрӑшса** вӗренет-и?

## ИКӖ ТӖП ЧЛЕНЛӐ ХУТСӐР (СӐПАТЛӐ) ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Пуҫламӑш шкултах ӗнтӗ предложенин тӗп членӗсемпе кӗҫӗн членӗсем тата хутсӑр предложени ҫинчен те ачасене кӗскен каласа панӑ.

Ҫавна май ҫак темӑна аса илессипе ҫыхӑнтармалла.

Сӑпатлӑ хутсӑр предложенисенче икӗ тӗп член — подлежащипе сказуемӑй пулаҫҫӗ.

*Ҫанталӑк кӗр енне сулӑнчӗ. Хурӑнсем саралнӑ. Хушӑран ҫумӑр та чашлаттарса иртет. Хура пӗлӗтсем аялтанах шуса иртеҫҫӗ. (Сад.)*

Ку тӗслӗхсене пӑхса тухнӑ май вӗренекенсем мӗн кураҫҫӗ-ха? Кашни предложенирех тӗп членсем (подлежащипе сказуемӑй) пуррине аса илеҫҫӗ. Хӑшпӗр предложенисенче подлежащи пулмасан та, анчах ӑна глагол-сказуемӑй урлӑ ҫӑмӑллӑнах тупма пулать пулсан, ун пек чух вӑл сӑпатлӑ предложенисен шутне кӗрет.

*Куратӑп халӑхӑн пуласлӑх*
*Ытарайми кӗнекине. (Хус.)*

*Пӗр пӗчӗкҫеҫ илемлӗ сада кӗтӗмӗр те шурӑ чул ҫурт еннелле такӑр сукмакпа утрӑмӑр. (Арт.)*

Малалла вӗренекенсене хӑйсене тӗслӗхсем туптармалла. Е хрестоматирен пӗр-пӗр произведени сыпӑкне вулаттармалла та сӑпатлӑ хутсӑр предложенисене суйласа илме хӑнӑхтармалла.

Ҫав сехетрех пысӑк мар хӑнӑхтару ҫыру ӗҫӗ ирттер-

мелле, сăпатлă хутсăр предложенисене аялтан туртса паллă тутармалла.

Ана валли çакăн йышши текст пама пулать.

Ленин сунара çӳреме юратнă. Анчах сунара çӳреме унăн пуш вăхăчĕ сахал пулнă.

Чирленĕ хыççăн каннă вăхăтра Ленина юлташĕсем тилĕ тытма сунара илсе кайма шутланă. Çак ĕç хĕллехи сивĕ вăхăтра пулнă. Сунара вĕсем хĕрлĕ ялавсем илсе кайнă. Вăрманти тилĕ шăтăкĕ тавра пĕчĕк хĕрлĕ ялавсем çакса тухнă. Унтан сунарçăсем хăйсен вырăнĕсене тăнă. Владимир Ильич та пысăк хыр хыçне пырса тăнă.

Инçетре таçта йытă вĕрнĕ сасă илтĕннĕ. Унтан вăрманта инçетре пăшал сасси янăраса кайнă. Ленин аллине пăшал тытса тăнă. Таврара шăпах пулнă. (А. Кононов, «Илемлĕ тилĕ» калавран.)

## ПРЕДЛОЖЕНИН ТĔП ЧЛЕНĔСЕМПЕ КĔÇЕН ЧЛЕНЕСЕМ.

Ку темăна пуçламăш шкултах вĕреннĕ, çавăнпа та VI-мĕш класра асаилӳ урокĕ туса ирттермелле. Ун çинчен вĕренекенсене малтанхи урокрах пĕлтермелле, килте 3-мĕш §-а вуласа тухма хушса ямалла. Пĕтĕм сехечĕпех асаилӳпе ирттермелле мар, анлă тата ансăр предложенисем çинчен çĕнĕрен каласа ăнлантарса хăвармалла.

Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем çинчен пĕтĕмĕшпе аса илнĕ чух вĕренекенсене çакăн пек ыйтусем памалла.

1. Предложенин мĕнле членĕсене пĕлетĕр? 2. Мĕн вăл подлежащи? 3. Подлежащи мĕнле ыйтусем çине ответлет? 4. Сказуемăй мĕне пĕлтерет тата унăн мĕнле ыйтусем пулаççĕ? 5. Мĕне эпир предложенин кĕçĕн членĕсем тетпĕр? 6. Кашниех пĕрер предложени тупăр та унти тĕп членсемпе кĕçĕн членсене кăтартса парăр.

Вĕренекенсен отвечĕсене учитель сăнаса пырать, тĕрĕс пулмасан, хăй çавăнтах тӳрлетсе хăварать е ытти вĕренекенсене ку ĕçе явăçтарать. Аса илнĕ хыççăн предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем çинчен учитель хăй пĕтĕмлетсе хăварать те анлă тата ансăр предложенисем çине куçать. Вăл доска çине çакăн пек предложенисем çырса парать.

| | |
|---|---|
| *1 Пионер вĕренет.* | *1. Пионер пур предметсемпе те тăрăшса вĕренет.* |
| *2. Ачасем ĕçлеççĕ.* | *2. Пирĕн класри ачасем колхозра ĕçлеççĕ.* |
| *3. Кино пулать.* | *3. Кĕçĕр клубра кино пулать.* |

Малтан сулахай енчи предложенисене пăхса тухмал-

ла. Вĕренекенсенчен пĕрине малтанхи предложение вулаттармалла та тĕп членсене туптармалла. Çав меслетпех ытти предложенисемпе те ĕçлемелле. Учитель кĕскен пĕтĕмлетсе хăварать: *тĕп членсенчен çеç тăракан предложение ансăр предложени теççĕ.*

Унтан сылтăм енчи предложенисене синтаксисла разбор тумалла, тĕп членсемпе кĕçĕн членсене туптармалла, вĕсен ыйтăвĕсене калаттармалла.

Сылтăм енчи пур предложенисене те пăхса тухнă хыççăн вĕренекенсенчен çапла ыйтма пулать:

— Халĕ пăхса тухнă предложенисене мĕнле предложенисем тетпĕр?

Вĕренекенсем калаймасан, учитель çакăн пек пĕтĕмлетсе хăварать: *тĕп членсемпе кĕçĕн членсенчен тăракан предложение анлă предложени теççĕ.*

Анлă тата ансăр предложенин определенийĕсене темиçе ачаран ыйтса çирĕплетмелле, хăйсенех предложенисем туптармалла. Çакăнтах анлă предложенисем парса доска çинче е килти тетрадьсем çинче разбор тутармалла, сăмахсен çыхăнăвĕн схемипе усă курмалла. Паллах, кĕçĕн членсене тĕплĕн разбор тăвас задача пулмалла мар-ха, вĕсем çинчен малалла вĕренеççĕ.

Разбор тунин тĕслĕхĕ.

*Паттăр пограничниксем Совет çĕршывĕн чиккисене кунĕн-çĕрĕн сыхлаççĕ.*



Киле валли ёç: Учебникри 3-мĕш параграфа тепĕр хут вуламалла, 12-мĕш хăнăхтарăва туса килмелле.

## ХУТСĂР ПРЕДЛОЖЕНИН СОСТАВĔПЕ УНАН ТĔСĔСЕМ

Ку пайĕнчи темăсенчен чылайăшне ачасем пуçламăш шкултах вĕреннĕ, çавăнпа та VI-мĕш класра çавна шута илсе ĕçлемелле. Аса илессине яланах çĕнĕ пĕлӳ парассипе çыхăнтармалла, IV-мĕш класра илнĕ пĕлӳпех çырлахмалла мар.

Хутсăр предложенисем мĕнле пайсенчен (составран) йĕркеленни çинче чарăнса тăмалла. Кашни чĕлхери пекех, чăваш чĕлхинче те хутсăр предложенисем уйрăм членсенчен йĕркеленсе пулаççĕ. Предложенире мĕнле вырăн йышăнса тăнине кура членсем икĕ пая уйрăлаççĕ: тĕп членсем тата кĕçĕн членсем. Тĕп членсем шутне подлежащипе сказуемăй кĕреççĕ, кĕçĕн членсем дополнени, определени тата обстоятельство пулаççĕ.

Предложенин тĕп тытăмне, кăшкарне тăваканĕсем подлежащипе сказуемăй пулса тăраççĕ. Кĕçĕн членсем вара, тĕп членсем çумне хушăнса, вĕсене тĕрлĕ енчен ăнлантарса параççĕ, предложение анлăлатаççĕ. Тĕслĕх: *Шкул ларать. Вăтам шкул аякранах курăнса ларать.*

Предложенири ĕçе тăваканĕ кам е мĕн пулнине подлежащи кăтартать. Сказуемăй вара подлежащи ĕçĕ-хĕлне, тăрăмне, ун çинчен мĕн каланине пĕлтерет.

Кĕçĕн членсем е подлежащие, е сказуемăя ăнлантарса тăраççĕ. Çавна май предложенире подлежащие пăхăнса тăракан тата сказуемăя пăхăнса тăракан сăмахсем пулаççĕ.

## ПОДЛЕЖАЩИ МĔНЛЕ САМАХСЕНЧЕН ПУЛНИ.

Вĕренекенсем подлежащи пĕлтерĕшĕпе ыйтăвĕсем çинчен аса илнĕ чухне подлежащи мĕнле пуплев пайĕсенчен пулма пултарни çинчен ытларах чарăнса тăмалла. Темăна ăнлантарнă чухне çакăн пек таблицăпа усă курма пулать:

| Мĕнле пуплев пайĕсенчен пулни | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Япала ятĕнчен | Ачасем йывăç лартаççĕ. |
| Паллă ятĕнчен | Хĕрлисем çĕнтерчĕç. Асли колхозра ĕçлет. |
| Хисеп ятĕнчен | Вуннă тăххăртан пысăк. |
| Местоименирен | Эпир телейлĕ. Вĕсем хулана çитрĕç. |
| Причастирен | Тăрăшакан яланах малта. Ĕçлекен çиме тивĕçлĕ. |
| Инфинитивран | Пире вĕренме ирĕк. Ачасене пурăнма аван. |
| Междометирен | Малта урра! илтĕнчĕ. |
| Сăмах майлашăвĕнчен. | Пĕр ялта карчăкпа старик пурăнаççĕ. Икĕ хĕр шыва анчĕç. Виç юланут вăрманта йĕр йĕрлесе çӳреççĕ. (К. Ив.) |

Таблицăри тĕслĕхсене разбор тутармалла, подлежащи мĕнле пуплев пайĕнчен пулнине ыйтмалла. Таблицăпа ĕçленĕ чух малтанах «Мĕнле пуплев пайĕсенчен пулни» тенине хаçатпа хупламалла. Вĕренекенсем предложенисене разбор тунă май подлежащисем мĕнле пуплев пайĕсенчен пулнине хăйсем ăнкарса илччĕр. Пур предложенисене те вулаттарса, унти тĕп членсене туптарнă хыççăн кăна хаçата уçмалла та подлежащисем мĕнле пуплев пайĕсенчен пулнине вулама хушмалла. Унтан вĕренекенсене подлежащи хăш-хăш пуплев пайĕсенчен пулнине кăтартакан тĕслĕхсем туптармалла. Çак сехетрех вĕренекенсене пысăках мар çыру ĕçĕ çыртармалла, подлежащисене туптармалла тата мĕнле пуплев пайĕнчен пулнине сăмах çине кĕскен çырма хушмалла.

Çыру ĕçне килти тетрадьсем çине çыртармалла. Унăн тексчĕ:

1. Поездваскать. Вăл Мускава çитесшĕн. *(М. Хури.)* 2. Комбайнпа ĕçлеме вĕренес килет. 3. Амăртура кайри мала тухрĕ. 4. Теприсем шлюпкăсемпе ярăнса çӳреççĕ. *(Бурн.)* 5. Пăшалпа вылямa юрамасть. 6. Европăри çырана çитесси инçех юлманччĕ *(Бурн.)*. 7. Вунпилĕк виççĕ çине пайланать. 8. Женькăпа Галя чикĕ çывăхĕнчи ялта пурăннă. 9. Мускавра темиçе миллион çын пурăнать. 10. Пӳртри çиет яшкине, урлă-пирлĕ тайăлса. *(К. Ив.)*

Ĕçе çыртармалла та класрах ачасене вулаттарса тĕрĕслемелле. Подлежащи пулăвĕ çинчен кĕскен пĕтĕмлетсе ĕç памалла: Учебник тăрăх 4-мĕш §-а вуласа ăнланмалла, 19-мĕш хăнăхтарăва туса килмелле.

## ХУТСĂР СКАЗУЕМĂЙ.

Урока аса илессипе пуçламалла.

1. Сказуемăй мĕне пĕлтерет? 2. Хутсăр сказуемăй мĕнле пуплев пайĕнчен пулать? 3. Вĕреннĕ сăвă-юрăсенчен кашни пуплев пайĕпе тĕслĕхсем тупăр.

Аса илнĕ хыççăн малалла çакна паллă тумалла. Сказуемăйсем виçĕ тĕрлĕ пулаççĕ: хутсăр глагол сказуемăйсем, хутлă глагол сказуемăйсем тата хутлă ят сказуемăйсем.

Хутсăр сказуемăй пулăвне плакатри е доска çинчи тĕслĕхсемпе кăтартмалла.

1. Хĕвелтухăç хĕрелет,
Ыр çанталăк пăсăлать. *(М. Фед.)*
2. Эс, Октябрь, ырлăх патăн
Пирĕн паттăр халăха.
Эс кăна телей кăтартрăн
Тĕнчене яланлăха.
3. Вĕçтĕр шурă кăвакарчăн,
Вĕçтĕр янкăр тӳпере.

Кашни предложенире тĕп членсене туптармалла та уйрăмах сказуемăй пулăвĕ çинче чарăнса тăмалла.

Тĕслĕхсене пăхса тухнă хыççăн вĕренекенсене çакăн пек ыйтусем памалла:

1. Разбор тунă тĕслĕхсенче сказуемăй миçе сăмахран тăрать? 2. Унти сказуемăйсем мĕнле пуплев пайĕнчен пулнă? 3. Хутсăр сказуемăйсем глаголăн мĕнле формисенчен пулнă? 4. Подлежащисемпе сказуемăйсем мĕнле çыхăнура тăраççĕ? 5. Глаголăн улшăнман формисенчен хутсăр сказуемăй пулма пултарать-и?

Çак ыйтусем тăрăх вĕренекенсем хутсăр сказуемăй пулăвĕ çинчен хăйсемех ăнланса илеççĕ, пĕтĕмлетсе калама та пултараççĕ. Суйласа илнĕ диктант çыртарма юрать. Унăн тексчĕ:

1. Пирĕн ялта пĕр карчăк пурăнатчĕ ĕлĕкрех. *(К. Ив.)* 2. Хулара пасар халăхĕ вĕркĕшет. *(С. Элк.)* 3. Ирхине

пирĕн отряда тата тăхăр партизан хутшăнчĕ. *(Уяр.)* 4. Лаптев наблюдательнăй пункта пычĕ. *(Тукт.)* 5. Чăрăнма пĕлми ялан ĕмĕт вĕçтĕр аякка. *(Я. Ухс.)* 6. Эпĕ юрлăп ун чухне коммунизм юррине. *(Хус.)* 7. Эпир кĕрешрĕмĕр пит вирлĕ. Юнра çуралчĕ çĕн саккун. *(Я. Ухс.)* 8. Вăл хăй çинчен пĕлтермен. 9. Эпĕ тĕнче усăлăхне пĕлессĕн ĕмĕтленетĕп.

Вĕренекенсем хăйсен тетрачĕсем çине подлежащипе сказуемăйне çырса пыраççĕ, сказуемăй глаголăн мĕнле форминчен пулнине кĕскен палăртаççĕ.

Çырнă ĕçне класра та, килте те тĕрĕслеме юрать.

Киле валли ĕç: 5-мĕш §-а вуласа ăнланмалла, 21-мĕш хăнăхтарăва туса килмелле.

## ХУТЛĂ ЯТ СКАЗУЕМĂЙ.

Хутлă сказуемăйсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: хутлă ят сказуемăйсем тата хутлă глагол сказуемăйсем. Хутлă ят сказуемăйсен пулăвĕ çапла: сказуемăйăн тĕп пĕлтерĕшне ят сăмахсем (япала ячĕ, хисеп ячĕ, местоимени) хăйсем çине илеççĕ, вĕсен çумне тата пулăшу глаголĕсем **(пул, тăр, шутла)** хушăнаççĕ.

*Эсĕ комбайнĕр пулатăн. Пичче Совет çарĕн запас офицерĕ шутланать.*

Тепĕр чухне пулăшу глаголĕ вырăнне сказуемăй вырăнĕнче тăракан ят сăмахсем çумне çителĕксĕр глагол аффиксĕ -чĕ (-ччĕ) хушăнма пултарать.

*Пӳлĕмре сывлăш усăлчĕ. Манăн шăллăм колхозра бригадирччĕ.*

Ят мар падежĕнчи сăмахсем те çителĕксĕр глагол аффиксĕ **-чĕ (-ччĕ)** йышăнса хутлă ят сказуемăй тума пултараççĕ.

*Колхоз председателĕ канцеляринчеччĕ. Унăн кĕнеки шкапраччĕ.*

Хăшпĕр наречисем, хыççăмахсем, татăксем, евĕрлев сăмахĕсем те хутлă ят сказуемăй тума пултараççĕ.

*Вăрманта пит илемлĕ пулнă. Пӳлĕмре пăчă.*

*Пĕри кунта, леш унта: темĕнле йĕр йĕрлеççĕ.*

*Вăрман çăра, пит тискер,*
*Унăн ăшĕ чăв та чав. (К. Ив.)*

*Кӳлĕре шыв мăй таран пулнă. Вăйăсенче ун сасси кайăк сасси евĕрлĕ. (К. Ив.) Паян кунĕ çавăн пек. (Х. Ç.).*

Темăна ăнлантарма пуçличчен ачасене ыйтусем памалла:

1. Эсир мĕнле хутлă сказуемăйсем пĕлетĕр?

2. Подлежащипе сказуемăй мĕнле çыхăнура пулать?

Çĕнĕ темăна ăнлантарма çакăн пек предложенисем сĕнме юрать.

1. Манăн пичче танкист пулнă. 2. Çанталăк сулхăн тăрать. *(Элк.)* 3. Унтри вунпĕртеччĕ. 4. Пирĕн пулас учитель — эсир. *(Турх.)* 5. Сăр тăрăхĕнчи ыраш калчисем курăнакан пулчĕç. 6. Юнĕ пур, чунĕ çук. *(Палан.)*

Кашни тĕслĕхе класри ачасене явăçтарса пăхса тухмалла, подлежащисемпе сказуемăйсене туптармалла, хутлă ят сказуемăйсем мĕнле пуплев пайĕсенчен пулнине паллă тумалла.

Хутлă глагол сказуемăйăн пулăвне кăтартакан çакăн пек схема пама пулать:




Хутлă ят сказуемăйсем хăшпĕр чухне сăмах майлашăвĕнчен те пулма пултараççĕ, çакна пĕр-ик тĕслĕхпе кăтартса памалла. Ытларах ун пек сăмах майлашăвĕсем причасти тата унпа çыхăнса тăракан сăмахсенчен пулаççĕ.

Тĕслĕхрен: *1. Тимирязев малта пыракан наукăçăн кĕрешекенни пулнă. 2. Ачасемшĕн вĕренӳ çулĕ чи ответлă вăхăт пулса тăрать.*

Вĕреннине çирĕплетес шутпа ăнлантару çыру ĕçĕ туса ирттермелле. Ачасене предложенин-предложенин вуласа

çыртармалла та подлежащие пĕр йĕрпе, сказуемăйне икĕ йĕрпе туртма, вăл мĕнле пуплев пайĕнчен пулнине кĕскен çырса хума хушмалла.

Ачасем вăл ĕçе класра тума ĕлкĕреймесен, килте туса пĕтерме хушмалла.

Анлантару диктанчĕн тексчĕ.

1. Шупашкарти хĕл каçĕ янкăр çутă. 2. Матижев пит те хытă çын иккен. *(Элк.)* 3. Уншăн ачана ним те айăпламалли çук. *(Х. Ç.)* 4. Кашни кун Алĕшка манпа пĕр сменăра ĕçлекенччĕ. *(Д.-Чалд.)* 5. Хуçа кăмăллă мар. *(Элк.)* 6. Ту çине хăпарма çăмăл марччĕ. 7. Çĕнĕ çамрăк ама вĕллере хуçа пулса тăрать. 8. Хура пальтоллă çын пире иртнĕ хĕлле çул кăтартаканни пулнă-мĕн. 9. Вăл вăхăтра манăн Шупашкарта нумай пурăнмалла пулчĕ. *(Х. Ç.)* 10. Эсĕ манăн аппа шутланатăн-çке-ха. *(Д.-Чалдун.)* Докладчикĕ — эпĕ хам *(Аслан.)* 12. Ыттисем — хамăр ялти учительсем. *(Аслан.)*

## ХУТЛА ЯТ СКАЗУЕМАЙЛА ПРЕДЛОЖЕНИСЕНЧЕ ЧАРАНУ ПАЛЛИСЕМ ЛАРТАССИ.

Шкул ĕçĕнче çакă палăрать: хутлă ят сказуемăйлă предложенисенче чарăну палли лартасси çинче учительсем çителĕклĕ таранах чарăнса тăмаççĕ, çавăнпа та вĕренекенсем ун пек предложенисенче тире лартас йĕркене çирĕппĕн пĕлмеççĕ. Çавăн пирки ку тема çинче нумайрах чарăнса тăмалла, вĕренекенсене ытларах ĕçлеттермелле, чарăну паллисем лартма хăнăхтарса пымалла. Ытти темăсене вĕреннĕ чухне те, тĕрлĕрен çыру ĕçĕсем çыртарнă чухне те ят сказуемăйлă предложенисенче тире лартассипе тĕслĕхсем парса пымалла.

Хутлă ят сказуемăйсем çинчен аса илтернĕ хыççăн учитель тема ятне пĕлтерет те класс умне плакат çакать. Плакатра хутлă ят сказуемăйлă предложенисенче тире лартассипе тĕслĕхсем панă, тире лартмалла мар тĕслĕхсем те пур.

Учитель плакатри кашни тĕслĕхе уйрăм вĕренекене вулаттарать те подлежащи тата сказуемăй мĕнле пуплев пайĕсенчен пулнине ыйтса пĕлет.

Хутлă ят сказуемăй умĕн хăçан тире лартмалли çинчен вĕренессине ыйту-калаçу меслечĕпе тума пулать. Вĕренекенсем, чарăну палли лартассине хăйсем ăнланса илсен, ку темăпа çыру ĕçĕнче те йăнăшсем сахалтарах тăваççĕ.

Темăна ăнлантарма панă тĕслĕхсем.

1. Шапшинский—Хусан вырăсĕ... *(Элк.)* 2. Пĕр енĕ — вăрманлăх, тепĕр енĕ — уйлăх. *(Туп. юм.)* 3. Виçĕ хут виççĕ — тăххăр. 4. Совет çыннин тĕллевĕ — телейлĕ пурнăç тăвасси. 5. Зоологи вăл — чĕрчунсем çинчен вĕрентекен ăслăлăх. 6. Вĕсем — пирĕн кӳршĕ ачисем. 7. Ени — витере, хӳри — тӳпере. *(Туп. юм.:* кăмака, мăръе). 8. Атăл хĕрри лăпкă та пушă *(Элк.)*. 9. Манăн пичче инженерччĕ. 10. Хăюлăх — этем çуначĕ *(Арт.)*.

Çак тĕслĕхсенчен вĕренекенсем мĕн кураççĕ-ха? Япала ятĕнчен, местоименирен, хисеп ятĕнчен, **-скер, -и** аффикс йышăннă пулас, иртнĕ, пулмалли причастисенчен пулакан хутлă ят сказуемăй умĕн пулăшу глаголĕ çук чухне тире лартаççĕ.

Пулăшу глаголĕ пулмасан, ят мар падежĕнчи япала ятĕнчен, хисеп ятĕнчен, местоименирен хутлă ят сказуемăйĕ пулнă чухне те тире лартмалла.

*Ку кĕнеке — юлташăн. Атте — бригадир, пичче — лесникра. Манăн аппа — çирĕмре.*

Пиллĕкмĕш тĕслĕхе разбор тунă чух вĕренекенсене çакна асăрхаттармалла: подлежащи хыççăн **вăл** местоимени тăрать пулсан, ун хыççăн, ят сказуемăй умĕн тире лартаççĕ.

*Тĕрĕслев диктанчĕ вăл — вĕренекен пĕлĕвне тĕрĕслемелли ĕç. Ĕç вăл — пурнăç илемĕ.*

Подлежащи е сказуемăй сăпат местоименинчен тăрать пулсан, палăртса, чарăнса каланă чух тире лартмалла, палăртмасăр каланă чух тире лартмалла мар. *Эпĕ пионер. Эпĕ — пионер. Ку — ачасемшĕн чи асаплă сехет хушши шутланнă. (Х. Ç.) Вĕсем — кӳршĕ ачисем.*

Тĕслĕх илнĕ саккăрмĕшпе тăххăрмĕш предложенисене ăнлантарнă май çакна паллă тумалла: хутлă ят сказуемăй паллă ятĕнчен е **-чĕ(-ччĕ)** аффикс хушăннă сăмахсенчен тăнă чухне тире лартмаççĕ.

*Çурхи каç çутă. Ку улăх сарлакаччĕ.*

Вĕреннине пĕтĕмлетнĕ хыççăн класра пысăках мар çыру ĕçĕ туса ирттермелле. Ана ăнлантару çыру ĕçĕ теме пулать.

Çакăн пек предложенисем памалла.

1. Сентябрьте Якутск патĕнче чылаях ăшăччĕ *(Корол.)*. 2. Юханшыв çинче пĕр пăр катăкĕ те çукчĕ. *(Корол.)* 3. Кашни вĕренекенĕн шкул пахчинче вуншар йывăç лартмалла. 4. Хăшпĕр вĕренекенсемшĕн йывăр предмет вăл — физика. 5. Пĕр пичĕ — уйăх, тепĕр пичĕ — хĕвел. *(Юм.)* 6. Александр Матросов — шкул ачисен чи юратнă геройĕ. 7. Петр Бойков — пирĕн класра чи лайăх вĕренекен ача. 8. Пирĕн ял — Выла шывĕ хĕрринче. 9. Ман отрядра тĕрлĕ халăхчĕ. *(Уяр.)* 10. Эпир ирĕклĕ совет ачисем.

## ХУТЛĂ ГЛАГОЛ СКАЗУЕМĂЙ.

Сăпатланакан глагол предложенире сказуемăй пулни вĕренекенсемшĕн паллă ĕнтĕ. Çавăнпа та çĕнĕ темăна вĕрентиччен хутсăр глаголсем çинчен аса илмелле. Унтан доскана пурăпа çӳлтен аялалла туртса икке пайламалла та сылтăм енне хутсăр сказуемăйлă предложенисем, сулахай енне — хутлă глагол сказуемăйлă предложенисем çырмалла.

| | |
|---|---|
| 1. Çул çинче юлташ тăрать. | Çул çинче юлташ мана кĕтсе тăрать. |
| 2. Пирĕн ача килте ларать. | Пирĕн ача киле ларса юлчĕ. |
| 3. Анне çăкăр пуçларĕ. | Анне çăкăр касма пуçларĕ. |
| 4. Пичче хулана кайрĕ. | Пичче хулана тухса кайрĕ. |
| 5. Хурсем çырмана анчĕç. | Хурсем çырмана анса кайрĕç. |

Вĕренекенсене доска çинчи тĕслĕхсене танлаштарса сăнама хушмалла. Унтан вĕсен уйрăмлăхĕсем çинчен ыйтма пуçламалла.

Учитель: Çак доска çине çырнă тĕслĕхсенче мĕнле уйрăмлăх куратăр?

Вĕренекен: Сулахай енчи предложенисенче — хутсăр глагол сказуемăй, сылтăм енчи предложенисенче сказуемăй икĕ сăмахран тăрать: пĕрремĕш предложенире — *кĕтсе тăрать* сăмахсем, иккĕмĕшĕнче — *ларса юлчĕ*, виççĕмĕшĕнче — *касма пуçларĕ* т. ыт. те.

Учитель: Тĕрĕс. Сказуемăй икĕ сăмахран тăрать. Халь татах сăнăр: çав икĕ сăмахĕ мĕнле пуплев пайне кĕреççĕ?

Вĕренекен: Пĕрремĕш предложенинчи *кĕтсе* сăмах — деепричасти, *тăрать* — глагол, иккĕмĕш предложенире çавăн пекех деепричастипе глагол, виççĕмĕшĕнче — инфинитивпа глагол, тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕшĕнче каллех деепричастипе глагол.

Учитель: Çаксене мĕнле сказуемăй теме пулать?

Вĕренекен: Хутлă глагол сказуемăй.

Учитель: Тĕрĕс, ăна хутлă глагол сказуемăй теççĕ. Малалла хутлă глагол сказуемăй пулăвĕ çинчен учитель

тĕплĕн каласа ăнлантарать, вĕренекенсене тимлĕн итлесе ларма хушать.

**Сăпатланакан тата сăпатланман глагол формисенчен пулнă сказуемăя хутлă глагол сказуемăй теççĕ.**

Хутлă глагол сказуемăйне е вĕсен составне кĕрекен глаголсем икĕ тĕслĕ пулаççĕ. Малтанхи вырăнта подлежащин тĕп ĕçне кăтартаканни **-са, -се, -а, -е** аффикслă деепричасти, **-ма, -ме, -машкăн, -мешкĕн** аффикслă инфинитив пулать, иккĕмĕш вырăнта — пулăшу глаголĕ. Пулăшу глаголĕ подлежащипе сказуемăй хушшинчи çыхăнăва сăпат, хисеп, вăхăт тата наклонени енчен кăтартса парать.

Чăваш чĕлхинче пулăшу глаголĕсем йышлă. Н. И. Ашмарин профессор кăтартнă тăрăх, чăваш чĕлхинче пулăшу глаголĕсем 50 ытла, вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ: **ан, антар, аппалан, аптăра, асаплан, ил, ирт, улăх, ӳк, ӳкер, усра, яр, юл, вырт, вил, кай, каç, кил, кур, кӳрт, кăлар, кăтарт, кĕр, лар, ларт, пар, пурăн, пуçла, пуçтар, пух, пыр, пиç, пăрах, пăх, пĕт, пĕтер, салан, çавăр, çит, çитер, çӳре, таврăн, тасал, тат, тыт, тул, тух, тăк, тăр, тăран, тăрат, хур, хăвар, хăпар, шăтар.**

Çав глаголсем хăйсен тĕп пĕлтерĕшне çухатман чухне хутсăр сказуемăй тăваççĕ.

*1. Пӳлĕме уйăх çути ӳкрĕ. 2. Эпĕ яла çитрĕм. 3. Шăллăм пӳртрен урама тухрĕ. 4. Турист çӳлĕ сăрт çине улăхрĕ. 5. Палламан çын мана куçран пăхрĕ.*

Хутлă глагол сказуемăйри пулăшу глаголĕсем ĕçе тĕрлĕ енчен кăтартса пама пултараççĕ. Пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен вĕсене çакăн пек ушкăнсене пайлама пулать.

1. Тĕп ĕçĕн пуçламăшне кăтартаканнисем: **пуçла, тыт, тытăн.**

Ярмуш ура айĕнчи çулçăсене иле-иле тĕрĕслеме пуçлать. *(Турх.)* Часах унта та кунта перосем чăкăртатнă сасă илтĕнме пуçларĕ. *(Турх.)* Эпĕ çурлана çатăртаттарса тытрăм. Зоя Савельевна, мана чарса, ĕнерхи инкек çинчен ыйтма тытăнчĕ. Эпĕ кĕнекене вулама тытăнтăм.

2. Тĕп ĕçĕн юхăмне, тăвăмне, куçăмне кăтартакан пулăшу глаголĕсем: **çӳре, ирттер, кай, кил, пыр, улăх, ан.**

Иван хăй шухăшĕпе курман-илтмен çĕрсенче вĕçсе çӳрет. (*Кр.-Асл.*) Совет халăхĕ Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче мĕнпур йывăрлăха тӳссе ирттерчĕ. Казаксем пĕр çĕре купаланнă шахтĕрсем çине кĕрсе кайрĕç. *(Кр.-Асл.)* Пăшал сасси кĕрлесе кайрĕ. *(Б. Полевой.)*

Пичче хӑй юлташӗсене чӗнсе илчӗ. Егор Семенчӑ вӑййа вӗҫне ҫити ертсе пычӗ. *(Кр.-Асл.)* Ҫыран хӗррине Нинӑпа Оля чупса анчӗҫ. *(Турх.)* Туристсем сӑрт тӳпине астуса улӑхрӗҫ.

3. Тӗп ӗҫӗн тӑрӑмне (состоянине) кӑтартакан пулӑшу глаголӗсем: **тӑр, лар, вырт.**

Ярмуш Арҫуксен тӗлӗнче юри чарӑнса тӑчӗ. *(Турх.)* Нина комсомол бюровӗн членӗ пулса тӑчӗ. *(Турх.)* Эпир кӗтнӗ самолӗт улӑха анса ларчӗ. Мӑйӑр тӗшши вара йӑлтах тулса ларнӑ. *(Турх.)* Айлӑмра ҫурхи шыв ҫеҫ, хуллен шӑнкӑртатса, юхса выртать. *(Кр.-Асл.)*

4. Тӗп ӗҫ камшӑн пулнине кӑтартакан пулӑшу глаголӗсем: **пӑх, кур, кӑтарт, пар.**

Яриле ҫӑкӑр хутаҫҫине тытса пӑхать. *(Уяр.)* Марк Васильевич ачасене Кӗтне ҫинчен кӗскен каласа пачӗ. *(Турх.)* Арҫук старик шӗвӗр пӳрнипе йӗр туса кӑтартрӗ. *(Тукт.)* Алексей Никитич хӑйсен бригадинчи темиҫе ҫул хушши купаланса тулнӑ чӑх-чӗп тирӗсӗ ҫине тӗллесе кӑтартрӗ. *(Тукт.)* Вӑл самолӗт ҫине пӗрремӗш хут ларса курчӗ. Урӑх вӑл сан патна килсе те курмасть пулӗ ҫав? *(Илп.)*

5. Тӗп ӗҫе туса вӗҫленине **ӳк, яр, пӑрах, хур, ҫит, ҫитер, пӗт, пӗтер, тух** тата ытти пулӑшу глаголӗсем те кӗреҫҫӗ. Паллах, кунта кашни пулӑшу глаголӗ ӗҫ мӗнле вӗҫленсе пынине уйрӑм майпа кӑтартса пырать. *Ӳк* пулӑшу глаголӗ хушӑнсан, тӗп ӗҫ ӑнсӑртран е ҫав тери хӑвӑрт пулса вӗҫленнине кӑтартать.

*Совет салтакӗ икӗ фашиста персе ӳкерчӗ. Лаша аяккалла сиксе ӳкрӗ.*

**Ҫит, ҫитер, тух, пӗт, пӗтрӗ** пулӑшу глаголӗсем тӗп ӗҫ хӑй мелӗпех вӗҫленнине, пӗтнине уҫса параҫҫӗ.

Нина изложение чылай ачаран малтан ҫырса пӗтерчӗ. *(Турх.)* Эпӗ финиша чи малтан чупса ҫитрӗм. Март уйӑхӗнче эпир самолета хатӗрлесе ҫитертӗмӗр. *(В. Чкалов.)* Ҫурхи шывсем часах юхса пӗтрӗҫ. Оля заметкӑна тепӗр хут вуласа тухрӗ.

**Хур, яр** пулӑшу глаголӗсем тӗп ӗҫ васкавлӑ вӗҫленнине кӑтартса параҫҫӗ.

Нина хӑйӗн янӑравлӑ сассипе ахӑлтатса кулса ячӗ *(Турх.)* Ачасем пӗр харӑссӑн алӑ ҫупса ячӗҫ. Тухтар кӗслине ҫакса хучӗ. *(Илп.)* Литюк васкаса чӳречесене карса хучӗ... *(Алент.)*

6. Шалтан тулалла тухнине **кăлар, тух, ӳк, пăрах,** тултан шалалла кĕнине **кĕр, кӳрт** пулăшу глаголĕсем кăтартма пултараççĕ.

Ӳплере ларакан Петюк уçланкăна чупса тухрĕ. *(Алент.)* Елюк кĕнекипе тетрачĕсене уçă халлĕнех сĕтел çине хăварчĕ те урама чупса тухрĕ. Хватей, шухăшпа йывăрланнă пуçне усса, картишнелле утса кĕчĕ. *(Ис. М.)* Вĕренекенсем шкул таврашĕнчи çӳп-çапа çырмана кайса пăрахрĕç. Куçма чĕлĕм вĕçĕнчи табак кĕлне качи пӳрнипе тĕксе ӳкерчĕ. *(Ис. М.)* Пичче кĕсъерен сехетне туртса кăларать. Шăнкăрч чĕппи йăвинчен темле майпа тухса ӳкнĕ. *(Харл.)*

7. Ĕç хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулнине кăтартнă чухне хутлă глагол сказуемăйри тĕп глаголпа пулăшу глаголĕ те пĕр-пĕр сăпатланакан формăра пулаççĕ.

*Пире хирĕç икĕ йытă сикрĕç тухрĕç хапхаран.*
*Килчĕ ырă çуркунне,*
*Килчĕ ячĕ ăшăтса. (К. Ив.)*

8. Хутлă глагол сказуемăй хăшпĕр чухне деепричастипе инфинитивран е икĕ деепричастипе пĕр пулăшу глаголĕнчен те пулма пултарать. Кунта икĕ деепричастийĕпе те тĕп глаголăн пĕлтерĕшне кăтартнă çĕрте усă кураççĕ. Кун пек хутлă глагол сказуемăйсем ĕçĕн процесне анлăрах кăтартса параççĕ.

Сывлăшра çĕрлехи шăршăсем уçăлчĕç, каç пулнă чухнехи пек, нӳрлĕ, чĕрĕ сывлăш сăмсана кĕре пуçларĕ. *(Тург.)* Ыттисене кура, атте те ĕлĕк чухнех хĕвел тĕттĕмленни çинчен калаçса пама тытăнчĕ. *(Труб.)* Кузьма Степанович çак çурта ахаль лартас темерĕ. *(Аслан).* Никандр таврăннăранпа Марк Васильевич Ярмушсен килне час-часах пырса ларакан пулчĕ. *(Турх.)*

Хутлă глаголăн пĕлтерĕшĕ çинчен вĕреннĕ чухне схема е таблица вырăнлă пулмалла. Ăна учитель класс доски çине туса парать. Вĕренекенсене класра пысăк мар хăнăхтару ĕçĕ çыртарать те подлежащисене пĕр йĕрпе, хутлă глагол сказуемăйсене икĕ йĕрпе турттарать, пулăшу глаголĕ мĕне пĕлтернине сăмахпа каласа пама хушать.

Класри çыру ĕçĕн тексчĕ:

I. Тинĕс тĕпĕнчен кимĕ аран йăтăнса хăпарчĕ. Уçса янă люкран тăвăр пӳлĕмсене нӳрлĕ çил вĕрсе кĕчĕ. Подводниксем таса сывлăша кана-кана çăта пуçларĕç. *(Бурн.).*

II. Мурат хăйсен ялĕ çывăхĕнчи вăрмана аса илчĕ. Вăл çав вăрманта уçăлса çÿреме юратнă. Çуркунне ялан ĕнесене çитерсе çÿренĕ, уçă сывлăшра юрла-юрла савăннă. Çулла тĕрлĕрен çырла çиме, кăмпа татма кайнă. Вăл сĕтеклĕ туратсенчен шăхличсем туса янратнă. Кĕр енне вара пĕрни-пĕрнипе сап-сарă мăйăр пухса килнĕ. *(Агаков.)*

III. Хĕвел шевли Çавал çинче вут пек выляса тăрать. Хĕвел хĕртнипе пас тухать те вырăнтан вырăна куçса çÿрет. Çавал хĕрринчен пур еннелле те пахчасем сарăлса выртаççĕ. Ялтан пĕр километртра пысăк вăрман курăнса ларать. Хутран-ситрен çывăхра пăравус кăшкăрнă сасă янраса килет. *(Диктант сборникĕнчен.)*

## ПРЕДЛОЖЕНИН КĔÇЕН ЧЛЕНЕСЕМ.

Предложенин аслă членĕсен пĕлтерĕшне мĕн енчен те пулин ăнлантарса паракан сăмахсене *предложенин кĕçĕн членĕсем* теççĕ. Кĕçĕн членсем, подлежащие е сказуемăя ăнлантарса, вĕсен ушкăнне кĕреççĕ.

Предложенире кĕçĕн членсен вырăнĕ тĕрлĕ енпе палăрать:

1. Морфологире — кĕçĕн членсем мĕнле пуплев пайĕнчен пулнипе;

2. Синтаксисра — пăхăнтаракан сăмахпа мĕнле çыхăнура тăнипе;

3. Лексикăра — пĕр кĕçĕн член вырăнне теприне лартнипе.

Предложенин кĕçĕн членĕсем çинчен вĕрентнĕ чух та пысăк йывăрлăхсем тĕл пулаççĕ. Вăл йывăрлăхсем мĕнрен килеççĕ-ха? Пирĕн чĕлхере предложенин кĕçĕн членĕсем пирки татса паман ыйтусем сиксе тухаççĕ. (Причастипе деепричасти япала ячĕсене управлени йĕркипе тытса тăнă чухне тÿрĕ тата тÿрĕ мар дополнени пулни. Дополнени пулакан сăмах хăшпĕр сочетанисенче обстоятельствăна куçса кайни. Дополненипе определени хушшинчи татса паман ыйтусем. Уйрăлми сăмах майлашăвĕсемпе вăхăтлăх сăмах çыхăнăвĕсене мĕнле кĕçĕн членсен шутне кĕртесси. Дополнени пулакан инфинитивпа хутлă глагол-сказуемăй составне кĕрекен инфинитива пăтраштарни, вĕсен хушшинчи чикке уйăрса илесси т. ыт. те). Паллах, VI-мĕш класра кĕçĕн членсем çинчен вĕрентнĕ чухне тĕл пулакан йывăрлăхсем çинчен каласа тăма май çук. Кĕçĕн членсене вĕрентес пирки учебникпа программăра хускатнă ыйтусемпе çеç вĕренекенсене паллаштармалла. Ана пĕлни вĕренекенсене предложени тытăмне, сăмахсен çыхăнăвне тишкерме пулăшать, пред-


ПРЕДЛОЖЕНИРИ КĔÇĔН ЧЛЕНСЕМ
ДОПОЛНЕНИСЕМ
ОПРЕДЕЛЕНИСЕМ
ОБСТОЯТЕЛЬСТВĂСЕМ
ТӲРĔ ДОПОЛНЕНИ
ТӲРĔ МАР ДОПОЛНЕНИ
УПРАВ - ЛЕНИЛЛĔ ОПРЕ - ДЕЛЕНИ
ПРИМЫ - КАНИЛЛĔ ОПРЕ - ДЕЛЕНИ
ПРИЛО - ЖЕНИЛЛĔ ОПРЕ - ДЕЛЕНИ
ВЫРĂН
ВĂХĂТ
МĔНЛЕЛĔХ
ПИРКЕ
ТĔЛЛЕВ

ложенисене тĕрĕс йĕркелеме, çыру ĕçĕнче, практикăра усă курма çул уçса парать.

Çак темăна вĕреннĕ чухне пуçламăш шкулта илнĕ пĕлӳпе, пуплев пайĕсем çинчен вĕреннипе, усă курмалла, малтанхи пĕлӳсене анлăлатса, тарăнлатса памалла.

Темăна вĕрентнĕ май ачасене тĕрлĕрен творчествăллă хăнăхтару ĕçĕсем памалла, пĕр тĕрлĕ синтаксисла конструкцие тепĕр тĕрлипе ылмаштарма, пĕр кĕçĕн член вырăнне тепĕр кĕçĕн член кĕртсе лартма, пĕр пуплев пайĕ вырăнне теприпе усă курма хăнăхтарса пымалла. Тĕп тата кĕçĕн членсемпе пысăк мар изложенисем, сочиненисем, статьясем çырнă чухне усă курма хăнăхтармалла, предложенири вĕсен вырăнĕпе паллаштармалла. Статьясен е çыракан ĕçĕн стильне кура кĕçĕн членсем, хăйсен яланхи вырăнĕнчен пĕлсе куçарсан, чĕлхен илемлĕхĕпе çырнă ĕçĕн шухăшне вăйлатма пултарнине кăтартмалла.

Тема вĕренессине учитель творчествăллă ирттерме пултарсан, ачасен вĕренес кăмăлĕ ӳсет, вĕсем кĕçĕн членсемпе калаçу тата çыру чĕлхинче тĕрĕс усă курма хăнăхса пыраççĕ.

«Предложенин кĕçĕн членĕсем» темăна вĕрентме тытăниччен ачасене малтанхи урокра вĕреннисене аса илтермелле: мĕн вăл подлежащи тата сказуемăй, вĕсен предложенири вырăнĕ, вĕсен пулăвĕ тата ыйтăвĕсем. Килти ĕçе, сочинение, темиçе ачаран ыйтса тĕрĕслемелле те кирлĕ пек ăнлантарса памалла. Юлашкинчен предложенин тĕп членĕсем çинчен кĕскен пĕтĕмлетмелле те çĕнĕ тема çине куçмалла.

Темăна вĕрентнĕ чух çак схемăпа усă курма юрать. (40 стр. схемăна пăхăр).

## ДОПОЛНЕНИ.

**Тĕп пĕлтерĕшне улăштарман, пĕр-пĕр ят мар падежра тăракан предложенири кĕçĕн члена дополнени теççĕ.**

Дополнение вĕрентнĕ май япала ячĕсем вĕçленнипе вĕсен ыйтăвĕсем çинче чарăнса тăмалла, ят мар падежсенче япала ячĕсем мĕнле аффикс хушăннипе пулнине пăхса тухмалла. Унтан куçăмлă тата куçăмсăр глагол çинчен аса илмелле. Куçăмлă глаголсене аса илнĕ май дополнени çине куçмалла.

Куçăмлă глаголсем япала ячĕсене яланах тăву падежĕнче тытса тăраççĕ.

1. *Пионер йывăç ўстерет.* 2. *Колхозниксем кўлĕ тăваççĕ.*

*Пионерăн ĕçĕ* тўррĕн *йывăç* çине куçать, *йывăç, мĕн* ыйтура тăрса, тăву падежĕнче пулать. *Ўс* — глагол тĕпĕ, вăл хăй куçăмсăр глагол, ун çумне хистев залогĕн аффиксĕ — *тер* хушăннипе куçăмлă глагол пулса тăрать. Глаголăн ĕçĕ (йывăç) япала ячĕ çине тўррĕн куçса, ăна тăву падежне лартнине стрелкăпа туса кăтартмалла.

Иккĕмĕш предложенире колхозниксем тунă ĕç *кўлĕ* сăмах çине çавăн пекех тўррĕн куçнине кăтартса панă, *кўлĕ* япала ячĕ тăву падежĕнче тăрать. Ку предложенире куçăмлă глагол ĕçĕн вĕçне те куратпăр — вăл кўлĕ пулни. Унччен юханшыв ирĕклĕн юхса выртнă пулсан, халĕ, ăна пўлсе кўлĕ тăваççĕ. Куçăмлă глагол ĕçĕ, япала çине куçса, унпа мĕнле те пулин улшăну тума пултарать.

*1. Ача чўлмек çĕмĕрчĕ. 2. Платниксем пўрт турĕç. 3. Пулăçă пулă тытрĕ. 4. Çыравçă кĕнеке çырчĕ. 5. Асатте юмах калатчĕ. 6. Хĕвел ăшши юра ирĕлтерчĕ. 7. Сталевар хурçă шăратать. 8. Кушак шăши тытрĕ.*

Илсе кăтартнă япала ячĕсем тăву падежĕнче тăраççĕ, тўрĕ дополнени пулаççĕ.

Ытти ят мар падежра тăракан вĕçленекен сăмахсем тўрĕ мар дополнени пулаççĕ. Япала ячĕсем куçăмсăр глаголсемпе чухне ытти ят мар падежсенче пулаççĕ. Т ĕ с л ĕ х с е м:

*1. Пионерсен яланах малта пулмалла. 2. Атăла ахах шăрçи ярăп.* (Хурана тăвар яни.) *3. Çĕленпе калтан чĕлхи пĕр, тенĕ. (Ват. с.) 4. Пирĕн сочиненисем учительре. 5. Эпир библиотекарьтен кĕнекесем вулама илтĕмĕр.*

Малти тĕслĕхсенчен япала ячĕсем камăнлăх, пару, пĕрлелĕх, вырăн тата туху падежсенче тăнине куратпăр. Предложенире туртнă сăмахсем пурте тўрĕ мар дополнени пулни çинчен ăнлантармалла. Тўрĕ мар дополненисем пур вĕçленекен пуплев пайĕнчен те пулнине кирлĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетсе памалла. Дополненин ыйтăвĕсем: *камăн?* (пулать), *мĕнĕн?* (пулать), *кама? мĕне? мĕн? кампа? мĕнпе? камра? мĕнре? камран? мĕнрен?*

Анчах дополнени çинчен вĕрентнĕ чухне вĕренекенсене çакна асăрхаттармалла:

а) Қамӑнлӑх падежӗнчи япала ячӗсем тепӗр сӑмаха ӑнлачтарса параҫҫӗ пулсан, дополнени мар, определени пулаҫҫӗ.

*Тимӗрҫӗн пурти катӑк, тет.*

*Хӗлӗн хырӑмӗ пысӑк, тенӗ.*

Қамӑнлӑх падежӗнчи *тимӗрҫӗн, хӗлӗн* япала ячӗсем хӑйсем хыҫҫӑн тӑракан *пурти, хырӑмӗ* япала ячӗсене ӑнлантарса параҫҫӗ, вӗсемшӗн определени пулаҫҫӗ. Ҫакна тӗплӗн ӑнлантарса памасан, ачасем камӑнлӑх падежӗнчи определенисене дополненипе пӑтраштарма пултараҫҫӗ.

ӑ) Пару, вырӑн, туху падежӗсенче те дополненипе обстоятельствӑна пӑтраштармалли вырӑнсем пур. Предложенире чӗрӗ мар япаласем ҫинчен калаҫу пырать пулсан, сӑмах пару, вырӑн, туху падежӗсенче *ӑҫта, ӑҫтан?* ыйтусемпе ыйтӑнать те вырӑн обстоятельстви пулать.

*Сунарҫӑ вӑрмана* (ӑҫта?) *кӗчӗ. Сунарҫӑ вӑрманта* (ӑҫта?) *ҫӳрет. Сунарҫӑ вӑрмантан* (ӑҫтан?) *тухрӗ.*

б) Калаҫу чӗрӗ япала (ҫын, выльӑх-чӗрлӗх, кайӑк-кӗшӗк) ҫинчен пырсан, пару, вырӑн, туху падежӗсенче *кама? мӗне? камра? мӗнре? камран? мӗнрен?* ыйтусемпе ыйтӑнать те дополнени пулать.

1. *Эпӗ юлташа* (кама?) *кӗнеке патӑм.* 2. *Ача кушака* (мӗне?) *апат пачӗ.* 3. *Манӑн кӗнеке пиччере* (камра?). 4. *Паян пӗҫермелли какай чӗресре* (мӗнре? ӑҫта?). 5. *Пирӗн хушамат асаттерен* (камран?) *пуҫланнӑ.* 6. *Пур чӗрчунсем те арӑсланран* (мӗнрен?) *хӑраҫҫӗ.*

в) Япалана мӗнле те пулин материалтан тунине пӗлтерет пулсан, туху падежӗнче тӑракан чӗрӗ мар япала дополнени пулать.

1. *Ҫӗҫҫе хурҫӑран* (мӗнрен?) *тунӑ.* 2. *Ҫуртсене йывӑҫран* (мӗнрен?), *кирпӗчрен* (мӗнрен?), *кантӑкран* (мӗнрен?) *тӑваҫҫӗ.*

г) Пӗр япалана тепӗр япалапа танлаштарнӑ чухне иккӗмӗш япалине тӑву падежне лартаҫҫӗ, вӑл дополнени пулать.

1. *Самолёт вертолётран* (мӗнрен?) *хӑвӑрт ҫӳрет.* 2. *Атӑл Днепртан* (мӗнрен?) *анлӑ.* 3. *Саккӑр тӑваттӑран* (мӗнрен?) *икӗ хут пысӑк.*

д) *-ма, -ме* аффикслӑ инфинитив предложенире тӳрӗ дополнени те пулать. Ун пек чухне инфинитива ытти тӑву падежӗнчи вӗҫленекен сӑмахпа ылмаштарма пултаратпӑр.

*Пичче вулама* (мĕне? мĕн тума?) *юратать.*

*Пичче çĕршыва* (мĕне?) *юратать.*

*Ачасем ĕçлеме* (мĕне?) *хăнăхаççĕ.*

*Вак халăхсем вырăс чĕлхине* (мĕне?) *вĕренеççĕ.*

Танлаштарнă тĕслĕхрен предложенире инфинитив тӳрĕ дополнени пулнине куртăмăр. Куçăмлă глагол пĕр вĕçленекен сăмахшăн тӳрĕ дополнени пулсан, теприншĕн тӳрĕ мар дополнени те пулать. Вĕренекенсене чĕлхери çавăн пек явленисемпе паллаштармалла.

*Атте пахчана йывăç лартрĕ.*

Предложенири *«лартрĕ»* глагол йывăç сăмаха тӳрĕ дополненире, *пахчана* пару падежĕнчи япала ятне тӳрĕ мар дополненире тытса тăрать. Акă унăн схеми.




Кун йышши тĕслĕхсене вĕренекенсене хăйсене туптармалла, разбор тутармалла, тӳрĕ тата тӳрĕ мар дополненисене уйăрма вĕрентмелле.

Глагол кăна мар, глагол ушкăнĕнче тăракан причасти, деепричасти, инфинитив та çавăн пекех вĕçленекен сăмахсене тӳрĕ тата тӳрĕ мар дополненире тытса тăма пултараççĕ. Предложенисене разбор тунă май ачасене чĕлхери çак уйрăмлăх çинчен те каламалла.

Петюк сăвă кĕнекине *вуларĕ.*

Петюк сăвă кĕнекине *вуласа тухрĕ.*

Петюк сăвă кĕнекине *вулама пуçларĕ.*

Петюк сăвă кĕнекине *вулакан ача.*

Шкул ачисене çак темăна вĕрентнĕ чух стиль тĕлĕшĕнчен дополненипе тĕрĕс усă курма хăнăхтармалла. Вĕренекенсем хăйсен çыру ĕçĕнчи стиль йăнăшĕсене асăрхаса пыма тивĕçлĕ. Учителĕн стиль тĕлĕшĕнчен хăшĕ тĕрĕссипе йăнăшне уйăрма вĕрентмелле. Калаçупа çыру чĕлхинче хыççăмахлă тата хыççăмахсăр дополненисем пулаççĕ.

Т ĕ с л ĕ х р е н: 1. *Аппа шыва анчĕ.*
2. *Аппа шыв патне анчĕ.*

## ОПРЕДЕЛЕНИ.

Чăваш чĕлхинче определени икĕ тĕрлĕ пулать: управлени тата примыкани йĕркипе çыхăннă определенисем. Управлени йĕркипе çыхăннă определенисем камăнлăх падежĕнчи вĕçленекен сăмахсенчен пулаççĕ. Вĕçленекен сăмахсем (япала ячĕ, *-и, -скер* йышăннă паллă ячĕ, местоимени) камăнлăх падежра, тепĕр сăмах умĕнче тăрса, ăна ăнлантарса параççĕ пулсан, управлени йĕркипе çыхăннă определени пулаççĕ.

1. Юлхавăн куллен уяв, теççĕ *(Ват. сăм.)* 2. Çак кĕрешӳре шуррисен çарĕ пĕтĕмпех пĕтрĕ теме те юрать. *(Кр.-Асл.)* 3. Пирĕн Петя савăнса форточка уçса ярать. 4. Пирĕн ĕç — тăшман пуçне хĕç. *(Ват. сăм.)*

Вĕçленекен сăмах камăнлăх падежĕн кĕске форминче те тăма пултарать, ăна пурпĕрех управлениллĕ определенипе çыхăннă тесе шутламалла.

1. Пичче ачисем яланах ман пата кĕнеке вулама çӳреççĕ. 2. Асатте юмахне лайăх астуса юлтăм. 3. Колхоз уй-хирĕ сип-симĕс ешерет.

Паллă ячĕ, хисеп ячĕ, кăтарту, ыйту, паллă мар, паллă местоименисем, причастисем тата хăшпĕр сăмах майлашăвĕсем, япала ячĕ умĕн тăрса, ăна ăнлантарса панă чухне определени пулаççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе примыкани йĕркипе çыхăнаççĕ. Кун пек определение примыканиллĕ определени теме пулать.

Определени çинчен вĕренекенсене паллаштарнă чухне примыкани йĕркипе çыхăннă определенисенчен пуçламалла. Малтан паллă ячĕ определени пулнипе тĕслĕхсем памалла, ачасене те ун пек тĕслĕхсем туптармалла. Паллă ячĕ япала ячĕпе мĕнле çыхăнура тăнине кăтартса хăвармалла.

*Ешĕл* курăк хушшинче  
*Сап-сарă* чечек ӳсет.  
*Аслă* Силпи ялĕнче  
Нарспи *ятлă* хĕр ӳсет. *(К. Ив.)*

Çак строфари курсивпа илнĕ сăмахсем паллă ятĕнчен пулнă определенисем, вĕсем хăйсен хыççăн тăракан япала ячĕсене ăнлантарса параççĕ. Учитель сăвăри определенисене хăй тупса памасть, ачасене ыйту урлă туптарать. Тĕслĕхри определенисем *мĕнле?* ыйтура тăраççĕ.

Вĕренекенсемшĕн *-и, -хи* аффикс йышăннă паллă ячĕсем йывăртарах, çавăнпа вĕсем çинче ытларах чарăнса тăмалла.

1. *Ирхи* çăлтăр хăпарса,
Йăл-йăл кулать тӳпере. *(К. Ив.)*

2. *Хушăлкари* чăвашсем
Çывăраççĕ харлатса;
*Анкартинчи* тăмана
Анчах вĕçет ухлатса. *(К. Ив.)*

Учитель вăхăтпа вырăна кăтартакан паллă ячĕсен пулăвне, вĕсен ыйтăвне аса илет. Япала вырăнне кăтартакан паллă ячĕсем *ăçти?,* вăхăтне кăтартаканнисем *хăçанхи?* ыйтупа ыйтăнаççĕ. Ун пек паллă ячĕсене *-и* сасăпа пĕтекен япала ячĕпе пăтраштарма кирлĕ марри çинчен те асăрхаттарса хăварать: *пăри* (мĕн?) — *пăрири* (мĕнри?), *анкарти* (мĕн?) — *анкартинчи* (ăçти?), *Нарспи* (кам?) — *Нарспири* (камри?).

Кашни хисеп ячĕпе причасти япала ячĕшĕн определени пулни çинчен чарăнса тăмалла, учебникри таблицăпа усă курса ăнлантармалла.

Тата хăшпĕр местоименисемпе сăмах майлашăвĕсем определени пулма пултарни çинчен каламасăр хăвармалла мар.

Сăпат местоименийĕсем ят мар падежра управленилле определени пулни паллă ĕнтĕ. Кăтарту, ыйту, паллă мар, паллă местоименисем ят падежĕнчи япала ячĕшĕн примыканиллĕ определени пулаççĕ.

Ана çакăн пек тĕслĕхсемпе кăтартса памалла. Определени пулакан местоименисене палăртса çырнă.

1. **Çакă** çут тĕнчере тăлăхах юлтăм. *(Лерм.)* 2. **Çав** сăмахсенчен Кирибей, мĕскĕн, хĕллехи юр пек шуралса кайрĕ. *(Лерм.)* 3. **Кун пек** ырă кунсем çанталăк нумайччен улшăнмасăр уяр тăнă чух çеç пулаççĕ. *(Тург.)* 4. Каç пуласса **ку** çумăр пĕлĕчĕсем те саланаççĕ. *(Тург.)* 5. Пирĕн ялта **темĕн те пĕр** сăмах сарăла пуçларĕ. *(Тург.)* 6. **Пĕтĕм** тĕнчене лăпкă йăваш çутă витсе тăрать. *(Тург.)* 7. **Кам кăкри** сĕтне çисе ӳсрĕн-ши? *(Шел.)* 8. Урампа **темĕнле** çын иртсе кайрĕ. 9. Пухăва **темĕн чухлĕ** халăх пухăннă.

Çак тĕслĕхсене ăнлантару диктанчĕ вырăнне çыртармалла та определени пулакан местоименисене аялтан

пĕр йĕрпе туртма хушмалла, ăнлантарса паракан сăмаха татăклă йĕрпе палăртмалла.

Ăнлантару диктанчĕ вăхăтĕнче вĕренекенсем мĕн пĕлменнине учителĕн ăнлантарса хăвармалла.

Определенисем сăмах майлашăвĕнчен тăни çинчен те тĕслĕхсем памалла, вĕсен пулăвĕпе паллаштармалла. Паллах, вĕренекенсене пур йышши сăмах майлашăвĕсем çинчен каласа ăнлантарма май çук. Пуринчен ытларах тĕл пулакан сăмах майлашăвĕсем çинче чарăнса тăмалла. Вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ: а) икĕ е виçĕ паллă ячĕ, юнашар тăрса, япала ятне тĕрлĕ енчен кăтартса параççĕ. (К ă в а к т ă р ă пĕлĕтре тăри сасси илтĕнет.); á) хисеп ячĕпе паллă ячĕ пĕрлешсе япала ятне ăнлантарса тăраççĕ. (И к ç ĕ р с а к ă р м и л л и о н л ă совет халăхĕ коммунизм тăвать.); б) япала ячĕпе тăракан хыççăмах, *-и* аффикс йышăнса, паллă ятне тухать те хăй хыçĕнче тăракан тепĕр япала ятне ăнлантарать. (П ӳ р т у м ĕ н ч и улмуççи çил вĕрмессерен хумханать.); в) местоименипе камăнлăх падежĕнчи япала ячĕ е местоименипе паллă ячĕ япала ячĕшĕн определени пулни. (П и р ĕ н я л ă н çамрăкĕсем юрламашкăн пит ăста. Пухура п ĕ т ĕ м ĕ ç л ĕ халăх.); г) причастипе паллă ячĕ япала ятне ăнлантарса тăни. (М а л а л л и а с л ă ç у л а пурте куратпăр.)

Определение вĕрентнĕ май вĕренекенсемпе пысăках мар синтаксис разборĕ е творчество ĕçĕ туса ирттермелле. Синтаксис разборĕ валли учебникри 38-мĕш хăнăхтарăва илсе, ăна класрах тутармалла, çавăнтах тĕрĕслемелле. Творчество ĕçне туса ирттерес пулсан, çакна сĕнмелле. Вĕренекенсене япала ячĕ çеç памалла, вĕренекенсем вĕсен умне кирлĕ паллă ячĕсем — определенисем лартса, предложенисем тăваççĕ. Е, çав япала ячĕсемпе усă курсах, пысăк мар сочинени çыраççĕ. Вара ăна валли тема ятне, сочиненин содержанипе çыхăнма пултарнă сăмахсене парас пулать.

Сочинени валли панă тема ячĕсем: 1. *Ирхи вăрман.* 2. *Шкул пахчи.* 3. *Пионерсен ĕçĕ.* 4. *Вĕренекенсем колхозра ĕçлени.* 5. *Эпĕ станок çинче ĕçлеме вĕренни.* 6. *Çуллахи вăхăт.* 7. *Эпĕ кĕнекене юратни.* 8. *Хĕллехи çанталăк.* 9. *Пирĕн аслă çĕршыв.* 10. *Телейлĕ ачасем.*

К и л е в а л л и 11 § вуласа ăнланма, 39-мĕш хăнăхтарăва туса килме ĕç парса ямалла.

## ПРИЧАСТИЛЛĔ СĂМАХ ÇАВРĂНĂШĔСЕМ.

Определенисен шутне причастиллĕ сăмах çаврăнăшĕсем те кĕреççĕ. Причасти хăйне пăхăнса тăракан сăмахсемпе пĕрле причастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ тăвать. Причастиллĕ сăмах çаврăнăшĕсем *-и, -скер* аффикс йышăннă причастисенчен пулаççĕ.

Причастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ хăй ăнлантаракан сăмах умĕн те, хыççăн та тăма пултарать. Ăна VIII-мĕш класра уйрăмтăран определени тесе вĕренеççĕ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр тинĕс, *çыр хĕрринче юлхавлăн хашкаканскер,* тĕлĕрсе кайнă. *(М. Г.) Кĕрешме кăна тытăннăскерĕн,* Мишшан мелĕ те çитмест-ха... *(Илп.)*

Сăмах çаврăнăшĕнчи причасти, хăй ăнлантарса тăракан сăмахпа пĕр падежра, пĕр хисепре тăрса, согласовани йĕркипе çыхăннă.

Юрă çыракана, *кунта вĕрентекенскере,* питĕ килĕштерсе пăрахнăччĕ вăл ун чухне. *(Арт.)* Виктор, *тунсăхласа ларнăскер,* хăй пĕлнĕ пĕртен-пĕр ташă çеммине хаваслăн туртса ячĕ. *(Арт.)*

Причасти çумне *-и* аффикс хушăнсан та сăмах çаврăнăшĕ тăвать. Вутти, пĕлтĕр хатĕрлени, шултра. *(Арт.)* Тыррине, çĕрулмине, *мĕн чухлĕ хывнине,* тӳлерĕм. *(Труб.)*

Причастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ хăй ăнлантаракан сăмахсăр та тăма пултарать, ун чухне вара причастийĕ определени мар, подлежащи е дополнени пулать.

Кĕпер çинче тăракансем, парома салтса, шалалла тĕксе ячĕç. *(Мранькка.)* Тинĕс тĕпĕнче нихçан шикленсе ӳкменскер, шланг çыхланас-мĕн пулсан, вара çӳлтисене нихçан та пăлхатмасть. *(Бурн.).* Çырма урлă каçаканскерне эпир аякранах куртăмăр. *(Алент.).* Учителĕн ачасене темăпа паллаштарнă май чарăну паллисем лартассине ăнлантарса памалла. Чарăну палли лартассипе ĕçленĕ чух çак причастиллĕ сăмах майлашăвĕсене калаçура мĕнле палăртса каласси çинче те чарăнса тăмалла. Причастиллĕ сăмах çаврăнăшне предложенири ытти сăмахсенчен пауза туса палăртса калатпăр. Çакна тĕрĕс калассипе те класра ĕçлемелле. Каланă чух причастиллĕ сăмах майлашăвĕ çинче сасă кăштах анать.

Арманов, чухăн çын ывăлĕ пулнăскер, пĕтĕм чĕререн халăх хушшинчи ĕçе паранчĕ. *(Труб.)*

Давиденко, нихçан та шӳт тумасăр ирттерменскер, хальхинче темшĕн тытăнса тăчĕ. *(Бурн.)*

Причастиллĕ сăмах çаврăнăшне предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ. Вĕренекенсене çак правилăпа та паллаштармалла, чарăну паллисем лартма хăнăхтармалла.

1) Аякран пăхсан, Атăлкассине ял теме йывăр, йăмрасем айне путнăскер, вăл вăрман кати пекех курăнать. *(Турх.)* 2. Камышин, тин çеç килсе çитнĕскер, кĕçĕр колхозра пуху пулассине пĕлет иккен. *(Турх.)* 3. Малта пыраканскер, вăл, паллах, Тутаркассипе ăмăртассинчен хăрасах тăмĕ. *(Турх.)* 4. Самукова пуçран çапса антратнă виçĕ нимĕç, вырăс офицерне тытнипе питĕ савăннăскерсем, çуйăхма пуçларĕç. *(Саламбек.)* 5. Чун хавхаланнипе сасартăк çирĕпленнĕскер, вăл ывăлĕ хыçне тăчĕ. *(М. Г.)* 6. Ваçук, пирĕнтен малта çак çулпах пыраканни, ыраш хушшине кĕрсе çухалчĕ.

*-и, -скер* аффикс йышăннă причастиллĕ сăмах çаврăнăшĕн хăйне ăнлантаракан сăмахĕ çук пулсан, ăна запятой лартса уйăрмаççĕ, мĕншĕн тесен предложенире вăл подлежащи е дополнени пулать.

*Ĕçе юратаканскер* кирек мĕнле ĕçе те хисеплет. *Ăмăртура мала тухнисене* пурне те хаклă парнесем пачĕç. *Пӳрте кăвак шинель тăхăннăскер* вăшт çеç кĕрсе тăчĕ. *(М. Г.)*

Юлашкинчен учитель ку темăпа ăнлантару е творчество ĕçĕ çыртарать.

Вăл диктантăн тексчĕ.

1. Леврен, кĕнеке-хаçат тавраш не чунтан юратаканскер, калама çук хĕпĕртерĕ. *(Элк.)* 2. Вăрçăра япун хĕçпăшалĕпе пĕтменскер, халĕ нимле хунхуз та хăрушă мар ĕнтĕ ăна. *(Элк.)* 3. Интеллигент, çемçе сасăпа калаçаканскер, сĕтел патне çитсе тăрсан, вырăс чĕлхи çине куçрĕ. *(Элк.)* 4. Нумай калаçнипе вĕриленсе çитнĕскер, пĕр сăлтавсăрах тата хăй мĕн тунине хăй те шута илмесĕрех, чӳречине карса хунă шурă чаршава вăл аяккалла сирсе хучĕ. *(Элк.)* 5. Витĕмлĕн калаçаканскер, хăйĕн хĕрӳллĕ сăмахĕсемпе вăл çынсен чĕрисене революци вучĕпе чĕртсе ячĕ. *(Элк.)* 6. Сĕтел çине ӳпĕнерех чавсаланнăскер, вăл кĕленче стаканти шыв кантăкран кĕрекен хĕвел çутипе йăлтăртатса выляни çине ним сăлтавсăр пăхса ларчĕ. *(Элк.)* 7. Хаваслă калаçаканскер пирĕн ушкăнпа часах пĕрлешсе кайрĕ. 8. Кĕрешӳре çĕнтерекенскерсене акатуйри халăх ăшшăн кĕтсе илчĕ.

## ПРИЛОЖЕНИ.

Определенисен шутне приложени те кӗрет. Анчах малтан вӗрентнӗ определенисемпе танлаштарсан, ку определенин хӑйне май уйрӑмлӑх пур. Вӑл, япалана тепӗр ят парса, ун умӗнче тӑрать. Япалана тепӗр ят панӑ чухне вӑл унӑн мӗнлелӗхне, калӑпӑшне, ӗçне-хӗлне, çулне, профессине, вырӑнне, пайӑр ятне, ӑс-тӑнне т. ыт. кӑтартма пултарать. Ят парасси япалан содержанипе, пӗлтерӗшӗпе таччӑн çыхӑннӑ. Предложени пулакан сӑмах япала ячӗ умӗнче тӑрать те уншӑн определени пулать. Приложени пулакан сӑмахпа япала ячӗ пӗр-пӗтӗмле пӗлтерӗшре пулаççӗ. Вӗсем пӗр-пӗринпе примыкани йӗркипе çыхӑнаççӗ.

Фронтовик-салтак киле таврӑнчӗ.

Спутник — аслӑ тӗнче уççи карапӗ çӗр тавра мухтавлӑн вӗççе çӳрет.

Хӑшпӗр приложенисем, хӑйсем ӑнлантаракан сӑмахпа пӗр падежра, пӗр хисепре тӑрса, согласовани йӗркипе çыхӑнаççӗ.

Этемӗн тискер *тӑшманӗсене — нимӗç фашисчӗсене* Совет Çарӗ аркатса тӑкрӗ.

Совет халӑхӗн *çулпуçне — Коммунистсен партине* пӗтӗм совет халӑхӗ чун-чӗререн юратать.

Панӑ тӗслӗхсенчи приложенисем тӑву падежӗнче, *фашисчӗсене, партине* япала ячӗсем те тӑву падежӗнче тӑраççӗ. Приложенипе япала ячӗсем пӗр-пӗринпе согласовани йӗркипе çыхӑннине куратпӑр.

Темӑна ӑнлантарнӑ чухне çакӑн пек тӗслӗхсем памалла. 1. Склад умӗнче *салтак-хуралçӑ* уткаласа çӳрет. 2. Паян эпӗ *инженер-учительпе* калаçрӑм. 3. *«Пучах» колхоз* шкула ялан пулӑшать. 4. *«Çамрӑк коммунист» хаçата* пионерсем те юратса вулаççӗ. 5. *Бичурин учӗнӑй* Чӑваш çӗршывӗнче çуралнӑ. 6. Пур пӗлӗвӗн *çӑлкуçне — кӗнекене* юрат. *(М. Г.)*

Қашни предложение разбор тунӑ май курсивпа уйӑрса палӑртнӑ сӑмахсем çинче ытларах чарӑнса тӑмалла. Қалаçӑва вӗренекенсене тимлӗн явӑçтармалла.

Вӗренекенсем пӗрремӗш предложение разбор тӑваççӗ: унта *хуралçӑ* сӑмах — подлежащи, *уткаласа çӳрет*— хутлӑ глагол сказуемӑй.

— Кам хуралçă? Е мĕнле хуралçă? тесе ыйтма та пулать.

Предложенире *салтак-хуралçă* пирки калană.

Хуралçăсем йышлă пулма пултараççĕ, автор кунта, ытти хуралçăсенчен уйăрса, пĕр çын — *салтак-хуралçă* пирки сăмах хускатать. *Хуралçă* камне лайăхрах палăртма, ăнлантармалла тума тепĕр ят парать. Кунта ахаль хуралçă мар, *салтак-хуралçă* çинчен сăмах пырать. *Салтак* — палăртса, çĕнĕ ят пană сăмах *хуралçă* сăмахшăн определени пулать, анчах пĕр танлăшра тăракан сăмах пирки ăна хушнă сăмах е приложени, тетпĕр. Приложени пулакан сăмах хăй ăнлантаракан сăмах умĕн тăрать. уншăн определени шутланать. Пайăр мар ятран пулнă приложенисене дефиспа çыраççĕ. Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш предложенисене разбор тусан, приложенисем колхоз, хаçат ячĕсенчен пулнине кураççĕ. Ун пек чухне пайăр ячĕсене кавычкăна илсе çыраççĕ. Пайăр ятсене хăçан кавычкăна илсе çырмалли çинчен вĕренекенсенчен ыйтмалла: вĕсене вăл темăна V-мĕш класрах вĕрентнĕ.

Çын хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ, псевдонимĕ, тăрăхласа пană ячĕ, выльăх-чĕрлĕх ячĕ, ял-хула, шыв-шур, улăхçаран ячĕсем — пурте вĕсем пайăр ятсем — приложени пулаççĕ, вĕсемпе ăнлантаракан сăмахсем хушшине дефис лартса çырмаççĕ. Ана учитель 5-мĕш тĕслĕхе разбор тунă чух ăнлантарса хăварать.

Юлашкинчен, улттăмĕш предложенире анлă приложени пană, вăл *кĕнекене* сăмахпа согласовани йĕркипе çыхăнса тăрать: приложени те, вăл ăнлантаракан сăмах та пĕрреллĕ хисепри, тăву падежĕнчи япала ячĕсем пулаççĕ. Кун пек чухне приложенипе вăл ăнлантаракан сăмах хушшине тире лартса çырмалли çинчен ачасене тĕплĕрех каласа памалла.

Вĕренекенсен чĕлхине аталантарас шутпа тата ăнлантарнине çирĕплетес тĕллевпе уйрăм хăнăхтару ĕçĕсем памалла. Вĕренекенсене çакăн пек ĕç пама юрать.

Кунти сăмах майлашăвĕсене улăштарса, приложенисем туса çырччăр: *хăравçă мулкач, пулă тытакан старик, сунара çӳрекен агроном, кĕнеке çыракан учитель, çĕршыва юратакан комсомолец, сад ĕçне пĕлекен колхозник, ăслăлăх ĕçне тăвакан агроном, пур ĕçе те пуçаракан коммунист.*

Тĕслĕх: *Çĕршыва юратакан комсомолец — комсомолец-патриот.*

Е доска ҫине уйрăм сăмахсем кăна ҫырса памалла, вĕренекенсем ҫав сăмахсем ҫумне кирлĕ приложенисем хушса ҫыраççĕ.

*Кĕнеке, вăрман, уйăх, пионер, атте, врач, мир, танкист, летчик, рабочи.*

Тĕслĕхшĕн туса кăтартни: *пĕлӳ ҫăлкуçĕ — кĕнеке, ҫĕр спутникĕ — уйăх.*

Киле 12 § вуласа ăнланма, 42-мĕш хăнăхтарăва туса килме парса ямалла.

## ОБСТОЯТЕЛЬСТВАСЕМ.

Обстоятельствăсем ҫинчен пуçламăш шкулта кăштах паллаштараççĕ. VI-мĕш класра ку темăна малалла анлăрах вĕрентмелле. Пĕрремĕш сехетĕнче обстоятельствăсем ҫинчен пĕтĕмĕшле аса илмелле те творчество диктанчĕ ҫыртармалла. Обстоятельствăри сăмахсем мĕнле пуплев пайĕнчен пулнипе паллаштармалла, мĕншĕн тесен вĕренекенсем обстоятельство пулакан сăмахсене час-часах наречипе пăтраштараççĕ.

Учитель ачасене обстоятельство тĕрлĕ пуплев пайĕнчен пулнине кăтартса парать.

Ана валли ҫакăн пек таблица выранлă пулмалла.

**Обстоятельствăсен пулăвĕ.**

| №№ йĕр. Мĕнле пуплев пайĕнчен пулни | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1. Наречирен | 1. *Паян* пионерсен сборе пулать. 2. Ачасем *хавассăн* юрлаççĕ. |
| 2. Деепричастирен | 1. Пӳрт хыҫĕнче *шавласа* Ачи-пăчи выляççĕ. (*К. Ив.*) 2. Гранатăсем *урлă-пирлĕ шартлатса* ҫурăлчĕç. |
| 3. Инфинитивран | 1. Командир боецсене тăшмана *ҫĕнтерме* хавхалантарать. 2. Атте пире *ĕçлеме* вĕрентет. |
| 4. Япала ятĕнчен | 1. Автобус *Канаша* вĕçтерет. 2. Пичче *хулара* вĕренет. |
| 5. Хыçсăмахпа япала ятĕнчен | 1. Экскурсантсем *вăрман хушшипе* пыраççĕ. 2. *Ял ҫинче* сăмах ҫӳрет. |
| 6. Сăмах майлашăвĕнчен | 1. *Ыран каçхине* виççĕмĕш спутнике хамăр ял тĕлĕнче куратпăр. 2. Тырă выракансем *кун каçиччен* ĕçлесе ырчĕç. 3. Разведчик *чĕрне вĕçĕн* утса пычĕ. |

| №№ йёрки. | Мĕнле пуплев пайĕнчен пулни. | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 7. | Паллă ятĕнчен | 1. Ку кĕпене *хитререн* тăхăнтăм.<br>2. Асанне пурçăна *çÿхерен* туянмарĕ. |
| 8. | Хисеп ятĕнчен | 1. Манăн шăллăм *пиллĕкре* саспаллисене пĕлекен пулчĕ.<br>2. Асатте *сакăрвуннăран* та иртрĕ ĕнтĕ. |
| 9. | Причастирен | 1. Вăл хăранипе *шурса* кайрĕ.<br>2. Атте *тарăхнăран* пире хытă вăрçрĕ.<br>3. Вĕренекенсем *пĕлнишĕн* учитель савăнчĕ. |

Çак темăна вĕренсе пĕтеричченех таблица класра çакăнса тăтăр. Таблицăра ачасем мĕн кураççĕ-ха? Хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен тăракан пур пуплев пайĕ те (местоименисĕр пуçне) обстоятельство пулма пултарнине ăнланса илеççĕ.

Малалла учитель творчество диктанчĕ çыртарать. Текст:

Пĕр çулхине эпĕ утарта, Палюк мучисем патĕнче, уйăх ытла пурăнтăм. Унта сывлăш уçă, йĕри-тавра вăрман. Сăр шывĕ те юнашарах. Ун пек çĕрте камăн пурăнас килмĕ!

Ун чухне хурăн çырли çеç мар, хăмла çырли те пиçсе çитнĕччĕ. Эпĕ кашни кун çырла пухатăп. Настаç кинеми нÿхрепрен йÿçĕхмен сĕт илсе кĕрет. Сĕтпе çырла хутăштарса çиетпĕр. Унтан тутлă апат мĕн пултăр?

— Ыран эпĕ те пыратăп. Пĕр тĕлте хăмла çырли питĕ нумай, вăл выртăна никам та пĕлмест,— терĕ Палюк мучи.

Тепĕр кунне ирех Палюк мучипе пĕр пысăк чĕрес, пĕр витре илтĕмĕр те вăрмана тухса кайрăмăр.

Палюк мучи мана халиччен çын çÿремен çулпа тÿрех темĕнле пĕчĕк уçланкăна илсе пычĕ. *(Г. Харл.)*.

Текстра 92 сăмах, обстоятельствăсем — 21.

Диктанта çыртармалла та обстоятельствăсене аялтан татăкла - - - - йĕрпе туртма хушмалла.

## ВЫРĂН ОБСТОЯТЕЛЬСТВИ.

Вырăн обстоятельстви ĕç хăш вырăнта пулнине кăтартса парать. Пулăвĕ енчен илсен, вырăн обстоятельстви пару, вырăн, туху падежĕнчи ят сăмахсенчен, наречирен, сăмах майлашăвĕнчен пулать. Унăн ыйтăвĕ-

сем: *ăçта? ăçтан? ăçталла?* Вырăн обстоятельстви глагол-сказуемăя ăнлантарса парать.

1. Çынсем *пухуран* саланаççĕ. *(Труб.)* 2. *Çав каçах* эпĕ Чĕмпĕре çитрĕм. *(Пушк.)* 3. Лесник лашана крыльцо *умнех* илсе пычĕ. *(Тург.)* 4. Пирĕн отряд вĕренӳре *малта* пырать.

Вырăн обстоятельствинчи сăмах предложенин пĕтĕм шухăшне палăртса каланă чух предложени пуçламăшĕнче те тăма пултарать.

1. *Ялсенче* колхозсем хăвăрт чăмăртанаççĕ. *(Труб.)* 2. *Урай варринче* тимĕр кăмака çунать. *(Уяр.)* 3. *Пӳртре* шăрчăк чĕриклетет, сехет шаккать. *(И. Мучи.)* 4. *Малта* хуп-хура çумăр пĕлĕчĕ *вăрман урлă* йăсăрланса хăпарни курăнать. *(Тург.)* 5. *Шупашкарта* ир-ирех завод сасси кĕрлет. *(Тукт.)*

Ачасем вырăн обстоятельствинчи сăмаха яланах наречи теме пултараççĕ. Çак йăнăша çинче учителĕн уйрăмах чарăнса тăма кирлĕ.

Вырăн обстоятельстви наречирен те, япала ятĕнчен те, сăмах майлашăвĕсенчен те пулать.

1. Çакă çутă тĕнчере (ăçта?) (вырăн падежĕнчи япала ячĕ — обстоятельство) вăйли çук та этемрен. *(К. Ив.)*

2. Аслă çул таçта аякка тăсăлса выртать. *(Кр.-Асли)*

3. Кăнтăр енче хĕлле те сивĕ пулмасть.

Вĕренекенсене çак тĕслĕхсенчи аялтан туртнă сăмахсене разбор тутармалла. Вырăн обстоятельстви пулакан сăмахсем япала ятĕнчен, япала ячĕпе хыççăмахран, наречирен пулнине ăнлантарса памалла.

Киле Иван Мучи çырнă «Хурăнлă çул» калаври малтанхи виçĕ абзацра тĕл пулакан вырăн обстоятельствисене килти тетрадь çине çырса илме, вăл обстоятельствăсем мĕнле пуплев пайĕнчен пулнине кăтартма ĕç парса ямалла.

Е çакăн пек предложенисене çырса илме памалла, унта тĕл пулакан вырăн обстоятельствине аялтан туртма хушмалла.

1. Пӳрт çумĕнче чие пахчийĕ,
Сĕрлеççĕ пахчара хуртсем.
Хиртен килеççĕ сухаççем,
Ялта янрать хĕрсен сассийĕ.
Килте кĕтеççĕ амăшсем.

*(Т. Шевч.)*

2. Виç юланут вăрманта
Йĕр йĕрлесе çӳреççĕ;
Пĕри кунта, леш унта
Темĕнле йĕр йĕрлеççĕ.

*(К. Ив.)*.

3. Ялта савăнăçлă хыпара никамран малтан клуб пуçлăхĕ Николай Васильевич Емельянов пĕлчĕ. Часах правление ниçта шăнăçми халăх пырса тулчĕ. Çынсем хăйсен мухтавлă геройĕсене алă çинче çĕклесе урама илсе тухрĕç те сывлăшалла ывăтса сиктерсе тăчĕç. Темиçе минутран халăх, никам каламасăрах, колхоз правленийĕ умне митинга пуçтарăнчĕ. *(Тукт.)*

4. Йĕпреçрен икĕ километрта Шăрттан ятлă йăмраллă пысăках мар ял пур. Унта Совет влаçĕ пулнăранпа пурнăç тĕлĕнмелле улшăннă. Кунта обществăлла хуçалăх çĕнĕ самана тивлечĕпе аталаннă. Ялта машинăсем кĕрлеççĕ. Çакăнта пурăнма юлнă ĕнтĕ Левентей — мухтавлă броненосецăн чаплă матросĕ. *(С. Селезнёв.)*

## ВĂХĂТ ОБСТОЯТЕЛЬСТВИ.

Предложенири ĕç хăçан пулнине вăхăт обстоятельстви кăтартса парать. Вăхăт обстоятельстви наречипе хăшпĕр формăри деепричастирен пулать. Ытларах çакăн пек вăхăт наречийĕсем тĕл пулаççĕ: **паян, ыран, ĕнер, кĕçĕр, кăçал, çуркунне, кĕркунне, каçхине, ирхине, кăнтăрла, каçпа, çулла, хĕлле, пĕркун, тахçан, авал, сĕм авал** т. ыт. те.

**-Иччен, -массерен, -мессерен, -сассăн, -сессĕн, -сан, -сен** аффикссем хушăннипе пулнă деепричастисенчен те вăхăта кăтартакан обстоятельствăсем пулаççĕ. Унăн ыйтăвĕсем: **хăçан? хăçанччен? хăçантанпа?**

Вĕренӳ материалне ăнлантарма çакăн пек тĕслĕхсем илме пулать.

1. Ирхине пирĕн отряда тата тăхăр партизан хутшăнчĕ. *(Уяр.)* 2. Гастелло ячĕ пире сĕм тĕттĕм çĕрсенче çутă çăлтăр пек çул кăтартса пырать. *(Н. Орлов.)* 3. Виçĕ кун каялла çак пĕчĕк пӳрте çынсем пуçтарăннăччĕ. *(Турх.)*. 4. Тăшман сисиччен эпир кунта партизансене чĕнсе килме пултаратпăр. *(Арт.)* 5. Кашни çиçĕм çиçмессерен аçа çапса кисретет. *(Элк.)* 6. Колхоз пуçланнăранпах вăл пахча çимĕç енĕпе ĕçлет. *(Труб.)* 7. Çурçĕр çилĕ вĕрсен, çанталăк сивĕтме тытăнчĕ. 8. Кăнтăр тĕлĕсенче çанталăк çав тери шăрăх тăнă. *(Элк.)*

Çӳлте панă предложенисенче вĕренекенсен умне кирлĕ ыйтусем лартса, учитель вăхăт обстоятельствисене туптарать, вĕсен пулăвĕпе паллаштарать. Вăхăт обстоятельствинчи сăмах наречирен, деепричастирен, япала ячĕпе хыççăмахран тăни çинчен калать.

Темăна ăнлантарнă хыççăн вĕренекенсене вăхăт

обстоятельствипе тĕслĕхсем туптармалла, уйрăм предложенисене доска çине çырса разбор тутармалла е пысăк мар творчество диктанчĕ ирттермелле.

## ПИРКЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВИ.

Вĕренекенсемшĕн пирке обстоятельстви йывăртарах тема. Ана час-часах тĕллев обстоятельствипе пăтраштараççĕ. Пирке обстоятельстви, пулăвĕ енчен илсен те, ытла уçăмлă мар, вăл ытларах япала тата причастин пĕрлелĕхпе туху падежĕсенче тĕл пулать, вĕçленекен формăри сăмахсенчен пулать.

Вĕренекенсен ăнланăвĕпе обстоятельствáсем наречирен çеç пулмалла пек, çавăнпа та пирке обстоятельствине вĕсем часах уйăрса илеймеççĕ.

Пĕрлелĕх тата туху падежĕнчи вĕçленекен сăмахсем (вĕсем тĕрлĕрен пуплев падежĕнче пулма пултараççĕ) **мĕн пирки? мĕншĕн?** ыйтусем çине ответленĕ чух пирке обстоятельстви пулаççĕ, ытти ыйтусем çине ответлесен, предложенири урăх член пулма кирлĕ.

Пирке обстоятельстви ĕç мĕнле сăлтавпа пулнине çеç уçса парать, нимĕнле тĕллеве те кăтартмасть. Çакна вĕренекенсене ăнлантарса памалла.

Темăна вĕреннĕ чух усă курмалли тĕслĕхсем:

1. Петюк чирленипе пĕр эрне шкула çӳреймерĕ. 2. Сивĕпе чӳречесем шап-шурă шăнчĕç. 3. Ирхине çăра тĕтреpен виçĕ утăмри аппана та паллаймарăм. 4. Патша правительстви хресчен ĕçĕсене çăмăллатасшăн хыпмасть. *(Элк.)*

Малтанхи предложенире **чирленипе** сăмаха разбор тăваççĕ. Ку сăмахра иртнĕ причасти çумне палăрту аффиксĕ **-и** хушăннă та вăл япала ячĕ пекех вĕçленме пултарать. Чирленипе — пĕрреллĕ хисепри пĕрлелĕх падежĕнчи япала ятне тухнă пирчасти.

Петюк мĕншĕн шкула çӳреймерĕ?— Чирленипе. Çак сăмахăн ыйтăвĕ **мĕншĕн?** Вăл пирке обстоятельстви пулать, **çӳреймерĕ** глагола сăлтавĕ енчен ăнлантарса парать.

Иккĕмĕш предложенире пирке обстоятельствинчи сăмах — **сивĕпе,** вăл пĕрлелĕх падежĕнчи япала ячĕ, **мĕн пирки?** ыйту çине ответлет, **шăнчĕç** глагола пирке енчен ăнлантарса парать.

Виççĕмĕш предложенире пирке обстоятельстви — **çăра тĕтреpен** сăмах майлашăвĕнчен тăрать: **çăра** — пал-

лă ячĕ, **тĕтререн** — туху падежĕнчи япала ячĕ, икĕ сăмах пĕрле **мĕншĕн?** ыйту çине ответлет, **паллаймарăм** глагола каллех пирке енчен ăнлантарать.

Юлашки предложенире пирке обстоятельстви **çăмăллатасшăн** сăмахран тăрать, вăл **-шăн** аффикс йышăннă пулас причасти, **мĕншĕн?** ыйту çине ответлет, **хыпмасть** глагола пирке енчен ăнлантарса пăхăнса тăрать.

Урока ăнлантарнă чухне учитель индукци меслечĕпе ĕçлет, кăтарту пособийĕпе усă курать. Вĕренекенсен тимлĕхне ÿстерме пирке обстоятельствипе хăйсене тĕслĕхсем туптарать, ăнлантару çыру ĕçĕ туса ирттерет.

К и л е в а л л и ĕ ç: 16 §-а вуласа ăнланмалла, 47-мĕш хăнăхтарăва тумалла.

## ТĔЛЛЕВ ОБСТОЯТЕЛЬСТВИ.

Тĕллев обстоятельстви çинчен вĕрентиччен инфинитивпа **-шăн** аффикс йышăннă тĕллевпе пирке форминчи сăмахсем çинче чарăнса тăмалла, вĕсен ыйтăвĕпе пулăвне аса илмелле. Ун хыççăн вара çавăн пек сăмахсем предложенире кĕçĕн членсенчен пĕри — тĕллев обстоятельстви пулни çинчен каламалла.

Материала ăнлантарма **вĕрен** глагол тĕпне илетпĕр, ун çумне инфинитивăн **-ме** е **-мешкĕн** аффиксне хушатпăр: **вĕренме, вĕренмешкĕн** пулать. Çак инфинитивпа усă курса, предложени тăватпăр.

**Пичче шкула вĕренме çÿрет.**

Предложенири вĕренме сăмах **мĕн тума? мĕншĕн?** ыйтусем çине ответлет. Ку сăмах пичче шкула мĕнле тĕллевпе çÿренине кăтартса парать. Çак ыйтури сăмахсем предложенире тĕллев обстоятельстви пулаççĕ.

Тĕллев обстоятельстви **-ма, -ме, -машкăн, -мешкĕн** аффикс йышăннă инфинитивран çеç мар, **-шăн, -шĕн** аффикс йышăннă причастисемпе япала ячĕсенчен те пулма пултарать.

**Володя пурне те ыйтса пĕлесшĕн çÿрет.**

Ку предложенире пулас причасти çумне **-шĕн** аффикс хушăннипе тĕллев обстоятельстви пулнă. Володя **мĕншĕн** тăрăшать? — Пурне те пĕлесшĕн. Кунта пирке обстоятельстви мар, тĕллев обстоятельстви уççăн палăрать.

**Сыснана ашĕшĕн усраççĕ.**

Сыснана **мĕншĕн** усраççĕ? — **ашĕшĕн.**

Ку предложенире **ашĕшĕн** япала ячĕ тĕллев обстоятельстви пулать.

Пиркепе тĕллев обстоятельстви хушшинчи уйрăмлăха уйăрса илме вĕрентмелле. Ана вĕрентес çĕрте сăмахсен форми мар, предложенире пĕлтерĕшĕпе обстоятельство пулакан сăмахсем мĕнле ыйтура тăнине асăрхама пĕлмелле.

**Танлаштару таблици.**

| Тĕллев обстоятельстви | | | Пирке обстоятельстви | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Пулăвĕ | Ыйтăвĕ | Тĕслĕхсем | Пулăвĕ | Ыйтăвĕ | Тĕслĕхсем |
| Инфинитивран | Мĕн тума? | Хĕрача чечексем пухма улăха анчĕ | Япала ячĕ | Мĕншĕн? Мĕн пирки? | Йывăççем сивĕпе шартлатса çурăлаççĕ |
| Япала ячĕ пиркепе тĕллев форминчен | Мĕншĕн? Мĕн тума? | Ĕнене сĕтшĕн усраççĕ | | | |
| Причасти | Мĕншĕн? Мĕн тума? | Пирĕн çар тăшмана тĕпрен аркатасшăн йĕрлерĕ. | Паллă ячĕ, пĕр. е тух. п. | Мĕншĕн? | Ку тутăра шурăран çыхрăм. |
| | | | Причастирен | Мĕн пирки? | Савăннипе вăл нумай хушă юрларĕ. |
| | | | Япала ячĕпе мест. пула, пирки, кура хыççăм. пĕрле | Мĕншĕн? | Йышне кура хурăнташĕ теççĕ. |
| | | | | Мĕн пирки? | Çумăра пула вăрмана каяймарăм. Хырăмĕ пирки çурăмсăр юлнă, тет. Юлташ пухура тем пирки пулмарĕ. |
| | | | Наречирен | Мĕншĕн? | Ярмуш пионерсен сборĕнче темĕншĕн пулмарĕ. |

Предложенире тĕллев пĕлтерĕшĕ ытларах паларсан, ун чухне тĕллев обстоятельстви пулать.

Тĕллевпе пирке обстоятельствисене уйăрса илес тĕлĕшпе класрах ачасене творчество ĕçĕ çыртармалла, унта тĕл пулакан обстоятельствăсене аялтан турттармалла, мĕнле обстоятельство пулнине сăмах çине кĕскен çыртармалла. Еçе класрах тĕрĕслемелле. Т е к с т:

1. Забастовка пуçласа ятăмăр, ĕç укçи ўстерме, штрафсене пĕтерме, çăкăр-тăвара лайăхлатма ыйтатпăр. 2. Волошин акă сасартăк пĕр хыпарпа тĕлĕнтерсе ячĕ. *(Бурн.)* 3. Изратов çакăн пек йывăрлăха лекнĕшĕн питĕ пăшăрханчĕ. *(Бурн.)* 4. Селиме Тухтара каллех çав пиншак пирки асăнтарчĕ. *(Илп.)* 5. Çтаппан тепĕр хут Мишшана çĕклесшĕн тĕрмешет... *(Илп.)* 6. Нямаç çавăншăн та хăех тўлеме килĕшет. *(Илп.)* 7. Вилĕме çĕнме хăват панăшăн Партие чунтан тав туса ырлар. *(Тукт.)*

## МЕНЛЕЛЕХ ОБСТОЯТЕЛЬСТВИ.

Мĕнлелĕх обстоятельстви çинчен вĕренессине наречие аса илнипе çыхăнтармалла, уйрăмах ачасенчен мĕнлелĕх наречийĕ çинчен ыйтмалла.

Мĕнлелĕх обстоятельствине хăшпĕр чухне определенипе пăтраштарма пултараççĕ. Çаксене ан пăтраштарччăр тесен, учитель мĕнлелĕх обстоятельстви, ытти обстоятельствăсем пекех, глагола ăнлантарнине, определени ят сăмаха ăнлантарнине палăртса хăвармалла.

Мĕнлелĕх обстоятельстви ĕç мĕнле пулнине пĕлтерет. Унăн ыйтăвĕсем: **мĕнле? епле?**

Темăна уçса пама тĕслĕхсем паратпăр.

1. Анлă Атăл лăпкăн хумханать. 2. Вĕренекенсем колхозра ăмăртса ĕçлеççĕ. 3. Пичче Мускавра виçĕ хутчен пулчĕ. 4. Ура айĕнчи турат шатăрт! хуçăлчĕ. 5. Тĕттĕм пĕлĕте прожектор çути вăрăм çĕçĕ пек çурса каять. *(Н. Орлов.)*

Учитель кашни предложени çинче чарăнса тăрать. Малтанхи предложение илсен, определенипе обстоятельство уйрăмлăхне паллă тумалла, мĕнлелĕх обстоятельстви **мĕнле?** ыйтупа ыйтăнать, **хумханать** глагола ăнлантарса парать.

**Лăпкăн** мĕнлелĕх обстоятельстви наречирен пулнă. Иккĕмĕш предложенире мĕнлелĕх обстоятельстви **ăмăртса** — мĕнлелĕх деепричастирен тăрать, **ĕçлеççĕ** глагола ĕç мĕнле пулни енчен ăнлантарса парать.

Мĕнлелĕх обстоятельстви тата ĕçĕн е пĕр-пĕр паллăн виçине кăтартма пултарать. Ана эпир виççĕмĕш предло-

женире палăртатпăр. Кунта ĕç миçе хутчен пулнине кăтартнă. Ыйтăвĕ: **миçе хутчен?** Ĕçĕн виçине кăтартакан обстоятельствăсем **мĕн чухлĕ? миçен?** ыйтусенче пулаççĕ.

Вĕсем пынă **виççĕн** чи малти ретре. **(Миçен?)**

Атте хăй ĕмĕрĕнче кĕнеке **питĕ нумай** вуланă. **(Мĕн чухлĕ?)**

Мĕнлелĕх обстоятельствисем евĕрлев сăмахĕсенчен, танлаштару татăкĕнчен, хисеп ячĕпе хыççăмахсенчен те пулаççĕ.

Мĕнлелĕх обстоятельствин пулăвне кăтартма уйрăм таблица хатĕрлемелле.

Мĕнлелĕх обстоятельствин пулăвĕ.

| | |
|---|---|
| 1. Наречирен: | Çурхи хĕвел *хĕрӳллĕн* ăшăтать. Манăн юлташ *лайăх* вĕренет. |
| 2. Деепричастирен: | Вĕренекенсем заводра *хавасланса* ĕçлерĕç. *Шăнкăртатса* шыв юхать. Çӳлĕ валак пусĕнче. *(К. Ив.)* |
| 3. Япала ячĕпе хыççăмахран: | Рабочисем ĕç укçине *уйăх тăрăх* илеççĕ. Эпир уроксене *кĕнеке тăрăх* хатĕрленетпĕр. |
| 4. Япала ячĕпе татăк пĕрлешĕвĕнчен | Совет салтакĕ тăван çĕршыв чиккине *куç пек* сыхлать. |
| 5. Хисеп ятĕнчен | Атте хулана *виççĕ* çитрĕ. |
| 6. Хисеп ячĕпе хыççăмахран | Шăллăм *ултăрах* çĕр таран шутлатчĕ. Петюк ман пата *виçĕ çул хушши* çыру çырчĕ. |
| 7. Евĕрлев междометийĕсенчен. | Хирте çава айĕнче курăк *вăш-ваш* йăванать. *(К. Ив.)*. Тӳпере çиçĕм *йăлтăрт!* çиçрĕ. |

Мĕнлелĕх обстоятельстви пулăвĕпе паллаштарнă хыççăн учитель вĕренекенсене класра 49-мĕш хăнăхтарăва тутарать, çав сехетрех тĕрĕслет. Вĕренекенсем хăнăхтарури мĕнлелĕх обстоятельствисене тата вĕсем ăнлантаракан сăмахсене аялтан туртаççĕ.

Е синтаксисла разбор туса ирттермелле. Ăна валли текст:

1. Пĕр çулхине эпĕ утарта Палюк мучисем патĕнче уйăх ытла пурăнтăм. Ун чухне хурăн çырли çеç мар, хăмла çырли те пиçсе çитнĕччĕ. *(Харл.)* 2. Тĕрĕс сăмахшăн çирĕп тăр. *(Ват. сăм.)* 3. Митьăпа эпир урайне сарса панă тӳшек çине фронтри пек юнашар выртрăмăр. *(Арт.)* 4. Ĕлĕк чăваш шăппăн калаçнă. (Ç. М.) 5. Салакасси урамĕсем тăрăх сиксе шарлатсах шыв юхать. *(Элк.)* 6. Турхантан Салакассине

вунпилӗк ҫухрӑм шутланнӑ. *(Элк.)* 7. Йӑрансӑр уй-хирте тырпул тинӗс пек хумханса выртать. *(Н. Орлов.)* 8. Юлташсем ҫав каҫ пире ҫӑлма, илсе тухма темиҫе хутчен те тӑрӑшрӗҫ. *(Алент.)* 9. Кӗркури ҫав тери ӑш ҫуннӑран шыв ыйтасшӑн пулчӗ... *(Алент.)* 10. Хӑйне панӑ хаклӑ парнешӗн кӗтӳҫӗ нумайччен савӑннӑ. *(Долг.)*

Тӗп членсемпе кӗҫӗн членсем ҫинчен вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн синтаксисла разбор туса ирттермелле. Вӗренекенсем разбор тунӑ чух малтан тӗп членсене тупса паллӑ тӑваҫҫӗ, унтан кашни кӗҫӗн член пулӑвӗпе ыйтӑвӗ ҫинче чарӑнса тӑраҫҫӗ. Разбор тунӑ чух класри пур вӗренекене те явӑҫтарма тӑрӑшмалла. Пур ачана та разбора явӑҫтарас тесен, тетрадьсем ҫине ҫыртарса разбор тутармалла. Кашнинех разбор схеми тӑрӑх тума хӑнӑхтармалла.

Темӑна вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн уйрӑм асаилӳ урокӗ е тӗрӗслев диктанчӗ туса ирттермелле. Ун пек уроксем вӗренекенсен пӗлӗвне шута илме, ӑнланман выранӑсене тепӗр хут аса илсе ҫирӗплетме пулӑшаҫҫӗ.

Килте тумалли ӗҫ: 18 §-а вуласа ӑнланасси, 13—17 §§ аса илесси, 52-мӗш хӑнӑхтарӑва туса килесси.

## ДЕЕПРИЧАСТИЛЛӖ САМАХ ҪАВРАНАШЕСЕМ.

Ку тема — ҫыру ӗҫӗшӗн чи кирлӗ темӑсенчен пӗри. Ачасене вӗрентнӗ чухне ҫак тема ҫинче уйрӑммӑнах чарӑнса тӑрас пулать.

Деепричастиллӗ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем предложенилле обстоятельствӑсене чылай ҫывӑх тӑраҫҫӗ. Анчах вӗсем хушшинче уйрӑмлӑх пур. Вӗрентӳ ӗҫӗнче уйрӑмах ҫавна палӑртмалла: **-са, -се** (ҫуклӑ формӑра — **-масӑр, -месӗр**), **-а, -е** аффикслӑ деепричастисем хӑй умӗнче тӑракан темиҫе сӑмаха пӑхӑнтарса тытса тӑраҫҫӗ те сӑмах ҫаврӑнӑшӗ тӑваҫҫӗ.

**Гена, хӗпӗртенӗ пек пулса, хӑвӑрттӑн малалла утса кайрӗ.** (*Кр.-Асли*) **Хӗвел, тӗрӗ тӗрлесе, вылять унӑн шывӗпе.** *(К. Ив.)*

Ку тӗслӗхсенчи деепричастиллӗ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем предложенисенчи сказуемӑйсене мӗнлелӗх енчен ӑнлантарса тӑраҫҫӗ. Деепричастиллӗ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсенче подлежащи выранӗнчи сӑмах пулмасть.

**Гена, сӗтел ҫине чавсаланса, вӑрахчен тем ҫинчен шухӑшласа ларчӗ.** (*Кр.-Асли.*)

Предложенилле обстоятельствӑсенче нумай чухне подлежащи выранӗнчи сӑмах пулать, сказуемӑй вырӑ-

нĕнчи сăмах хăшпĕр чухне деепричастипе инфинитивран тăрать пулсан та, подлежащи шухăшне сăпатсăр формăра та пулин уçса ăнлантарса парать.

**Çурхи хĕвел пăхсан, калчасем часах симĕсленчĕç. Хĕвел анса ларсан та, çуллахи каç часах тĕттĕмленсе çитмест.** *(Тукт.)*

Малта панă тĕслĕхсенчи предложенилле обстоятельствăсенче подлежащи вырăнче (**хĕвел**, сказуемăйсем вырăнĕнче **пăхсан** тата **анса ларсан та** деепричастисем пулаççĕ, вĕсем подлежащи (**хĕвел**) ĕçне кăтартса параççĕ.

Кунта хăш сăпатпа хисепре пулни паллă мар, анчах подлежащи ĕçне пурпĕрех ăнланса илетпĕр. Деепричасти сăмах çаврăнăшĕнче подлежащи вырăнĕнчи сăмах пулмасть, ун ĕçне глагол урлă та курма пултараймастпăр. Деепричастисем çуклă формăра та пулаççĕ, çавăн пекех деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшне те тăваççĕ.

**Амăшĕ, лампа çутмасăр, Гена кĕрессе кĕтсе ларчĕ.** *(Кр.-Асл.)*

Учитель малалла -а, -е аффикслă деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ çинче чарăнса тăрать.

**Моторпа кĕрле-кĕрле,**
**Ыткăнать Валерий Чкалов**
**Хĕвеланăç еннелле.** *(Хус.)*

Кун пек аффикслă формăран пулнă деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕсем мĕнлелĕхе кăтартаççĕ, **мĕнле?** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

Юлашкинчен çакна асăрхаттармалла: -са, -се аффикслă деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕн хăшпĕр чухне подлежащийĕ те пулать.

**Хĕвел пăхать шăратса,**
**Кайăк юрлать йăвинче.** *(К. Ив.)*

Çак сехетрех деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшне предложенири ытти сăмахсенчен чарăну паллисем лартса уйăрасси çинчен те каласа памалла.

**Деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойсем лартса уйăраççĕ.**

а) Деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ предложени пуçламăшĕнче тăрсан, ун хыççăн запятой лартаççĕ.

**Ирех хырăм тăрантса,**
**Кайрĕ хире Тăхтаман.** *(К. Ив.)*

**Ялти пурнăç çинчен калаçса, Тарук сĕтел çине апат хатĕрлерĕ.** *(М. Ухс.)*

ă) Деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ предложени варринче чухне ăна ик енчен те запятой лартса уйăраççĕ.

**Гена, кушак пек йăпшăнса, чикмек тăрăх арман тăррине хăпарса кайрĕ.** *(Кр.-Асли.)*

**Виков, хăйне хăй сисмесĕрех, йăл кулса илчĕ.** *(Кр.-Асли.)*

б) Деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ предложени вĕçĕнче сказуемăйпа таччăн юнашар тăман чухне ăна умне запятой лартса уйăраççĕ.

**Аптраман Пальли тăнларĕ**
**Пилота, каçса кайса.** *(Хус.)*

**Пĕр тĕлĕк курса суйланнă,**
**Аса илсе аннесене.** *(Уйăп.)*

в) Деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ, глагол-сказуемăй умĕн тăрса, ăна ăнлантарса панă чухне чарăну палли лартмаççĕ.

**Лисук Павлуш юррине сывлама чарăнсах итлерĕ.** *(М. Ухс.)* **Сасартăк лавккаран кĕленче ванчăкĕсем кĕлте пек сиксе тухса чăнкăртатса сирпĕнчĕç.** *(М. Ухс.)*

**Варук çыран хĕрринчи йăмра сулхăнĕнче çывăрса кайма пуçланă Ваçукăн кĕçĕн хĕрне алă çинче çĕклесе уткалать.** *(М. Ухс.)*

г) Хăшпĕр ят сăмах хыççăн тăракан деепричасти хыççăмах пĕлтерĕшĕпе палăрнă чухне запятой лартса уйăрмаççĕ.

**Социализмăн татăклă çĕнтерĕвĕ тесе марксистсем вăл тĕнчере çĕнтернине шутлаççĕ.** *(Н. С. Хрущёв.)* **Çырма лариччен тем чухлех çырассăн туйăнатчĕ, халĕ ак ним çырма та пĕлместĕп.** *(Арт.)* **Тавлашу хĕрсе çитиччен пӳлĕме Анна Ивановна кĕрсе тăчĕ.** *(Арт.)* **Вăл иртен пуçласа каçчен кукуруза уйне хуралларĕ.**

Темăна ăнлантарнă хыççăн вĕренекенсемпе çыру ĕçĕсем туса ирттермелле.

Малтанах ăнлантару диктанчĕ ирттерес пулать, ăна çырнă май ачасем чарăну палли лартма ытларах ăнланса илеççĕ, тĕрĕс çырма хăнăхса пыраççĕ. Е çак темăпах изложени çыртармалла. Çырнă чух вĕренекенсем деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕсене кĕртсе çыраççĕ.

**Пакшапа Чакак.**

*(Юмах.)*

Вăрманта пакшапа чакак пĕр-пĕринпе кӳршĕллĕ пурăннă. Пакши çу каçа ырми-канми ĕçленĕ, хĕлле пурăнмалăх апат-çимĕç хатĕрленĕ. Чакакĕ, йывăç çинчен йывăç çине вĕçе-вĕçе ларса, вăрман тăрăх уссăр чакăлтатса, сӳпĕлтетсе çӳренĕ.

Ĕçлекен пакша патне хутран-ситрен пырса ларса, чакак çапла калană: «Ытла та выçă, ĕмĕтсĕр эсĕ, пакша! Пурпĕрех вăрманти кăмпапа майăра пуçтарса пĕтерес çук, килес çул каллех пулаççĕ вĕсем. Эпĕ вара сан пек хыткаçмак* мар: пĕр-пĕр хӳре тĕртĕннипе çĕре ӳкнĕ майăршăн кӳрше усал сăмах каламастăп. Маншăн пулсан, нимĕн те кирлĕ мар. Хырăм выçсан, мĕн те пулин тупса çиетĕпех!» — тенĕ.

Вăхăт иртнĕ. Кĕркунне хыççăн шартлама сивĕ хĕл те персе çитнĕ. Тăрăн юр выртнипе çимелли тупаймасăр, чылай кайăк-кĕшĕк выçă аптранă. Чакак та выçлăн-тутлăн пурăннипе пĕтĕмпех начарланса кайнă.

Халĕ ĕнтĕ вăл пакша патне пырсан, çăварне шыв сыпнă пек, тутă пакша çине ним шарламасăр пăхса ларнă. Пакши вара, малтанхине аса илсе, Чакака çапла каласа вĕрентнĕ:

— Тирпейлĕ те перекетлĕ чĕрчуна выçă та ĕмĕтсĕр чĕрчунтан уйăрма пĕлес пулать, чакак тус. Çулла хатĕрлесе хуман пулсан, халĕ ĕнтĕ эпĕ те сан пекех выçă ларнă пулăттăм. Ахальтен мар: «Пурнăç хытти — çăкăр çемçи! — теççĕ» тенĕ.

*(«Чăваш юмах-халапĕсем» кĕнекерен.)*

Каярахпа, ытти сехетсенче, çак деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕпех тĕрĕслев çыру ĕçĕсем те памалла. Паллах, текстра предложенилле обстоятельствăсенче чăрăну палли лартассипе çыхăннă тĕслĕхсем те пулччăр. Текстсем:

1. Порфир тавралла пăхса илчĕ, юлташĕн аллисем çине пусса, хулпуççи çине тăчĕ. Вăл хурăнăн чĕрĕ туратĕнчен ярса илчĕ. Вара вăл, турник çине хăпарнă пек, хăпарса кайрĕ. Унтан, хăрах аллипе хурăнтан ыталаса, вырнаçса ларчĕ. Чĕн пиçиххине салтса, пĕр вĕçне юлташне пачĕ, хăй хурăн çумне хытăрах чăмăртанчĕ. Хветĕр, пиçиххирен тытса, урисемпе хурăн вуллинчен хирĕнчĕ. Акă вăл туратран та ярса илчĕ. Порфир ăна турат çине улăхма пулăшрĕ, хăй, çӳлерех хăпарса, тепĕр турат çине вырнаçрĕ.

Çывăхрах хăрăк туратсем хуçăлчĕç, ура сассисем илтĕнчĕç. Унччен те пулмарĕ, уçланкăна ырхан та лапсăркка кашкăр тухса ларчĕ. Ачасем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

Вăрман тата хытăрах шавласа кайрĕ. Кĕпшĕлсем чуна ыраттармалла чарлатаççĕ, кураксем те кăранклатса явăнаççĕ. Пĕтĕм вăрман такампа хирĕçнĕн, ятлаçнăн туйăнать.

Кашкăр, кайăксем çине ултавлăн пăхса, хӳрине вылятать, çăварне карса анасласа илет, шăршлать. Унтан майĕпен вĕтлĕхелле кĕрсе çухалать. Кайăксем те унран юлмаççĕ, шавласа ун хыççăн вĕçеççĕ. Вĕсем те тискер кайăка чухлаççĕ имĕш.

*(П. Семенов. «Сукмак» кĕнекерен).*

---

* Хыткаçмак — хыткукар тенине пĕлтерет.

Текстра 137 сăмах, кĕпшĕл сăмаха ăнлантармалла.

2. Пĕрре, çуллахи ăшă кун, хĕвел хытă хĕртетчĕ. Кăвак тӳпере шурă пĕлĕтсем курăнма пуçларĕç. Хĕвеланăçĕнчен тачка пĕлĕтсем хăпараççĕ. Малта хулăн шурă ярăмсем уснă кăвак пĕлĕт карăнса пырать. Çав пĕлĕт хыççăн сенкер пăтранчăк çывхарать. Хĕвел те, чаршав хыçне пытаннă пек, çав пăтранчăк ăшне кĕрсе çухалать. Пĕтĕм тавралăха хупласа, тăвăл пуçланать...

Çул çинчи турпассем, çӳп-çап, тусан та хăпарса каять. Тăвăл шыв хĕрринчи йăмрана, татти-сыпписĕр пыра-пыра, хаяррăн силлеме тытăнать. Йăмра çинчи кураксем вĕçсе хăпараççĕ. Вĕсене çил, турпассене вылятнă пек, таçталла хăваласа каять. Йăвинче чĕпписемпе амăшĕ çеç юлать.

Пĕтĕм çанталăк ахăрса каять. Хура пăтранчăк çинче хаяр çиçĕм йӳплене-йӳплене темскер шырать, ванса çухалать. Аслати авăтса ярать, çĕр кисренет. Çумăр чĕреслетсе çăвать. Тăвăл вăйланать. Вăл, çиллине шăнараймасăр, йăмрана тепре пырса силлет. Йăмра авăнса илет, вĕтĕ турачĕсем хуçăлса тăкăнаççĕ. Мĕскĕн амăшĕ хăйĕн чĕпписене хупăрласа ларать. Çил вăйланать, йăмра тайăлса-тайăлсах каять. Çакна туйса илсен, ватă куракăн куçĕсем хуралса килеççĕ.

Текстра — 137 сăмах.

## Тилĕпе курак.

3. Шурăмпуç те хăпарать, тул çутăлать.

...Тул çутипе пĕрлех чее тилĕ хăйĕн çурисем валли апат шырама тухать. Акă вăл çыран тăрăх чупса пырать. Курак чĕппи пуррине сиссе, тилĕ чарăнса тăрать — унталлах çывхарать. Акă инçех те юлмарĕ...

Çав вăхăтра курак амăшĕ турат çинчен чул пек персе анать, чее тилле улталама пăхать. Вăл, хăрах çунатне усса, тайкаланса, тилĕ умĕнчех сиккеллесе пырать. Тилĕ ун хыççăн чупать, иксе те ӳкет, курак вĕçсе хăпарса каять. Тилĕ те хăйне улталанине сисет пулас, вăл каялла вĕлтренсем хушшине пăхать. Амăшĕ чĕппине çăласшăн, вĕçеймен пек пулса, тилĕ умне сарăлса ӳкет. Çав вăхăтра тилĕ ун çине сиксе ларать те пуссах выртать... Темле майпа çав ватă курак, тилĕ айĕнчен çаврăнса тухса, çĕр çуммипе вĕçсе каять. Тилĕ ун хыçĕнчен хӳтерсе пырать. Курак, вĕçсе илсе, аран-аран турат çине çитсе çакăнать. Тилĕ унăн хăрах çунаттине хытах амантнă, хӳрине тăпăлтарса юлнă.

Çĕр çинче мĕн пулса иртнине курак чĕпписем кураççĕ. Вĕсем амăшне хĕрхенеççĕ.

*(П. Семенов. «Сукмак» кĕнекерен.)*

Текстра — 138 сăмах.

## Атĕл ялĕ пуçланни.

*(Легенда.)*

Пĕр виççĕр çул ытларах каялла Пăчанар шывĕн сылтăм енне чăтлăх вăрмана Атĕл ятлă çын куçса ларнă. Пăчанар шывĕ, сĕм вăрмантан юхса тухса, анаталла пысăкланса пынă. Атĕл ун вĕçнерех ларнăран кунта икĕ утăм сарлакăш кăна пулнă. Пăчанар тепĕр енче Чурпайпа Урапакасси ялĕсем чăмăртанма тытăннă.

Атӗл хӑйӗн Апка ятлӑ мӑшӑрӗпе, ырма-канма пӗлмесӗр, Пӑчанара юхса тухакан Ҫӑлчакан шывӗ хӗрринче ҫӗр пӳрт хатӗрленӗ. Вӗсен аллинчи йывӑҫ кӗреҫесем, йӑлттин-ялттин ыткӑнса, тӑмлӑ ҫӗре шӑтарса кӗнӗ. Эрне хушшинче ҫӗр пӳрт пулса та ҫитнӗ. Ун ҫывӑхӗнче пысӑк хурамасем чармакланса ларнӑ. Пурӑна-киле Атӗлӗн виҫӗ ывӑл тата икӗ хӗр ҫуралнӑ. Аслӑ ывӑлӗ Левешке ашшӗпе пӗрле, пуртӑсем йатса, вӑрман хӑртма ҫӳренӗ. Йӗри-тавра сӗм вӑрман кашласа ларнӑ. Ҫӑлчакан ҫырмипе тепӗр вара ҫитиччен (каярах ӑна, амӑш ятне хисеплесе, Апка варӗ тенӗ) уҫланкӑсем пулнӑ. Ку вырӑнта вӑрман хӑртма ҫӑмӑлтарах пулнӑ.

Левешке аллинчи пуртӑ, хӗвел питӗнче ҫиҫсе илсе, вӗрене, ӑвӑс, хурама йывӑҫҫисене йӑвантарнӑ. Ҫулсеренех хӑртнӑ вырӑн анланса, сарӑлса пынӑ, тырӑ акмалли лаптӑк пысӑкланнӑ.

Ытти ывӑлӗсем те, ҫитӗнсе ҫитсе, ашшӗне ӗҫре пулӑшакан пулнӑ. Левешкепе вӑталӑх ывӑлӗ Темпӳк, Ҫӑкшӑма кайса ҫӳресе, хӑйсене валли мӑшӑрсем тупнӑ та авланнӑ. Пурте пӗрле пулса, мӑшӑрланнӑ ывӑлӗсене валли каллех ҫӗр пӳртсем хатӗрленӗ, часах вӗсем ашшӗнчен уйрӑлса тухнӑ. Левешкен, икӗ ҫул иртсен, ывӑл ҫуралнӑ, ӑна Сенӳк тесе ят панӑ. Сенӳк ӳссе ҫитнӗ ҫӗре кунта ҫичӗ кил шутланнӑ. Ҫитмӗлтен иртнӗ аслашшӗ те вилсе кайнӑ. Ун ятне хисеплесе, ачисемпе мӑнукӗсем ку яла вара Атӗлкасси тенӗ. Пурӑна-киле Сенӳк йӑхӗнчен Петрав Пачамшай тавраш пулса кайнӑ.

*(Ваттисем каласа панинчен.)*

## ИНФИНИТИВЛӐ САМАХ ҪАВРАНАШЕ.

Ытти сӑмах ҫаврӑнӑшӗсемпе пӗр ретрех инфинитивлӑ сӑмах ҫаврӑнӑшӗ те тӑрать.

Кунта тӗп тыткӑчи — инфинитив. Вӑл хӑйне пӑхӑнса тӑракан сӑмахсемпе пӗрле инфинитивлӑ сӑмах ҫаврӑнӑшӗ тӑвать. Чӑваш чӗлхинче инфинитив икӗ тӗрлӗ пулнине вӗренекенсем пӗлеҫҫӗ ӗнтӗ: морфологи вӗреннӗ чухне ку ыйтусене пӑхса тухнӑ. Учитель халӗ, вӗренекенсенчен инфинитив пулӑвӗ ҫинчен ыйтса, ӑна аса илтерет.

Инфинитив глагол тӗпӗ ҫумне **-ма, -ме, -машкӑн, -мешкӗн** аффикссем хушӑннипе пулать, ыйтӑвӗ: **мӗн тума?, мӗн тумашкӑн?,** пӗлтерӗш енчен глагол ӗҫе мӗнле тӗллевпе, мӗн пирки пулнине уҫса парать.

Вӗренекенсене инфинитивпа тӗслӗхсем туптармалла, ун пулӑвӗ, пӗлтерӗшӗ, предложенире вӑл мӗнле член пулни ҫинчен ыйтмалла.

Малалла инфинитивлӑ сӑмах ҫаврӑнӑшӗ ҫине куҫмалла. Хӑҫан инфинитивлӑ сӑмах ҫаврӑнӑшӗ пулать-ха? Паллах, инфинитив хӑй тӗллӗн инфинитивла сӑмах ҫаврӑнӑшӗ тӑваймасть. Пӗр сӑмах е темиҫе сӑмах, инфинитива пӑхӑнса, управлени е примыкани йӗркипе ҫыхӑнса

тăрса, синтагма тăваççĕ, вăл сăмах çаврăнăшĕ хутлă глагол-сказуемăй шутне кĕмест, унран расна тăрать.

Инфинитивлă сăмах çаврăнăшĕ причасти тата деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ пек предложенири ытти членсенчен уйрăм чаранупа (паузăпа) уйрăлса тăмасть. Инфинитивлă сăмах çаврăнăшне пауза туса палăртман пирки чарăну паллисемпе те уйăрмаççĕ.

Çапăçусем иртсен,
Пире эс, парти, чĕнтĕн
**Ĕçри кĕрешӳре те çĕнтерме...** *(Клем.)*

Унтан бригадире хушать
**Пĕтĕм яла пухса тухмашкăн.** *(Алка.)*

Хăшпĕр чухне, уйрăмах интонаципе пауза туса вуласассăн, запятой лартса уйăраççĕ.

Малтанлăха, **çамрăк арăмпа çын пек пурăнма,** чипертерех хваттер кирлĕ. *(Элк.)*

Пĕр шухăш, çунатне сарасшăн,
Пĕр чарăнми йăшăлтатать. *(Алка.)*
**Уяр чухне ĕçне тухмашкăн,**
Анкартисем хыçĕпеле,
Утма-çул тăрăх ушкăн-ушкăн
Çынсем васкаççĕ хирелле. *(Алка.)*

Инфинитив глагол-сказуемăй умĕнче тăрать пулсан (нумай чухне хутлă глагол-сказуемăй составне кĕрет), вара инфинитивлă сăмах çаврăнăшĕ тумасть.

Долбилов аллинчи хута вулама тытăнчĕ. *(Элк.)*

Йăван сĕтел çине лампа çутса ларать те савнă хăнисене пăхма хыпаланать. *(Элк.)* Салампи хăйĕн телейне, савăнăçне çынсенчен пытарма пултараймарĕ. *(Арт.)* Салампи каллех хăйне евĕрлĕ ĕçлеме пуçларĕ. *(Арт.)*

Инфинитивлă сăмах çаврăнăшĕ çинчен вĕреннĕ май ханăхтару ĕçĕсем туса ирттермелле, синтаксисла разбор тумалла, илемлĕ литература кĕнекинчен тĕслĕхсем туптармалла.

Хăнăхтару ĕçĕ валли тĕслĕхсем: 1. Çамрăксемпе ĕçлеме те, выляса кулма та кăмăллă. *(Турх.)* 2. Хăйĕн пирки сăмах хускатма вăл (Ятман) именчĕ. *(Турх.)* 3. Левентей калаçăва ыррăн вĕçлеме шутларĕ. *(Турх.)* 4. Аннушка вара пиччĕшне курма темиçе сехетлĕхе çеç килсе кайрĕ. *(Турх.)* 5. Кӳршĕсем апат тума

ларнине курсан, Ятман политинформаци ирттерме вӗсем патне куҫрӗ. *(Турх.)*

6. Кулса сиксе выляма
   Кайӑк чунӗ янӑ ҫав. *(К. Ив.)*
   Вӑл тӑшмана пӗтерме
   Икӗ вӑйлӑ аллӑм пур. *(К. Ив.)*

Инфинитивлӑ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсем предложенири кӗҫӗн членсенчен тӗллев тата пирке обстоятельствисем пулаҫҫӗ.

1. Унтан вӑл ывӑлне вӑратрӗ:
   мӗн тума?
   **Ун каймалла-ҫке вӗренме.** *(Алка.)*
   мӗншӗн?
   **Ӑна халь шыраса тупмашкӑн**
   Ан тытӑн та, ан тертлеш. *(Алка.)*

Пӗрремӗш предложенири инфинитивлӑ сӑмах ҫаврӑнӑшӗ тӗллев обстоятельствине, иккӗмӗш предложенире— пирке обстоятельствине кӑтартаҫҫӗ. Инфинитивлӑ сӑмах ҫаврӑнӑшӗ предложенире хӑш член пулни ҫинчен вӗренекенсене тӗплӗрех ӑнлантарас пулать.

## ХУТСӐР ПРЕДЛОЖЕНИН ТЕСЕСЕМ

Шкул ачисем сӑпатлӑ предложенисене вӗреннӗ хыҫҫӑн тата ҫакӑн пек хутсӑр прдложенисемпе паллашаҫҫӗ: 1. Паллӑ мар сӑпатлӑ предложенисем. 2. Пӗтӗмлетӳ сӑпатлӑ предложенисем. 3. Сӑпатсӑр предложенисем. 4. Ят предложенисем.

Темӑна вӗренме программӑра 6 сехет палӑртнӑ.

*Малтанах* вӗренекенсене икӗ тӗп членлӑ, сӑпатлӑ предложенисене аса илтермелле.

*Малалла* сӑпатсӑр предложенисем ҫинчен ӑнлантармалла. Ӑнлантарнӑ чухне сӑпатлӑ предложенипе танлаштармалла, вӗсен хушшинчи уйрӑмлӑха татӑклӑн уҫса памалла.

Вӗренекенсене ку темӑна вӗреннине лайӑхрах асра тытма схема памалла.




Темăна вĕреннĕ май учителĕн çак ыйтусене асра тытмалла:

1. а) Сăпатлă предложенисем икĕ тĕрлĕ пулни: икĕ тĕп членран — подлежащипе сказуемăйран тăраканнисем; ă) пĕр тĕп членран — сказуемăйран кăна тăраканнисем.

2. Паллă мар сăпатлă предложенире пĕр тĕп член — сказуемăй çеç пулни;

3. Пĕтĕмлетӳ сăпатлă предложени икĕ тĕрлĕ пулни: а) икĕ тĕп членĕ — подлежащипе сказуемăй та предложенире пурри; ă) пĕр тĕп член — сказуемăй çеç пурри.

4. Сăпатсăр предложенире пĕр тĕп член — сказуемăй çеç пулать.

5. Ят предложени пĕр подлежащирен е подлежащипе ăна ăнлантарса тăракан сăмахсенчен тăрать.

Хутсăр предложенисем тата ытти тĕслисем те пур (хушу, чĕнӳ, междометиллĕ предложенисемпе сăмах предложенисем), анчах вĕсене вăтам шкулта вĕрентмеççĕ.

Вĕренӳ ĕçĕнче ачасем сăпатлă предложенисене сăпатсар предложенисемпе, паллă мар сăпатлă предложенисене пĕтĕмлетӳ сăпатлă предложенисемпе пăтраштарни, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса илме пĕлменни ытларах палăрать. Çак йывăрлăха пĕтерес тесен, ачасем пăтраштаракан хутсăр предложенисене танлаштарса кăтартса вĕрентмелле, вĕсен хушшинчи уйрăмлăха палăртма пĕлмелле, ачасене тимлĕн шухăшлаттарса ĕçлемелле.

Сăпатсăр предложенире тĕп член — сказуемăй кăна пулать, кунта подлежащи малтанхи текстран та, ĕç условинчен те, глагол форминчен те палăрмасть. Сăпатсăр предложенире ĕçне тăваканне курмастпăр, ăна тупма

та пулмасть. Тепӗр чухне ӗҫне тӑваканне предложенири шухӑш тӗлӗшӗпе пӗлме пулать, анчах грамматика енчен—подлежащи пулакан пӗр сӑмах та тупма май ҫук. Уйрӑмах ӑна сказуемӑй причастирен пулнӑ чухне куратпӑр.

**Манӑн ӗҫе каяс. Пирӗн экскурсие каймалла. Вӗренекенсен колхозра ӗҫлесчӗ.**

Ку предложенисенчи ӗҫне тӑваканӗ — япала ячӗпе местоименисем — ят мар падежра тӑнипе грамматикӑра подлежащи пулма пултараймасть, ҫавӑнпа та ун пек предложенисене те сӑпатсӑр предложенисен шутне кӗртеҫҫӗ.

Сӑпатсӑр предложени ҫинчен ӑнлантарма ҫакӑн пек тӗслӗхсем илме пулать.

1. **Ҫӳҫентерет. Чӗтретет. Ыйхӑлаттарать.**

Малта панӑ предложенисене пӑхса тухмалла та унти тӗп членсене тупмалла.

Разбор тунӑ май вӗренекенсем хӑйсемех ӑнкарса илеҫҫӗ: ку предложенисенче сказуемӑй кӑна, подлежащи ҫук, ӑна тупма та май ҫук.

Ҫак предложенисене, ытти кӗҫӗн членсене кӗртсе, анлӑрах тума пулать, пурпӗрех подлежащи (ӗҫне тӑваканӗ) пулмасть.

**Ҫан-ҫурӑма ирех чӗтретет. Паян кунӗпех мана ыйхӑлаттарать. Ӳт-тире ҫӳҫентерет.**

Пӗррелле хисепӗн 3-мӗш сӑпатӗнчи хальхи вӑхӑтри глаголсем ҫавӑн йышши предложенисен сказуемӑйӗсем пулаҫҫӗ. Анчах та пур глаголран мар, ҫутҫанталӑкри хӑшпӗр явленисене е ҫынсен шалти сисӗм-туйӑмӗсене кӑтартса паракан глаголсенчен пулаҫҫӗ.

Мӗнле майпа пулма пултарнӑ-ши ҫавӑн пек предложенисем?

Пирӗн шутпа, ӑна ҫакӑн пек ӑнлантарма пулать. Авалхи этемӗн тавракурӑмӗ ансӑр пулнӑ, ҫавӑнпа вӑл ҫутҫанталӑкри явленисен пулӑвне ӑнлантарма пултарайман. Ҫав явленисене тӑваканнине нимӗнле ятпа та палӑртайман: уншӑн темӗнле пӗлмен вӑй туса тӑнӑ пек пулса тухнӑ. Ҫавна май чӗлхере сӑпатсӑр каланӑ предложенисем пулса кайма пултарнӑ. Малтанах вӗсем сӑпатланакан глагол форминче тӗл пулнӑ пулсан, ытти пуплев пайӗсем аталаннӑ май унта та палӑрма пуҫланӑ.

Кунта учитель ачасене сӑпатсӑр предложенисем причастирен, наречирен пулнипе паллаштарать.

Малтанах вĕренекенсене пулас причасти сказуемăй пулнине палăртмалла.

1. **Манăн кĕнеке вулас.** 2. **Урока вăхăтра çитес.** 3. **Вĕренӳре пирĕн отличник пуласчĕ.**

Пулас тата пулмалли причасти сказуемăй пулнă чухне подлежащи выранĕнчи сăмах камăнлăх падежĕнче пулать, ĕçе тăваканĕ палăрмасăр юлать. Причасти сказуемăй пулнă чухне çителĕксĕр глаголăн аффиксĕ **-чĕ** хушăнма пултарать, ун пек чухне калаканăн ĕмĕт-шухăшне те кăтартса парать. Ăна виççĕмĕш тĕслĕхрен **те** курма пулать. Деепричасти те сăпатсăр предложенире хутлă ят, хутлă глагол сказуемăйĕ те пулма пултарать.

1. **Уйăх çине пирĕн малтан вĕçсе çитесчĕ.** 2. **Пирĕн Тăван çĕршывшăн юрăхлă çын пуласчĕ.**

Пĕрремĕш предложенире хутлă глагол сказуемăйăн тĕп пĕлтерĕшне **вĕçсе** деепричасти уçса парать, **çитесчĕ** причасти ĕç мĕнле майпа вĕçленессине çеç кăтартать, **-чĕ** аффикс хушăннипе калаканăн ĕмĕт-шухăшне те палăртмасăр хăвармасть.

Иккĕмĕш предложенире хутлă ят сказуемăй тĕп ĕçне япала ячĕ **çын** сăмах кăтартать, «пуласчĕ» причасти пулăшу глаголĕ пĕлтерĕшĕнче тăрать, **-чĕ** аффикс хушăннипе çавăн пекех ĕмĕтленнине палăртать.

Сказуемăй пулмалли причастирен тăнă чухне тумалли ĕçе çирĕппĕнех хушнине е йышăнса юлнине кăтартать.

1. Çитес çичĕçуллăхра халăха вĕрентес ĕçе малалла лайăхлатмалла. 2. Ĕç тухăçлăхне пĕрмай ӳстерсе пымалла. 3. Ялхуçалăх ĕçне тата хăвăртрах аталантармалла. 4. Шкулта вĕрентессине ĕçпе таччăн çыхăнтармалла. 5. Этемĕн шанчăкĕ пулмалла.

Сăпатсăр предложенисем наречирен пулни.

Паллă ячĕ те, наречи те пулакан хăшпĕр сăмахсем япалан мĕнлелĕхне кăтартман чухне наречи пĕлтерĕшĕпе предложение кĕреççĕ те сказуемăй пулаççĕ.

**Кăнтăрла ăшă. Ирхине сивĕ. Вăрманта хӳтĕрех. Пĕчĕк пӳртре пăчă.**

Сказуемăй наречирен пулнă чухне танлаштару форминче те, пулăшу глаголĕпе пĕрле те, -чĕ аффикспа та тăма пултарать.

| | |
|---|---|
| **Кăнтăрла ăшă пулчĕ.** | **Мана сивĕ пулчĕ.** |
| **Кăнтăрла ăшăччĕ.** | **Мана сивĕрех пулчĕ.** |

Кун пек предложенисенче, наречирен пулнă хутлă ят сказуемăйсăр пуçне, наречирен е япала ятĕнчен пулнă обстоятельство ытларах тĕл пулать.

Ачасене ăнлантарнă чух сăпатсăр предложенисен пулăвĕн таблиципе те усă курмалла. Вăл асра тытма çăмăллатать.

Сăпатсăр предложенисемпе тĕслĕхсем туптарнă хыççăн вĕренекенсене киле çакăн пек ĕç памалла: учебник тăрăх 20 §-а вуласа ăнланмалла, 56-мĕш хăнăхтарăва килте туса килмелле, 57-мĕш хăнăхтарăва вĕреннине сирĕплетнĕ чух класрах тутармалла.

## ПАЛЛĂ МАР СĂПАТЛĂ ТАТА ПĔТĔМЛЕТŸ СĂПАТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Сăпатсăр предложенисем çинчен аса илнĕ хыççăн çак сехетрех паллă мар сăпатлă предложенисем çине куçмалла.

Ăнлантарнă чух усă курмалли тĕслĕхсем.

1. Халь те пулин Силпире асăнаççĕ мĕскĕне,
   Ялан çумăр çумасан, шыв сапаççĕ тăприне. *(К. Ив.)*

2. Ыраш вырма тухаççĕ. *(Элк.)* 3. Кăçал виçĕ ял хушшинче кӳлĕ чавнă. *(Турх.)*

Предложенисенче подлежащи çук, анчах предложенин шухăшĕ тăрăх вĕсенче подлежащи пур пек, палăртса паман кăна.

Малтанхи предложение илер. Кунта Силпи ялĕнче Нарспие вилнĕ хыççăн асăнни çинчен калана. Ăна камсем асăнаççĕ-ши? Предложенире ăна уççăн кăтартман: те Силпи ялĕн çыннисем, те Нарспи тăванĕсем, те Нарспи тантăшĕсем, те ялти вată-вĕтĕсем. Çавăнпа та вулаканшăн Нарспие камсем асăнни паллă мар. Ытти предложенисенче те ĕçе камсем тунине уççăн кăтартса пани çук.

Çавăн пек предложенисене паллă мар сăпатлă предложенисен шутне кĕртеççĕ.

Çакăнтах паллă мар сăпатлă предложенисен пулăвĕ çинче те чарăнса тăмалла. Учитель калаçу меслечĕпе паллă мар сăпатлă предложенисенчи сказуемăй глаголăн мĕнле формисенчен пулнине каласа парать. Вĕренекенсене çакăн пек пĕтĕмлетӳ патне илсе çитерет.

Паллă мар сăпатлă предложенисен сказуемăйĕ хальхи вăхăтри, виççĕмĕш сăпатри, нумайлă хисепри глаголсем-

пе курмасăр иртнĕ, иртнĕ умĕнхи вăхăтри глаголсенчен пулать. Предложенире, подлежащисĕр пуçне, ытти пур членсем те пулма пултараççĕ. Вĕренекенсене паллă мар сăпатлă предложенисемпе тĕслĕхсем туптармалла та пĕтĕмлетÿ сăпатлă предложенисем çине куçмалла. Тĕслĕхсем:

1. Чыса çамрăкран упра. *(Ват. с.)* 2. Сăмаха шухăшласа кала. *(Ват. с.)* 3. Атăла курмасăр аттуна ан хыв. *(Ват. с.)* 4. Куç умĕнче ан мухта, куç хыçĕнче ан хурла. *(Ват. с.)* 5. Аллупа ĕçле, пуçупа шухăшла. *(Ват. с.)*

Малтанхи предложение пăхса тухнă май вĕренекенсене çакăн пек ыйту памалла.

Учитель: Предложенире «упра» глагол-сказуемăй урлă подлежащие тупма пулать-и?

Вĕренекен: Пулать.

Учитель: Мĕнле сăмах лартмалла?

Вĕренекен: 3-мĕш сăпатри «эсĕ» местоимение.

Учитель: Тĕрĕс. Эсĕ местоимени хăвăнпа калаçакан çынна пĕлтерет. Çак предложенири **эсĕ** сăмах мĕне пĕлтерет?

Вĕренекенсем ответлеймеççĕ, малалла учитель хăй ăнлантарать.

«Чыса çамрăкла упра» предложенире **эсĕ** сăпатлă местоимение лартатпăр пулсан, вăл конкретлă **эсĕ** сăмаха пĕлтермест, пĕтĕмлетсе каланă сăмах шутланать. **Эсĕ** тесе кунта пур çын пирки те калама пулать. Ытти предложенире те подлежащи вырăнне пĕтĕмлетсе каланă **эсĕ** сăмах тĕл пулать. Çакăн йышши предложенисене пĕтĕмлетÿ сăпатлă предложенисем теççĕ. Кун пек предложенисенчи подлежащи вырăнĕнче **эсĕ** е **эсир** местоименисене лартма май пур. Пĕтĕмлетÿ сăпатлă предложенисем вĕрентсе каланă ваттисен сăмахĕсенче ытларах пулаççĕ.

Пĕтĕмлетÿ сăпатлă предложенисенче подлежащи пулмасть, анчах ăна çăмăллăнах тупма пулать. Çавăнпа та учебникра ăна паллă мар сăпатлă предложенисемпе пĕрле панă, уйăрса кăтартман. Учитель паллă мар сăпатлă предложенисене пĕтĕмлетÿ сăпатлă предложенисемпе танлаштарса кăтартать, вĕсен хушшинчи уйрăмлăхпа пĕрпеклĕхне паллă туса хăварать. Ун хыççăн пысăк мар творчество ĕçĕ иртterет. Диктантра сăпатсăр, паллă мар сăпатлă тата пĕтĕмлетÿ сăпатлă предложенисем панă, вĕренекенсем çырнă май мĕнле предложени пулнине кĕскен çырса паллă тумалла. Е пысăках мар

ирĕклĕ диктант çыртармалла. Вĕренекенсем текстри пур предложенисене те мар, паллă мар сăпатлă тата пĕтĕмлетӳ сăпатлă предложенисене кăна тетрадьсем çине çырса хураççĕ.

Диктант тексчĕ.

Пилĕк çул каялла пирĕн шкул садне тума йышăннăччĕ. Унтан вара чылай вăхăт иртрĕ. Учительсемпе вĕренекенсем тăрăшсах улмуççисем, чие йывăççисем лартрĕç. Сад йĕри-тавра карта та тытрĕç. Çуллахи вăхăтра йывăççене шăварсах тăчĕç.

Халь садра илемлĕ. Улмуççисем сарăлса ӳсеççĕ. Кашнин чун-чĕрине савăнтармалла! Малашне садран пысăк тупăш кĕтмелле.

Пирĕн шкул ачисем ваттисем каланине яланах асра тытнă. Ан тĕлĕнтер чĕлхӳпе, тĕлĕнтер ĕçӳпе, теççĕ. Шăпах вĕсем пурне те хăйсен ĕçĕсемпе тĕлĕнтереççĕ те ĕнтĕ!

Текстра 66 сăмах. Аклантармалли сăмахсем çук.

## ЯТ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Ят предложени пĕр подлежащирен е ăна ăнлантаракан сăмахсенчен тăрать. Ят предложени ят падежĕнче тăракан япала ятĕнчен тата ăна ăнлантарса тăракан сăмахсенчен пулать терĕмĕр. Анчах кашни ят падежĕнчи сăмахах ят предложени тума пултараймасть, ăна валли мĕнле те пулин факта çирĕплетсе калани кирлĕ.

**Июнĕн 22-мĕш кунĕ. 1941 çул. Хăрушă хыпар. Аслă вăрçă пуçламăшĕ. Юнлă та хаяр çапăçусем.**

Кунти кашни предложени мĕнле те пулин факта çирĕплетсе парать.

Ят предложенисем япаласене, вĕсен паллисене, хисепне кăтартма пултараççĕ. Ят предложенинчи япала ячĕсем кăтарту местоименисемпе е татăксемпе пĕрле те пулаççĕ.

**Ак Атăл. Вăл пит илемлĕ те лăпкă.**

**Ав вăрман. Ман савăнăç йăви.**

Вăхăт тĕлĕшĕнчен илсен, хальхи вăхăтри япаласемпе событисем çинчен каланă чухне ят предложенисемпе усă кураççĕ. Ят предложени сасартăк, хăвăрт улшăнакан ĕçсене е вăрăммăн пулса иртнине кĕскен çырса кăтартнă чухне тĕл пулать.

1. Хĕрĕх виççĕмĕш çул. Хура кĕркунне. Украина фрончĕ. Акă шавлă Днепр! Унăн сылтăм чăнкă çыранĕ. Кунтах тарăн траншейăсемпе окопсем. Пĕр взвода яхăн харсăр боецсем. Çӳлтен приказ. Днепр тепĕр енне каçмалла. 2. Хĕвеллĕ ир. Тӳлек çанталăк. Урам сип-симĕс. Ешĕл сад. *(Алка.)* 3. Эдмунд Шиффке. Рядовой. Утмăл саккăрмĕш полкран. *(Хус.)*

4. Германи. Тыткăн. Госпиталь баракĕ.
Клин патĕнче пит йывăр аманса,
Тăнран тухса, эп тыткăна çаклантăм. *(Хус.)*

Ят предложенинче сказуемăй пулмасть, подлежащи тата ăнлантарса паракан сăмахсем пулаççĕ. Писательсем çутçанталăка сăнласа панă чухне, е хăвăрт улшăнса пыракан событисене çырса панă чухне, е героя кĕскен сăнласа панă чух ят предложенисемпе усă кураççĕ. Ят предложенисем калаканăн вăхăтне перекетлеме пулăшаççĕ.

Вĕренекенсене çакна та асăрхаттармалла: кашни уйрăм каланă сăмахах (ят падежĕнчи япала ячĕ, хисеп ячĕ, местоимени пулсан та) ят предложени пулмасть.

1. — Сĕрме пуçла? Мĕскер?

— Пулă. Куртăн-и, мĕн чухлĕ?— терĕ Палюк мучи, кӳлĕре темĕнле, сĕлĕх евĕрлĕ чĕрчунсем çине тĕллесе кăтартса. *(Харл.)*

Ку предложенире **пулă** япала ятне уйрăм панă, ун хыççăн точка лартнă. **Пулă** сăмах пурпĕр ят предложени пулмасть, вăл тулли мар предложенире тăрать.

2. —**Ачасем! Ачасем!** — тепĕр хĕвел тухнă пекех савăнăçлăн кăшкăрса пырса кĕчĕ шкула Якуркка Мĕкĕти.— **Пĕлетĕр-и, эпĕ паян мĕн куртăм?** *(Харл.)*

Кунта **ачасем! ачасем!** каллех ят предложени пулмаççĕ, вĕсем обращени кăна пулаççĕ.

3. Ерохин. Ăнланатăп, ăнланатăп. Вăрттăнлăх. Ну, мĕнех, сан пек пултăр эппин. *(П. Яльцев.)*

**Вăрттăнлăх** — япала ячĕ, уйрăммăн ят предложени пек тăрать пулсан та, ят предложенийĕ пулмасть: вăл ĕçĕ вăрттăн пулнине калать çеç, çирĕплетсе кăтартмасть.

4. Хисеплесе каланă: тавтапуç, тав, салам, тархасшăн; килĕшнине кăтартакан: аван, лайăх, тĕрĕс, çапла, чăнах, чăнах та сăмахсем каллех уйрăммăн тăнă чух та ят предложени пулмаççĕ. Вĕсем сăмах-предложени пулаççĕ.

Хĕрарăм-врач. Сыва-и, юлташсем!
Сасăсем. Сывах-ха. Сывлăх сунатпăр.
Пехотинец. Тĕрĕс. Пассажирсем. Ларăр.
Хĕрарăм-врач. Тавтапуç. Шоссе çинче мĕншĕн машинăсем курăнмаççĕ?

*(В. Катаев.)*

5. Тӗл пулсан, паллашнӑ чухне каланӑ хушамат, ят, ашшӗ ячӗ, ӗҫлекенӗн вырӑнӗпе должноҫӗ ят предложени тумаҫҫӗ.

Сурбанов (Лена еннелле кӑтартса). Акӑ оригиналӗ. Елена Егоровна Золотова, чаплӑ доярка... Ҫирӗм икӗ ҫулта... *(Айз.)*

6. Малтанхи предложенирен палӑртса кӑтартма илнӗ уйрӑм сӑмах е сӑмах майлашӑвӗ каллех ят предложени пулмасть.

Эпӗ ӑна кашни кунах куратӑп. Кашни кун. *(Алент.)*

Ят предложенисем темӑна ҫирӗплетме класрах учебник тӑрӑх 59-мӗш хӑнӑхтарӑва тутармалла, ҫавӑнтах тӗрӗслемелле. Килте 60-мӗш хӑнӑхтарӑва туса килме парса ямалла. Хӑнӑхтарура панӑ темӑсенчен пӗрине класрах туса пӑхмалла, ытти темӑсемпе килте калав ҫырасси вӗренекенсемшӗн ӑнланмалла пулать. Киле хутсӑр предложенин тӗсӗсем ҫинчен вуласа аса илме 19, 20, 21, 22 §§ парса ямалла.

Пӗтӗм темӑна вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн тепӗр сехетре творчество ӗҫӗ туса ирттермелле.

Ана валли текст.

1. Ҫул. Каҫхи ҫул. Сывлӑмпа нӳрленнӗ ансӑр сукмак. Мӗн ҫинчен кӑна аса илтермеҫҫӗ-ши вӗсем? Каҫхи нӳрлӗ сукмак кашни ҫыннӑн чӗринчех йӗр хӑварнӑ пуль. *(Алент.)*

2. Этемӗн шанчӑкӗ пулмалла. Япалана шухӑшламасӑр ан ту. Паян тумалли ӗҫе ырана ан хӑвар. Ҫиччӗн пӗр ҫынна кӗтмеҫҫӗ. *(Ват. с.)*

Литюкваскать. Ана килте кӗтеҫҫӗ. Литюк чӗри ҫулӑмланса, хӗлхем сапса тӑрать. Вӗри хӗлхем! Хаҫатра каланӑ пек сӗт-ҫу нумайрах илмелле. Америкӑна хӑваласа иртмелле. Сахар та ҫапла кларӗ. Эпӗ сӑвакан ӗнесем халиччен ҫулталӑкне икӗ пиншер литр ҫеҫ сӗт панӑ. Сахал ку. Манӑн кашни ӗнерен тӑватӑ пин, пилӗк пин литр сӗт суса илмелле. *(Алент.)*

Диктанта ҫырнӑ май ҫакӑн пек паллӑ тума хушмалла: сӑпатсӑр предложение аялтан пӗр йӗрпе, паллӑ мар сапатлисене — хумлӑ йӗрпе, пӗтӗмлетӳ сӑпатлисене — татӑк йӗрпе, ят предложенисене — икӗ тӳрӗ йӗрпе туртмалла.

Ку таранччен вӗреннӗ темӑсемпе тӗрӗслев диктанчӗ те ҫыртарма юрать. Вӑл вӗренекенсен пӗлӗвне шута илме пулӑшать. Ана тепӗр сехетӗнче туса ирттермелле.

Диктант валли текст:

Кăвакарчăн пек йăваш кайăк урăх пур-ши? Çук та пулĕ. Кăвакарчăнсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ, ытти кайăксемпе те çапăçмаççĕ. Хăйсене питĕ тирпейлĕ тытаççĕ.

Кăвакарчăн вăл — ăста кайăк. Хăй пурăннă кил-çуртне нихçан манмасть, таçтан шыраса тупать. Çавăнпа кăвакарчăнсене тепĕр чух почтăра та çÿретеççĕ. Ун ури çумне çырăва çыхмалла çеç. Çырăва вăл кирлĕ çĕре хăвăрт çитерет.

Ашшĕ-амăшне кура чĕпписем те пĕчĕкренех ăслă ÿсеççĕ. Йăвисенче лăпкăн лараççĕ, аслисем чĕнмесĕр тухмаççĕ.

Ку çеç-и? Мĕн пĕчĕкренех амăшĕсене пулăшма тытăнаççĕ.

Мĕнле пулăшаççĕ тетĕр? Ак мĕнле. Кăвакарчăн амăшĕсем малтанхи чĕпписен тĕк ÿсме пуçласан тата икшер çăмарта тăваççĕ. Малтанхи чĕпписем ÿссе çитнĕ тĕле кашни йăвара тата икшер чĕпĕ тухрĕç. Вĕсене кăвакарчăн чĕпписем хăйсемех ăшăтса кăларчĕç. Ÿссе çитнисем вара йăвасенчен вĕçсе анчĕç те васкасах апат шырама тытăнчĕç Хăйсем кăна çимеççĕ, пĕчĕк чĕпписене те пырса çитереççĕ. Йăмăкĕсем, шăллĕсем-çке-ха! Вăт мĕнле ăслă вĕсем — кăвакарчăн чĕпписем.

*Г. Харлампьевăн* «Кăвакарчăн чĕпписем» калавĕ тăрăх.

Текстра 126 сăмах. Анлантармалли сăмахсем çук.

## ТУЛЛИ МАР ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Темăна вĕренме тытăниччен калуллă тулли предложенисем çинчен аса илмелле. Ун пек предложенисенче тĕп членпа кĕçĕн членсем те пулаççĕ. Вĕренекенсем тĕслĕхсем параççĕ, тĕп членсемпе кĕçĕн членсене кăтартса хăвараççĕ.

Малалла учитель тăван чĕлхере тулли мар предложенисем пурри çинче чарăнса тăрать. Тулли мар предложенисенче малтанхи шухăшран ăнланмалла пирки пĕр-пĕр члена сиктерсе хăварса калаççĕ. Уйрăмах ун пек предложенисем диалогра (икĕ çын хушшинчи калаçура), монологра (çын хăйне хăй калаçнинче) тĕл пулаççĕ. Тулли мар предложенисем анлă шухăша сахал сăмахсемпех уçса параççĕ, калаçу вăхăтне перекетлеме, кĕске вăхăтрах нумай хыпара пĕлтерме пулăшаççĕ.

Тулли мар предложенисемпе драматургсем хăйсен пьесисенче анлă усă кураççĕ.

Учитель урока вĕрентме литература произведенинчи пĕр-пĕр паллăрах, витĕмлĕрех сыпăка илсе пама пултарать. Акă Элкер çырнă «Унтри» калавăн сыпăкĕ.

Чылай вăхăт çÿресе нимĕнле ĕç те тупайманнипе ĕмĕтне хуçнă Унтри, юлашкинчен, пĕр магазина пырса кĕрет.

— Мĕн кирлĕ сана, ачамккă? — сасартăк ыйтса хурать тăсланкă сутăçă...

— Ĕç шыратăп... вырăна кĕресчĕ манăн,— тет Унтри,— сутăçă чăвашла каланине кура, чылаях хăюлланса.

— Мĕнле ĕç? Мĕн тума пултаратăн эсĕ?

— Шыв кӳме, вутă çурма...

— Миçе çулта эсĕ?

— Вуниккĕ тултарнă.

— Хăш вулăс? Хăш ял?

— Çĕрпӳ вулăсĕ. Паçпаксем.

Унтри сутăçă ыйтнине хирĕç каланă чухне кĕскен, тулли мар предложенисемпе тавăрса калать. Ответсенчи предложенийĕсенче подлежащи çук, хăшпĕринче е дополнени, е сказуемăй сиксе юлнă. Мĕншĕн-ха вăл предложенисене автор çавăн пек йĕркелет?

Хуçа Унтрирен ыйтнă чух тулли предложенисемпе ыйтать. Ку предложенисенче тĕп членсемпе кĕçĕн членсем те пур. Унтри хуçана хирĕç каланă чух ыйтнă предложенири сăмахсене тепĕр хут каласа тăмасть, унта çук сăмахсемпе ответлет. Çавăнпа та предложенисем кĕске, тулли мар пулаççĕ. Вăл предложенисенче чылай членсене сиктерсе хăварнă, анчах вĕсене çăмăллăнах тупма пулать.

Çавăн йышши предложенисене тулли мар предложени теççĕ.

Тепĕр чухне подлежащипе сказуемăйлă предложенисенчен пĕр-пĕр кĕçĕн члена кăларса пăрахсан та, тулли мар предложени пулать.

а) — Эсĕ кăçал вĕренме каятăн-и?

— Çук, каймастăп.

Ответленĕ предложенинче подлежащипе вăхăт обстоятельствине сиктерсе хăварнă.

ă) — Кам колхозниксемпе пĕрле уйра кĕлте çыхнă?

— Эпĕ çыхнă.

Иккĕмĕш предложенире кĕçĕн членсенчен — тӳрĕ дополнени (**кĕлте**), тӳрĕ мар дополнени (**колхозниксемпе пĕрле**), вырăн обстоятельстви (**уйра**) çук, калаканĕ вĕсене сиктерсе хăварнă, çавăнпа та ку предложение тулли мар тетпĕр.

Вĕренекенсене тулли мар предложенисемпе паллаштарнă май чарăну паллисем лартасси çинчен те каласа хăвармалла.

Хăшпĕр тулли мар предложенисенче пĕрре малтан

кăтартнă глагол-сказуемăя сиктерсе хăвараççĕ те ун вырăнне вăрăм чарăну (пауза) тăваççĕ. Çав чарăнăва çырура тире лартса палăртаççĕ.

Пичче ĕçлет колхозра, шăллăм — заводра.
Вăл пулнă аслă вырăс хĕрĕ.
Эс унăн йăмăкĕ — чăваш. *(Шав.)*

Çавнашкал илемлĕ çурхи кун Саламли икĕ çыру илчĕ: пĕри — пĕчĕк Нинăран, тепри — Владивосток хулинчен. *(Арт.)* Эсĕ мана пулăшăн, эпĕ — сана. *(Аслан.)* Ёлĕк кунта чиркӳ пулнă, халĕ — клуб. *(Аслан.)*

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш предложенире антонимла сăмахсем чухне тире лартатпăр.

Кашкăр пăхать вăрманалла, йытă — ялалла.

Тип аçа пек килсе çапрĕ
Урăм-сурăм çав хăват.
Пур çынни, туппи-масарĕ—
Çӳлелле, унтан — шыва. *(Хус.)*

Çак сехетрех пысăках мар асăрхаттару диктанчĕ çыртарма юрать, вăл вĕренекенсене тулли мар предложенисенче чарăну паллисем лартма хăнăхтарать. Текст:

— Ачасем! Ачасем! — тепĕр хĕвел тухнă пекех савăнăçлăн кăшкăрса пырса кĕчĕ шкула Якуркка Мĕкĕти.— Пĕлетĕр-и, ачасем, эпĕ паян мĕн куртăм?

— Мĕн?

— Пирĕн пахчари çĕмĕрт çине темĕнле кайăк йăва çавăрнă. Тата илемлĕ çăмартасем тунă.

— Эсĕ çăмартисене тытса пăхрăн-и? — ыйтрĕ Павел Петрович.

— Тытса пăхрăм. Мăйăртан кăшт çеç пысăкрах.

— Эсĕ кайăкне куртăн-и?

— Çук, кураймарăм. Киле таврăнсан, куратăп ак,— тет Мĕкĕте мухтанараххăн.

— Эсĕ вăл кайăка кураймастăн.

— Кураймастăп? Мĕншĕн? — тĕлĕнсе ыйтать Мĕкĕте.

— Кайăксем çын алли пырса тĕртĕннĕ йăваран сивĕнеççĕ,— ăнлантарса пачĕ Павел Петрович. *(Г. Харл.)*

## ПĔР ЙЫШШИ ЧЛЕНЛА ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Хутсăр предложенин синтаксисне вĕренес ĕçре пĕр йышши членсем чылай пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕренекенсем пĕр йышши членсене вĕреннĕ май хутсăр предложенин тата тепĕр кăткăсрах енĕпе паллашаççĕ. Кунта вĕренекенсемшĕн йывăрри — пĕр йышшипе пĕр йышши

мар определенисене уйӑрса илесси, пӗр йышши членлӑ предложенисенче кирлӗ чарӑну паллисем лартма пӗлесси, пӗр йышши членсене сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисенчен уйӑрса илесси т. ыт. те. Учителӗн ачасене вӗрентнӗ чухне ҫак йывӑрлӑхсене шута илес пулать.

Предложенири сӑмахсем икӗ тӗрлӗ паллӑ ҫыхӑнура: сыпӑнуллӑ тата пӑхӑнуллӑ ҫыхӑнура пулаҫҫӗ.

Пӑхӑнуллӑ ҫыхӑнура пӗр сӑмах теприне пӑхӑнтарса тытса тӑрать. Согласовани, управлени тата примыкани йӗркипе ҫыхӑнни пӑхӑнуллӑ ҫыхӑнӑва кӗрет. Унсӑр пуҫне сыпӑнуллӑ ҫыхӑну пур. Сӑмахсем шухӑш тӗлӗшпе ҫеҫ пӗр-пӗринпе ирӗккӗн, пӗр виҫере тӑрса пӑхӑнмасӑр ҫыхӑннине сыпӑнуллӑ ҫыхӑну теҫҫӗ. Пӗр йышши членсем шӑп сыпӑнуллӑ ҫыхӑнура тӑраҫҫӗ. Предложенири кашни пӗр йышши член пӗр-пӗринпе ирӗккӗн, пӗр шайра тӑрса, шухӑш тӗлӗшӗнчен кӑна ҫыхӑнать. Пӗр йышши членсем предложенири пӗр ыйту ҫине ответлеҫҫӗ, пӗр-пӗр сӑмаха ӑнлантарса параҫҫӗ. Предложенири кашни членах (тӗп членсемпе кӗҫӗн членсем) пӗр йышши член пулма пултарать.

**Хура тинӗс, Шурӑ тинӗс, Хӗрлӗ тинӗс** те пулать. Ярмуш **вуларӗ, ҫырчӗ, калаҫрӗ,** юлташӗсемпе **тавлашрӗ,** пӗр минут та ӗҫсӗр **лармарӗ.** *(Турх.)*

**Чухӑнлӑх, пуянлӑх, уйрӑмлӑх** йӑранӗ (опред.)

Ирӗкпе ҫӗнелнӗ пурӑнӑҫран тарӗ. *(Ҫ. М.)*

Қаҫхи тупӑ сасартӑк **хӑрушшӑн, хӑватлӑн, сивлеккӗн** янраса кайрӗ. *(Арт.)* (Мӗнлелӗх обстоятельстви.)

Эпӗ **атте-аннене, ҫуралнӑ яла, тӑвансене, хамӑр ҫӗршыва** ытарайми юрататӑп.

Кунта пурте **мӗне?** ыйтупа ыйтӑнаҫҫӗ, пурте тӑву падежӗнчи тӳрӗ дополнени пулаҫҫӗ. Предложенири дополненисем пӗр-пӗринпе сыпӑнуллӑ ҫыхӑнура тӑраҫҫӗ. Пӗр йышши членра тӑракан подлежащин, дополненин анлӑ определенисем пулма пултараҫҫӗ.

Эпӗ ача чухне хамӑрӑн **пысӑк сад пахчине,** ял ҫумӗнчи **симӗс улӑхсене, колхоз вӑрманне** тем пекех сӑнама юрататтӑм.

**Ҫак йӑмраллӑ тӑп ялсем,**
**Йӑлтӑркка юханшывсем,**
**Хырлӑ, чӑрӑшлӑ вӑрман**
**Ӗмӗр тухмӗҫ асӑмран...** *(Элк.)*

Вĕренекенсемшĕн анлă определениллĕ пĕр йышши членсене уйăрса илме йывăр.

Пĕр йышши членсем хăшпĕр чухне пĕр формăра тăракан пуплев пайĕсенчен мар, тĕрлĕ пуплев пайĕсенчен е тĕрлĕ формăра тăракан пĕр пуплев пайĕнчен пулаççĕ. Ун чухне те пĕр йышши членсене тупасси вĕренекеншĕн йывăр ĕç пулса тăрать.

Тĕслĕхсем:

**Вăл пуринпе те питĕ кăмăллă, тараватъ нихçан та çынпа хирĕçмен пуль...** *(Арт.)* **Эпĕ çӳçĕме кăтралатса пĕтертĕм, халĕ ак йăлт юхса пĕтрĕ, тепĕр пилĕк çултан кукшалансах юлатăп пулĕ.** *(Арт.)* **Саламли ку сăмаха уншăн мар, такамшăн, хăй ĕмĕтĕнчи юратнă çыншăн каларĕ.** *(Арт.)* **Колхоз клубне чакăр куçлă, ватăрах, кăвак костюм тăхăннă артист килчĕ.**

Вĕренекенсем пĕр йышши членсене уйрăмтăран кĕçĕн членсемпе те пăтраштарма пултараççĕ. Учителĕн пĕр йышши членсемпе уйрăмтăран кĕçĕн членсем хушшинчи уйрăмлăха та кăтартса памалла.

Уйрăмтăран кĕçĕн член хăй умĕнче тăракан пĕр-пĕр члена хăш енчен те пулин ăнлантарса уçса парать, вăл пĕр йышши член пулма пултараймасть. Пĕр йышши членсем пĕр-пĕринпе сыпăнуллă çыхăнура тăраççĕ пулсан, уйрăмтăран кĕçĕн членсем хăйсене тытса тăракан сăмахсемпе пăхăнуллă çыхăнура пулаççĕ.

**Соловьева — çарта пулнă хĕр — арçын пек патвар кĕлеткеллĕ, çӳçне те арçынла кастарнă, салтакла çирĕп утать, сăмаха пат тӳрĕ татса калать.** *(Арт.)* **Эпир, пулеметчиксем, пушă лентăсем çине патрон тиретпĕр.** *(Арт.)* **Çак вăхăтра, сасартăк, Днепрăн леш енче, улăхра, шурлăхлă вырăнсенче ӳсекен çӳçе тĕмĕсем хушшинче, такамăн илемлĕ, уçă сасси янăраса кайрĕ.** *(Агак.)*

Вĕренекенсем анлă определениллĕ пĕр йышши членсене сыпăнуллă хутлă предложенисемпе те пăтраштараççĕ. Кунта учитель пĕр йышши членсене сыпăнуллă хутлă предложенисемпе танлаштарса кăтартать, вĕсем хушшинчи уйрăмлăха уçса парать. Вĕсем хушшинчи тĕп уйрăмлăх: сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенин икĕ тĕп членĕ те — подлежащипе сказуемăйĕ те пулаççĕ. Тепĕр чухне подлежащи пулмасан та, анчах вăл сăпатсăр предложени шутланать пулсан, пурпĕрех сыпăнуллă хутлă предложени пулать.

**Çил вĕрмест, анчах сивĕ.**
**Уйăх çутатать, анчах ăшăтмасть.**

Пĕрремĕшĕнче сыпăнуллă хутлă предложени: **çил вĕрмест** — сăпатлă предложени, иккĕмĕшĕ — сăпатсăр, **анчах** хирĕçле союзпа çыхăннă. Иккĕмĕш тĕслĕхĕнче пĕр йышши членлă хутсăр предложени панă, икĕ сказуемăй: **çутатать, ăшăтмасть** пĕр-пĕринпе **анчах** хирĕçлекен союзпа çыхăннă. Пĕр йышши членсем те, сыпăнуллă хутлă предложенисем те союзлă тата союзсăр çыхăнура пулаççĕ. Пĕр йышши членсем предложенин пĕр-пĕр членĕ çеç пулаççĕ пулсан, сыпăнуллă предложенисем темиçе уйрăм предложение пĕрлештерсе, çыхăнтарса тăраççĕ. Пĕр йышши членсем хушшинчи союз пĕр пек, уйрăм сăмахсене çыхăнтарма кирлĕ, сыпăнуллă хутлă предложенисенчи союз темиçе хутсăр предложение пĕрлештерсе, çыхăнтарса тăма кирлĕ. Кўлепи енчен илсен, вĕсен хушшинчи уйрăмлăх çавăн пек.

Темăна вĕренме тытăниччен IV-мĕш класра вĕреннине кèскен аса илмелле. IV-мĕш класра ачасем пĕр йышши членсен определенийĕпе, вĕсем пĕр-пĕринпе **та, те, тата, е, анчах** союзсемпе çыхăннипе тата чарăну паллисем лартассипе кăштах паллашаççĕ. Чарăну паллисенчен пèр йышши членсем хушшине союзпа е союзсăр чухне запятой лартма хăнăхаççĕ. V-мĕш класра пĕр йышши членсем çинчен кăштах аса илеççĕ. Паллах, синтаксиса вèреннĕ чухне ку темăна тĕплĕрех вĕрентмелле.

Малтанхи сехетре вĕренекенсене пĕр йышши членсем çинчен çакăн пек ыйтусем пама юрать:

1. Пĕр йышши членсем тесе мĕне калаççĕ?

2. Пĕр йышши членсем мĕнле союзсемпе çыхăнса тăраççĕ?

3. Пĕр йышши членсем хушшине мĕнле чарăну палли лартаççĕ?

Кашни ыйту çине ответленĕ май вĕренекенсем кирлĕ тĕслĕхсем тупаççĕ.

Вĕренекенсен отвечĕсем хыççăн учитель пĕр йышши членсем çинчен вĕрентме пуçлать. Ачасен пĕлĕвне шута илсе, вăл пĕр йышши членсен йывăртарах енĕсем çинче ытларах чарăнса тăрать.

Ачасен пĕр йышши членсен определенине çирĕп пĕлмелле. Çав шутпа учитель уйрăм тĕслĕхсем илсе парать.

1. Петĕр, Валя, Ҫĕркури, Хвекла, Матви ыттисенчен маларах шутласа пĕтерчĕç те коридора тухрĕç. *(Ухли.)* 2. Ҫаçрĕ, чупрĕ те вăл сикрĕ (мĕн турĕ?) ишĕлен траншейăна. *(Хус.)* 3. Сарлака, симĕс, ешĕл курăклă улăхсем тăрăх Мăншу çуталса юхать. *(Шупуç.)* 4. Ирхи хĕвел ăшшăн, савăнăçлăн, ирĕккĕн кулса ячĕ. 5. Путăксемпе, варсемпе (мĕнсемпе?) çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет. *(К. Ив.)* 6. Улăхри сенкер юханшывсем, симĕс кăтра вăрман, тинĕс пек анлă уй-хирсем Верука савăнтарнă. 7. Сарă çÿçлĕ, хĕрлĕ сăнлă, лутрарах, типтер тумланнă ача улăхпа пырать.

Ҫак тĕслĕхсемпе усă курса, вĕренекенсене пĕр йышши членăн определенийĕ патне илсе çитермелле, выводне вĕренекенсене тутармалла.

**Пĕр ыйтурах тăрса, пĕр сăмахпах çыхăнакан предложени членĕсене пĕр йышши членсем теççĕ.**

**Подлежащисем те, сказуемăйсем те, определенисем, дополненисем тата обстоятельствăсем те пĕр йышши членсем пулаççĕ.**

Улттăмĕш предложенире пĕр йышши членсене ăнлантаракан определенисем панă. Ку предложенири пĕр йышши членсем япала ячĕсенчен пулнă. Вĕсем — подлежащисем: **юханшывсем, вăрман, уй-хирсем.** Ҫак пĕр йышши член пулакан кашни подлежащин ик-виçĕ сăмахлă определени пур. Ку тĕслĕ пĕр йышши членлă предложенисем çинчен вĕрентнĕ чухне схема туса памалла.




Схемăра подлежащие ăнлантарса паракан пĕр йышши мар определенисем умлă-хыçлă пулчăр. Мĕншĕн? **Юханшывсем** япала ятне пĕр определенийĕ тĕс енчен,

тепри вырӑн енчен ӑнлантарса парать. Пӗрремӗш определенийӗ — **сенкер** япала ятне кӑна тӗс енчен ӑнлантарса панӑ пулсан, иккӗмӗшӗ — **улӑхри** япала ятне кӑна мар, **сенкер** паллӑ ятне те ӑнлантарса, иккӗшиншӗн те определени пулать. Пӗр йышши определенисем пулнӑ пулсан, вӗсене япала ятне пӗр енчен ӑнлантарнӑран схемӑра та юнашар, пӗр шайра памаллаччӗ.

Юлашки предложенири пӗр йышши членсем **ача** подлежащие тӗрлӗ енчен ӑнлантарса параҫҫӗ, вӗсем тӗрлӗ пуплев пайӗнчен пулнӑ. Кун пек пӗр йышши членсем ҫинчен вӗренесси ачасемшӗн ҫӑмӑлах мар, ҫавӑнпа та ун ҫинче кирлӗ таран чарӑнса тӑмалла.




Ку предложенири пӗр йышши определенисем: **ҫӳҫлӗ, сӑнлӑ, лутрарах, тумланнӑ,** кашниннех темелле тата хӑйӗн определенийӗ пур. **Ача** подлежащие пӗрремӗшпе иккӗмӗш определенийӗсем, паллӑ ятӗнчен пулнӑскерсем, сӑн-пичӗ енчен кӑтартаҫҫӗ, виҫҫӗмӗшӗ — танлаштару форминчи паллӑ ячӗ — ҫӳлӗшне кӑтартать, тӑваттӑмӗшӗ — иртнӗ причастирен пулни — тумне палӑртать.

**Ача** сӑмаха тӗрлӗ енчен сӑнласа параҫҫӗ пулсан та, тӗрлӗ формӑри тата тӗрлӗ пуплев пайӗнчен тӑрсан та, вӗсем пӗр ӑнланӑва — ачана лайӑх енчен кӑтартнӑран, вӗсем пӗр йышши членсем шутланаҫҫӗ.

Кашни пӗр йышши члена пӗр пек интонаципе, кашни хыҫҫӑн пӗчӗк чарӑну (пауза) туса калаҫҫӗ. Учитель ӑна таблицӑри тӗслӗхсене ӑнлантарнӑ чухнех асӑрхаттарса хӑварать.

Вӗренекенсене ӑнланмалларах пултӑр тесен, пӗр йышши членлӑ предложение илсе схема туса кӑтартас пулать. Схемӑра кӗске чарӑнӑва (паузӑна) ҫӳлтен

аялалла пĕр йĕрпе туртмалла, вăрăм чарăнăва — иккĕпе. Предложени вĕçленсен, яланах пысăк чарăну тăваççĕ. Тĕслĕхрен çак предложение илер. Ирхи хĕвел ăшшăн, савăнăçлăн, ирĕккĕн кулса ячĕ.




Пĕр йышши членсем пĕр-пĕринпе сыпăнса тăрса çыхăнаççĕ, хăйсем ăнлантаракан сăмахпа управлени е примыкани йĕркине пăхăнса çыхăнаççĕ. Вĕсен çыхăнăвĕ çинчен те схемăпа кăтартса ăнлантармалла е вĕренекенсене вăл схемăна хăйсенех тутармалла.

Юлашкинчен çакна та асăрхаттарса хăвармалла.

Шухăша палăртас тĕлĕшпе пĕр-пĕр сăмаха икĕ-виçĕ хут калани пĕр йышши член тумасть.

Хĕртет, хĕртет хĕрӳ хĕвелĕ,
Пурне те савăнăç кӳрет. *(Тукт.)*
Утать, утать çул тăрăх,
Кун кунларĕ, каç турĕ. *(К. Ив.)*

Автор пĕр сăмахах икĕ хут каланипе хăй калас шухăшне витĕмлĕрех тăвать, вулакана лайăх асра тытма пулăшать. Литературăра ăна п о в т о р с е м теççĕ.

Вĕреннине учитель пĕтĕмлетет те киле учебник тăрăх 42-мĕш §-а вуласа ăнланма, 92—93-мĕш хăнăхтарусене туса килме парса ярать. Унсăр пуçне морфологи пайĕнчен союзсене аса илме хушать.

**Пĕр йышши членсене çыхăнтарса тăракан союзсем.**

Темăна вĕрентме тытăниччен вĕренекенсене союзсем çинчен аса илтермелле, çакăн пек ыйтусем памалла:

1. Мĕн вăл союз? 2. Союзсем мĕнле тĕп ушкăнсене пайланаççĕ? 3. Мĕнле союзсене сыпăнтаракан союзсем теççĕ? 4. Уйăракан союзсем шутне мĕнле союзсем кĕреççĕ? 5. Хирĕçлекен союзсемпе тĕслĕхсем тупса парăр?

Малалла пĕр йышши членсем союзсăр çыхăннине, кайран союзпа çыхăннине кăтартса памалла. Вĕренӳ материалне ăнлантарма çакăн пек тĕслĕхсем сĕнме пулать.

1. Вăрманĕ, улăхĕ, уй-хирĕ хывайрĕç хĕллехи тумне. *(Алка.)* 2. Пирĕн вăрманта юман, çăка, хурама, вĕрене тата шĕшкĕ ӳсет. 3. Тăшмана уйăрма та, курма та, унпа кĕрешме те хатĕр пулмалла. *(Элк.)* 4. Эпĕ е колхозра, е заводра, е шкул пахчинче ĕçлетĕп. 5. Вăл çилленсе пĕрре шурса каять, тепре кăвакарса чĕтре пуçлать. *(Шупуç.)* 6. Мускав та темиçе хут çуннă,
Анчах Мускав нихçан та парăнман. *(А. Клементьев.)*

Малтан учитель панă тĕслĕхсене вĕренекенсене ăшра вуласа паллашма хушать, унта тĕл пулакан пĕр йышши членсене асăрхама ыйтать.

Малалла кашни предложение уйрăм пăхса тухмалла, вĕренекенсене пĕр йышши членсене туптармалла; вĕсем мĕнле союзпа çыхăннине тата вĕсен пĕлтерĕшне хăйĕн уçса памалла. Пуринчен ытла вĕренекенсем пăтраштаракан е учебникра кăтартман йывăрлăхсем çинче чарăнса тăмалла.

1. **Та, те** союзсем пĕр йышши членлă предложенисенче ик-виçĕ пĕлтерĕшпе, сыпăнтаракан союзсемпе те, уйăракан союзсемпе те тĕл пулаççĕ. Вĕренекенсем **та, те** союз хăçан мĕнле пĕлтерĕшпе çӳренине час-часах пăтраштараççĕ.

а) **Та, те** союзсем сыпăнтаркан пĕлтерĕшĕпе чухне пĕр ĕç тепĕр ĕç хыççăн пулнине, вăл ĕçсем пĕр çыхăнура тăнине кăтартаççĕ. Çак союзсем кунта пĕр йышши членсем хушшинче пулаççĕ.

**Çиччĕ виç те пĕрре кас.** *(Ват. сăм.)*

ă) **Та,** **те** союзсем сыпăнтаракан тата вăйлатакан пĕлтерĕшпе чухне кашни пĕр йышши член пулакан сăмах хыççăн тăраççĕ, юлашки союзсăр пуçне кашни хыççăнах запятой лартмалла.

**Куç — этемĕн çулĕ те, кунĕ те.** *(Ват. сăм.)*

**Пăхатпăр та, пирĕн хушăра Куçук та, Хураçка та çук.** *(Уяр.)*

**Çул çинче ырă сунса каланă сăмахсем те, ăслă канашсем те, ыйтусем те, ӳкĕтленисем те янăраса тăчĕç.** *(Ф.)*

б) **Та,** **те** татăксем уйăракан союз пĕлтерĕшĕнче чухне пĕр йышши членсенчен хăшĕ çинче чарăнса тăмалли пирки иккĕленнине, уçăмлă маррине кăтартаççĕ.

**Ĕçе те паян, те ыран тухмалла.**

2. **Пĕрре-тепре** союза вĕренекенсем **пĕрре, тепре** вăхăт наречийĕсемпе пăтраштарма пултараççĕ.

**Пĕрре-тепре** уйăракан союзсем предложенире яланах мăшăррăн тĕл пулаççĕ, наречисем чухне кашнинех предложенире уйрăмшарăн усă кураççĕ.

**Валя пĕрре юман енне, тепре Улька енне пуç тайрĕ.** *(Алка.)*

**Пĕрре эпĕ автомашинăпа пыратăп, тепре самолётпа çитсе курасчĕ.**

3. Хирĕçлекен союзсем шутне **анчах, çапах** союзсем кĕреççĕ, анчах та вĕсем пĕр виçере мар: **анчах** союз малтанхи шухăша тӳррĕн, вирлĕн хирĕçлет; **çапах** союз вара йăвашрах, майĕпен хирĕçленине пĕлтерет.

**Тĕнче таврах пĕрре тухса çӳрес-и, терĕм,**
**Анчах çĕр пайĕнчен пĕрне те çӳреймерĕм.** *(Гриб.)*
**Вĕçĕ-хĕррисĕр тӳремпе кустарнă чух та,**
**Çапах ху умăнта мĕн те пулин куратăн.** *(Гриб.)*

4. Хирĕçлекен союзсен шутне **ни** союза та кĕртме пулать. Унăн вăйлăн палăртса кăтартас пĕлтерĕшĕ те пур.

**Васканипе памастăп канăç**
**Ни ăс-хакăла, ни вăй-хала.** *(Алка.)*

5. Вĕренекенсем союзлă пĕр йышши членлă предложенисене союзлă сыпăнуллă хутлă предложенипе пăтраштарма пултараççĕ. Вĕсене ан пăтраштарччăр тесен, вĕренекенсем чи малтан хутлă е хутсăр предложени пулнине разбор тума вĕренччĕр. Ана пĕлес пулсан, кашни предложенирех подлежащипе сказуемăйне тупмалла. Вара тин ытти членсемпе союзсем çине куçмалла. Çак йĕркене пăхăнса предложенисене тишкерме хăнăхсан, пăтрашасси пулмасть. Вĕренекенсене çак йĕркене хăнăхтармаллах.

**Вăхăт** юлсан, класра вĕренекенсене учебникри 64-мĕш хăнăхтарăва тутармалла та унтах тĕрĕслемелле.

К и л е̇ в а л л и ĕ ç: 43 §-а вуласа ăнланмалла, «Тăван литература» хрестоматирен пĕр йышши членлă предложенисене тупса çырса килме хушмалла.

**Пĕр йышши членлă предложенисенче запятой лартасси.**

Малтанхи уроксенчех темăна вĕреннĕ май ачасем пĕр йышши членлă предложенисенче запятой лартассипе паллашма тытăнаççĕ. Анчах та вĕсем пĕр йышши членсенче чарăну палли лартас йĕркене аванах ăнланнă теме çук-ха, мĕншĕн тесен учитель ку урокчен ун çинче кирлĕ таранах чарăнса тăрайман.

Темăна вĕрентессине темиçе тĕрлĕ меслетпе усă курса та ирттерме пулать.

1. Тĕслĕхсене доска çине çырса памалла та хăçан мĕнле чарăну палли лартнине ăнлантарса памалла.

2. Хатĕр кăтарту пособийĕпе ĕçлемелле, мĕншĕн ун пек чарăну палли лартнине ăнлантармалла.

3. Пĕр вĕренекене доска умĕнче предложенисем çыртармалла, пĕр йышши членсем хушшине хăçан тата мĕншĕн ун пек чарăну паллисем лартмаллине калаттармалла. Ку ĕçе пĕтĕм класри ачасене явăçтармалла.

4. Класра ăнлантару диктанчĕ ирттермелле, пĕр йышши членлă предложенисенче мĕнле чарăну паллисем лартассине ăнлантарса хăвармалла.

5. Вĕренекенсене хăйсен тĕллĕн ĕçлеттермелле. Вĕсене 44 §-а вуласа ăнланма хушмалла. Мĕнле ăнланнине ыйтса тĕрĕслемелле. Кирлĕ пек ăнлантарса панă хыççăн 96-мĕш хăнăхтарăва тутарса тĕрĕслемелле.

Ку урока кирек мĕнле майпа ирттерес пулсан та, вĕренӳ материалне çакăн пек йĕркелемелле.

Малтанах подлежащирен е сказуемăйран пулнă союзсăр пĕр йышши членлă предложенисем илмелле, вĕсене пĕр-пĕринчен запятойпа уйăрнине кăтартмалла.

Пĕр йышши членсем сыпăнтаракан союзсемпе (**та, те, тата**) тăнă чухне запятой хăçан лартмаллине кăтартса памалла. **Тата** союзпа çыхăннă чухне запятой лартмаççĕ. **Та, те** союзсемпе икĕ пĕр йышши члена çыхăнтарнă чухне вĕсен хушшине запятой лартмаççĕ. Çак союз предложенире икĕ хут, виçĕ хут е ытларах та тĕл пулнă чухне кашнин хутне запятой лартмалла, юлашки хутĕнче çеç запятой лартмаççĕ.

**Пирĕн Хветĕр вĕренӳре те, ĕçре те, вăйăра та пултарулă. Хуйхă та, кӳренӳ те, тарăху та, кĕвĕçӳ те ун чĕрине çурса ярасла ыраттарма тапратрĕ.** *(Арт.)*

Пĕр йышши членсем уйăракан союзсемпе (**е, те-те, пĕрре-тепре, пĕр-пĕр**) тăнă чухне яланах иккĕмĕш союз умĕн çеç запятой лартассине палăртмалла.

Ман аллăмсем те ĕçпеле хуралнă
**Е** утă çулнă чух, **е** сухара.
Пăрахут ишет, ун çулĕ халь инçе:
**Те** Ростова, **те** Сочие каfive... *(А. Клем.)*

Кĕрхи хĕвел **пĕр** ăшăтать, **пĕр** ăшăтмасть.

Сăпани **пĕрре** хĕрелсе, **тепре** шуралса кайрĕ. *(Х. Ç.)*

Пĕр йышши членсем **анчах, çапах** хирĕçлекен союзсемпе тăнă чух запятойне вĕсен умĕн çеç лартаççĕ. Вĕренекенсене çакна та асăрхаттармалла: **анчах** союз çеç мар, вăл вăйлатакан татăк та пулать, ун пек чухне запятой лартмалла мар.

**Почтальон пирĕн пата анчах килсе кайрĕ.**

**Ку йывăрлăха, хресченсем, эсир хăвăр анчах тата сирĕн чăн тусăрсем — революционерсем анчах витĕр пĕлсе тăраççĕ.** *(Элк.)*

Юлашкинчен çакна та паллă тумалла: уйрăм шухăшсене кăтартакан анлă пĕр йышши членсене точкăпа запятой лартса уйăраççĕ. Вĕренекенсене кун пек тĕслĕхсемпе те паллаштармалла.

Вунă çултах ашшĕнчен
Юлнă Петĕр тăлăха;
**Çапах** «пӳлĕх пӳрнипе»
Майĕпеле пурăнать;

Амăшĕпе килĕштерсе,
Кӳршĕсенчен кая мар
Тăвать ĕçкĕ-çикĕне.
*(Шупуç.)*

Анлантару диктанчĕ ирттермелли текст.

1. Çĕкленес, улăхас, малалла чикĕнес,
Кив тĕнчене кăкласа çеремлес. *(Шупуç.)*

2. Часах хăшпĕр чӳречесенчен кĕрен, сарă, сенкер çутăсем курăна пуçларĕç. *(Сад.)* 3. Çавăн пек шухăшсемпе Михаля ăшчиккине пăлхатса выртнă çĕртех пĕр вĕриленсе, пĕр сивĕнсе каять. *(Труб.)* 4. Эпĕ тĕлĕннипе пĕрре Улай çине, тепре сунарçă пичче çине пăхса илтĕм.

5. Якур пичче çулпала
Пушкăрт лаши кӳлнĕ те:
Те çуркунне, те çулла
Яртлаттарса чуптарнă.
*(М. Фĕд.)*

6. Полици те, губернаторĕ те, патши те пуян хутне кĕрет. *(Элк.)* 7. Те вырăс хăй, те тутар, те чăваш: вырăсла та, тутарла та, чăвашла та лайăх калаçать. *(Арт.)* 8. Шалтайкин чĕрн пĕр ыратса, пĕр хăпартланса кайрĕ. *(Арт.)* 9. Пĕр каласан, художникĕ те, çыруçи те, суфлĕрĕ те, артисчĕ те, агитаторĕ те, библиотекарĕ те — йăлтах хам.

*(Арт.)* 10. Çапла майĕпен çу кунĕсем ирте пуçларĕç, анчах çав шăрăх утçи кунĕ карчăк асĕнчен каймарĕ... *(Арт.)* 11. Çĕнĕ журнала пичче анчах пăхса ларатчĕ. 12. Эс вĕсемпе çунатланатăн, çӳле вĕçетĕн е анатăн. Чуна ыр кăмăл иленет, итленĕçем итлес килет. *(Алка.)* 13. Ĕмĕтĕрсем вĕçеççĕ çӳлĕ, анчах та кĕввĕр çĕкленмест. *(Алка.)*

Килевталлиĕç: 44 § вуласа ăнланмалла, 98-мĕш хăнăхтарăва туса килмелле, определенисем çинчен учебник тăрăх вуласа аса илмелле.

## ПĔР ЙЫШШИ ТАТА ПĔР ЙЫШШИ МАР ОПРЕДЕЛЕНИСЕМ.

Япала ятне пĕр йышши определенисем ăнлантарнă чухне кашни определени хыççăнах запятой лартаççĕ.

**Садра кăвак, хĕрлĕ, шурă, кĕрен, сарă чечексем ешереççĕ.** Ку предложенире **чечексем** япала ятне тĕс енчен ăнлантарса таракан пĕр йышши определенисем. Пурте мĕнлелĕх паллă ятĕнчен пулнă.

Пĕр йышши определенисем синоним енĕпе те палараççĕ.

**Пирĕн вăрманта хитре, тӳрĕ, яштака, çӳлĕ хырсем ӳсеççĕ. Хитре, тӳрĕ, яштака, çӳлĕ** — пĕр йышши определенисем, хыр илемлĕхĕпе çӳлĕшне кăтартаççĕ, анчах ытларах унăн илемлĕхне кăтартма усă курнă, çавăнпа та пĕр йышши член шутланаççĕ, вĕсене запятой лартса уйăрмалла.

**Октябрьти революциччен чăваш ялĕсенче час-часах хура, лутра, пĕчĕк, тайлăк пӳртсене курма пулнă.** *(Ком. ял.)*

Çак предложенире **хура, лутра, пĕчĕк, тайлăк** определенисем пурте начар тенĕ пĕр ăнланăва кăтартаççĕ, пĕр йышши определени пулаççĕ. Илемлĕ литературăра ун пек определени-эпитетсемпе анлă усă кураççĕ.

**Вирьялов çи-пуçĕ ĕлĕкхиллех тирпейлĕ, таса, анчах шупкаланма ĕлкĕрнĕ: куçа çимест.** *(Арт.)* **Эпĕ йĕри-тавра пăхса илтĕм: тĕттĕм, илемлĕ, чаплă çĕр тăрать.** *(Тург.)*

Япаласен паллисене тĕрлĕ майпа, тĕрлĕ енчен (калăпăшне, çӳлĕшне, тĕсне, çирĕплĕхне, анлăшне, илемлĕхне, тумне, хакне, мĕнрен тунине, вырăнне т. ыт.) кăтартакан пĕр йышши мар определенисем пулаççĕ. Вĕсем пăхăнса тăракан сăмаха тĕрлĕ енчен сăнласа параççĕ. Ун пек пĕр йышши мар определенисене запятойпа уйăрмаççĕ.

**Парка чечексем çинче шурă кăвак çунатлă шултра илемлĕ лĕпĕшсем вĕлтĕртетсе çӳреççĕ, хитре тĕкĕлтурасем сăрăлтатаççĕ.** *(Гр. Кр.)*

Предложенире **лĕпĕшсем** япала ятне малтанхи определени тĕс енчен, иккĕмĕшĕ — çунат уйрăмлăхĕ енчен, виççĕмĕшĕ — пысăкăш енчен, тăваттăмĕшĕ — хитрелĕх енчен сăнласа параççĕ. Çав май вĕсем пĕр йышши мар определенисем, вĕсен хушшине запятой лартмаççĕ.

**Ноябрьти шап-шурă çĕнĕ юр йĕри-тавра вĕлтĕртетет.**

Ку тĕслĕхри пĕр йышши мар определенисене схемăпа туса кăтартар.

| | | |
|---|---|---|
| Ноябрьти | — | вăхăт енчен палăртни |
| шап-шурă | — | тĕсне кăтартать |
| çĕнĕ | — | пахалăха |
| юр | — | япала ячĕ |

Пĕр йышши мар определенисем япала ятне çакăн пек майпа ăнлантараççĕ: малтанхи определенисем япала ятне пахалăхпа илемлĕх енчен кăтартаççĕ, унтан — калăпăш, пысăкăш, çӳлĕш енчен, юлашкинчен — вăхăтпа вырăн палли енчен. Юлашки определенийĕсем япала ятне ăнлантарса тăнипе пĕрлех хăй хыççăн тăракан определенисене те ăнлантараççĕ, вĕсемшĕн те определенисем пулаççĕ; çавăнпа та вĕсене чарăнса, пауза туса каламаççĕ, запятой лартса та уйăрмаççĕ.

Пĕр йышши мар определенисем, паллă ячĕсемсĕр пуçне, ытти пуплев пайĕсенчен те пулаççĕ.

**Çемçе юрпа витĕннĕ йывăççем пĕр хускалмасăр лараççĕ.** *(Турх.)* **Утрав çинчи йывăççем хыттăн кашлаççĕ. Турă лашан вăрăм çилхи хуллен вăркăшать.**

Çак темăпа урок ирттернĕ чухне малтан определенисем çинчен аса илни вырăнлă.

1. Мĕн вăл определени?
2. Мĕнле определенисем пулаççĕ?
3. Определенисем мĕнле пуплев пайĕсенчен пулаççĕ?
4. Определенисем хăйне ăнлантаракан сăмахсемпе мĕнле çыхăнура тăраççĕ?

Ыйтусем çине вĕренекенсем ответлеççĕ. Учитель определенисем çинчен пĕтĕмлетсе хăварать, малалла пĕр йышшипе пĕр йышши мар определенисем çине куçать. Вĕсем çинчен ăнлантарма плакатпа, схемăпа усă курать.

Плакатри тĕслĕхсем тăрăх вĕренекенсене пĕтĕмлетӳ патне илсе çитерет. Пĕр йышшипе пĕр йышши мар определенисем çинчен хăй пĕтĕмлетсе парать, вĕренекенсене темăпа çыхăннă тĕслĕхсем туптарать, тупнă предложенисенчи пĕр йышши тата пĕр йышши мар определени-

сен пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен, чарăну палли лартасси çинчен калаттарать.

Унтан вĕренекенсене çакăн пек тĕслĕхсем парать те вĕсене схема туса ăнлантарма хушать.

Тĕслĕхрен: 1. **Йăлтăртатса çутатакан ирхи сарă хĕвел хăйĕн пархатарлă шевлине çĕр çине сапалать. 2. Ырă, тараватлă, хĕрӳллĕ хĕвел пурне те савăнăç кӳрет.**




Пĕр йышши мар определенисен схеми.




Пĕр йышши определенисен схеми.

Çак схемăсене материала ăнлантарнă чухне туса кăтартмалла.

Вĕреннине çирĕплетес тĕлĕшпе вĕренекенсене пысăках мар творчество ĕçĕ пама юрать.

Вĕренекенсен предложенири япала ячĕсен умне кирлĕ определенисем тупса çырмалла, кирлĕ чарăну паллисем лартмалла.

1. ...вăрман... тумне тăхăнчĕ. 2. ...улăхра..: чечексем ӳсеççĕ. 3. ...уй-хирсенче... тырă ешерет. 4. Çаксем пурте... чĕресене тем пек савăнтараççĕ. 5. ...каникул вăхăтĕнче эпир те... колхоз уй-хирне ĕçлеме тухатпăр, ...колхоз пурлăхне ӳстересшĕн тăрăшатпăр. 6. ...аласем нимĕнле ĕçрен те хăраса тăрас çук. 7. Эпир... пурнăç тăвакан çамрăксем!

Многоточи вырăнне çакăн пек сăмахсем пулма пултараççĕ. 1. **Çурхи, хăйĕн илемĕ.** 2. **Çывăхри, кăвак, сарă, хĕрлĕ, кĕрен.** 3. **Пирĕн колхозăн анлă, сип-симĕс.** 4. **Пирĕн çамрăк.** 5. **Çуллахи, хамăр, тăван,** 6.**Пирĕн хастар.** 7. **Тĕнчери чи çутă, ырă, ирĕк те телейлĕ.**

Е хăнăхтару ĕçĕ туса иттермелле, ăна валли çакăн пек текст сĕнме юрать.

1. Çак вăхăтра пирĕн ума чакăр тутăр çыхнă, çӳхе пальто тăхăннă, кăн-кăвак куçлă, яштака пӳ-силлĕ хĕрарăм пырса тăчĕ. *(В. Алент.)* 2. Çӳл тӳпери чăлт шурă пĕлĕтсем калама çук илемлĕн курăннă. 3. Пĕрре кăпăкланса шуралса çитĕннĕ вĕсем, тепре, çу пек ирĕлсе, çавăнтах çухалнă. *(Долг.)* 4. Пурнăç малалла каять, анчах асаилӳ çухалмасть. *(Арт.)* 5. Кăнтăрла тĕлнелле çӳлте-çӳлте çемçе, шурă, çаврака пĕлĕтсем тухаççĕ. *(Тург.)* 6. Таçтан темле пĕчĕк кайăк сасси чĕнкĕлтетни илтĕннĕ. *(Элк.)* 7. Хура сухаллă, кăшт курпунтарах çын, хулпуççийĕ çинче кĕсменсем. *(В. Алент.)* 8. Унăн сăн-сăпачĕ таçти, инçетри, çӳлĕ сăрт хĕрринчи канăçсăр шевлене пăхнă пекех. *(В. Алент.)* 9. Çав вăхăтрах пирĕн пата хура костюм тăхăннă, вăтам пӳллĕ, кĕрнек çын пырса тăчĕ. *(В. Алент.)* 10. Инçетре çутă мĕлтлетсе илчĕ. Пĕрре хĕрлĕ, тепре шурă, унтан каллех хĕрлĕ. *(Бурн.)*

**Пĕр йышши членлă предложенисенчи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ.**

**Предложенире пĕр йышши членсемпе пĕр йĕрке тухать, пĕр член пулса анлă ăнланăва кăтартакан, пĕр йышши член умĕн е хыççăн тăракан сăмаха, е сăмах майлашăвне пĕтĕмлетӳ сăмахĕ теççĕ.**

Пĕтĕмлетӳ сăмахне пĕр йышши членсемпе танлаштарсан, вăл анлă, сарлака ăнланупа палăрать, пĕр йышши членсем ансăр ăнланупа палăраççĕ. Пĕр йышши членсем пĕр евĕрлĕрех пĕр ушкăнра тăракан сăмахсене кăтартса параççĕ. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем çав уйрăм сăмахсене пĕтĕмлетсе ушкăн ятне параççĕ, пурне те пĕрле пĕтĕçтереççĕ.

**Пирĕн вăрманта çакăн пек йывăççем пур: юман, вĕрене, ăвăс, çăка, çӳçе, çирĕк тата каврăç.**

**Юман, вĕрене, ăвăс, çăка, çӳçе, çирĕк тата каврăç — çаксем пурте пирĕн вăрманти йывăççем.**

**Садра чечексем: мăкăнь, роза, кăвакарчăн куçĕ, шăлтăрма курăк, чавкапуç, утмăлтурат ӳсеççĕ.**

Пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем пĕтĕçтерсе панă абстрактлă япаласен ушкăнне кăтартакан япала ятĕнчен, хăшпĕр кăтарту паллă местоименипе наречисенчен пулаççĕ. Ытларах тĕл пулакан местоименисем: **çаксем, вĕсем пурте, пурте, вĕсем кашни, пурте вĕсем, çапла, çакăн пек.** Ытларах тĕл пулакан наречисем: **ниçта та, таçта та, çакăнта, кунта, нихçан та, нумай, йывăр т. ыт.**

1. Каяс пулсан, кунта çине-çине ялсем: Шăхаль, Тăванъел, Саплăк, Начар Упи, Выç Турантăш — вĕçевĕçĕн ларса тухнă вĕсем. *(Илп.)* 2. Пур тем анлăш сăмахсем: фронт, маневр, задача. *(Хус.)* 3. Вырăспа та тăванлаш, тутарпа та эс туслаш — пурте пирĕн хурăнташ. *(Хус.)* 4. Никам та çукчĕ пирĕн: ни атте-анне, ни

тавансем, ни хурăнташсем. *(Лаз.)* 5. Еçĕ вара питĕ нумай: çуртне пăхмалла, выльăхне тăрантармалла, акисухине тумалла. 6. Пирĕн йăхра çаксем пулнă: Левешке, Сенюк, Энтри, Қараçăм, Йăван, Петĕр, Çемен, Павăл тата Зинови. 7. Тутар, пушкăрт, узбек, казах, ойрот, якут, тувин, чăваш — çаксем пурте тĕрĕк йăхне кĕрекен халăхсем. 8. Шелепи, Элкер, Хусанкай, Ухсай — пурте чăваш халăх поэчĕсем.

Пĕтĕмлетӳ сăмахсемлĕ предложенисенче чарăну палли лартасси çакăн пек:

I. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсем умĕн пулсан, ун хыççăн двоеточи (йĕкĕр пăнчă) лартаççĕ.

**Эпир шкул пахчинче çакăн пек çимĕçсем пăхса ӳстеретпĕр: сухан, хăяр, кăшман, кишĕр, купăста тата кавăн.**

II. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсем хыççăн чухне тире лартаççĕ.

**Золотницкий Н. И., Ашмарин Н. И., Егоров В. Г., Горский С. П. профессорсем — çаксем пурте чăваш чĕлхин паллă тĕпчевçисем.**

III. Пĕр предложенирех пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсен умĕн те, хыççăн та тăма пултарать, ун пек чухне çав чарăну паллисенех лартаççĕ.

**Пирĕн класри çак ачасем: Павăл, Маруç, Ваçук, Верук — пурте лайăх вĕренеççĕ. Манăн çакăн пек кĕнекесем пур: «Хĕн-хур айĕнче», «Унтри», «Шурăмпуç килсен», «Вăл вилĕмсĕр», «Вутпа çулăм витĕр», «Вунсаккăрмĕш çул», «Юмахсем» — вĕсене пурне те Семен Васильевич Элкер çырнă.**

IV. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пулмасан, пĕр йышши членсем умĕн двоеточи тата вĕсем хыççăн тире лартмаççĕ.

**Вырăнĕ-вырăнĕпе ним йĕркесĕр выртакан тăшман виллисем, ванчăк пулемĕтсем, пăрахса хăварнă винтовкăсем тĕл пулаççĕ.** *(Арт.)* **Урайĕнче тумтир таврашĕсем, çĕтĕк-çатăксем, кĕнекесем пĕр йĕркесĕр купаланса выртаççĕ.** *(Турх.)* **Кунта пĕтĕм уй-хир, хыçри вăрман, çырмаçатра пĕр чарăнми урса кайса çатăртаттарать..** *(Алка.)*

V. Хăшпĕр чухне пĕр йышши членсем умĕн пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пулмасть, анчах вĕсен умĕн чарăнса, пĕр йышши членсене палăртса каланăран, двоеточи лартаççĕ.

Пĕр çап-çамрăк хурăн
Илем кӳнĕ йăлăма:
Яштака, кăтра, шап-шурă.. *(Канаш.)*

Вăл пăртак ÿссенех ĕçе хутшăнчĕ: тыр выратчĕ, сÿре сÿрелетчĕ, выльăх пăхатчĕ. *(Алка.)*

VI. Пĕтĕмлетÿ сăмахĕ пулмасан та, чысласа калама пысăкрах чарăну тунă чух пĕр йышши членсем умĕн двоеточи лартмалла.

Стена хаçат редколлегинче: Петр Бойков, Виктор Пушков, Лариса Тихонова, Нина Григорьева тата Зиновий Павлов. Вĕсем нумай шутласа тăман, пĕр сасăпа çапла йышăннă: Ивана Мускава ярас. *(Турх.)*

VII. Хăшпĕр чухне пĕр йышши членсем умĕн пĕтĕмлетÿ сăмахĕ е ун вырăнĕнче тăраканни пулсан та, тире лартаççĕ. Пĕтĕмлетÿ сăмахĕпе ун вырăнĕнче тăраканни хыççăн пĕр йышши членсем пулаççĕ, вĕсем кунта анлă приложени вырăнĕнче шутланаççĕ, çавăнпа та вĕсене час-часах икĕ енчен те тирепе уйăраççĕ. Ун пек чарăну палли лартнине писательсен произведенисенче курма пулать.

Тĕслĕхсем.

Штабра ларакансем — вырăссем, латышсем, китаецсем, чăвашсем — пурте, чугун çулăн ик айккипе станцăран тухса, тăшмана хирĕç утатпăр. *(Кр. -Асли.)* Эпир виççĕн — эпĕ, Епхÿ тутарĕ Юнус тата кервен кăна мăкшă Микулай — масар çинче те кая тăрса юлтăмăр. *(Уяр.)* Хĕл хĕллекен кайăк-кĕшĕк — кăсăясемпе уйăпсем тата темĕнле кайăксем — хăйсен çепĕç чĕлхипе чĕвĕлтетеççĕ. *(Долг.)* Эпир виççĕн — боцман, эпĕ тата минĕр — шлюпкăна кĕрсе лартăмăр. *(Бурн.)*

Вĕренекенсене пĕтĕмлетÿ сăмахĕ çинчен вĕрентме тытăниччен кăтарту, пallă местоименисемпе наречисем çинчен, вĕсен пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен аса илтермелле, тĕслĕхсем туптармалла. Пĕтĕмлетÿ сăмахĕсенчен нумайăшĕ çав пуплев пайĕсенчен пулаççĕ. Малалла ĕçлеме пĕр йышши членлă, пĕтĕмлетÿ сăмахĕсĕр предложени илмелле, ăна доска çине çырса памалла, пĕр йышши членсем предложенире мĕнле член (тĕп е кĕçĕн член) пулнине ыйтмалла.

Унтан пĕр йышши членсем умĕн мĕнле пĕтĕмлетÿ сăмахĕ лартассипе ачасене ĕçлеттермелле.

Пĕр тĕслĕх илсе пăхар.

**Çурхи илемлĕ пахчара сухан, купăста, хăяр, ыхра, кишĕр тата кăшман ÿсеççĕ.**

Учитель: Мĕн ÿсет? Сухан, купăста, хăяр, ыхра,

кишĕр тата кăшман. (Предложенири пĕр йышши членсем подлежащи пулаççĕ.)

Учитель: Çак пĕр йышши членсем умĕн мĕнле пĕтĕмлетӳ сăмахĕ лартма пулать? Пурте шухăшлăр. Çак пĕр йышши членсем мĕнле япаласен ушкăнне кĕреççĕ? Вĕсене пĕр сăмахпа мĕнле калама пулать? (Çимĕçсем е пахча çимĕçсем.)

Учитель: Çак **çимĕçсем** сăмаха ăçта лартатпăр?

Вĕренекен: Пĕр йышши членсем умĕн.

Учитель: Тĕрĕс. Предложение çапла йĕркелетпĕр.

Çурхи илемлĕ пахчара çакăн пек çимĕçсем ӳсеççĕ: сухан, купăста, хăяр, ыхра, кишĕр тата кăшман.

**Çимĕçсем** сăмах умĕн кăтарту местоименийĕпе танлаштару татăкне **çакăн пек** сăмах майлашăвне лартатпăр, предложени вĕçĕнчи **ӳсеççĕ** глагола пĕр йышши членсем умне куçарса лартатпăр, çапла майпа пĕтĕмлетӳ сăмахлă, пĕр йышши членлă предложени тăватпăр.

Пĕр йышши членсем умĕн двоеточи лартасси çинчен те каласа хăвармалла.

**Çимĕçсем** пĕтĕмлетӳ сăмахĕ предложенире мĕнле член пулнине кăтартса памалла.

Çимĕçсем: мĕнсем? **Çимĕçсем** сăмах предложенире подлежащи пулать. Кĕскен учитель пĕтĕмлетет: предложенире пĕр йышши членсем мĕнле член пулаççĕ, пĕтĕмлетӳ сăмахĕ те çав членрах пулать. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕпе пĕр йышши членсем падеж, сăпат, хăшпĕр чухне хисеп енчен те пĕр-пĕринпе килĕшсе тăраççĕ.

Пĕр йышши членсен умĕнчи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ япаласен ушкăнне, йăхне, пĕрлĕхне кăтартакан япала ячĕсенчен тата хăшпĕр наречисенчен пулаççĕ.

Малалла пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсем хыççăн тăнипе паллаштармалла. Çав малтанхи тĕслĕхе илсе памалла, пĕр йышши членсем хыççăн мĕнле пĕтĕмлетӳ сăмахĕ лартма юрани çинчен ыйтмалла.

Пĕр йышши членсем хыççăнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕсем кăтарту, паллă местоименийĕсемпе наречисенчен пулаççĕ.

**Сухан, купăста, хăяр, кăшман, ыхра тата кишĕр— пурте пахчари çимĕçсем.**

Учитель: Ку предложенире пĕр йышши членсем хыççăн мĕнле пĕтĕмлетӳ сăмахĕ лартма пулать?

Вĕренекен: **Пурте** — паллă местоимение е **çаксем**

**пурте** — кăтарту местоименипе паллă местоимени пĕрлешсе пулнă пĕтĕмлетӳ сăмахĕ.

Учитель: Тĕрĕс. Халĕ предложение пĕтĕмлетӳ сăмахĕпе пĕрле калăр.

Вĕренекен: **Сухан, купăста, хăяр, кăшман, ыхра тата кишĕр — пурте пахчари çимĕçсем.**

Учитель: Çаплах, тĕрĕс. Пĕр йышши членсем хыççăн, пĕтĕмлетӳ сăмахĕ умĕн мĕнле чарăну палли лартмалла?

Вĕренекен: Ун пек предложенире пĕтĕмлетӳ сăмахĕ умĕн тире лартаççĕ.

Çак меслетпех тата темиçе предложение разбор тăваççĕ, пĕтĕмлетӳ сăмахĕсенче чарăну палли лартассине пăхса тухаççĕ, пĕтĕмлетӳ сăмахсен пулăвĕпе пĕлтерешĕ çинче те чарăнса тăраççĕ. Учитель вĕренекенсене пĕтĕмлетӳ членĕсемпе пĕр йышши членсенче чарăну палли лартас схемăпа та паллаштарма пултарать, вăл вĕреннине асра тытма çăмăллатать.

 — **пĕтĕмлетӳ сăмахĕ,**  — **пĕр йышши член**

I. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсен умĕн тăнин схеми.

1. 

II. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсен хыççăн тăнин схеми.

2. 

III. Пĕтĕмлетӳ сăмахĕ пĕр йышши членсем умĕн те, хыççăн та тăнине кăтартакан схема.

3. 

IV. Хăшпĕр чух пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн, пĕр йышши членсем умĕн тире лартнин схеми.

4. 

Мĕн вĕреннине пĕтĕмлетнĕ хыççăн вĕренекенсене учебникри 75-мĕш хăнăхтарăва класра тутармалла та тĕрĕслемелле.

Килте тумалли ĕç: 46—47 §§ вуласа ăнланмалла, 109-мĕшпе 110-мĕш хăнăхтарусене туса килмелле.

Пĕр йышши членсене вĕренсе пĕтерсен, асаилӳ урокĕпе çыру ĕçĕн урокĕсем туса ирттермелле.

Асаилӳ урокĕнче пĕр йышши членсем çинчен пĕтĕмĕшпе аса илмелле, хутсăр предложенисене разбор тутармалла, çыру ĕçĕсем туса ирттермелле, вĕсене разбор тутарса, чарăну паллисене тĕрĕс лартма хăнăхтармалла.

## АСАРХАТТАРУ ДИКТАНЧĔ.

1. Çак сĕм вăрман варринче ларакан тĕттĕм чăваш ялĕнче вăл вăхăтра чăваш йăлисем, юмах-халапĕсем, юрри-сăввисем нихăш вырăнтинчен те лайăхрах сыхланса усраннă. 2. Константин Иванов чăваш шкулĕсем валли кĕнекесем кăларнă çĕрте нумай ĕçленĕ, тӳрлетнĕ, çĕнĕрен куçарса çырнă, типографире корректура вуланă. 3. Пичче, атте, анне тата эпĕ вăрмана кайрăмăр. 4. Слакпуç таврашĕнче чăвашсем ят панă вырăнсем те нумай: Кĕрленай, Юманлăх, Кантăр варĕ, Кантăр вăрманĕ, Пĕчĕк шур, Ĕне масарĕ, Улякка çăлĕ, Емелкке варĕ тата ыт. те. 5. Атă тăхăннă çамрăк, пальтине хул хушшине хĕстерсе, хăрах аллине арча тытса, малтан Чукмаркассипе, каярах Масаркассипе утать,— пур çĕрте те чуна шари çурса ямалла чухăнлăх. 6. Емельян Пугачёв хăйĕн хăюллă çыннисемпе Пушкăрт çĕрне пырса кĕнĕ, унта асап куракан пĕтĕм халăха: вырăссене, пушкăртсене, тутарсене, чăвашсене тата ыттисене те патшапа тĕрлĕ харампырсене хирĕç тăратнă. 7. Сарлака çӳлĕ хӳмепе çавăрнă килкартинче ик-виçĕ хутлă çуртсем ларнă. (Ухсай Яккăвĕн «К. Иванов» кĕнекинчен).

Тĕрĕслев диктанчĕсем.

1. Славикпе Маркел пĕр класра вĕренеççĕ. Иккĕшĕ те сăран атăпа, кăвак шăлаварпа, кĕске пиншакпа çӳреççĕ. Пĕвĕ-сийĕ те пĕр пекех хăйсен çӳçĕсем сарă, куçĕсем сенкер. Вĕсен амăшĕсем хĕр чухне тантăшсем пулнă, ачисене те çавăнпа пĕрешкел тумлантарма тăрăшаççĕ. Маркел Жюль Верн кĕнекисемпе интересленет. Уйăхпа Марс çине кайса курма ĕмĕтленет. Славик вара машинăсем çинчен каласма

юратать, вёсене вёренет, пӑсать, юсать — пурне те пӗлесшӗн тӑрӑшать. *(Ухли.)* 2. Умӗнче вара икӗ ывӑлӗ — Шерккейпе Элентей тӑраҫҫӗ, унтан Шерккей арӑмӗ Сайте, хӗрӗ Селиме, кӗҫӗн ывӑлӗсем Тимрукпа Ильяс — пурте вӗсем старик ҫине куҫ сиктермесӗр пӑхаҫҫӗ. *(Илп.)* 3. Танксем, броневиксем, кавалеристсем, пехота, ҫывӑхри аэродромра самолётсем — пурте йӗркеллӗ, хушнӑ-хушман тапранса кайма хатӗр. 4. Семин расчӗчӗ питӗ пысӑк йывӑрлӑха лекрӗ темелле: ни каялла, ни малалла кайма. *(Ҫитта.)* 5. Вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенче те, каярахпа та эпӗ пайтах курнӑ тыткӑна лекнӗ фашистсене. Малтан, пирӗн алла ҫаклансанах, вӗсем хӑйсене хӑйсем чи ӑслӑ пуҫлӑ та чи таса юнлӑ, чи вӑйлӑ ҫынсем вырӑнне хуратчӗҫ пулас. Эпир ача чухне вӑрҫӑлла выляттӑмӑр, анчах ҫӗр палӑрми ҫар мӗн чухлине, вӑл мӗнле иккенне чухлама та пултарайман. *(Алка.)*

## ТАВАТА ПАТТАР.

1941 ҫул. Кӗркунне. Карели фрончӗ. Кӗрхи шурӑ тӗтреллӗ, сивӗ ҫумӑрлӑ ҫанталӑк ҫан-ҫурӑма ҫӳҫентерсе тӑрать. Йӗри-тавра хыр вӑрманӗпе шурлӑхсем. Акӑ пӗр пысӑк сӑртлам. Ун ҫинче хӗрлӗ ялав вӗлкӗшет. Кунта тӑватӑ паттӑр: Владимир Волков, Иван Дашмаков, Сергей Павлов тата Иван Почейкин — пурте чӑваш ачисем. Вӗсем ӗнтӗ пиллӗкмӗш кун ҫак сӑртлама тӑшмана памаҫҫӗ, паттӑррӑн хӳтӗлеҫҫӗ. Акӑ тискер тӑшмансем: сарӑ френчлӑ фрицсем, симӗс гимнастеркӑллӑ венгерсем, кӑвак тумлӑ финсем умлӑн-хыҫлӑн уҫланкӑран чупса иртеҫҫӗ. Вӗсем пӗрре хӑвӑрттӑн малалла ыткӑнаҫҫӗ, тепре шурӑ чулсем е йывӑҫ вуллисем хыҫне выртса пытанаҫҫӗ. Унсӑрӑн май та ҫук. Ҫавӑнтах е Владимир Волковӑн пулемӗчӗ, е Иван Дашмаковӑн автомачӗ, е Сергей Павловӑн граначӗ тӑшмана вилӗм кӳрет. Халӗ те сӑртлам хыҫал енчен виҫӗ финн ҫӗкленме пикенчӗҫ, анчах граната ҫурӑлнипе ҫавӑнтах тӗп пулчӗҫ.

Нимӗҫсем ак каллех атакӑна ҫӗкленчӗҫ, малалла васкаса чупаҫҫӗ, сӑртлам патнех ҫывхарса пыраҫҫӗ. Владимир Волков ҫывӑрмасть, гашетка ҫине пусать те, пулемёт, чӗрӗ чун кӗнӗ пек, хӑвӑрттӑн калаҫма тытӑнать. Пуля тивнипе тӑшман салтакӗсем е месерле ӳкеҫҫӗ, е тирӗнсе каяҫҫӗ, е лӑнчӑр хутланса лараҫҫӗ. Сывӑ юлнисем каялла сирпӗнеҫҫӗ.

Ҫапла паттӑррӑн хӳтӗлеҫҫӗ пӗр рубежа тӑватӑ паттӑр совет салтакӗ.

# ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕН СИНТАКСИСĔ

## ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

**Хутлă предложени тесе пĕр шухăша пĕлтерекен, анчах интонаципе тытăмĕ енчен икĕ е темиçе хутсăр предложенирен тăракан предложение калаççĕ.**

Хутлă предложенисем пĕлтерĕш енчен те, грамматика тĕлĕшĕпе те пĕр пĕтĕмлĕхе кăтартаççĕ. Кунта кашни хутсăр предложени çирĕп тĕвĕ туса пĕрлешнипе пулнă. Пĕрлешнĕ май предложенийĕсем хăйсен малтанхи уйрăм пĕлтерĕшĕпе кӳлепине те çухатнă. Хутсăр предложенисем хутлă предложенисен йышĕнче çĕнĕ пĕлтерĕшпе кӳлепине туяннă.

Хутлă тата хутсăр предложенисем хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур-ши?

1. Хутлă предложенире темиçе подлежащипе сказуемăй пулать. 2. Хутлă предложенисем анлă, кăткăс шухăша кăтартса пама пултараççĕ. 3. Хутлă предложенисенчи хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе союзлă тата союзсăр, интонаципе çыхăнса тăраççĕ. 4. Хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем хăйсем тĕллĕн пур чухне те предложени пулаймаççĕ.

Хутлă предложенири хутсăр предложенисем, пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса, пĕр-пĕрне тултарса тăраççĕ. **Ятман сисрĕ: старик кунта тӳрех чупса килмен, вăл плана тултарма май пуррипе çукки çинчен хăй тĕллĕн нумай шухăшланă, тен, хăйĕн çыннисемпе те темиçе хутчен сӳтсе явнă пулĕ, вара тин, план чăнах та ытла пысăккине ĕненсе, ял Советне аннă.** *(Турх.)*

Çак хутлă предложенири хутсăр предложенисене уйрăм илсе тишкерме юрать, анчах вĕсенчен пĕри те

шухăша вĕçленĕ уйрăм предложени пулаймасть, вĕсене точка лартса уйăрма çук. Çакă хутсăр предложенисем таччăн çыхăнса тăнинчен, пĕри теприне ăнлантарса пынинчен килет.

Хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем хушшинче çыхăну пулать. Вĕсем çыхăнассин мелĕсем, пĕрлешнин виçи кашни ушкăнĕшĕн тĕрлĕрен пулать. Анчах та грамматикăра вĕсене икĕ тĕп пая уйăрма йышăннă: пĕри — сыпăнуллă хутлă предложенисем, тепри — пăхăнуллă хутлă предложенисем.

Сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе союзпа та, союзсăр та çыхăнса тăраççĕ. Кунти хутсăр предложенисем пĕр тан пĕлтерĕшлĕ, пĕр-пĕринпе пăхăнмасăр сыпăнса пулаççĕ.

**1. Çырма юхать кĕрлесе аслă ялăн çумĕпе, хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе, вылять унăн шывĕпе.** *(К. Ив.)* **2. Тĕнче тĕлĕрет, çырмара кăна шыв кĕрлесе юхать, тата шăрчăк чĕриклетни илтĕнет.** *(Арт.)* **3. Кунтан докладчик курăнмасть, анчах унăн сăмахĕсем лайăх илтĕнеççĕ.** *(Турх.)*

**Тĕп предложенирен тата пăхăнуллă предложенирен тăракан предложение пăхăнуллă хутлă предложени теççĕ.** Пăхăнуллă хутлă предложенири хутсăр предложенисем пĕри теприне ăнлантарса, ăна пăхăнса тăрса çыхăнаççĕ.

Тĕп предложенин шухăшне пăхăнуллă предложени уçса ăнлантарса парать, çавăнпа та, уйрăммăн илсен, тĕп предложение те, пăхăнуллă предложение те кирлĕ таран ăнланма çук. Тĕп предложенипе пăхăнуллă предложени пĕр-пĕринпе союзлă е союзсăр çыхăнура та тăма пултарать.

**1. Ăçта атака пулнă, унта тӳсме çук шăршă кĕрет.** *(Элк.)* **2. Укахвипе Липăн паян калаçу майланмасть, мĕншĕн тесен Укахвин хуйхă: Галимджан виçĕ эрне хушши çыру çырмасть.** *(Турх.)* **3. Тăшманусем сана макăртас тесен, эсĕ, ирĕксĕр те пулин, кулма тăрăш.** *(Уяр.)* **4. Çунат пулас пулсан, кун каçипе Мариç паян вăрмана вунă хут вĕçсе кайса килнĕ пулĕччĕ.** *(Уяр.)* 5. **Шерккей аптраса ӳкнĕ: пӳртне кĕрсен, каллех пĕччен ĕнтĕ, кичем, кăмăла пусарма темĕн çитмест, чĕрине тем пăшăрхантарать.** *(Илп.)*

Чăваш чĕлхинче тата пăхăнуллă хутлă предложенисемпе сыпăнуллă хутлă предложенисем хушшинче тăракан предложенисем те йышлă тĕл пулаççĕ. Вĕсем пăхă-

нуллӑ хутлӑ предложение ҫывӑхрах тӑраҫҫӗ. Тӗп предложени выранӗнчи пӗр-пӗр члена сарлакан ӑнлантарса параҫҫӗ. Вӗсене учебникра предложенилле членсем тенӗ.

**1. Контрреволюциллӗ вӑйсем хаяррӑн тапӑннине ҫапса салатма парти пур халӑх вӑйне пӗрлештернӗ.** (*С. Гиль.*) **Пасар ялне ҫитиччен эпир пит те хаваслӑн шӑкӑлтатса калаҫса пытӑмӑр. Вечерта ташӑсемпе юрасем пуҫласан, Лисук хӑйӗн чун хавалӗпе пурне те хаваслантарса ячӗ.** *(Ис. М.)*

## СЫПӐНУЛЛӐ ХУТЛӐ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

### СЫПӐНУЛЛӐ ХУТЛӐ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ ҪИНЧЕН ПӖТӖМӖШЛЕ КАЛАНИ

**Пӗр тан пӗлтерӗшлӗ, пӗр-пӗрне пӑхӑнмасӑр ҫыхӑнса тӑракан предложенисенчен пулнӑ хутлӑ предложение сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени теҫҫӗ.**

Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисенче темиҫе хутсӑр предложени пулать. Вӗсем, пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса тӑрса, уйрӑм шухӑшсенчен чӑмӑртаннӑ пӗр-пӗр анлӑ шухӑша кӑтартса параҫҫӗ. Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисем пӗр-пӗринпе союзсемпе те, союзсӑр та ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

Малтан хутсӑр тата хутлӑ предложенисем хушшинчи уйрӑмлӑха уйӑрса илме вӗрентмелле. Вӗренекенсем часчасах союзпа ҫыхӑннӑ пӗр йышши членлӑ хутсӑр предложенисене союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисемпе пӑтраштараҫҫӗ, вӗсем хушшинчи уйрӑмлӑха тупма пӗлмеҫҫӗ. Ҫӑннипех те, пӗр йышши членлӑ предложенисем те, сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисем те пӗр пек союзсемпе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсене кӳлепи тӗлӗшӗнчен пӑтратма пулать. Вӗренекенсем вӗсене ан пӑтраштарччӑр тесен, икӗ темине те пӗр-пӗринпе танлаштарса вӗрентмелле. Танлаштарса вӗрентес ҫӗрте кӑтарту пособийӗ, таблица, грамматикӑлла разбор, творчество ӗҫӗ пысӑк вырӑн йышӑнмалла.

Танлаштарма илнӗ тӗслӗхсем.

**Ӳсет пирӗн ҫӗршыв, тата халӑхсен пурнӑҫӗ кунсерен чечекленет.**

**Пирӗн ҫӗршыв тата халӑхсен пурнӑҫӗ куллен чечекленет.**

Пӗрремӗш предложенире икӗ подлежащи тата икӗ сказуемӑй; иккӗмӗшӗнче икӗ подлежащи, анчах вӗсен пӗр

сказуемăй кăна — пĕр йышши членлă хутсăр предложени, икĕ пĕр йышши подлежащие **тата** союз çыхăнтарса тăрать. Вĕсене çакăн пек схемăпа палăртма пулать.

I




II




I. Сыпăнуллă хутлă предложени. II. Хутсăр пĕр йышши членлă предложени.

**Уйăх çутатать, анчах вăл ăшăтмасть.**
**Уйăх çутатать, анчах ăшăтмасть.**

Малтанхи сыпăнуллă хутлă предложенире икĕ подлежащи **(уйăх, вăл)** тата икĕ сказуемăй **(çутатать, ăшăтмасть)**, вăл икĕ хутсăр предложение **анчах** союз пĕрлештерсе тăнипе пулнă. Иккĕмĕш тĕслĕхĕнче — пĕр подлежащи кăна, **çутатать** тата **ăшăтмасть** пĕр йышши сказуемăйсене **анчах** хирĕçлекен союз пĕрлештерсе тăрать. Кунта пĕр йышши членлă хутсăр предложение куратпăр. Акă вĕсен схемисем:







Вĕренекенсем сыпăнуллă хутлă предложенисене пăхăнуллă хутлă предложенисенчен уйăрса илме пĕлмеççĕ. Учителĕн каллех вĕсен хушшинчи уйрăмлăха уçса памалла. Сыпăнуллă хутлă предложенисенчи хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе килĕшсе тăрса ирĕккĕн

çыхăнаççĕ. Кунти кашни хутсăр предложени тепринпе интонаци тĕлĕшпе ытларах çыхăнать.

Çут хĕвел çӳле çĕкленчĕ,
Çутçанталăк чĕрĕлет,
Шурă юрĕ сĕлкĕшленчĕ,
Шыв пулса юхма пикенчĕ,
Урам тăрăх шыв кĕрлет. *(Уйăп.)*

Пăхăнуллă хутлă предложенире пĕри теприне пăхăнтарса тытса тăрать. Уйрăммăн илсен, нихăш предложени те калакан шухăша уçса параймасть, интонаци тĕлĕшĕпе те предложени вĕçленменни курăнса тăрать. Вĕренекенсем ытларах союзсăр сыпăнуллă хутлă предложение союзсăр пăхăнуллă хутлă предложенирен уйăрса илеймеççĕ.

Кунта каллех вĕсене танлаштарса памалла, сыпăнуллă е пăхăнуллă çыхăнура тăнине кăтартса хăвармалла.

**Командир ал сулчĕ — кĕрлерĕ пăшал.**
**Мĕн тупнă — йăлтах параççĕ ăна.** *(Элк.)*

Панă тĕслĕхрен çакна куратпăр. Пĕрремĕшĕ — союзсăр сыпăнуллă хутлă предложени, ĕç умлă-хыçлă питĕ хăвăрт пулнине кăтартать, вĕсем хушшине сыпăнтаракан союз **те** лартма та пулать. Ĕç хăвăрт пулнине кăтартнă чух икĕ предложени хушшине çырура тире лартса палăртаççĕ. Кунта предложенисем пĕр-пĕринпе сыпăнса çыхăнса тăраççĕ.

Иккĕмĕш предложенире пачах урăхла. Кунта пĕр предложенийĕ теприне пăхăнтарса тăрать. Тĕп предложенийĕ — **йăлтах параççĕ ăна,** — хăй умĕнче тăракан **мĕн тупнă** предложение пăхăнтарать. Кашнине уйрăммăн илсен, ăнланма май çук. Вĕсем пĕрле кăна пĕр анлă шухăша кăтартса параççĕ. Тĕп предложенипе пăхăнуллă предложени хушшинче кунта та тире лартнă. Тире лартасси çакăнтан килнĕ: тĕп предложенире **çавна** местоимени çук, ун вырăнне тире лартнă.

Çапла эпир икĕ союзсăр хутлă предложение танлаштарса патăмăр. Вĕсем тытăмĕпе, тире лартасси тĕлĕшпе пĕр пек пулсан та, содержанипе çыхăнăвĕ енчен расна. Вĕсен çыхăнăвне схемăпа та кăтартса памалла.

**Сыпăнуллă çыхăну**



**Пăхăнуллă çыхăну**



Темăна вĕрентме çапла пайламалла.

1. Сыпăнуллă хутлă предложенисем çинчен ăнлантарса пани. Сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсàр предложенисем пĕр-пĕринпе шухăш енчен çыхăнни.

2. Сыпăнуллă хутлă предложенисенчи союзсем: сыпăнтаракан, уйăракан, хирĕçлекен союз.

3. Союзлă сыпăнуллă предложенисенче чарăну паллисем лартасси. Ăнлантару диктанчĕ.

4. Тĕрĕслев диктанчĕ.

Сыпăнуллă хутлă предложени çинчен вĕрентме тытăниччен малтан вĕреннисене аса илмелле.

Çакăн пек ыйтусем пама юрать:

Мĕн вăл предложени? Предложенире мĕнле членсем пулаççĕ? Эсир мĕнле предложенисем пĕлетĕр? Мĕнле предложенисене хутлă предложенисем теççĕ? Хутлă предложенисем мĕнлисем пулаççĕ?

Аса илнĕ хыççăн учитель кĕскен пĕтĕмлетсе хăварать те тема çине куçать. Материала ăнлантарма сыпăнуллă хутлă предложенисемпе ик-виçĕ тĕслĕх илсе парать.

**1. Пулăсем сухипе сывлаççĕ, кит ўпкепе сывлать. 2. Кит шывра пурăнать, анчах вăл пулă мар, типĕри чĕрчунсене çывăх тăрать. 3. Кит çав тери пысăк чĕрчун, вăл темиçе тонна йывăрăш туртать тата кўлепи унăн вăтăр метр тăршшĕ е ытларах та пулать.**

Вĕренекенсене икĕ хутсăр предложенирен тата темиçе хутсăр предложенирен хутлă предложенисем пулнине кăтартса ăнлантармалла. Малтанах союзсăр сыпăнуллă хутлă предложени пулăвĕ çинче чарăнса тăмалла.

**Пулăсем сухипе сывлаççĕ, кит ўпкепе сывлать** тĕслĕхе илмелле те икĕ уйрăм хутсăр предложенирен союзсăр сыпăнуллă хутлă предложени пулнипе паллаштармалла. Кунта икĕ хутсăр предложение çыхăнтарма логикăпа интонаци паллă вырăн йышăнаççĕ. Калакан шывра икĕ тĕрлĕ чĕрчунсем мĕнпе сывланине кăтартса парасшăн. Çавна май унăн анлă шухăш çуралать: икĕ тĕрлĕ чĕрчун

сывланине танлаштарса памалла. Предложени валли икĕ уйрăм подлежащи пур, вĕсене валли пĕр сăмахран тăракан тĕрлĕ формăри глагол та тупăнать. Мĕнпе сывланине çеç кирлĕ сăмахсемпе палăртмалла: пĕри — **сухипе,** тепри — **ӳпкепе.**

Хутлă предложенин шухăшĕ пулчĕ те ĕнтĕ. Анчах ăна кирлĕ интонаципе калама пĕлмелле! Кашни хутсăр предложени хыççăн каланă пек сасса антарса каласан, вара хутлă предложени тесе никам та йышăнмасть. Çавăнпа та **сухипе** тата **ӳпкепе** сăмахсене палăртарах каламалла. Малтанхи хутсăр предложенин юлашки сăмахĕн юлашки сыпăкне каланă чухне (кунта уйрăмах **сывлаççĕ** сăмахăн **-аççĕ** сыпăкĕ пулать) сасса çӳлерех çĕклемелле те кăшт тăсарах тăмалла. Çапла туни предложение каласа пĕтерменнине тата тепĕр предложени пуррине кăтартать.

Союзсăр сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен кашни хутсăр предложенин юлашки сăмахĕнчи юлашки сыпăкĕсене (кайранхи предложенисĕр пусне) сасса çӳлерех хăпартса тăсса калаççĕ. Çак интонаци вăл сыпăнуллă хутлă предложенисене пĕрлештерсе тăма пулăшать.

Учитель союзсăр сыпăнуллă хутлă предложенисем шухăшпа тата интонаципе çыхăнса тăнине паллă туса хăварать.

Союзлă хутлă предложенисемпе те кĕскен паллаштармалла. Кунта кашни хутсăр предложениех мĕнле те пулин союз тата çавăн пекех интонаци сыпăнтарса тăнине кăтартса памалла. Ку сехетре союзсем çинчен уйрăммăн чарăнса тăма кирлĕ мар, вăл вĕренекенсене чăрмантарать кăна.

Сыпăнуллă хутлă предложенисен пулăвĕпе çыхăнăвĕ çинчен пĕтĕмĕшле ăнлантарнă хыççăн хăнăхтару ĕçĕ туса ирттермелле. Ун пек ĕçсенчен ытларах синтаксисла разбор, пысăках мар ăнлантару диктанчĕ, творчество диктанчĕ пулаççĕ. Е тата «Тăван литература» хрестоматирен сыпăнуллă хутлă предложенисене туптармалла.

Учебникра 56 §-па паллаштарнă хыççăн вĕренекенсене килте тума нимĕнле хăнăхтару та паман. Çавна май учитель вĕренекенсене хăй ĕç парса ярать.

Киле валли çакăн пек ĕçсем сĕнме юрать.

1. Кашни вĕренекенĕн сыпăнуллă хутлă предложенипе пилĕкшер тĕслĕх тупса çырса килмелле.

2. VII-мĕш класри «Тăван литература» хрестоматинчи пĕр-пĕр произведенирен сыпăнуллă хутлă предложенисене çырса килмелле.

3. «Диктант сборникĕн» II-мĕш пайĕнчен хăнăхтару туса килме хушмалла.

Асăрхаттарни: Вĕренекенсене виçĕ ĕçрен пĕрне çеç тума хушмалла.

## СЫПĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕНЧИ СОЮЗСЕМ.

Урокăн малтанхи пайĕнче морфологи урокĕсенче союзсем çинчен вĕреннине аса илмелле, чăваш чĕлхинче мĕнле союзсем пуррине тата вĕсен пĕлтерĕшне ачасенчен ыйтмалла.

Урока ăнлантарнă чух вĕренекенсем союзпа çыхăнакан пĕр йышши членлă предложенисем çинчен пĕлнипе усă курмалла, вăл çак темăна ăнланмалларах тăвать, союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисен пулăвне уççăнтарах кăтартать.

1. **Çуркунне вăрман тата симĕс улăх ачасене илĕртет.**

Çак предложение пăхса тухаççĕ, **тата** союзпа çыхăннă пĕр йышши членлă хутсăр предложени пулнине пĕлеççĕ.

Çак хутсăр предложенирен учитель вĕренекенсене хутлă предложени тума хушать. Çакăн пек хутлă предложени тăваççĕ.

**Çуркунне вăрман ешерет, тата симĕс улăх ачасене илĕртет.**

Сыпăнуллă хутлă предложенири хутсăр предложенисене **тата** союз çыхăнтарса тăрать, вăл икĕ предложенири ĕç пĕр вăхăтра пулнине кăтартать.

**Те снаряд, те бомба ӳксе кисретрĕ.**

**Те** — союз, икĕ пĕр йышши подлежащи умĕн тăрса, вĕсен ĕçне иккĕлетсе кăтартать, вĕсенчен пĕри кăна пулнине, вăл паллă маррине пĕлтерет. Ку предложенире икĕ подлежащин пĕр сказуемăй кăна, вăл пĕр йышши членлă хутсăр предложени. Çак предложенирен, **те** союзпа усă курса, сыпăнуллă хутлă предложени тумалла. Ана тунă чух пĕрремĕш подлежащи — **снаряд** — хыççăн çак предложенин шухăшĕпе çыхăннă тепĕр глагол-сказуемăй хушса çырас пулать. Ун пек сказуемăйсенчен килĕшӳллисем: **çурăлчĕ, арканчĕ, чĕтретрĕ.**

**Те снаряд çурӑлчӗ, те бомба ӳксе кисретрӗ.** Кашни предложенири тӗп членсене аялтан туртса паллӑ тумалла, кун пек предложенисенчи **те** союзӑн пӗлтерӗшне уçса памалла.

Çак меслетпех ытти союзсемпе пулакан сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисем çинчен те ӑнлантарса хӑвармалла.

Ӑнлантарнӑ чухне таблицӑпа анлӑ усӑ курмалла.

**Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисен таблици.**

| Союзсем | Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисем | Предложенисен пӗлтерӗшӗ |
|---|---|---|
| 1. Сыпӑнтаракан: *тата, -та, -те, вара.* | Колхозниксем тӑрӑшса ӗçлеççӗ, *тата* вӗсене шкул ачисем те пулӑшаççӗ. Шкул ачи тӑрӑшса вӗренет *те*, унӑн пӗлӗвӗ те ӳсет. Эсӗ çырмана кӗреçепе ан, *вара* пӗвесем тӑвӑпӑр. | Ӗçе пӗр вӑхӑтра тунине пӗлтерет. Пӗр ӗç хыççӑн тепӗр ӗç пулнине пӗлтерет. |
| 2. Уйӑракан: *-те, -е, пӗрре-тепре.* | *Те* уйӑх тухать, *те* прожектор çути ӳкет вӑрман урлӑ. Е хаяр çил кӗрлет, *е* кашкӑр улать. *Пӗрре* савать пичче мана, *тепре* саватӑп эп ӑна. *(Дав.)* | Иккӗленнине, паллӑ маррине пӗлтерет. Ылмашса пынине, уйӑрса каланине пӗлтерет. Ӗç икӗ майлӑ пулнине кӑтартать. |
| 3. Хирӗçлекен: *анчах, çапах.* | Амӑшӗ такама кӗтет, *анчах* никам та килмест. *(М. Г.)* Сенюк пите ырӑ кӑмӑллӑ ачаччӗ, *çапах* ӑна хӑшӗсем килӗштерместчӗç. | Ӗç хирӗçле пулнине уçса парать. Ӗç пулнине йӑвашшӑнрах хирӗçлени. |

Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисен схемине союзлӑ пӗр йышши членлӑ предложенисен схемипе танлаштарса кӑтартмалла. Танлаштарса вӗрентнин усси çинчен вырӑссен аслӑ педагогӗ К. Д. Ушинский каланине яланах асра тытмалла.

Икӗ предложени илетпӗр: пӗри — союзлӑ пӗр йышши членлӑ хутсӑр предложени, тепри — союзлӑ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени. Вӗсен схеми.

1. Те уйăх çути, те прожектор çути вăрман урлă ўкет.

2. Те уйăх тухать, те прожектор çути вăрман урлă ўкет.

3. Уйăх çутатать, анчах ăшăтмасть.

4. Уйăх çутатать, анчах вăл ăшăтмасть.

1. 


Союзлă сыпăнуллă предложени çинчен вĕрентнĕ чухне кашни союзпа çыхăннă хутсăр предложениех разбор туса памалла, унăн пĕлтерĕшне уçса кăтартмалла, предложенири союзсем вырăнĕпе тата чарăну палли лартассипе те майĕпен паллаштарса пымалла.

Союзсем пирки каланă май çакна асăрхаттармалла: **та, те, тата, вара, анчах, çапах** сăмахсем — союзсем çеç мар, татăксем те пулаççĕ. Тепĕр чухне вĕренекенсем çак сăмахсене предложенире кураççĕ те, унăн предложенири вырăнĕпе пĕлтерĕшне тавçăрса илмесĕрех, союзсем теме пикенеççĕ.

Тĕслĕхсем:

1. Арăмĕн хăйĕн ачине те пăхас пулать, кухньăра та ĕçлес пулать, пўрт-çуртри ытти ĕçсене те тирпейлесе тăрас пулать. *(Элк.)* Ахаль те тата Унтрие чăпта ĕçĕ йăлăхтарчĕ. *(Элк.)* Хăйсем вара, Унтри вăрансан, унран мăшкăлласа каçса кайсах ахăраççĕ. *(Элк.)* Сыхласса пит

лайăх сыхлатчĕç вара, лайăх йытă хуçа килне сыхланă пекехчĕ. *(Чалд.)*

Çак предложенисенче союзпа пĕр пек сăмахсем, татăк пĕлтерĕшĕпе çӳрекен омонимсем пур. Вĕренекенсене çакна асăрхаттармалла.

Вĕреннине çирĕплетме пысăк мар хăнăхтару ĕçĕ е синтаксисла разбор туса ирттермелле. Синтаксисла разборăн йĕрки:

1. Сыпăнуллă хутлă предложенире миçе хутсăр предложени.

2. Хутсăр предложенисен çыхăнăвĕ (союзлă е союзсăр тата мĕнле союзпа çыхăннă);

3. Хутсăр предложенире ĕç мĕнле пулса пырать;

4. Кашни хутсăр предложенине членсем тăрăх разбор тумалла:

а) тĕп членсем (подлежащипе сказуемăй),

ă) кĕçĕн членсем (дополнени, определени, обстоятельство),

б) кашни член мĕнле сăмахпа сăмах майлашăвĕнчен тăни,

в) разбор тăвакан предложенири член хăш сăмахпа çыхăнса тăрать тата унăн ыйтăвĕ,

г) вăл сăмах ытти сăмахсемпе мĕнле çыхăнура тăрать?

д) мĕнле пуплев пайĕнчен пулнă?

Сыпăнуллă хутлă предложенисене çак схема тăрăх разбор тумалла. Схема класра çакăнса тăтăр.

## СЫПĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕНЧЕ ЧАРĂНУ ПАЛЛИСЕМ ЛАРТАССИ.

Ку тема тăрăх чарăну паллисем лартма вĕрентес ĕçе тĕрлĕрен туса ирттерме пулать.

Малтанхи урока аса илнĕ хыççăн вĕренекенсем умне плакат çакса ямалла. Унти тĕслĕхсем:

1. Çырла пиçрĕ, ачасем вăрмана чĕрес йăтса çӳреме тытăнчĕç, хаваслă вăхăт çитрĕ. 2. Вăхăт кĕр еннелле сулăнчĕ, тата çумăр та час-часах пĕрĕхкелеме пуçларĕ. 3. Инçене кайса çӳреме Унтри вырăсла та пĕлмест тата хуçа каланă сăмахсем те хăратаççĕ. *(Элк.)* 4. Эпĕ Алешăран ашшĕ пирки темиçе хутчен те ыйтнă, анчах вăл каламастчĕ. *(Чалд.)* 5. Литература каçĕнче е эпĕ сăвă калаттăмччĕ, е юлташ юптарусем вуласа паратчĕ. 6. Те Прохор ăсансене хăй персе ӳкересшĕн пулчĕ, те вăл мана урăх сăлтавпа чарчĕ. *(Харл.)* 7. Хĕрлĕ

ялав сывлӑшра пӗрре сылтӑмалла вӗлкӗшсе илчӗ, тепре сулахаялла сулланса илчӗ те каллех тӳп-тӳрӗ пулса тӑчӗ. *(М. Г.)* 8. Шыв хытӑ кӑна килсе ҫапрӗ те, ҫӗрпӳрт алӑкӗ уҫӑлса кайрӗ. 9. Сасартӑк аслати шатӑр-шатӑр шат! тутарчӗ — пӗтӗм пӳрт чӗтресе кайрӗ. 10. Хумма тытса пӑхать сӗллине — сӗллӗн пӗр тӗшӗ те ҫук. *(Труб.)*

Плакатри кашни предложение уйрӑм вӗренекенсене вулаттармалла та мӗнле предложени пулнине, хутсӑр предложенисем пӗр-пӗринпе мӗнле ҫыхӑнура тӑнине, предложенири ӗҫ мӗнле пулса пынине, юлашкинчен, ӑҫта тата мӗнле чарӑну палли лартмаллине калаҫу мелечӗпе татса памалла. Паллах, ӗҫе пӗтӗм класа явӑҫтарма тӑрӑшмалла.

Вӗрентӳ ӗҫне союзсӑр сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенисенчен тытӑнмалла. Малтанхи предложение илетпӗр. Союзсӑр сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени, вӑл виҫӗ хутсӑр предложенирен тӑрать, пӗр-пӗринпе союзсӑр ҫыхӑнура, пӗр анлӑ шухӑша — **ҫырла пиҫнӗ вӑхӑта** кӑтартса парать. Пӗр хутсӑр предложение тепринчен уйӑрса илме вӑрӑмрах чарӑну тӑватпӑр, ӑна ҫырура запятой лартса паллӑ тӑваҫҫӗ. Унтан иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш предложение танлаштарса пӑхса тухмалла. Учитель кунта ҫакна паллӑ тӑвать: икӗ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенире те хутсӑр предложенисене **тата** союз пӗрлештерсе тӑрать, пӗр вӑхӑтри ӗҫсене кӑтартса паракан предложенисене ҫыхӑнтарать, пӗрремӗш сыпӑнуллӑ предложенире **тата** союз умӗн запятой лартнӑ, иккӗмӗшӗнче — лартман. Сӑлтавӗ мӗнре-ши? Чӑнах та, сыпӑнуллӑ хутлӑ предложенири хутсӑр предложенисене **тата** союз ҫыхӑнтарса тӑнӑ чух запятой ун умӗн лартмалла, анчах иккӗмӗш предложенири икӗ хутсӑр предложенишӗн те пӗр обстоятельство пулнӑран **тата** союз умӗн запятой лартмаҫҫӗ. Кунта икӗ хутсӑр предложенишӗн те **инҫене кайса ҫӳреме** вӑхӑтпа тӗллев обстоятельствин майлашӑвӗ пур, ҫавӑнпа та запятой лартмалла мар.

**Тата** союзпа ҫыхӑннӑ икӗ сыпӑнуллӑ хутлӑ предложение кӑтартса ӑнлантарма танлаштару схеми памалла.






Тăваттăмĕш предложение разбор тунă май çакна ăнланаççĕ: хирĕçлеве пĕлтерекен **анчах, çапах** союзсем умĕн запятой лартмалла.

Пиллĕкмĕшпе улттăмĕш сыпăнуллă хутлă предложенисем ĕçе уйăрса каланине, темиçе ĕçрен пĕрин çинче чарăнса тăнине е ĕç тĕрлĕ майпа пулнине пĕлтереççĕ, **е** союз икĕ тапхăр каланипе пулнă, иккĕмĕш **е** умĕн запятой лартаççĕ. **Пĕрре-тепре** — мăшăр союз (ĕçсем тĕрлĕ майлă пулнине пĕлтереççĕ), **тепре** союз умĕн запятой лартмалла.

**Те** союз сыпăнуллă хутлă предложенире темиçе хутчен тĕл пулсан (саккăрмĕш предложение пăх), яланах ун хыççăн запятой лартмалла; **те** союз икĕ пĕлтерĕшпе çўрет: пĕрре — союз вырăнĕнче, тепре — вăйлатакан татăк.

Юлашки предложенисене тишкернĕ май союзсăр сыпăнуллă хутлă предложенисенче хăçан тире лартмаллине ăнлантарса хăвармалла. Ун çинчен учебникра çырман, анчах пурнăçра, вĕренў ĕçĕнче ăна пĕлни питех те кирлĕ: вĕренекенсем нумай чухне союзсăр сыпăнуллă хутлă предложенисенче тире лартнă тĕслĕхсене курма пултараççĕ, мĕншĕн лартнине пĕлмесĕрех юлаççĕ.

а) Пĕр ĕç хыççăн тепĕр ĕç питĕ хăвăрт е ăнсăртран пулса иртнине палăртма çырура тире лартаççĕ. (Плакатри тăххăрмĕш предложение пăхăр.)

ă) Пĕрремĕш предложенири ĕçе иккĕмĕшĕ питĕ хытă хирĕçлесе кăтартнă чух каллех предложенисем хушшине тире лартаççĕ. (Плакатри юлашки предложение пăхăр.)

Асăрхаттарни: **та, те, анчах, çапах** союзсем пулсан, кун йышши пĕлтерĕшлĕ предложенисенче те запятой лартмалла.

Ку темăна урăхла меслетпе те вĕрентме пулать.

Вĕренекене доска умне кăлармалла та сыпăнуллă хутлă предложенисем çыртармалла, кашни предложениех разбор тумалла, мĕнле чарăну палли лартассине ăнлантарса пымалла. Çапла меслетпе союзлă тата союзсăр сыпăнуллă хутлă предложенинче чарăну палли лартмалли йĕркесемпе паллаштармалла.

Е вĕренекенсене ăнлантару диктанчĕ çыртармалла та чарăну палли лартассине ăнлантарса памалла. Ăнлантару диктантне валли уйрăм предложенисенчен тăракан текст илмелле, çак темăпа çыхăннă чарăну паллисем лартмалли правилăсене пурне те текста кĕртме тăрăшмалла.

Ăнлантару диктантне класрах вуласа тĕрĕслемелле. Вĕренекенсем темăна ăнланнă пулсан, класрах учебникри 132-мĕш хăнăхтарăва тутармалла, пĕр йышши членлă предложенисене сыпăнуллă хутлă предложенинчен уйăрса илме, кирлĕ çĕре чарăну паллисем лартма хушмалла.

Киле 133-мĕш хăнăхтарăва парса ямалла.

Ăнлантару диктанчĕ валли текст:

1. Лавсем йĕркеленсе пĕрин хыççăн тепри уй хапхи патнелле уттарчĕç. Лашасем талпăнса туртаççĕ, урапасем лăчăртатса пыраççĕ. Арманов ку лавсем тухса кайнипе кăмăллă пулчĕ, анчах çак пилĕк килтен тырă тухманни калама çук çилентерет. *(Труб.)* Кăнтăрла тĕлĕнче урпана пырса перĕнме те май çук — калама çук тăкăнать. *(Труб.)* Тепĕр чухне анне сасартăк шаккатчĕ те, шăллăм вара макăрма чарăнатчĕ. *(Харл.)* Те çипĕ тăсăлса кайрĕ, те çыххи салтăнчĕ, анчах чакак шăрçана çиппи-мĕнĕпех çĕклесе кайрĕ. *(Харл.)* Тĕттĕм пирки Мишша аллине малалла тăсрĕ кăна — темскер ÿксе чăнкăр! турĕ. Пăхать Мучар — Савин Михали иккен. *(Труб.)* Шыв хĕрринчи йывăç пĕрре çырмана куçма памасть, тепре колхоз унпа тупăш курать.

Текстра 90 сăмах, темăпа çыхăннă чарăну паллисем — 8.

Сыпăнуллă хутлă предложенисем çинчен вĕренсе пĕтернĕ хыççăн юлашки сехетĕнче синтаксисла разбор урокĕ е ачасен пĕлĕвне шута илме тĕрĕслев диктанчĕ туса ирттермелле. VII-мĕш класри вĕренекенсемшĕн тĕрĕслев диктантĕнче 130—150 сăмах пулмалла. Текст

уйрăм предложенисенчен тăма та, çыхăнуллă пулма та пултарать.

Тĕрĕслев ĕçĕн тексчĕ.

### Хăюллă ача.

Петĕр ирех шкула пуçтарăнчĕ. Пĕрре вăл паян шкулта дежурнăй, тепре математика учителĕ ирех пыма чĕннĕччĕ.

Акă вăл урама тухрĕ, кăвак шуçăм çапа пуçланă, анчах килсеренех электричество çути ялкăшать-ха. Кăшт кайсан, вăл ял вĕçне те тухрĕ, малта анлă уй сарăлса выртать.

Те ытла иртен, те тата урăх сăлтавпа — паян унпа юлташ шкула кайма никам та пулмарĕ. Петĕр чунне хытарчĕ те уй урлă чулса каçма шут тытрĕ. Ак çурмаçула çитрĕ ĕнтĕ, шкул ялĕ те курăнакан пулчĕ. Темлерен вăл малалла тинкеререх пăхрĕ — çул çинче кашкăрлара парать. Петĕр тăпах чарăнчĕ. Е халĕ кашкăр ун çине тапăнма пултарать, е унăн кашкăр çине тапăнса хăратса ямалла. Çак самантра вăл пальто кĕсйине чиксе ячĕ, алла тӳрех пугач çакланчĕ. Ăна вăл хăвăрт туртса кăларчĕ те çавăнтах, капсюль лартса, авăрларĕ. Кашкăр еннелле темиçе утăм хăюллăн ярса пусрĕ те персе ячĕ. Те сасартăк пенĕ сасă кашкăра хăратрĕ, те Петĕр хăюллă пулни ăна шиклентерчĕ — кашкăр çавăнтах аяккалла тапса сикрĕ.

Петĕр, хăй пултарулăхĕпе савăнса, шкулалла уттарчĕ.

Текстра 150 сăмах, темăпа çыхăннă чарăну паллисем — 10, ăнлантармалли сăмахсем çук.

# ПĂХĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

## ПĂХĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ ÇИНЧЕН ПĔТĔМĔШЛЕ ĂНЛАНТАРНИ *.

Нумай чĕлхесенче пăхăнуллă хутлă предложени йĕрки кăткăс.

Ку ыйтăва чăваш чĕлхи науки те татса парайман-ха, ун пирки çырни те сахал. Юлашки вăхăтра кăна Н. А. Резюков тата И. А. Андреев статьисем тухрĕç, унта лайăх шухăшсем йышлă, анчах вĕсем те кăткăс ыйтăва пĕтĕмпех татса панă теме çук-ха.

Паллах, ку кĕнекере эпир вăл ыйтусене татса парас тĕллев лартмастпăр, çак темăна мĕнле меслетпе вĕрентесси çинчен каланă май, пăхăнуллă хутлă предложенисен синтаксисĕ пирки кăштах хамăр шухăша каласа хăварасшăн.

Чăваш чĕлхинчи пăхăнуллă хутлă предложенисем пирĕн тăван чĕлхе стройне, унăн уйрăмлăхне кăтартса параççĕ.

Чăваш чĕлхинче пăхăнуллă хутлă предложенисем самаях аталанни паллă ĕнтĕ.

Чĕлхе этемĕн шухăшлавĕпе çыхăннă. Чĕлхе пуçланса кайсан та, малтанхи тапхăрта этем конкретлăрах шухăшланă. Çав шухăша валли хутсăр предложенин синтаксисĕ те çырлахтарма пултарнă.

Шухăшлав та майĕпен аталанса, кăткăсланса пынă, çав кăткăс шухăша, паллах, хутсăр предложени йĕркипе витĕмлĕ çавăрса калама йывăр пулнă. Вара чĕлхе çав хутсăр предложени никĕсĕ çинчех хутлă предложенисемпе каласа пама хăнăхса пынă, юлашкинчен, пăхăнуллă хутлă предложенисем те ӳссе аталанма пуçланă. Вĕсем халĕ те аталанса пыраççĕ.

Чăваш чĕлхинче пăхăнуллă хутлă предложенисем икĕ тĕрлĕ аталанса пынă: пĕрисем — пăхăнакан предложенин

---

* Н. К. Дмитриев. Пушкăрт чĕлхи грамматики çинчен каланине шута илнĕ.

сказуемăйĕ, хăйĕн кӳлепине çухатса, çыхăну пĕлтерĕшне йышăннипе, теприсем — пăхăнакан предложенисен сказуемăйĕсем хăйсен кӳлепине çухатмасăр тĕп предложенипе союзпа çыхăннипе аталаннă.

Пĕрремĕшсем (ăна учебникра предложенилле членлă предложенисем теççĕ) аталанса çитнĕ ĕнтĕ, вĕсем ĕлĕкхи халăх юррисемпе сăмах-халапĕсенче те тĕл пулаççĕ.

Иккĕмĕшсем (пăхăнуллă хутлă предложенисем) **халĕ** те аталанса пыраççĕ. Уйрăмах вăл вырăс чĕлхи тĕртĕмĕпе (влиянийĕпе) ӳсни ытларах палăрать, çыру чĕлхинче паллă вырăн йышăнать.

Пăхăнуллă хутлă предложенисем çыхăнăвĕ тĕлĕшпе икĕ тĕрлĕ — с о ю з л ă тата с о ю з с ă р пулаççĕ.

Йăван Российăри революци мĕнле пынине пĕлесшĕн çунать, çавăнпа вăл ыйту хыççăн ыйту парать. *(Элк.)*

Туйрăм эп: çĕршывсăр манăн

Пур аннем те çук. *(Хус.)*

Пĕр тĕслĕ пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенисемпе **кам, камăн, мĕн, ăçта, хăçан, мĕн чухлĕ** союзла сăмахсемпе çыхăнса тăраççĕ; пăхăнуллă предложенири союзла сăмахсемпе мăшăрлăн тĕп предложенире местоименисем е наречисем пулаççĕ.

**Кам — вăл** (мест.), **кам — çавă** (мест.) **камăн — унăн** (местоим.), **мĕне — çавна** (мест.), **ăçта — çавăнта** (наречи), **хăçан — çавăн чухне** (наречи), **мĕн чухлĕ — çавăн чухлĕ** (наречи) т. ыт. те.

**Кам** ĕçчен те пултаруллă, **çав** хисепе тивĕç.

Ку йĕркепе çыхăннă пăхăнуллă предложени тĕп предложенин пĕр-пĕр сăмахне ăнлантарса парать, çав сăмах ыйтăвĕнчех тăрать. **Кам ĕçчен те пултаруллă** — пăхăнуллă предложени, вăл тĕп предложенири **çав** местоимение ăнлантарать.

Хăшпĕр пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенисемпе союзла сăмахсемпе çыхăнаççĕ, тĕп предложени умĕн тăраççĕ: **тесе, тесен, пулсан, пулсан та, пулин те.**

Вĕренекен пĕлӳ илес **тесе,** тăрăшса вĕренчĕ.

Пурăнса ирттернĕ куна тепĕр хут пурăнма майĕ пулас **пулсан та,** Ухтиван çав ĕçсенех тунă пулĕччĕ, хăй курайман çынсене те çав сăмахсенех калĕччĕ. *(Уяр.)*

Тăшманусем сана макăртас **тесен,** эсĕ, ирĕксĕр те пулин, кулма тăрăш. *(Уяр.)* Пуçсем сывă **пулсан,** çурт тăвăпăр. *(Чалд.)*

Юлашкинчен, пăхăнуллă предложенисем тĕп предло-

женисемпе союзсемпе çыхăннине те палăртмалла. Ун пек союзсем: **мĕншĕн тесен, çавăнпа, çавăнпа вара, вара.**

Липăн та шухăшсем сапаланчăк, **мĕншĕн тесен** Ятман килĕшетĕп тенĕ çĕртенех килĕшмерĕ. *(Турх.)* Хăрамалли нимĕн те курман, **çапла вара** хӳме урлă пĕр сасă кăлармасăр хăвăрт сиксе каçрĕ. *(Фадеев.)* Эсĕ ытла шăппăн калаçатăн, **çавăнпа** нимĕн те илтĕнмест.

Союзпа çыхăнакан пăхăнуллă предложенисем союзсăр çыхăнура та пулаççĕ, вĕсен çыхăнăвне сасă çĕкленсе илни кăтартса парать.

Хĕрарăмсем тăрăшни харама каймарĕ: паян колхоз юлашки гектар çинчен кăларнă çĕрулмине витнĕ сарайне куштăркама хучĕ. *(Тур.)* Кăмпи пултăр — кунтăкĕ тупăнĕ. *(Ват. с.)* Çил-тăман чарăнĕ — каллех юр тытма тухăпăр. *(Мед.)*

Пăхăнуллă хутлă предложенире яланах тĕп предложени тата пăхăнса тăракан предложенисем пулаççĕ. Тĕп предложени ытларах иккĕмĕш вырăнта тăрать, малта пăхăнакан предложени пулать.

Тĕп предложени калаканăн чи паллă шухăшне пĕлтерет. Вăл шухăшăн тĕрлĕ енне пăхăнуллă предложенисем хушса параççĕ, тĕп предложенин пĕр-пĕр членне пăхăнса тăрса ăнлантараççĕ.

**Эпĕ юлташа юрататăп, мĕншĕн тесен вăл ĕçчен те тӳрĕ кăмăллă.**

Тĕп предложени — **эпĕ юлташа юрататăп.**

Мĕншĕн юрататăн? Пăхăнакан предложени **юрататăп** глагола ăнлантарать, юратнин сăлтавне уçса парать, тĕп предложение пăхăнса тăрать. Икĕ предложение **мĕншĕн тесен** союз çыхăнтарать, пĕрлештерет.




Пăхăнуллă хутлă предложенисен кивĕ конструкцине* (е иккĕмĕшле конструкцие) илсен, çакна палăртмалла.

* Н. А. Резюков терминĕпе усă куратăп (кивĕ тата çĕнĕ конструкци).

Кун йышши пăхăнуллă предложенисем икĕ е темиçе хутсăр предложени пĕрлешнипе пулаççĕ.

Вĕсенчен пĕри — тĕп предложени вырăнĕнче шутланакании — пĕр улшăнмасăр юлать, унăн тĕп членĕсемпе кèçĕн членĕсем те пур, тепри — пăхăнакан предложени вырăнĕнчи глагол-сказуемăй кӳлепине улăштарать, е причасти, е деепричасти кӳлепине йышăнать те тĕп предложенири пĕр-пĕр сăмаха ăнлантарса тăрать, тĕп предложенири пăхăнтаракан сăмах ыйтнă май тĕрлĕ падеж аффиксĕсемпе хыççăмахсем те хушăнма пултараççĕ.

Пăхăнакан предложенири сказуемăй тĕрлĕ улшăнман формăра пулсан та, вăл пурпĕрех сказуемăйлăхне çухатмасть, малтанхи пекех (сăпатланакан формăри глагол пекех) хăй ушкăнĕнчи сăмахсене пăхăнтарса тăрать, ят сăмахсене çав падежрах тытса тăрса, управлени йĕркипе çыхăнтарать.

Тĕслĕх:

Николай Варенцов хăй ĕçне юратса тăвать, çавăнпа ăна пурте хисеплеççĕ.

Ку следствине пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложени, тĕп предложени — **Николай Варенцов хăй ĕçне юратса тăвать,** пăхăнакан предложени — **çавăнпа ăна пурте хисеплеççĕ.**

Тĕп предложенире **Николай Варенцов** подлежащи, **юратса тăвать** хутлă глагол сказуемăй, сказуемăй ушкăнне **хăй ĕçне** сăмах майлашăвĕ те кĕрет, **тăвать** глагол **ĕçне** япала ятне тăву падежĕнче лартса пăхăнтарса тытса тăрать, **ĕç** сăмахăн определенийĕ **хăй** — паллă местоимени.

Пăхăнакан предложенире подлежащи паллă местоимени **пурте,** сказуемăй — **хисеплеççĕ,** сказуемăй ушкăнне **çавăнпа ăна** сăмахсем кĕреççĕ, **ăна** — тăву падежĕнчи сăпат местоименийĕ, вăл **хисеплеççĕ** глагола пăхăнса тăрать, **çавăнпа** — следствие кăтартакан пăхăнуллă предложенин союзĕ, вăл та сказуемая пăхăнса тăрать.

Çак пĕрремĕшле конструкциллĕ пăхăнуллă хутлă предложенирен иккĕмĕшле конструкциллĕ хутлă предложени тума пулать. Ăна çапла йĕркелемелле: тĕп предложенири **юратса тăвать** — сказуемăйри **тăвать** глаголран причасти тумалла, тунă пăхăнуллă предложенири **çавăнпа** союза кăларса пăрахмалла та икĕ предложение пĕрлештермелле. **Николай Варенцов хăй**

**ĕçне юратса тунă, ăна пурте хисеплеççĕ.** Капла тунипе сыпăнуллă хутлă предложени çеç пулать-ха. Ку çителĕксĕр: пирĕн иккĕмĕш конструкциллĕ пăхăнуллă хутлă предложени тумалла.

Çак икĕ хутсăр предложение союзсăр пуçне урăх майпа çыхăнтармалли меслет те пур иккен. Ăна авалхи чăвашсемех шухăшласа кăларнă. Вăл пит ансат меслет. Малтанхи предложенири сказуемăйне иккĕмĕш предложени сказуемăйĕ ыйтнă май туху падежне лартмалла кăна — çыхăну пулса та тăрать.

**Николай Варенцов хăй ĕçне юратса тунăран ăна пурте хисеплеççĕ.**

Çак хутлă предложение форма енчен улăштарни содержани тĕлĕшпе улшăну турĕ-ши?— Турĕ.

Кунта тĕп предложени — **ăна пурте хисеплеççĕ,** ăна пăхăнса тăраканĕ — **Николай Варенцов хăй ĕçне юратса тунăран.** Пĕрремĕш конструкциллĕ пăхăнуллă хутлă предложени ĕçĕн следствине кăтартнă пулсан, кунта— пиркене кăтартать.

Анчах çакăн пек улшăнусем хыççăн иккĕмĕш конструкциллĕ пăхăнуллă хутлă предложени хăйĕн пăхăнулăхĕпе хутлăх пĕлтерĕшне çухатнă-ши е сыхласа хăварнă?

Çакăн пирки пирĕн чăваш чĕлхеçисем те, тĕрĕк чĕлхеçисем те нумай çулсем хушши тавлашаççĕ. Тавлашнă май пĕрисем кун йышши пăхăнуллă хутлă предложенисене хутсăр предложенисен анлă членĕсем кăна теççĕ, теприсем — предложенилле членсем теççĕ, виççĕмĕшсем— пăхăнуллă хутлă предложенисем тесе çирĕплетсех калаççĕ.

Пирĕн шутпа, кун йышши предложенисем хăйсен пăхăнулăхне те, хутлă предложенисен пулăвне те сыхласа хăварнă.

Мĕнле майпа?

Иккĕмĕш конструкциллĕ пăхăнуллă предложенисен подлежащи те, сказуемăйĕ те пур, апла пулсан вĕсем предложение йĕркелеме пултараççĕ, пĕр-пĕр уйрăм шухăша та пĕлтереççĕ.

Ăна çак тĕслĕх те çирĕплетсе парать.

**Николай Варенцов хăй ĕçне юратса тунă.**

Кунта союз пĕлтерĕшне кăтартакан **-ран** аффикса илмен, вăл тĕп предложенипе çыхăнтарса тăма кирлĕ пулнă. Вăл чăваш чĕлхипе тĕрĕк чĕлхисен уйрăмлăхĕ

пулса тăрать. Ку тĕпчевçĕсене пачах тĕлĕнтерме те кирлĕ мар, уншăн арпашмалли те çук.

Çапла май **тунăран** глагол форми пĕрре пăхăнуллă предложенин сказуемăйĕ, тепре **-ран** аффикс хушăннипе — çыхăну сăмахĕ пулса тăнă, вăл союз пĕлтерĕшне те йышăннă. Тепĕр чухне çыхăну сăмахĕсем вырăнче хыççăмахсем пулаççĕ.

**Сизовпа Махотин тăнă çĕре Павел пырса тăчĕ, унăн сасси янăраса кайрĕ.** *(М. Г.)* **Ырă кăмăллă старикпа паллашнă хыççăн унăн кăмăлĕ уçăлчĕ. Вăхăт нумай иртнĕ пирки çамрăксем клубран саланса пĕтрĕç. Пирĕн çĕршыв хăвăрт аталанса пыни çинчен учитель лайăх лекци вуласа пачĕ.**

Çакăн йышши предложенисене пĕр иккĕленмесĕрех пăхăнуллă хутлă предложенисем шутне кĕртмелле, учебниксенче те пĕрремĕш конструкциллĕ хутлă предложенисем хыççăн памалла. Вара шкул ĕçĕнче икĕ конструкцине те пĕр сехет хушшинчех танлаштарса ăнлантарма пулать. Ун пек туни темăна ăнланма çăмăллатать, вăхăта перекетлет.

Тата çакăн пек предложенисем çинчен мĕн калама пулать-ши? 1) **Садран таврăннă чух Салампи Ленăна хăйсем патне кĕрсе тухма ыйтрĕ.** *(Арт.)* 2) **Çичĕ сехетре тăрсан, Петĕр уроксене аса илме ĕлкĕрет.** 3) **Каçхине урамра шавлани чылай вăхăт янраса тăчĕ.** 4) **Виличчен пĕрре йĕркеленсе, çителĕклĕ пурнăçпа ыр курса пăхаясчĕ...** *(Кăлк.)*

Ку предложенисене ниепле те пăхăнуллă предложенисен е, хăшпĕр чĕлхеçĕсем пек каласан, предложенилле членсен шутне кĕртме май çук. Сăлтавĕ çакăнта: çак предложенисенче предикачĕ икшер хут тĕл пулсан та, субъекчĕ пĕрер хут çеç тĕл пулать. Тен, предикачĕсем темиçе субъект ĕçне кăтартса параççĕ пулĕ, вĕсемпе сăпатсăр предложени сказуемăй формипе усă курнă пулĕ?

Çук, пачах апла мар. Ку предложенисенче (уйрăмах малтанхи предложенисенче) пĕр подлежащи — субъект, унăн икĕ предикат: пĕри — глаголăн сăпатланман форминче, тепри — глаголăн сăпатлă форминче.

**Садран таврăннă чух Салампи Ленăна хăйсем патне кĕрсе тухма ыйтрĕ.** Кам ыйтрĕ?— Салампи. Садран кам таврăннă?— Каллех Салампи. Ĕçне тăваканĕ пĕр çынах — Салампи.

Апла пулсан, вал мĕнле предложени-ши?

— Хутсăр предложени. Унта **«садран таврăннă чух»** тени икĕ обстоятельствăран тăрать: **садран** — вырăн обстоятельстви, **таврăннă чух** — вăхăт обстоятельстви, нимĕнле предложенилле обстоятельство та çук. «Диктант сборникĕнче» (II-мĕш пайĕ, 1958 ç., 29 стр.) ăна вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсен шутне кĕртнĕччĕ.

Иккĕмĕш предложение илер. **Çичĕ сехетре тăрсан, Петĕр уроксене аса илме ĕлкĕрет.**

Ĕçе тăваканĕ, субъекчĕ — Петĕр, вăл çичĕ сехетре тăрсан, вăлах уроксене аса илме ĕлкĕрет. Кунта та пĕр подлежащин икĕ сказуемăй: пĕри — глаголăн сăпатланман форминче — **тăрсан,** тепри — глаголăн сăпатланакан форминче — **ĕлкĕрет.** Каллех хутсăр предложени, унăн вăхăт обстоятельстви пур — **çичĕ сехетре тăрсан,** вăл хăçан? ыйтупа ыйтăнать. Кунта каллех нимĕнле хутлă предложени те çук.

Ытти предложенисене те çак меслетпех пăхмалла, вĕсенче те нимĕнле хутлă предложенисемпе предложенилле членсем çук.

Юлашкинчен, тăваттăмĕш предложенире деепричастиллĕ сăмах майлашăвне куратпăр, вăл та пăхăнуллă предложени пулма пултараймасть, ăна тума унăн нимĕнле грамматикăлла форми те çук. Пăхăнуллă предложенисене çак принципа пăхсан, пăтрашуллă вырăнсем сахалтарах пулмалла.

Хутсăр предложенисенче деепричастиллĕ сăмах майлашăвĕ тел пулни чĕлхеçĕсене пăтрашу патне илсе çитерме кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вăл предложенири сказуемăя мĕн енчен те пулин уçса парать, ытларах мĕнлелĕхпе вăхăт енчен ăнлантарни тĕл пулать. Деепричастиллĕ сăмах майлашăвĕнче субъект пулмасть, сăмахсем пурте деепричасти тавра чăмăртанса, ăна пăхăнса тăраççĕ.

**Пĕлĕт, икĕ пая пайланса, хĕвел тухас вырăнта çуталма пуçларĕ. Васкаса утса, эпĕ вĕт тĕмлĕ ката урлă каçрăм та çӳлĕрех вырăна улăхса çитрĕм.** *(Тург.)* **Хĕвел сават тĕнчене, хĕл ыйхинчен вăратса.** *(К. Ив.)*

Пăхăнуллă хутлă предложенисем тата темиçе пăхăнуллă предложенирен те пулаççĕ. Пулăвĕ вĕсен çаван пек: тĕп предложенийĕ пĕрер çеç пулать, пăхăнуллă предложенисем вара темиçе те пулма пултараççĕ.

Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе виçĕ тĕслĕ: пĕр йышши, умлă-хыçлă тата тĕрлĕ енчен çыхăнать.

1. Пĕр йышши çыхăнура тăнă чухне темиçе пăхăнуллă предложени, пĕр ыйтурах тăрса, тĕп предложенин пĕр членнех ăнлантараççĕ.

**Эпир хамăрăн актива идеологи ĕçĕн ыйтăвĕсем çине тимлĕнрех çаврăнса пăхас тетпĕр пулсан, кунта йĕрке туса хурас тетпĕр пулсан, ĕçре уçăмлăн çул кăтартса парас тетпĕр пулсан, эпир идеологи ĕçĕнчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене совет çыннисене тивĕçлĕ пек, большевиксене тивĕçлĕ пек критикăласа тăма кирлĕ.** *(Жданов.)*

Тĕп предложени: **эпир идеологи ĕçĕнчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене совет çыннисене тивĕçлĕ пек, большевиксене тивĕçлĕ пек критикăласа тăма кирлĕ.** Ыттисем виççĕшĕ те условие кăтартакан пăхăнуллă предложенисем, вĕсем пурте тĕп предложенин **критикăласа тăма кирлĕ** хутлă глагол сказуемăйне пăхăнса ăнлантарса тăраççĕ, пуриншĕн те пĕр ыйту: мĕнле условире?, пурте пĕр пек **пулсан** союзла сăмахпа çыхăннă.

2. Тĕрлĕ енлĕ çыхăнура тăнă чухне темиçе пăхăнуллă предложенин, тĕп предложенипе тĕрлĕ ыйтура тăрса, тĕрлĕ сăмаха ăнлантарса парса çыхăнать. Пăхăнуллă хутлă предложенисен тĕрлĕ союз е союзла сăмах пулать.

**Капитализм çĕршывĕсенчен хăшпĕрисенче пенси парса тăрас йĕрке пур пулсан, ăна, тĕпрен илсен, ĕççыннисем хăйсен шучĕпе пурнăçласа пыраççĕ, мĕншĕн тесен фондсенче пуринчен ытларах рабочисен хăйсен ĕç укçинчен уйăрса илекен укçа шучĕпе тăваççĕ.** *(Н. Хрущёв.)*

Кунта тĕп предложени: ăна, **тĕпрен илсен, ĕççыннисем хăйсен шучĕпе пурнăçласа пыраççĕ.** Пĕрремĕш пăхăнуллă предложени тĕп предложение услови енчен ăнлантарать, **пулсан** союзла сăмахпа çыхăннă, мĕнле условире? ыйту çине ответлет, тĕп предложенире **пурнăçласа пыраççĕ** глагол-сказуемăя пăхăнса тăрать. Çак тĕп предложениех тепĕр енчен пиркене пĕлтерекен пăхăнуллă предложени уçса парать, мĕншĕн? ыйтупа ыйтăнать, **мĕншĕн тесен** союзпа çыхăнать.

Пăхăнуллă хутлă предложенири пăхăнуллă предложенисем умлă-хыçлă çыхăнма пултараççĕ: виççĕмĕш пăхăнуллă предложени иккĕмĕшпе, иккĕмĕшĕ — пĕрремĕшпе, пĕрремĕшĕ — тĕп предложенипе çыхăнса тăраççĕ.

**Эсир мĕнле хушнă, эпир çавăн пек тăрăшса ĕçлерĕмĕр пулин те, хамăр ĕçе тĕплĕн хăнăхманнипе пулас, хамăр бригада планне пурпĕр пурнăçлаймарăмăр.**

Тĕп предложени — **хамăр бригада планне пурпĕр пурнăçлаймарăмăр,** пĕрремĕш хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени, ăна пăхăнса ăнлантарса тăрать: тĕп предложенипе **пулин те** союзлă сăмахпа çыхăннă, пĕрремĕш пăхăнуллă предложение иккĕмĕш — мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложени ăнлантарса парать, унпа **мĕнле** союзла сăмахпа çыхăнать.

Вĕрентнĕ чухне схемăпа, таблицăпа усă курса ăнлантармалла.

Çавăн пекех иккĕмĕш конструкцillĕ пăхăнуллă предложенисем те темиçе пăхăнуллă хутлă предложенирен е пĕрремĕшпе иккĕмĕш конструкциллĕ пăхăнуллă предложенисем хутăш та тăма пултараççĕ. Вĕсем çыру чĕлхинче йышлă формăра тĕл пулаççĕ.

Уйрăм тĕслĕхсем илсе пăхар.

1. Эпир пурнăçра начар фактсене кăна шыракансене, çав тĕлĕшпе шăл йĕрекенсене, пирĕн пурнăçа хура сăрсемпе сăрласа пăсакансене сивлетпĕр. *(Хрущёв.)* 2. Эпир Финляндире пулнă вăхăтра пĕр рабочи аппендицитпа чирлесен, ăна операци тумалла пулсан, хăйне мĕн тери йывăр пулни çинчен, çавăншăн укçа нумай тӳлеме е вилсе выртма тивни çинчен каласа пачĕ. *(Хрущёв.)* 3. Коммунизм вăхăтĕнче тин, производительнăй вăйсем хăватлăн аталансан, çапла вара куллен кирлĕ мĕнпур япаласене питĕ нумай туса кăларма тытăнсан тата çынсем пурте, пурлăх-ырлăх обществăна кирлине ăнланса, хăйсен ирĕкĕпе, хăйсем мĕн чухлĕ илнине пăхмасăр пĕтĕм вăйпа ĕçлеме тытăнсан, вара тин общество членĕсене продуктсем валеçес ĕçе йĕркелесе пыни кирлĕ пулмасть. *(Хрущёв.)*

Методика тĕлĕшпе пăхăнуллă хутлă предложенисене вĕрентнĕ чух çакна палăртни кирлĕ:

1. Пăхăнуллă хутлă предложение сыпăнуллă хутлă предложенирен уйăрса илесси.

2. Пăхăнуллă предложенисене, уйрăмах иккĕмĕш конструкцилле пăхăнуллă предложенисене, обстоятельствăсенчен уйăрса илесси тата çак темăна вĕрентнĕ чух вĕсене яланах танлаштарса парасси.

3. Пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен пĕтĕмĕшле пĕлӳ парасси.

4. Пăхăнуллă хутлă предложени чăваш чĕлхинче икĕ конструкциллĕ пулнипе паллаштарасси, вĕсен хушшинчи уйрăмлăха кăтартасси.

5. Хутлă предложенисем союзлă тата союзсăр çыхăннине, темиçе пăхăнуллă хутлă предложени пулнине, вĕсен çыхăнăвне кăтартса парасси.

6. Пăхăнуллă хутлă предложени тĕп предложенипе пăхăнуллă çыхăнура тăни, вĕсене уйăрса илме вĕрентесси.

7. Пăхăнуллă хутлă предложение кĕрекен кашни предложенин тĕсне уйăрма, кашни предложенин тĕп членĕсене тупма хăнăхасси.

8. Пăхăнакан предложени тĕп предложенири хăш сăмаха ăнлантарса пани, унăн ыйтăвĕ.

9. Пăхăнакан предложенисем тĕп предложенипе мĕнле майпа çыхăнса тăни (союзпа е союзсăр, союзла сăмахсемпе т. ыт.).

10. Пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен вĕрентнĕ чух кăтарту пособийĕсенчен схема, таблица кирлĕ пулни, синтаксисла разбор, творчествăлла çыру ĕçĕсем пысăк вырăн йышăнни, вĕсемпе пĕлсе усă курнин пахалăхĕ.

Пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен вĕрентессине предложенилле членлă предложенисем çинчен вĕрентессипе çыхăнтармалла.

Предложенилле членсемпе пăхăнуллă хутлă предложенисем нумайăшĕ мăшăрлă пулаççĕ. Тĕслĕхрен: подлежащи пулакан предложенилле членпа подлежащи пулакан пăхăнуллă хутлă предложенисене, определени пулакан предложенилле членпа определени пулакан пăхăнуллă хутлă предложени т. ыт. мăшăрлă. Çакăн пек мăшăрлă пулакан предложенилле членсемпе пăхăнуллă хутлă предложенисене VII-мĕш класра танлаштарса вĕрентмелле.

Пăхăнуллă хутлă предложенисене вĕреннĕ чух ачасем синтаксисăн кăткăс енĕсемпе майĕпен паллашса пыраççĕ. Учителĕн кăтарту пособийĕпе пĕлсе ĕçлемелле, вĕренекенсене хăйсене çав кăтартса вĕрентмелли хатĕрсем тăвас ĕçе явăçтармалла.

Пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен вĕренмелли темăна çакăн пек пайлама пулать:

1. Пăхăнуллă хутлă предложени çинчен ăнлантарса

пани. 2. Пӑхӑнуллӑ предложенисен тӗсӗсем. 3. Дополненипе определени пулакан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени. 4. Синтаксисла ҫыруллӑ разбор. 5. Обстоятельство пулакан пӑхӑнуллӑ предложени. Вырӑна пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложени. 6. Вӑхӑта пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложени. 7. Мӗнлелӗхе пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложени. 8. Тӗллеве, тӗллевпе условие пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложени. 9. Условие тата хирӗҫлеве пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенисем. 10. Пиркепе следствине пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенисем. 11. Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисенче чарӑну паллисем лартасси. Анлантару диктанчӗ. 12. Темиҫе пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисем. Ун пек предложенисенче чарӑну палли лартасси. 13. Тӗрӗслев ҫыру ӗҫӗ.

## ПӐХӐНУЛЛӐ ПРЕДЛОЖЕНИСЕН ТӖСӖСЕМ.

Темӑна дедукци йӗркипе вӗрентмелле. Малтан пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенин пулӑвӗ, пӗлтерӗшӗ ҫинчен, тӗп предложенипе пӑхӑнуллӑ предложени тата вӗсен хушшинчи ҫыхӑнӑвӗ ҫинчен аса илес пулать. Вӗренекенсем 137-мӗш хӑнӑхтарӑва вулаҫҫӗ те тӗп предложенипе пӑхӑнуллӑ предложенисене кӑтартса параҫҫӗ, пӑхӑнуллӑ предложени мӗнле союзпа е союзла сӑмахпа ҫыхӑннине калаҫҫӗ.

Пӑхӑнуллӑ предложенисем чӑваш чӗлхинче йышлӑ. Вӗсем ҫинчен учитель кӗскен каласа парать, схемӑсемпе, таблицӑпа усӑ курать.

Схема тӑрӑх ӑнлантарнӑ чух пӑхӑнуллӑ предложенисем тӑватӑ тӗп ушкӑна пайланни ҫинче чарӑнса тӑмалла. Предложени членӗсем пекех подлежащи, сказуемӑй, дополнени, определени тата обстоятельство пулакан пӑхӑнуллӑ предложенисене паллӑ тумалла. Предложени членӗсем пӗр сӑмахран е сӑмах майлашӑвӗсенчен тӑраҫҫӗ пулсан, ҫак ушкӑнри пӑхӑнуллӑ предложенисем хӑйсем уйрӑм предложени тӑваҫҫӗ те ҫав предложени членӗсен ыйтӑвӗпех ыйтӑнаҫҫӗ. Сӑмахпа каланине уйрӑм тӗслӗхсемпе ҫирӗплетмелле, доска ҫине ҫырмалла е пӑхӑнуллӑ предложенисен таблицине кӑтартмалла.

Пăхăнуллă хутлă предложени тĕсĕсен схеми.



Пăхăнуллă хутлă предложенисен пĕтĕмĕшле таблици.

| №№ йĕр-ки | Предложени ячĕсем | Ыйтăвĕ-сем | Çыхăнăвĕ | Т ĕ с л ĕ х с е м |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Подлежащи пулакан пăхăнуллă предложени. | Кам? Мĕн? | *вăл* *çав* | Кам нумай вĕреннĕ, **вăл** нумай пĕлет. Кам ĕçе юратать, çав ĕçе тĕплĕ тăвать. |
| 2. | Дополнени пулакан пăхăнуллă предложени. | Ят мар падеж ыйтăвĕ | *кам* *мĕн* | **Кам** ĕçе юратать, ăна нимĕнле ĕç те хăрушă мар. **Мĕн** акнă, **çавна** выратăн. |
| 3. | Определени пулакан пăхăнуллă предложени. | Мĕнле? Хăш? Камăн? Кам? | *мĕнле* *хăш* | Эсĕ **мĕнле** кĕнеке вулатăн, эпĕ те **çав** кĕнекенех вулăп. Эсĕ **хăш** çулпа каятăн, вăл та **çав** çулпах пырать. |
| 4. | Вырăна пелтерекен пăхăнуллă предложени. | Ăçта? Ăçтан? Ăçталла? | *ăçта,* *ăçтан* | Вăл ăçта пулать, çавăнта унăн ыр ячĕ сарăлать. |
| 5. | Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложени. | Хăçан? | *хăçан* | Хăçан çанталăк ăшăтать, **çавăн чухне** курăк тӳрех ешерет. |
| 6. | Мĕнлелĕхе пелтерекен пăхăнуллă предложени. | Мĕн чухлĕ? | *мĕнле?* *мĕн* *чухлĕ?* | Çын мĕн чухлĕ ĕçе савать, **çавăн чухлĕ** тăрăшса тăвать. |
| 7. | Тĕллеве пелтерекен пăхăнуллă предложени. | Мĕншĕн? Мĕн тума? | *тесе* | Кроликсем самăр пулччăр **тесе,** эпир вĕсене гĕрлĕ апат çитеретпĕр. |
| 8. | Тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | Мĕн тăвас тесен? | *тесен* | Тĕплĕ пĕлӳ пултăр **тесен,** вĕреннине ĕçпе çыхăнтармалла. |
| 9. | Условие пелтерекен пăхăнуллă предложени. | Хăçан? Мĕнле услови-пе? | *пулсан* | Тăван çĕршыв пуян **пулсан,** пурăнма та пит аван. |

| №№ йěрки | Предложени ячěсем | Ыйтăвě-сем | Çыхăнăвě | Тěслěхсем |
|---|---|---|---|---|
| 10. | Хирěçлеве пěлтекен пăхăнуллă предложени. | | *пулсан та* *пулин те* | Утма йывăр **пулсан та,** эсě пальто ил. Ленин вилнě пулин те, унăн ěçěсем яланах чěрě. |
| 11. | Пиркене пěлтерекен пăхăнуллă предложени. | Мěн пирки? | *Мěншěн тесен* | Çамрăк ăрун нумай вěренмелле, **мěншěн тесен** коммунизм тăвакансен тавракурăмě анлă пулмалла. |
| 12, | Следствине пěлтерекен пăхăнуллă предложени. | | *çавăнпа, çавăнпа вара, вара* | Капиталистсем Хěвеланăç Германие атом бази туса хураççě, **çавăнпа** унти халăхсемшěн хăрушлăх кӳреççě. |

Таблицăри тěслěхсенче вěренекенсене тěп предложенипе пăхăнуллă хутлă предложенисене туптармалла, учителěн вěсем мěнле предложени тěсě пулнине асăнса хăвармалла. Çапла майпа подлежащи, дополнени, определени тата обстоятельство пулаканнисенчен пěрер е икшер предложени илсе памалла.

Çакăнтах пăхăнуллă предложение предложени членěпе танлаштарса памалла: вěсем иккěшě те пěр ыйтурах тăраççě, анчах предложени тытăмě енчен вěсен пысăк уйрăмлăх пуррине паллă тумалла. 1) **Вăл лайăх пěлет.** 2. **Кам тăрăшса вěренет, вăл лайăх пěлет.** Хутсăр предложенире **вăл** подлежащи пулать, кам? ыйтупа ыйтăнать, анчах вăл кам пулни паллă мар. Çав кам пулнине пăхăнакан предложенире лайăх кăтартнă, ăна **кам тăрăшса вěренет** пăхăнакан предложени уçса парать, вăл та çак кам? ыйтурах тăрать. Хутсăр предложенире ăна пěр сăмахпа ответленě пулсан, пăхăнуллă хутлă предложенире пăхăнуллă предложенипе çеç каласа парать.

мěнле?
**Сехре те çав ěçех тума тăрăшать.**

мěнле?
**Марине мěнле ěç ěçлет, Сехре те çав ěçех тума тăрăшать.**




Хутсăр предложенире **ĕçех** япала ятне кăтарту местоименийĕнчен пулнă **çав** определени ăнлантарса парать, ыйтăвĕ мĕнле?, анчах хутсăр предложенири мĕнле ĕç пулнине уçса параймасть, ăна определени пулакан пăхăнуллă предложени ăнлантарса парать, вăл та çав ыйту çинех ответлет.

**Кам ĕçе юратать, ăна нимĕнле ĕç те хăратмасть.**

Хутсăр предложенири **кама?** дополнени ыйтăвне хутлă предложенире пăхăнакан предложени ăнлантарса парать, дополнени ыйтăвĕ çине ответленĕрен ăна дополнени пулакан пăхăнуллă предложени тесе ят панă, вăл тĕп предложение пăхăнса тăрать.

Юлашкинчен вырăн обстоятельствине предложени пулакан обстоятельствăпа танлаштарса памалла.

**Унта ĕç ăнса пырать.**




## ПОДЛЕЖАЩИ ПУЛАКАН ПĂХĂНУЛЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

Темăна вĕренме тытăниччен предложенирен тĕп членсем — подлежащипе сказуемăй çинчен аса илмелле, подлежащи ыйтăвĕ тата вăл мĕнле пуплев пайĕсенчен пулнине те кăштах асăнмалла. Унтан пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен аса илмелле те малалла çак тема çине куçмалла.

Подлежащи пулакан пăхăнуллă предложени пулăвĕпе пĕлтерĕшне уçса памалла. Материала вĕрентме çакăн пек тĕслĕхсем сĕнме пулать.

1. Кам ĕçе юратать, çав телейлĕ пулать.
2. Кам вулать, вĕренет, вăл пурне те пĕлет.
3. Кам хаклать юлташпа туслăха,
   Вăл юлмасть нихçан та хурлăха.

4. Кам çĕршывшăн парать хăй вăйне,
   Вăл тупать мухтавпа ыр ятне.
5. Кам сивлет тискер, сĕмсĕр вăрçа,
   Çав чăнах юрататать пурнăçа.
6. Мĕн акнă, çав шăтать. *(Ват. с.)*

Материала ăнлантарнă чухне тĕслĕхсенчен пĕр-икĕ предложени илмелле те çавсемпе ăнлантармалла. Акă пĕрремĕш предложенипеле темăна мĕнле ăнлантармаллине пăхса тухăпăр.

Малтан тĕп предложение илмелле. Вăл предложени кунта **çав телейлĕ пулать.** Вĕренекенсене предложенипе сказуемăйне туптармалла: **çав** — подлежащи, кăтарту местоименийĕнчен пулнă, **телейлĕ пулать** — хутлă ят сказуемăй. Çак тĕп предложени кам? подлежащи ыйтăвĕпе ыйтăнать, анчах пăхăнуллă предложенисĕр кам телейлĕ пулни паллă мар, çавна **кам ĕçе юрататать** пăхăнакан предложени ăнлантарса парать, вăл тĕп предложение пăхăнса тăрать. Çак хутлă предложение кĕрекен тĕп предложенипе пăхăнакан предложение уйрăммăн илсен, вĕсенчен кашниех уйрăм шухăшсене кăтартса параççĕ пулсан та, вĕсене вĕçленнĕ предложенисем теме пулмасть.

Малалла пăхăнуллă предложенири тĕп членсене пăхса тухмалла: **кам** — подлежащи, çыхăну местоименисенчен пулнă, унăн тĕп пĕлтерĕшĕ — тĕп предложенипе çыхăнтарасси, **юрататать** — глагол-сказуемăй, **ĕçе** — тӳрĕ дополнени, тăву падежĕнчи япала ячĕ.

Тĕп предложенипе пăхăнуллă предложение çыхăнтарас çĕрте, **кам, мĕн** местоименисĕр пуçне, интонаци кирлĕ вырăн йышăнать: пăхăнуллă хутлă предложенин юлашки сăмахне каланă чухне сасă çĕкленет, вăл предложени вĕçленменнине, малалла татах тепĕр предложени пуррине кăтартать.

**Кам** ĕçе юрататать, **çав** телейлĕ пулать.

Пăхăнакан предложени тĕп предложенири **вăл, çав** кăтарту местоименийĕсенчен тăракан подлежащие ăнлантарса параççĕ, ăна схемăпа кăтартса хăвармалла.



Хăшпĕр чухне тĕп предложенин подлежащийĕ пулмасть, тулли мар предложени евĕрлĕ пулать, çавăнпа та пăхăнакан хутлă предложени хыççăн тире лартаççĕ.

1) **Кам пухуран каясшăн — кайтăр.**

2) **Мĕн шутлатăн — пурнăçлантăр.**

3) **Кам çав кайăка тытать — телейлĕ пулать.**

Малтанхи икĕ предложенире çав кăтарту местоимениййĕнчен пулнă подлежащие каламан, ун вырăнне пысăк чарăну тумашкăн тире лартмалла.

Вĕренекенсене к и л т е т у м а учебникри 106-мĕш хăнăхтарăва парса ямалла е тата хăйсене 5-шер тĕслĕх тупса килме хушмалла.

## ДОПОЛНЕНИ ПУЛАКАН ПĂХĂНУЛЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

Темăна вĕрентнĕ чух предложенири кĕçĕн член — дополнени çинчен аса илмелле, ун пĕлтерĕшĕпе ыйтăвĕ çинчен ыйтмалла.

Урока ăнлантарма таблицăпа усă курмалла, унта çакăн пек тĕслĕхсем пулма тивĕç:

1. Кам чыса ачаранах упрать, ăна халăх ырлать. 2. Аслă Ленин мĕн сĕннĕ, парти çавна тăвать. *(Хрущёв.)* 3. Кам саспалли пире вĕрентнĕ, çавна эпир нихçан та манмастпăр. 4. Кам ирĕк пурнăç пире панă, çавна пĕлет халь çут тĕнче. 5. Мĕн вулатăн, çавна кĕскен çырса хур. 6. Камăн сывлăх лайăх, çавна вĕçевсĕсен шкулне вĕренме илеççĕ. 7. Кам паян памасть — текех каçармастăп. *(Элк.)* 8. Кам ман пата килет, унпа эсĕ шанчăклăн хулана çитетĕн. 9. Кам тăшмана парăнмасть, ăна халăх манмасть. *(Ват. сăм.)*

Дополнени пулакан пăхăнуллă хутлă предложенире те, ытти пăхăнуллă хутлă предложенири пекех, икĕ грамматика центрĕ пулать: пĕри — тĕп предложенири подлежащипе сказуемăйĕнчен пулнă, тепри — пăхăнакан предложенири подлежащипе сказуемăй таврра чăмăртаннă.

Материала ăнлантарнă чух малтан тĕп предложение илмелле, унти тĕп членĕсене паллă тумалла, тĕп предложени мĕнле ыйтура тăнине пăхса тухмалла. Малтанхи тĕслĕхех илер.

**Ăна халăх ырлать** — Кама халăх ырлать? Çак ыйту çине пăхăнакан предложени ответлет: **кам чыса ачаранах упрать.**

Çак пăхăнакан предложени тĕп предложенири **ăна** сăмаха ăнлантарса парать; **ăна** — сăпатлă местоимени, тăву падежĕнче, вăл тĕп предложенири дополнени. Пă-

хăнакан предложени çак **ăна** дополнение ăнлантарса панăран хăй те дополнениллĕ пăхăнуллă предложени пулать.

Тĕп предложенипе пăхăнакан предложение **кам — ăна, кам — çавна, мĕн — ăна, камăн — çавăн** союзлă сăмахсем çыхăнтарса тăраççĕ. **Кам, мĕн** союзла сăмахсем яланах пăхăнакан предложенире подлежащи пулаççĕ, тĕп предложенире вĕсене мăшăр **вăл, çав** сăмахсем ят мар падежĕсенче тăраççĕ.

Схема:




Вĕренекенсене çакна та асăрхаттармалла: тĕп предложенире подлежащипе дополнени пулакан сăмахсем тухса ÿкме пултараççĕ, вара вĕсен вырăнне тире лартаççĕ. (Таблицăри 6-мĕш предложение пăхăр.)

Тĕп предложенипе пăхăнакан предложенин сказуемăйĕсем пĕр формăра пулаççĕ; вăхăт, сăпат, хисеп енчен килĕшсе тăраççĕ.

**Кам та кам ăслăлăх çине шанчăкне хурать, çавна ăслăлăх тивлечĕ пÿрĕнет. Аслă пиччĕшĕ мĕн-мĕн курнă, курнă шăллĕ те ăна.** *(Юмах.)*

Анчах хăшпĕр чухне икĕ предложенири сказуемăйсем тĕрлĕ формăра та пулма пултараççĕ.

**Мĕн тупнă — йăлтах параççĕ ăна.** *(Элк.)*

**Кам пурнăça юратать, ăна пурăнма çăмăл.**

Пăхăнуллă предложенире союзла сăмах ытти хăшпĕр местоимениреп те пулма пултарать, анчах ун пек тĕслĕхсем сахал тĕл пулаççĕ.

**Çынна епле ыр тăвăн, ху та çавна курăн.** *(Ват. с.)*

**Хăшĕ урокра пулман, çавсене учитель уроксем хыççăн хăварса ăнлантарчĕ.**

Илсе панă пăхăнуллă предложенисенчи союзла сăмах **епле?, хăшĕ?** ыйту местоименисенчен пулнă, анчах кунта, ыйту пĕлтерĕшне çухатса, çыхăну местоименийĕ пĕлтерĕшне йышăннă.

Урокра вĕреннине çирĕплетме пысăках мар творчество çыру ĕçĕ ирттермелле. Ăна валли пăхăнуллă предложенисем памалла, вĕренекенсем тĕп предложенисене хăйсем тупса çыраççĕ.

Т ĕ с л ĕ х с е м:

1. Учитель мĕн хушать,... (ăна эсĕ пурнăçлама тăрăш.) 2. Мĕн акатăн,... (çавна выратăн.) 3. Кам ачаран ĕçе юратнă,... (ăна нимĕнле ĕç те шиклентермест.) 4. Тĕнче уççинче мĕн пур,... (çавна учĕнăйсем пĕлме тăрăшаççĕ.) 5. Кам физкультурăна хисеплемест,... (ăна кирек мĕнле чир те ерме пултарать.) 6. Мĕн вӳлатăн,... (çавна асра тытма тăрăш.)

## ОПРЕДЕЛЕНИ ПУЛАКАН ПĂХĂНУЛЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

Определени пулакан пăхăнуллă предложенин пĕрремĕш конструкцийĕ ытларах çыру чĕлхинче тĕл пулать, калаçу чĕлхинче (яланах теме те юрать) иккĕмĕш конструкцийĕпе усă кураççĕ.

Вĕрентӳ ĕçĕнче ачасене икĕ конструкцийĕпе те паллаштараççĕ, анчах пĕр вăхăтра мар, иккĕмĕш конструкцийĕпе малтанах, VI-мĕш класрах, паллашнă ĕнтĕ. Çавăнпа та учитель вĕренекенсене малтан определенипе предложенилле определенисем çинчен аса илтерет, вăра тин, паянхи тема çине куçать.

Определени пулакан пăхăнуллă предложенин икĕ грамматика центрĕ: тĕп предложени тата пăхăнакан предложени пулать. Пăхăнакан предложени тĕп предло-

женипе **мĕнле, хăш, кам** союзла сăмахсемпе ҫыхăнать, тĕп предложенире ҫак союзсемпе мăшăр **ҫав, унăн** местоименисем пур. Пăхăнакан предложени тĕп предложенири **ҫав, унăн** определенисене пăхăнса тăрса, вĕсен пĕлтерĕшне анлăн уҫса парать. Тĕп предложенири **ҫав, унăн** местоименисем яланах хăйҫем те тепĕр сăмахшăн определени пулса тăраççĕ: вĕсем, тĕп предложенири подлежащие, дополнение ăнлантарса парса, определени пулаççĕ.

**Кам тăрăшса ĕҫлет, унăн ĕҫĕ ăнать.**

**Кам** — пăхăнакан предложенире подлежащи пулать, валах тĕп предложенипе ҫыхăнтарма пулăшать, ҫавăнпа ăна ҫыхăну сăмахĕ теççĕ.

**Кам тăрăшса ĕҫлет** — пăхăнакан предложени тĕп предложенири **унăн** местоимение пăхăнса ăнлантарса тăрать, **унăн** местоимени **ĕҫĕ** япала ятне ăнлантарать, унăн определенийĕ пулса тăрать. **Ĕҫĕ** — тĕп предложенин подлежащийĕ, **ăнать** — сказуемăйĕ. Кунта тĕп предложенипе пăхăнакан предложенире глагол-сказуемăйсем пĕр сăпатланакан формăрах, иккĕшĕ те кăтарту наклоненийĕнче, хальхи вăхăтра, 3-мĕш сăпатра, пĕрреллĕ хисепре, пурлă формăра тăраççĕ. Тĕп предложени пăхăнакан предложенири ĕҫĕн результатне кăтартса парать. Кивĕ конструкцине каласан, ҫапла пулать: **тăрăшса ĕҫлекенĕн ĕҫĕ ăнать.**

Анчах кунта хутлă предложени пулмасть: икĕ грамматика центрĕ те ҫук, пĕр сказуемăй кăна, подлежащи те ҫавăн пекех пĕрре ҫеç. Ҫавăнпа та **тăрăшса ĕҫлекенĕн** причастиллĕ сăмах майлашăвĕ ҫеç, вăл **ĕҫĕ** япала ячĕшĕн определени пулать.

Пăхăнакан предложенисем тĕп предложенипе **мĕнле, хăш** местоименисемпе ҫыхăнса тăма пултараççĕ.

**Эсир мĕнле кино курнă, эпир те ҫав кинона курăпăр. Эсĕ хăш хулана каятăн, эпĕ те ҫав хулана вĕренме каятăп.**

Илсе панă пăхăнуллă хутлă предложенисем пĕр ĕҫ хыççăн тепĕр ĕҫ пулассине кăтартаççĕ, ҫавна май тĕп предложенипе пăхăнуллă предложенисенчи глагол формисем те тĕрлĕрен вăхăтпа сăпата кăтартаççĕ. Пăхăнуллă предложенири ĕҫ тĕп предложенири ĕҫ умĕн пулса иртет. (Тĕслĕхсене танлаштарса пăхăр.)

Определени пулакан пăхăнакан предложени яланах тĕп предложени умĕн тăрать.

Вĕренекенсене çак темăна ăнлантарнă чух плакатпа, схемăпа усă курса ĕçлемелле, кайран хăйсене тĕслĕхсем туптармалла, творчество çыру ĕçĕпе синтаксисла разбор туса ирттерес пулать. Темăна ăнлантарнă чухне усă курмалли тĕслĕхсем.

1. Ашшĕ мĕнле ĕç тăвать, ывăлĕ те çав ĕçе хутшăнать. 2. Шкулта мĕнле пĕлӳ параççĕ, çавăн пек пĕлӳ вĕренекенсем илеççĕ. 3. Хăшин ячĕ тухать, çав çын малалла ыткăнать. 4. Кам хастар çапăçать кĕрешӳре, унăн ячĕ юлать ĕмĕре. 5. Хăш ĕçе ытларах кăмăллатăн, çав ĕçе юратса эс тăватăн. 6. Кам физзарядка тăвать ирсерен, ун сывлăхĕ ӳсет кунсерен. 7. Кам сана вĕрентет ыр ĕçе, ун ятне эс усран чĕрере.

Çак предложенисемпе ĕçленĕ май учитель вĕренекенсене тĕп предложенипе пăхăнакан предложение уйăрса илме вĕрентет. Содержани енчен илсен, тĕп предложени пăхăнакан предложенире пуçланă шухăша ăнлантарса пĕтĕмлетсе вĕçлет, пăхăнакан предложени мĕнле те пулин шухăша пуçарса парать кăна. Тĕп предложенире определени пулакан местоименисем яланах пулаççĕ, вĕсем **мĕнле? хăш? кам?** ыйтусем çине ответлеççĕ. Ытларах **çав, унăн, çавăн пек** местоименисенчен пулаççĕ, анчах местоименисем хăйсен умне лартнă ыйтăва татса параймаççĕ, вара ăна пăхăнакан предложени ăнлантарса парать.

Кунта схема туса ăнлантармалла.




Вĕренекенсем определени пулакан пăхăнуллă хутлă предложение дополнени пулакан пăхăнуллă хутлă предложенипе пăтраштарма пултараççĕ. Çавăнпа та учителĕн çак икĕ пăхăнуллă хутлă предложени хушшинчи уйрăмлăха палăртса вĕрентмелле. Кунта çак икĕ тĕслĕ хутлă предложенисене кăтартакан танлаштару таблиципе усă курмалла. Унтан дополнени пулакан пăхăнуллă хутлă предложенирен определени пулакан пăхăнуллă предложени тутарса пăхмалла.

Тĕслĕхрен: **Эсĕ «Кăра çилсем» повеçе вулатăн, çавна эпĕ те вулатăп.**

1.**Эсĕ мĕн вулатăн?** Ку дополнени пулакан пăхăнакан хутлă предложени. Унран определени пулакан пăхăнуллă хутлă предложени тăватпăр.

2. **Эсĕ мĕнле кĕнеке вулатăн, çав кĕнекене эпĕ те вулатăп.**

Учитель: Кунта хăшĕ тĕп предложени?

Вĕренекен: **Çав кĕнекене эпĕ те вулатăп** —тĕп предложени пулать.

Тĕп предложенири **кĕнеке** япала ятĕнчен пулнă дополнени умне **çав** местоимениреn тăракан определение кĕртсе лартмалла та определение пĕлтерекен пăхăнуллă предложени пулса тăрать.

Çак меслетпе ăнлантарнипе ачасем хăвăртрах тавçăрса илеççĕ. Килте 47 § вуласа ăнланма, 108-мĕш хăнăхтарăва тума парса ямалла. Унсăр пуçне 45-мĕшпе 46-мĕш §-сене те аса илме хушмалла: çитес сехетĕнче виçĕ пăхăнуллă хутлă предложение вĕренни тăрăх асăрхаттару диктанчĕ çыртармалла е синтаксисла разбор тумалла. Разбор сехетĕнче тĕрлĕрен творчество ĕçĕсем çыртарма юрать.

Пăхăнуллă хутлă предложенисене çак схема тăрăх разбор тумалла.

а) Тĕп предложенипе пăхăнакан предложенисене уйăрса парасси.

ă) Мĕнле пăхăнуллă предложени иккенне уйăрса илесси (подлежащи, дополнени, определени пулакан пăхăнуллă предложени).

б) Пăхăнакан предложени тĕп предложенипе мĕнле çыхăнура тăни (союзлă е союзсăр).

в) Пăхăнакан предложени тĕп предложенири хăш сăмаха ăнлантарса пăхăнса тăнине кăтартасси.

г) Пăхăнакан предложение пăхăнтаракан тĕп предложенири сăмах мĕнле член пулни.

д) Тĕп предложенипе пăхăнакан предложение уйрăм разбор тăвасси (кашни уйрăм предложениех мĕнле хутсăр предложени тĕсне йышăнни, тĕп членсемпе кĕçĕн членсене туптарни, сăмахсен хушшинчи çыхăнăвне палăртни т. ыт. те).

Разбора çырса та, сăмах вĕççĕн те тума пулать. Çырни тăрăх синтаксисла разбора тĕрлĕ меслетпе туса иртте-реççĕ.

1. Тĕп предложенипе пăхăнакан предложение аялтан уйрăм йĕрпе туртмалла: тĕп предложение пĕр йĕрпе, пăхăнакан предложение икĕ йĕрпе.

**Кам ĕçе юрататъ, вăл ĕçе тĕплĕ тăватъ.**

2. Тĕп предложенипе пăхăнакан предложени çине вĕсен ячĕсене кĕскетсе çырмалла.

**Кама эс хисеплетĕн, çав çынпа туслашатăн.**

3. Пăхăнуллă хутлă предложенисен схемине памалла.

**Эсĕ мĕнле кĕнеке вуларăн, эпĕ те çав кĕнекене вулатăп.**

Е кашни предложени пирки тĕплĕн çырса памалла. Пăхăнуллă хутлă предложени схемине пăхăнса йĕркипе çырса кăтартмалла.

## ОБСТОЯТЕЛЬСТВО ПУЛАКАН ПАХАНУЛЛА ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Вĕренекенсем предложенири обстоятельствăсем çинчен VI-мĕш класрах вĕреннĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та чи малтан çавна аса илмелле.

1. Предложенири мĕнле кĕçĕн члена обстоятельство теççĕ? 2. Пĕлтерĕш тăрăх мĕнле обстоятельствăсем пулаççĕ? 3. Обстоятельство пулакан сăмах предложенири хăш членпа ытларах çыхăнса тăрать? 4. Вырăн обстоятельстви мĕне пĕлтерет тата мĕнле ыйтусем çине ответлет? 5. Вăхăт обстоятельстви çинчен каласа парăр. 6. Пирке обстоятельстви мĕне кăтартать тата унăн ыйтăвĕсем? 7. Тĕллев обстоятельстви çинчен каласа парăр. 8. Мĕнлелĕх обстоятельстви пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен калăр.

Предложенири обстоятельство пулакан кĕçĕн членсем пекех обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем пур. Вĕсем те обстоятельство ыйтăвĕпех ыйтăнаççĕ, обстоятельство пекех глагол-сказуемăя пăхăнса ăнлантарса параççĕ, анчах уйрăмлăхĕ пурпĕр пысăк: уйрăм пăхăнуллă предложени тăваççĕ, тĕп предложенипеле тата союзла сăмахсемпе çыхăнса тăраççĕ, уйрăм интонаципе палăраççĕ, пĕр-пĕр анлă ĕçĕн малтанхи тапхăрне кăтартаççĕ, примыкани йĕркипе мар, предложенисен пăхăнуллă çыхăнăвĕпе çыхăнаççĕ, тĕп предложени умĕн тăраççĕ.

Обстоятельство пулакан кĕçĕн членсем пилĕк тĕслĕ, обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем тă-

хăр тĕслĕ пулаççĕ: 1) вырăна пĕлтерекеннисем, 2) вăхăта пĕлтерекеннисем, 3) мĕнлелĕхе пĕлтерекеннисем, 4) тĕллеве пĕлтерекеннисем, 5) тĕллевпе условие пĕлтерекеннисем, 6) условие пĕлтерекеннисем, 7) хирĕçлеве пĕлтерекеннисем, 8) пиркене, 9) следствине пĕлтерекеннисем.

Тăвату обстоятельство пулакан пăхăнуллă хутлă предложенисен: условие, тĕллевпе условие, хирĕçлеве тата следствине пĕлтерекеннисен мăшăрĕ çук, ыттисем предложенири обстоятельствăсемпе мăшăрлă.

Çакна таблицăпа кăтартса памалла.

| №№ йĕрки | Обстоятельство пулакан кĕçĕн членсем | Тĕслĕхсем | Обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|---|
| 1 | Вырăн обстоятельстви | Кăнтăр енчен çумăр килет. | Вырăна пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | *Ăçтан* çил вĕрет, *çавăнтан* çумăр килет. |
| 2 | Вăхăт обстоятельстви | Çуркунне Атăл тăрăх пăрахутсем çÿреме тытăнаççĕ. | Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | *Хăçан* Атăл пăрĕ каять, *çавăн чухне* пăрахутсем çÿреме тытăнаççĕ. |
| 3 | Мĕнлелĕх обстоятельстви | Ĕçлес кăмăл çавăн чухлĕ ÿссе пырать. | Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | *Мен чухлĕ* хавхаланса ĕçлетĕн, ĕçлес кăмăл *çавăн чухлĕ* ÿссе пырать. |
| 4 | Тĕллев обстоятельстви | Эпĕ шкулта лайăх пĕлÿ илме тăрăшатăп. | Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | *Лайăх пĕлÿ илес тесе,* эпĕ тăрăшса вĕренетĕп. |
| 5 | Пирке обстоятельстви | Спектакль пулнăран ачасем шкула нумай пуçтараннă. | Пиркене пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | Ачасем шкула нумай пуçтараннă, *мĕншĕн тесен паян кунта спектакль пулать.* |
| 6 | — | — | Условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | *Ват çын ялти урам тăрăх утса пырать пулсан,* пурте ăна сывлăх сунса пуç таяççĕ. |

| №№ йěрки | Обстоятельство пулакан кĕçĕн членсем | Тĕслĕхсем | Обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|---|---|
| 7 | — | — | Тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | *Тĕрĕс татăцилемлĕ вулама вĕренес тесен,* кашни кунах сасăпа кĕнекесем вуламалла. |
| 8 | — | — | Хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | В. И. Ленин виллĕ *пулин те,* ĕçхалăхшĕн тунă хаклă ĕçĕсем нихçан та манăçа юлмĕç. |
| 9 | — | — | Следствине пĕлтерекен пăхăнуллă предложени | Вĕренекенсем çуллахи вăхăтра хăйсен сывлăхне çирĕплетрĕç, *çавăнпа та хĕл каçипе пĕрре те чирлемерĕç.* |

**ВЫРАНА ПЕЛТЕРЕКЕН ПАХАНУЛЛА ПРЕДЛОЖЕНИ.**

Вĕрентес ĕçе вырăна пĕлтерекен обстоятельствăсем çинчен аса илнипе пуçласа ямалла, вырăн обстоятельствипе пĕлтерĕшне, ыйтăвне, сказуемăйпа çыхăннине кăтартса памалла. Ун хыççăн паянхи тема çине куçмалла та плакат çинчи тĕслĕхсемпе ĕçлеме тытăнмалла.

Тĕслĕхсем:

**1. Ăçта туслăхпа юлташлăх çирĕп, унта ĕç те ăнса пырать.** *(Турх.)* **2. Ăçта ĕлĕк çеçенхир пулнă, çавăнта халь тухăçлă тырпул паракан анасем. 3. Ăçта Чапаев çитсе тухать, унта тăшман пуçĕ арканать. 4. Ăçта кĕрешеççĕ çурхи шывпа, унта тискер çырсем çуках. 5. Кайăк хур çулĕ ăçталла, пирĕн çул та выртĕ çавăнталла.** *(Юрă.)* **6. Ăçта çак çулпуçĕ — унта çĕнтерӳ.** *(Элк.)*

Кашни предложение вĕренекенсене вулаттармалла, тĕп предложенипе пăхăнакан предложение тата вĕсем мĕнле союзпа çыхăннине туптармалла.

Пăхăнакан предложенисем малта тăраççĕ, вĕсем тĕп предложенипе **ăçта, ăçтан, ăçталла** союзла сăмахсемпе

çыхăннă, тĕп предложенире вĕсемпе мăшăр **çавăнта, унта, çавăнталла, унталла** наречисем пур. Пăхăнакан предложенисем вырăна пĕлтерекен обстоятельство пекех **ăçта? ăçтан? ăçталла?** ыйтусем çине ответлеççĕ, тĕп предложенири ĕç ăçта, мĕнле вырăнта пулнине кăтартаççĕ. Çавăнпа та вĕсене вырăна пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем теççĕ.

Материала ăнлантарнă чух учитель предложенисен çыхăнăвне кăтартакан схемăпа та паллаштарать. Çак темăна вĕреннĕ май ачасене творчество ĕçĕсем парас пулать. Тĕп предложенисем памалла та, вĕренекенсем вырăна пĕлтерекен пăхăнакан предложенисене хăйсем шухăшласа тупса çырччăр.

**1. Çавăнта тырпул лайăх ӳсет. 2. Унта çĕнĕ япаласем курнă. 3. Çавăнта вĕренӳ пахалăхĕ хăвăрт ӳсет. 4. Унта икĕ алла пĕр ĕç тивет. 5. Унта санăн юлташусем пулаççĕ. 6. Çавăнталла туристсем çул тытаççĕ. 7. Çавăнта вутă. 8. Шухăш-ĕмĕт те çавăнталла туртăнать.**

Вĕренекенсене вырăна пĕлтерекен пăхăнакан предложени хыççăн запятой лартассипе те паллаштармалла.

Тĕслĕхрен: **Ăçта Чапаев çитсе тухать, унта тăшман пуçĕ арканать.**

**«Ăçта Чапаев çитсе тухать»** сăмахсем хыççăн запятой лартмалла, малалла тĕп предложени **унта** наречипе пуçланать. Чарăну палли лартассипе пысăках мар хăнăхтару ĕçĕ туса ирттермелле.

Мĕн вĕреннине пĕтĕмлетмелле.

Киле парса ямалли ĕç: 49 §, 109-мĕш хăнăхтару. Разбор тумалли предложенисем:

1) Ăçта пăхнă — унта кайăк-кĕшĕк хĕвĕшет. *(Аслан.)*

2) Ăçта пăхнă, пур çĕрте те шурă юр йăлтăртатса выртать. *(Труб.)*

3. Ăçта çурхи хĕвел ӳкет, çавăнта юр час ирĕлет.

4. Витесенче те ăçта ан пăх—утă е улăм тăккаланчăкĕ. *(Арт.)*

5. Камăн куç ăçталла курать, унталла утма пуçларĕç. *(Кр. Асли.)*

### ВАХАТА ПЕЛТЕРЕКЕН ПАХАНУЛЛА ПРЕДЛОЖЕНИ.

Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложени темăна вĕрениччен вăхăт обстоятельствипе предложениллĕ членсем çинчен аса илмелле, вара тин çак темăна вĕренме тытăнмалла.

Вĕрентнĕ чухне çакна палăртмалла:

1. Пăхăнакан предложени тĕп предложени умĕн пулать, унпа **хăçан** союзла сăмахпа çыхăнса тăрать.

2. Тĕп предложенире союзла сăмахпа мăшăрлăн **çавăн чухне, ун чухне** наречисем пулаççĕ.

3. Пăхăнакан предложени тĕп предложенири ĕçĕн вăхăтне кăтартать, **хăçан?** ыйту çине ответлет.

4. Пăхăнакан предложени тĕп предложенири **çавăн чухне, ун чухне** сăмахсене ăнлантарса пăхăнса тăрать;

5. Пăхăнакан предложенири ĕç хыççăн тĕп предложенири ĕç пулса пырать.

**Хăçан тăрăшса ĕçлетĕн, çавăн чухне ĕç ăнăçлă пулса пырать.**

6. Пăхăнуллă предложенипе тĕп предложенири глагол-сказуемăйсем пĕр формăра та, тĕрлĕрен формăра та тăма пултараççĕ.

1. **Хăçан та хăçан эпир тăрăшса вĕренме пуçлатпăр, çавăн чухне эпир те вĕренӳри отличниксем пулатпăр.** 2. **Хăçан сана кĕнеке кирлĕ пулать, çавăн чухне ăна илме кил.** 3. **Хăçан çĕрле сывлăм ӳкет, çавăн чухне çумăр пулмасть.**

Темăна вĕрентме çакăн пек тĕслĕхсене илме юрать, вĕсене учитель малтанах плакат çине çырса хатĕрлет.

1. Хăçан симĕсленет уй-хир, вăрман,
   Çавăн чух чуну та савĕ сан.
2. Хăçан хавхаланать ĕçпе чĕрӳ,
   Çавăн чух эс тупăн çĕнтерӳ.
3. Хăçан тĕреклететĕн сывлăхна,
   Ун чух чир-чĕр ермест сана.
4. Хăçан ватта сума сăватăн,
   Çавăн чух хисеплĕ ят тупатăн.

Çак тĕслĕхсемпе усă курса, çĕнĕ темăна ăнлантармалла, тĕп предложение туптармалла, вăл мĕнле ыйту çине ответленине (кунта **хăçан?** ыйту çине ответлет), унтан пăхăнуллă предложение вулаттармалла, вăл тĕп предложенипе **хăçан** союзла сăмахпа çыхăннине палăртмалла, вĕсен çыхăнăвне схема туса памалла.

Малтанхи тĕслĕхе илер.

Пăхăнакан предложени — хăçан симĕсленет уй-хир, вăрман — тĕп предложенири **хăçан?** ыйту çине ответлесе пăхăнса тăрать, **çавăн чух** сăмаха ăнлантарса парать, тĕп предложенире подлежащи — **чуну**, сказуемăй — **савĕ**,

пăхăнуллă предложенире: **уй-хир, вăрман** — подлежащи, **симĕсленет** — сказуемăй.

Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложени хыççăн, тĕп предложени умĕн запятой лартмалла, союзла сăмахпа тĕп предложенири мăшăрлă наречисĕр калана чухне тире лартаççĕ.

**Çичĕçуллăх вĕçленет — çĕршывăм чи мала иртет.**

**Çанталăк сивĕтет — кӳлĕсем те шăнĕç.**

Урокра ăнлантарнине çирĕплетме тăрăшмалла. Вĕренекенсене хăйсене вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложенисем туптармалла. Вăл тĕслĕхсене синтаксисла разбор тутармалла, тĕп предложенипе пăхăнуллă предложение туптармалла т. ыт. те.

Творчество ĕçĕсенчен çакна сĕнме юрать: çак сехетре вĕреннĕ пăхăнуллă предложенисенчен вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем вăхăта пĕлтерекен деепричастисемпе пулаççĕ. Апла пулсан, пăхăнуллă предложенири глагол-сказуемăйран **-сан,-сен,-сассăн,-сессĕн** аффикслă деепричасти е причасти тумалла та ун çумне тĕрлĕрен хыççăмах хушмалла, пăхăнуллă предложенири **хăçан** союзла сăмаха, тĕп предложенири — **унпа** мăшăрлă наречисене кăларса пăрахмалла, вара вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельство пулать.

1. **Хăçан эпĕ почтăна килетĕп, çавăн чухне çĕнĕ хаçат-журналсем çырăнса илетĕп.**

**Почтăна килсен, эпĕ çĕнĕ хаçат-журналсем çырăнса илетĕп.**

2. **Хăçан вĕренӳ çулĕ вĕçленет, çавăн чухне эпĕ пионер лагерьне канма каятăп.**

**Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ хыççăн эпĕ пионер лагерьне канма каятăп.**

Çак тĕслĕхсенчен вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тумалла, ун хыççăн вăхăта пĕлтерекен анлă обстоятельствăсем тумалла.

1. Июнь уйăхĕ çитрĕ. Ачасем çырлана çӳреме пуçлаççĕ. 2. Çĕмĕрт çурăлнă вăхăтра сивĕ тăрать. Çĕмĕрт çырли йытчĕччиллĕ пулать. 3. Шкул ачисем вĕренӳ ĕçне ĕçпе таччăн çыхăнтараççĕ. Вĕсен пĕлĕвĕ çирĕп тата пур енлĕ пулать. 4. Вĕренекен васкамасăр тăрăшса çырать. Ун çырăвĕ те илемлĕ те тĕрĕс, чуна савăнтарать. 5. Эсĕ тăрăшса ĕçлетĕн. Ĕç те ăнать. 6. Çанталăк уяртать. Колхозниксем утă çулма тухаççĕ.

Туса кăтартни.

Хăçан июнь уйăхĕ çитет, çавăн чухне ачасем çырлана çӳреме пуçлаççĕ.

Июнь уйăхĕ çитсен, ачасем çырлана çӳреме пуçлаççĕ.

Киле парса ямалли ĕç: 50 §, 110-мĕш хăнăхтарăва туса килмелле.

## МĔНЛЕЛĔХЕ ПĔЛТЕРЕКЕН ПĂХĂНУЛЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

Малтан вĕренекенсенчен мĕнлелĕх обстоятельствипе мĕнлелĕхе пĕлтерекен предложенилле обстоятельство çинчен ыйтса аса илмелле.

а) Мĕнле обстоятельствăсене мĕнлелĕх обстоятельстви теççĕ?

ă) Мĕнлелĕх обстоятельстви ыйтăвĕпе пулăвĕ çинчен калăр.

б) Мĕнлелĕх обстоятельстви предложенири мĕнле сăмаха ăнлантарса паратъ?

в) Мĕнлелĕхе пĕлтерекен предложенилле обстоятельство мĕне кăтартать тата мĕнле ыйту çине ответлет?

г) Мĕнлелĕхе кăтартакан предложенилле обстоятельство мĕнлелĕх обстоятельствисенчен мĕнпе уйрăлса тăрать тата хăш енчен вĕсен пĕрпеклĕх пур?

Çак темăна ăнлантарма тĕслĕхсем памалла.

1. Эпир пурнăç çулĕпе мĕн чухлĕ маларах каятпăр, çулăм чĕреллĕ поэт Çеçпĕл Мишшин сăн-сăпачĕ çавăн чухлĕ ытларах курăнса, çуталса пырать. *(Ĕçх.)* 2. Физзарядка мĕн чухлĕ нумай тăватăн, çавăн чухлĕ ўт-пў тĕрекленсе пырать. 3. Социализмла обществăра рабочи мĕн чухлĕ нумайрах тавар тăвать, унăн ырлăх-пурлăхĕ те çавăн чухлĕ çўлерех пулать. *(Н. Хрущев.)* 4. Революцие мĕн чухлĕ ытларах халăх хутшăнать, революци те çавăн чухлĕ вăйлăрах пулать. Революци мĕн чухлĕ вăйлăрах, вăл çĕнтересси те çавăн чухлĕ шанчăклăрах. *(Элк.)* 5. Аслисем мĕнле хушаççĕ, эсĕ хушнă ĕçе çапла ту. 6. Производство техники мĕн чухлĕ ытларах лайăхланать, обществăлла ĕç тухăçлăхĕ çавăн чухлĕ хăвăртрах ўсет, ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланать. *(Н. Хрущев.)*

Мĕнлелĕх пĕлтерĕшлĕ пăхăнакан предложени тĕп предложенири ĕç мĕнле майпа пулнине кăтартать. Тĕп предложени пăхăнакан предложенири **мĕнле пулса пынă** ĕçĕн тухăçне, результатне кăтартать, мĕнле? мĕн чухлĕ? ыйтусем çине ответлет.

Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнакан предложенисем тĕп предложенипе **мĕнле, мĕн чухлĕ** союзла сăмахсемпе çыхăнса тăраççĕ. Çак союзла сăмахсемпе мăшăрлă пулса, тĕп предложенире **çапла, çавăн чухлĕ, çавăн пек** наречисем пулаççĕ.

Материала ăнлантарнă чух учитель схемăпа усă курать. Схемăра тĕп предложени малта пулать, пăхăнакан предложенийĕ — иккĕмĕш вырăнта.

Мĕн чухлĕ?

*Ӳт-пӳ çавăн чухлĕ тĕрекленсе пырать.*

↕

*Физзарядка мĕн чухлĕ нумай тăватăн,*

Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп предложени умĕн тăрать, вĕсен хушшине запятой лартса уйăраççĕ.

**Эпир мĕн чухлĕ тăрăшса ĕçлетпĕр, тимлесе тĕплĕн вĕренетпĕр, çавăн чухлĕ хăвăртрах коммунизм тума пулăшатпăр. 2. Мĕнле май килет, çавăн пек çăлас Чаккана.** *(Элк.)*

Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложение разбор тунă май çакна асăрхаттармалла: тĕп предложенипе пăхăнакан предложени пур чухне те сăпатлă предложени пулмасть, вăл сăпатсăр, паллă мар сăпатлă тата тулли мар предложени те пулма пултарать.

**Мĕнле май килет, çавăн пек çăлас Чаккана.** Кунта тĕп предложенире подлежащи çук, сказуемăй — çăлас, ку — сăпатсăр предложени пулать.

**Мĕнле тума хушаççĕ, ĕçе çапла тăватăн.** Ку мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложенине илсен, тĕп предложенире — **ĕçе çапла тăватăн** — подлежащи çук, анчах ăна сказуемăй урлă çăмăллăнах тупма пулать: вăл — **эсĕ** пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшĕпе çӳрет, пăхăнакан предложенире те подлежащи çук, сказуемăй **хушаççĕ,** камсем хушни паллă мар, çавăнпа ăна паллă мар сăпатлă предложени тетпĕр. Ку темăна ачасене вĕрентнĕ май çакăн пек творчествăллă ĕçсем пама пулать: 1) Хутсăр предложенисене пĕрлештерсе мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тутармалла. 2) Пăхăнуллă предложенисем памалла, вĕренекенсем тĕп предложенисене тупса çыраççĕ. 3) Вĕренекенсене ку темăпа хăйсене тĕслĕхсем туптармалла та пулăвĕ çинчен калаттармалла. 4) Синтаксисла разбор туса ирттермелле. 5) Чарăну паллисем лартма хăнăхтарас тĕлĕшпе пысăк мар çыру ĕçĕ çыртармалла. 6) Пĕр-пĕр произведение вулаттармалла та ку таранччен вĕреннĕ пăхăнуллă предложенисене туптармалла, вĕсене

разбор тутармалла. 7) Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисенчен мĕнлелĕхе кăтартакан предложенилле обстоятельство тутармалла. 8) Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисемпе усă курса, пысăк мар калав çырма хăнăхтармалла. Ку тĕлĕшпе çакăн пек темăсем сĕнме юрать:

1) Эпир мĕнле вĕренетпĕр. 2) Сад пахчине мĕн чухлĕ пахатăн. 3) Аслисем епле вĕрентеççĕ. 4) Тăван чĕлхе мĕн чухлĕ пуян та çивĕч т. ыт. те.

Киле валли ĕç: 51 §, 111-мĕш хăнăхтару.

Ку таранччен вĕреннĕ темăсемпе асăрхаттару çыру ĕçĕ туса ирттермелле, чарăну палли лартма хăнăхтарса пымалла. Ку диктанта валли уйрăм сехет кирлĕ пулать. Учитель диктант умĕн пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен ыйтать, вĕсенче чарăну палли лартасси çинчен калаттарать, темиçе предложени разбор тутарать. Ун хыççăн асăрхаттару диктанчĕ çырасси çинчен пĕлтерет, диктант текстне вуласа парать. Текст:

1. Аçта халăх ирĕклĕ пурăнать, çавăнта пултарулăх хăвăрт ӳсет. 2) Хăçан яла çитсе ӳкетĕн, ун чухне çĕнĕ хыпар пĕлетĕн. 3) Аçта этем мĕлки кăна,—унта е бомба вăркăнать, е вĕçсĕр пуля çапăнать. *(Элк.)* 4) Аçта йыш — унта вăй. *(Турх.)*.5) Хăш енчен сасă илтĕннĕ, сынсем çав еннелле пăхса тăнă. 6) Мĕн чухлĕ ĕç йывăрланса пырать, çавăн чухлĕ пысăк хаваслăхпа ĕçлес килет. 7) Мĕнле килнĕ, çапла кайĕç. 8) Эсĕ япалана ăçтан илетĕн, çавăнта кайса хур. *(Харл.)* 9) Хăçан çырма-çатрана йывăç лартатăн, çавăн чухне çурхи шывсем ăна çĕмĕрме пăрахĕç. 10) Кĕнекесем йышлă вулатăн — тавракурăма хăвăрт анлăлататăн. 11) Аçта йĕп, унта çип, теççĕ. 12) Мĕн шыранă — çавă тупăнчĕ. *(Шел.)*

## ТĔЛЛЕВЕ ПĔЛТЕРЕКЕН ПĂХĂНУЛЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

Малтан тĕллеве пĕлтерекен обстоятельствăсемпе тĕллеве пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем çинчен аса илмелле, вĕсен пĕлтерĕшне, пулăвне, ыйтăвĕсене, мĕнле сăмахпа çыхăнса тăнине ачасенчен ыйтмалла. Вĕсем малтанхи темăна пĕлеççĕ пулсан, тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем çинчен хăвăртрах ăнланаççĕ.

Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенире калакан ĕçе мĕнле тĕллевпе, мĕнле туртăмпа тунине, унăн сулăмне кăтартса параççĕ. Вĕсен ыйтăвĕсем: мĕншĕн? мĕн тума?

Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп пред-

ложенипе **тесе** союзлă сăмахпа çыхăнса тăрать, пăхăнуллă предложенире **тесе** союз умĕн хушу наклоненинчи 1-мĕшпе 3-мĕш сăпатри глагол-сказуемăй е пулас причасти тăрать.

Темăна ăнлантарнă чух çакăн пек тĕслĕхсем пама юрать.

1. Мире сыхласа хăварас тесе, совет халăхĕ хытă кĕрешет. 2. Совет Союзĕ, Германи мирпе демократи çулĕпе аталанса пытăр тесе, нумай çул хушши çине тăрса тăрăшрĕ. *(Н. Хрущев.)* 3. Çичĕ çуллăх плана тултарас тесе, эпир мĕнпур вăя хурса ĕçлетпĕр. 4. Ачисене вăратас мар тесе, Михаля краççын çутмасăрах хуранти сивĕ яшкана сыпса выртрĕ. *(Труб.)* 5. Социализмла обществăра, унăн мĕнпур членĕсен ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерме пурлăх-ырлăхсен хисепсене нумайлатас тесе, производствăна план тăрăх ӳстерсе пыраççĕ. *(Н. Хрущёв.)*

Учитель малтанхи предложение илет те унпа тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени пĕлтерĕшне, пулăвне, çыхăнăвне кăтартать. Кунта тĕп предложени — **совет халăхĕ хытă кĕрешет.** *Мĕншĕн? Мĕн тума? Мĕнле тĕллевпе?* ыйту лартма пулать. Унăн тĕллевне пăхăнакан предложени кăтартать. Тĕп тĕллевĕ — мире сыхласа хăварас тесе. **Тесе**—тĕп предложенипе çыхăнтаракан союзла сăмах, вăл авалхи **тет** глаголран пулнă, **калать** тенине пĕлтерет. Çав глагол, **-се** аффикс йышăнса, деепричастирен союзла сăмах пулса тăнă. Тĕп предложенире подлежащи — **совет халăхĕ**, сказуемăй — **кĕрешет**. Хăй уйрăммăн илсен— сăпатсăр предложени, тĕллеве пĕлтерет, **сыхласа хăварас** — хутлă ят сказуемăйран пулнă. Пăхăнакан предложени тĕп предложенири сказуемăй ĕçне тĕллев енчен ăнлантарса пăхăнса тăрать, çавăнпа та обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисен шутне кĕрет. Вĕсен çыхăнăвне схемăпа кăтартса памалла.

Мире сыхласа хăварас **тесе,**

↑ мĕншĕн? Мĕн тума?

| Совет халăхĕ хытă **кĕрешет.** |
|---|

Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп предложенири **кĕрешет** глагол-сказуемăя ăнлантарса пăхăнса тăрать, уншăн анлă обстоятельство пулать.

Çак майпа пур предложение те пăхса тухса ăнлантармалла, юлашкинчен çакна асăрхаттармалла: **тесе** союзлă

сăмаха урăх формăсенчи сказуемăйсем хыççăн калаççĕ пулсан, ун пек предложенисем тĕллеве çеç мар, пиркене те пĕлтерeççĕ.

Мучар пĕркун Михаляран, *наччаслăха михĕ кирлĕ тесе*, михĕ илсе кайрĕ. *(Труб.)* Иванĕ кашнинчех юлташне тĕртсе, *кулса ярас мар тесе,*—пуçне чикет, хăй хĕп-хĕрлĕ пулса каять. *(М. Г.)* Ентĕ, *вĕсем пуян тесе,* ял кулли пулас çук-ха. *(Илп.)* Тухтар Палюк çуккипе, хăй килни *пушăлла пулчĕ тесе,* куç-кĕретĕнех ўпкелешме тытăнчĕ. *(Илп.)*

Урăх çын сăмахлă предложенисенче урăх çын сăмахĕсене тўрĕ мар каланă чухне вĕсем хыççăн **тесе** сăмаха лартаççĕ; ун пек чухне вăл тĕллеве те, пиркене те кăтартмасть, унпа тўрĕ мар каланă урăх çын сăмахне автор сăмахĕпе çыхăнтарма кирлĕрен усă кураççĕ.

1. Кусем кулаксене пĕтерес, колхоз тăвас тесе çунса тăракан активистсем. *(Труб.)* 2. Ентĕ вăл хăй ăсĕпе чăнласах та Селимене ўкĕте кĕртетĕп тесе шутларĕ. *(Илп.)* 3. Еçе хăвăр кăна явăçăр, йĕркине пĕлсе тăвăр, тесе асăрхаттарчĕ Кантюк. *(Илп.)*

Урăх çын сăмахĕсем хыççăн **тесе** сăмаха автор сăмахĕсемпе çыхăнтарнă çĕрте усă кураççĕ.

«Патша кирлĕ мар, улпут çĕрĕсене туртса илмелле» тесе калаçаççĕ, тет. *(Элк.)* «Тыттарасчĕ-ха кусене иккĕшне»,— тесе, Михаля тўрех ял Совечĕн çурчĕ патнелле утрĕ. *(Труб.)* «Пĕркун Мучар пĕтернĕ, халĕ те çавах элеклесе тыттарса килмерĕ-ши мана?»—тесе тавçăрса илчĕ Михаля. (Труб.)

Тесе деепричасти хăйне пăхăнса тăракан сăмахсемпе пĕрле фразеологилле сăмах майлашăвĕ те тăвать.

Ўтĕм çĕрте çĕрсе пĕтсессĕн те,
Ятăм çĕрмĕ тесе шанатăп. *(Шелепи.)*
Хуллен, пĕчĕккĕн колхозран тухас тесе çĕмĕрлекен хĕрарăмсем лăпланчĕç. *(Труб.)* Эпĕ ĕçе каяс тесе килтĕм.
Саккун тесе, хăпса килетчĕç
Тиексемпе урядниксем...*(Я. Ухс.)*

Темăна вĕрентнĕ хыççăн хăнăхтару ĕçĕ туса ирттермелле. Панă тĕслĕхсенчен вĕренекенсем тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисене **тесе** сăмахпа тĕл пулакан ытти пĕлтерĕшлĕ предложенисенчен уйăрса илеççĕ те разбор тăваççĕ. Т ĕ с л ĕ х с е м:

1. Çутă сахалтарах ÿктĕр тесе, ăна кăмака питлĕхĕпе таянтарса пÿлнĕ. *(Илп.)* 2. Ачасем çынран кая ан пулччăр тесе, вĕсене çĕтĕк те хура çÿретмерĕ. *(Илп.)* 3. Уссине тăкăн, инкекне пуçтарса пĕтерейĕмĕн тесе, Элентей Кантюк патне çĕр хуттипе мар, кăнтăр çутипе кайса килме шут тытрĕ. *(Илп.)* 4. Ку тата мĕн? тесе кăшкăрса ячĕ Пугачев, куçĕсене хĕмлентерсе. *(Пушк.)* 5. Генералтан çыру илсессĕнех, вăл пит майлăн, Герасим атте Оренбургран тĕлĕнмелле хыпар илнĕ тесе суйкаласа, Василиса Егоровнăна килтен ăсатнă. Василиса Егоровна çав самантрах пуп майри патне кайса килнĕ, вăл вара, Иван Кузьмич канаш панипе, Машăна та, ăна пĕччен кичем ан пултăр тесе, хăйпе пĕрле илсе кайнă. *(Пушк.)* 6. Юр çăвиччен пÿрт лартса кĕресчĕ тесе, Мучар хыпаланса çÿрет. *(Труб.)* 7. Е вăл мана, кăмака çинче выртать тесе, çын шутĕнчен кăларасшăн-и? *(Уяр.)* 8. Курăнмалла пултăр тесе, юри кăмака хĕрринерех пырса выртрăм. *(Уяр.)* 9. Çăкăрне шывпа ислетсе кăштах çирĕ те, лăш хуйхăрса: ах, ку татăка çисе ярас мар-ха тесе, каялла кушилне чиксе хучĕ. *(И. Мучи.)* 10. Тарçисем, Чышка каллех пуç тупса парас тесе, чылайччен тăрмашнă та, анчах ĕçĕ çур пуслăх та тухайман. *(И. Мучи.)* 11. Кроватьне чĕриклеттерес мар тесе, ерипен тăрса ларчĕ те вăл, тĕттĕмре хыпашласа, пукан çинчен кипкипе шăлаварне илсе тăхăнкаласа ячĕ. *(И. Мучи.)* 12. Пусмăртан хăтăлнă ĕçхалăхĕ çутă курчĕ тесе савăнатăп. *(Шелепи.)* 13. Чухăнсем, вăтамсем — колхоза кĕрес текенсем тата нумай-ха, анчах, килте арăмсемпе калаçса татăлман тесе, çырăнмасăр тăчĕç. *(Труб.)* 14. Хĕрарăм пуçпа пушшех нуша курмалла пулĕ тесе шухăшларĕ Анушки. *(Труб.)* 15. Кунĕ хăвăртрах иртгĕр тесе, вăл витери тислĕкне тасатрĕ. *(Илп.)* 16. Çапах та, сăнаса пăхмалăх тесе, лапам вырăна вунă гектар çине кукуруза акса хăварчĕç. 17. Эпĕ, хамăн пысăк чĕреллĕ юлташсен сăмахĕсене калас тесе, Пугачĕв çине хăюллăн пăхса тăратăп. *(П.)*

Килте тумалли ĕç. 52 §, 113-мĕш хăнăхтару. Е Трубина Марфи çырнă «Мучар» повеçĕнчен тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем (пилĕкшер тĕслĕх) тупса çырса килмелле, условие пĕлтерекен обстоятельствăсене аса илмелле.

## УСЛОВИЕ ПЕЛТЕРЕКЕН ПАХАНУЛЛА ПРЕДЛОЖЕНИ.

Иртнĕ урокра вĕреннине тĕрĕслемелле те условие пĕлтерекен обстоятельствăсем çинчен аса илмелле.

1. Условие пĕлтерекен обстоятельствăсен пĕлтерĕшĕпе пулăвĕ çинчен калăр.

2. Кун йышши предложенисемпе пурте пĕрер предложени тупăр та ăсра разбор тăвăр.

Учитель, условие пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем çинчен вĕренекенсем пĕлнине шута илсе, малалла условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем çине куçать.

Темăна ăнлантарма çакăн пек таблица илет.

| Условие пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем | Условие кăтартакан пăхăнуллă предложенисем |
|---|---|
| 1. Пурте тăрăшса ĕçлесен, коммунизма та час çитен. | Пурте тăрăшса ĕçлеççĕ пулсан, коммунизма та час куратăн. |
| 2. Тăшман парăнмасан, ăна пĕтереççĕ. | Тăшман парăнмасть пулсан, ăна пĕтереççĕ *(М. Г.)* |
| 3. Ача-пăча вут-кăварпа алхассан, инкек те тупăн ăнсăртран. | Ача-пăча вут-кăварпа алхасать пулсан, инкек те тупăн ăнсăртран. |
| 4. Колхозсем нумай тырпул тусан, çĕршывăм пулĕ пит пуян. | Колхозсем нумай тырпул тăваççĕ пулсан, çĕршывăм пулĕ пуринчен пуян. |

Вĕренекенсене таблицăри тĕслĕхсене хăйсен ăшĕнче вуласа тухма хушмалла, тĕслĕхсемпе паллаштармалла. Унтан вĕренекенсенчен пĕрне малтан сулахай енчи пĕрремĕш предложение вулаттармалла, мĕнле предложени пулнине ыйтмалла, тулли мар разбор тутармалла. Унтан сылтăм енчи тĕслĕхе вулаттармалла, вĕсен хушшинчи пĕрпеклĕхпе уйрăмлăхне танлаштарса пăхтармалла. **Пурте тăрăшса ĕçлесен, коммунизма та час çитен.**—Мĕнле майпа коммунизма час çитен?

— **Пурте тăрăшса ĕçлесен**—условие кăтартакан предложенилле обстоятельство.

Çак условие кăтартакан предложенилле обстоятельстăран условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тума пулать-и? Мĕнле майпа?

Условие кăтартакан предложенилле обстоятельствинчи сказуемăй вырăнче тăракан **ĕçлесен** деепричастие хальхи е иртнĕ вăхăтри глагола куçармалла та ун хыççăн **пулсан** союзла сăмах хушмалла, вара условие кăтартакан пăхăнуллă предложени пулса тăрать. Ун ыйтăвĕсем: хăçан? мĕн тусан? мĕнле условире? мĕнле майпа?

**Пурте тăрăшса ĕçлеççĕ пулсан, коммунизма та час куратăн.**

— Мĕнле условире коммунизма та час куратăн?

— **Пурте тăрăшса ĕçлеççĕ пулсан** — ку условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложени: подлежащи — **пурте,** сказуемăй — **ĕçлеççĕ, пулсан** — тĕп предложенипе çыхăнтаракан союзла сăмах. Тĕп предложени — **коммунизма та час куратăн.**

Условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп предложенири ĕç хăçан, мĕнле майпа тата мĕнле условисенче пулнине уçса парать. Çак меслетпех ытти предложенисене те танлаштарса ăнлантарса памалла.

Пăхăнуллă предложени пулăвĕнче çакна та манмалла мар: условие пĕлтерекен пăхăнакан предложенисен сказуемăйĕ япала ятĕнчен те, паллă ятĕнчен те, причастирен те тăма пултарать.

Пурте пĕр пек тăрăшса ĕçлес пулсан, эпир çулталăкри плана тата хăвăртрах тултармалла.

Пирĕн ялăн, савнă ялăн
Хирĕпе иртес пулсан,
Ылтăн çăлтăрлă мухтавлă
Ĕç геройсене куран. *(Юрă.)*

Кирук сывах пулсан, манăн мĕншĕн кулянас. *(Кăлк.)* Мел пулсан, чĕреме çăлса парăттăм сана. *(Кăлк.)* Хура Муççа шухăшĕ кайăк пулсан, вăл ун умĕнче вĕçсе пынине пур çын та курнă пулĕччĕ. *(Аслан.)* Кирек хăçан та, кирек ăçта та алла тытнă ĕç пĕр тикĕс ăнса пырать пулсан, этем чунне хăват кĕрет. *(Аслан.)* Революци пулсассăн, Колчака та вырăнтан кăларнă та пăрахнă. *(Тăхти.)*

Вĕренекенсене ăнлантарнă чухне схемăпа та усă курма пулать.

**Çĕршывăм пулĕ** пуринчен пуян,

Мĕн тусан?

| колхозсем **хăватлă тырпул туса илеççĕ пулсан.** |
|---|

Вĕреннине çирĕплетес тĕлĕшпе ăнлантару диктанчĕ туса ирттермелле, условие пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси çинче чарăнса тăмалла.

Условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенире **пулсан** союзла сăмах хыççăн запятой лартмалла.

Пирĕн умра вара чăннипех те аслă художник пулсан, вăл хăйĕн произведенийĕсенче революцин хăшпĕр паллăрах енĕсене те пулин кăтартса памалла пулнă. *(Ленин.)* 2. Куçу курмасть пулсан, ун çинчен хăлху та илтес çук сан. *(Кăлк.)* 3. Çакна май прокат туса кăларасси çичĕ çул хушшинче пĕтĕмĕшпе 53—63 процент ӳсет пулсан,

трубасем туса кăларасси икĕ хут ытла, хурçă листи туса кăларасси чылай ÿсет. *(Н. Хрущёв.)*

Условие пĕлтерекен пăхăнакан предложени тĕп предложени варринче тăнă чух ăна икĕ енчен те запятойпа уйăраççĕ.

Халĕ империализмла агрессорсене отпор пама тата, вĕсем тĕнче вăрçи пуçарса яма хăяс пулсан, вĕсене парăнтарма пултаракан питĕ пысăк вăйсем пур. *(Н. Хрущёв.)* Саламби, Музăна малтанхи хут тĕл пулсан, çакнашкал сăнлă чиперкке хĕр хăй ăçта курнине аса илме тăрăшрĕ. *(Арт.)*

Условие пĕлтерекен пăхăнакан предложени **пулсан** союзла сăмахсăр тăнă чухне тĕп предложени умĕн тире лартаççĕ.

Карташ çумласа пĕтрĕ — пĕр вăхăта канар-ха апла. *(Кăлк.)*

Условие пĕлтерекен пăхăнакан предложенире **пулсан** союзла сăмах пур пулсан та, тĕп предложени шухăшне пăхăнакан предложени витĕмлĕн хирĕçленĕ чухне тире лартаççĕ.

Çавăнта кăштах тăман пулсан — пырса лекеттĕмĕр тăшман аллине. *(В. Алент.)*

Синтаксисла разбор туса ирттермелли тĕслĕхсем.

Нимĕçсен икĕ государствине пĕрлештересси çинчен калаçса татăлма май паракан урăх çул пулсан, эпир ун майлă пулма та хатĕр. *(Н. Хрущёв.)* США-ри производство шайне пирĕн экономика ÿсĕмĕн виçи вырăнне илеççĕ пулсан, çакна чи вăйлă аталаннă капитализм экономикипе танлаштарса пăхма çапла тăваççĕ. *(Н. Хрущёв.)* Иртнĕ вăхăтра, сăмахран, пирĕн пĕтĕм çĕршывра тырă хатĕрлемелле пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ РСФСР-ăн Çурçĕр-хĕвеланăç районĕсенче, Балтика тăрăхĕнчи республикăсенче, Белоруссири нумай районсенче тата Украинăн Полесье пайĕнче тырă сутăн илмесен те юрать. *(Н. Хрущев.)*

Çунат пулас пулсан, кун каçипе Мариç паян вăрмана вунă хут вĕçсе кайса килнĕ пулĕччĕ. *(Уяр.)* Чаплă утăм пулас пулсан, сана лартса тĕнче хĕрне кайăттăм. *(Уяр.)* Манăн икĕ чĕре пулас пулсан, Мариç, пĕрне эпĕ сана кăларса парăттăм. *(Уяр.)* Сурпан çыхмасăр ĕмĕр ирттернĕ тăлăх хĕрарăм та çапла калать пулсан, Саламбин вара мĕншĕн шанчăка çухатас-ха? *(Арт.)* Хăй пуян та çынна пăхăнмасăр пурăнман пулсан, вăл, тен, çапăçма та сиксе тăнă пулĕччĕ, хĕрÿ кăмăла та тутанса пăхнă пулĕччĕ. *(Тург.)* Куçусемпе çапла хăйăрса пăхатăн пулсан — авă çул, эс — ирĕкре! *(Кр.-Асли.)* Хăраса тăрас пур — çакăн пек çула та тухмалла пулман, килте, кăмака хыçĕнче шăрчăк чĕриклетнине итлесе лармалла пулнă. *(Кр-Асли.)* Вырăнĕ-вырăнĕпе çĕрнĕ чикмек урлисем те пулкалаççĕ, пĕр-пĕр вырăнта хуçăлас-тăвас пулсан, шахта тĕпне çитиех персе анма пулать. *(Кр.-Асли.)* Халех, çакăнтан анмалла пулсан, Ваççук çурăмĕ çинче сахалтан та икĕ пăт

ытларах хут çыххи — мĕнле анас пирки ирĕксĕрех шухăшламалла. (*Кр. Асли.*) «Пымастăн пулсан — ĕçĕ пĕтнĕ»,— хăтăрса пăрахрĕ Васçук, чĕрре кĕрсе. (*Кр.-Асли.*) Пушăлла таврăнас пур — унта кайма килĕшмен те пулăттăм. (*Кр.-Асли.*)

## ТĔЛЛЕВПЕ УСЛОВИЕ ПĔЛТЕРЕКЕН ПАХАНУЛЛА ПРЕДЛОЖЕНИ.

Темăпа паллаштариччен вĕренекенсенчен тĕллеве тата условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем çинчен ыйтмалла. Çак темăсен материалне вĕренекенсем ăнланнă пулсан, учитель çĕнĕ тема çине куçать, унăн пĕлтерĕшĕпе пулăвĕ тата уйрăмлăхĕ çинче чарăнса тăрать.

Тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем пĕр вăхăтрах икĕ пĕлтерĕше кăтартаççĕ: тĕллеве тата условие. Еçĕн тĕллевне ытларах пăхăнакан предложени палăртать, тĕп предложени вара хăйĕн пĕлтерĕшĕпе те, глагол-сказуемăй кӳлепи енĕпе те условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложение аса илтерет, çавна май пĕр предложенирех икĕ пĕлтерĕшĕ те сыхланса юлаççĕ. Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенипе танлаштарсан, тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенири ĕç тĕллевĕ вирлĕрех, çирĕпрех палăрать, ăна ун пек пулма **тесен** союзла сăмах пулăшать. **Тесен** союзла сăмаха, тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенири пекех, хушу наклоненийĕн пĕрремĕшпе виççĕмĕш сăпатсенчи глагол-сказуемăй е пулас причастирен пулнă сказуемăй çумне хушмалла.

**Нумай пĕлес тесе, вĕренекенсем нумай вулаççĕ. Нумай пĕлес тесен, вĕренекенсен нумай вуламалла.**

Тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенири тĕп предложени пĕлтерĕшĕпе те, кӳлепипе те условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенири тĕп предложени пекех пулать. Танлаштарса пăхар.

**Нумай пĕлес пулсан, вĕренекенсен нумай вĕренмелле. Нумай пĕлес тесен, вĕренекенсен нумай вĕренмелле.**

Икĕ предложенишĕн те тĕп предложени: **вĕренекенсен нумай вĕренмелле,** пулмалли причастирен пулнă сăпатсăр предложени — вĕсен уйрăмлăхне кунта курмастпăр. Вĕсен умне пăхăнакан предложенисем хушăнсан кăна предложенисем пĕлтерĕшĕпе те, пĕтĕмĕшле форми енчен улшăнаççĕ: пĕри — условие, тепри — тĕллевпе условие кăтартса параççĕ. Кун йышши предложенисен ыйтăвĕ те урăхла. Вĕсем *мĕн тăвас тесен?* ыйтупа ыйтăнаççĕ.

**Пурнăç майне кўрес тесен, пĕр сум çумне теприне хушмалла, пĕр пĕрчĕрен çĕр пĕрче çити ĕрчетме пĕлмелле, тепренчĕк те сая ан кайтăр.** *(Илп.)*

Кун йышши предложенисем çинчен ăнлантарнă чухне вĕренекенсене тĕллеве тата условие пĕлтерекен пăхăнулла предложенисемпе танлаштарса кăтартмалла, вĕсем хушшинчи пĕрпеклĕхпе уйрăмлăхне уçса памалла, кунтах схема та туса памалла. Схема валли çак предложение илер.

**Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли программăна ăнăçлăн пурнăçлас тесен, пĕтĕм парти, пĕтĕм совет халăхĕ пысăк вăй хурса ĕçлени кирлĕ.** *(Н. Хрущёв.)*

тĕп предложени
*Пĕтĕм парти, совет халăхĕ пысăк вăй*
*хурса ĕçлени кирлĕ*
мĕн тăвас тесен ↑

*Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли программăна ăнăçлăн пурнăçлас тесен.*

Тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнакан предложенири **тесен** союзла сăмах хыççăн запятой лартаççĕ.

**Потреблени хатĕрĕсем çителĕклĕ пулччăр тесен, производство хатĕрĕсем кирлĕ...** *(Н. Хрущёв.)*

Кун йышши пăхăнакан предложени тĕп предложени варринче тăнă чух ăна икĕ енчен те запятой лартса уйăрмалла.

1. Çавăнпа та, чăнлăха пăсса кăтартас мар тесен, никам та темĕнле «йывăрлăхсем» çинчен калама пултараймасть. *(Н. Хрущев.)* 2. Ялти хисеплĕ учитель ятне илес ачасен, хресченсем умĕнче шанчăклă туссем пулас тесен, портфель кăна çĕклесе çўреме мар, ытти ĕçсене те пĕлмелле пулнă. *(Я. Ухс.)*

Çак темăна урокра ăнлантарнă хыççăн учитель вĕренекенсене хăнăхтару ĕçĕ парать. Ак, тĕслĕхрен, вал тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем илет, вĕренекенсем вĕсенчен тĕллевпе условие пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложенисем туса калаççĕ.

1. Тырăсене уйран вăхăтра пуçтарса кĕртес тесе, колхозниксем тăрăшса ĕçлерĕç. 2. Колхозниксем, пысăк тухăçлă кукуруза туса илес тесе, хĕлле агрокружокра вĕренчĕç, çулла тăрăшса ĕçлерĕç. 3. Сывлăх çирĕп

пултăр тесе, эпир кашни кунах физзарядка тăватпăр. 4. Вут-кăвартан сыхланмалла пултăр тесе, вăл çурт тавра тирексемпе йăмрасем лартса тухнă. 5. Вĕренӳ ăнăçлă пултăр тесе, ачасем киле панă ĕçе тăрăшса тăваççĕ.

Темăна вĕренсе пĕтернĕ хыççăн кĕскен аса илмелле, вĕренӳре юлса пыракансенчен ыйтмалла, материала ăнланнипе ăнланманнине тĕрĕслемелле; вăхăт юлсан, вĕсене хăйсене тĕслĕхсем туптармалла е синтаксисла разбор тутармалла.

Киле валли ĕç: 53 §, 114-мĕш хăнăхтару.

## ХИРĔÇЛЕВЕ ПĔЛТЕРЕКЕН ПĂХĂНУЛЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

Хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем çинчен вĕренме тытăниччен условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложенипе хирĕçлеве пĕлтерекен сыпăнуллă хутлă предложенисем çинчен аса илмелле. Вĕсем çинчен аса илни çак темăна лайăхрах ăнланма пулăшать.

Хирĕçлеве пĕлтерекен сыпăнуллă хутлă предложени пĕлтерĕш тĕлĕшĕпе çакăн йышши предложенипе çывăх тăрать, лешĕ те, ку та хирĕçлеве пĕлтерет: малтанхи предложенири шухăша иккĕмĕш предложени вирлĕн хирĕçлет.

**Шурă юр çунă, анчах никам та çуна кӳлсе тухман-ха.**

**Шурă юр çунă пулин те, никам та çуна кӳлсе тухман-ха.**

Анчах çак икĕ предложени хушшинче тытăмĕ тĕлĕшĕнчен уйрăмлăх пысăк: пĕрремĕш предложение — сыпăнуллă хутлă предложени тетпĕр, кунта икĕ пĕр тан предложенисене **анчах** союз сыпăнтарса çыхăнтарать, иккĕмĕшĕ — хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложени, кунта — **никам та çуна кӳлсе тухман-ха** — тĕп предложени, вăл хăй умĕнче тăракан — **шурă юр çунă пулин те** — пăхăнакан предложение тытса тăрать, вĕсен çыхăнăвне **пулин те** союзла сăмах йĕркелесе тăрать. Сыпăнуллă хутлă предложенире хирĕçлекен союз **анчах** иккĕмĕш хутсăр предложение кĕрет пулсан, пăхăнуллă предложенире **пулин те** союз пĕрремĕш предложени тытăмĕнче тăрать. Сыпăнуллă хутлă предложенире пĕрремĕш предложение каланă хыççăн малалла тата иккĕмĕш предложени пуррине интонаци улшăнни— юлашки сыпăкĕ çинче сасă çӳлелле çĕкленсе илни

катартса парать, хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенире вара союзла сăмах **пулин те** пурри малалла тата тепĕр предложени — тĕп предложени пулассине тӳрех палăртать: кунта калама тытăннă шухăш вĕçленменни уççăн курăнать. Пĕлтерĕш тĕлĕшĕпе иккĕшĕ те малтанхи предложени шухăшне хирĕçлеççĕ.

Халь малалла условие пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложенипе танлаштарса пăхар. Паллах, содержани енчен хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени условие пĕлтерекеннипе нимĕнле пĕрпеклĕхне те курмастпăр. Мĕн енчен вĕсем пĕр-пĕринпе çывăх-ши?

Форми енчен пĕр тĕпрен пулнă союзла сăмахсемпе çывăх. Условие пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе **пулсан** союзла сăмахпа çыхăнса тăрать. Хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе **пулсан та, пулин те** союзла сăмахсемпе çыхăнать, кунта союзла сăмахсем çумне вăйлатакан татăк **-та, -те** хушăннипе пулнă. **Пулсан, пулин** союзла сăмахсен пулăвĕ пирки çакна каламалла: **пул** — глагол тĕпĕ çумне деепричасти аффиксĕ **-сан** хушăннипе условие пĕлтерекен деепричасти пулнă, вăл халĕ союзла сăмах вырăнче, **пул** — глагол тĕпĕ çумне виççĕмĕш сăпатри килĕшӳ наклоненин аффиксĕ **-ин** хушăннипе пулнă, ку та союзла сăмах пĕлтерĕшне йышăнать.

Учитель вĕренӳ теми çине куçнă май ачасем умне таблица çакса парать, унта çакăн пек предложенисем.

1. Совет шкулĕ пысăк çитĕнӳсем тунă **пулсан та,** вăл коммунизм тăвас ĕçĕн ыйтăвĕсенчен юлса пырать, унăн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. *(Н. Хрущев.)* 2. Питĕ йывăр **пулсан та,** парăнма юрамасть. 3. Ваççук, вунултăра çеç **пулин те,** хăйне хăй тыткалама пĕлет. *(Кр.-Асли.)* 4. Шеркей Нямаçран самай аслă **пулсан та,** малтан хăй ăна сывлăх сунчĕ, алă тăсрĕ. *(Илп.)* 5. Государствăсем социаллă строй тĕлĕшĕнчен пĕр пек мар пулин те, халăхсен пĕр-пĕринпе мирлĕ пурăнас пулать... *(Н. Хрущёв.)*

Учитель плакатри пĕрремĕш предложение ачасене вулаттарать те унăн содержанине ыйтать. Унтан тĕп предложенипе пăхăнакан предложение туптарать. Тĕп предложение аялтан пĕр йĕр, пăхăнакан предложение — икĕ кукăр-макăр йĕр туртаççĕ. Хутлă предложение кĕрекен кашни хутсăр предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсене тупса разбор тăваççĕ.

Тĕп предложени — **вăл коммунизм тăвас ĕçĕн ыйтăвĕсенчен юлса пырать,** пăхăнакан предложени — **совет шкулĕ пысăк çитĕнÿсем тунă пулсан та;** çак икĕ предложение **пулсан та** союз çыхăнтарса тăрать. Пăхăнакан предложени шухăшне тĕп предложени вирлĕн хирĕçлет. Пăхăнакан предложени **совет шкулĕ пысăк çитĕнÿсем туни** çинчен пĕлтерет. Апла пулсан, халĕ Совет шкулĕ коммунизм тăвас ĕçĕн ыйтăвĕсене тивĕçтермелле пек, анчах тĕп предложени пăхăнакан предложенири шухăша хирĕçлет-мĕн. Çавна май вăл хăй шухăшне малтанхи шухăша хирĕçле йĕркелет. **Пулин те, пулсан та** союзлă сăмахсем пăхăнуллă предложенири калаканăн малтан пĕлтерекен шухăшĕ хирĕçле вĕçленессине уççăн асăрхаттараççĕ. Вăл шухăш хирĕçле çаврăнса каяссине çак союзла сăмахсем палăртрĕç ĕнтĕ. Ăна эпир интонацирен те уççăнах туйса илетпĕр: **пулсан та, пулин те** союзла сăмахсем умĕнче тăракан глагол-сказуемăйсене каланă чух сасă анса çитмех тытăнать, анчах çак союзла сăмахсем çинче кăшт хăпарать те тÿрех татăлать, малалла хирĕçле шухăшлă предложени пулассине палăртать. Чăннипех те, малалла тĕп предложени хирĕçле, тепĕр майлă шухăша пĕлтерет. Тĕп предложени *мĕн тусан та?* ыйту çине ответлет, ăна пăхăнакан предложени кăларса тăратать. Пăхăнакан предложени тĕп предложенири «юлса пырать» хутлă глагол-сказуемăя ăнлантарса парса пăхăнса тăрать.

| | | |
|---|---|---|
| Совет шкулĕ пысăк çитĕнÿсем тунă | пулсан та | вăл коммунизм тăвас ĕçĕн ыйтăвĕсенчен юлса пырать, унăн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. (Н. Хрущев.) |

Темăна ăнлантарнă май чарăну палли лартас пирки те калас пулать. Хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнакан предложенири **пулин те, пулсан та** сăмахсем хыççăн, тĕп предложени умĕн запятой лартмалла.

1. Павăл култарма тăрăшса вуларĕ пулин те, çамрăксем пурте шăпланса итле пуçларĕç, Лена сĕтел умне пырса тăчĕ. *(Арт.)* 2. Экономика вăйлă аталаннă пулсан та, США-ра продуктсем туса кăлармалли тата валеçмелли капитализмла юрăхсăр меслет пуç пулса тăрать. *(Н. Хрущёв.)*

Хирӗҫлеве пӗлтерекен пӑхӑнакан предложени тӗп предложени ӑшӗнче пулсан, ӑна икӗ енчен те запятойпа уйӑрмалла.

Аркадий, хӑй юлташӗнчен ытларах калаҫать пулсан та, ялан тенӗ пекех аяла пулса юлать. *(Тург.)* 2. Хӗвелӗ пур, пӗчӗкҫӗ кӑна курӑнать пулин те, ҫапах калама ҫук йӑлтӑртатса, чӗпӗтсе пӗҫертет. *(Тург.)* 3. Мӗне юрӑхлӑ пулӗ-ха вӑл, ман служба патшалӑхшӑн кирлӗ пулсан та, эпӗ хамӑн службӑна пӑрахсан? *(Пушк.)*

Вӗренекенсене творчество ӗҫӗ памалла. Тӗп предложенисем пур, пӑхӑнакан предложенисене хӑйсем тупса ҫырччӑр.

1. Эпӗ виҫӗ ют чӗлхене вӗрентӗм. 2. К. В. Иванов чи паха произведенисем ҫырса хӑварнӑ. 3. Ман атте художник пулайман. 4. Вӗсен паттӑрла ӗҫӗсене совет халӑхӗ манмӗ. 5. Совет ҫӗршывӗ коммунизм тӑвать. 6. Вӑл Чӗмпӗрти чӑваш шкулне аллӑ ҫул хушши ертсе пырать.

Е ӑнлантару диктанчӗ туса ирттермелле. Тӗслӗхсем:

1. Тем тӗрлӗ паха йывӑҫ пулсан та, этем алли тивмесӗр унран юрӑхлӑ продукци пулмасть. *(«Ялав»)* 2. США-ра тӗрлӗ таварсем ытлӑн-ҫитлӗн пулсан та, миллионшар ҫынсем ӗҫ тупаймаҫҫӗ, чухӑн пурӑнаҫҫӗ, вӗсем хӑйсене пурӑнма чи кирлӗ япаласем те илме пултараймаҫҫӗ. *(Н. Хрущев.)* 3. Ку конвертсем ӑшӗнчи ҫырусене Коля пӑхмасӑр калама пӗлет пулин те, кӗҫӗр, чӗре ҫуннӑ чух, вӗсене тепӗр хут алла илчӗ. *(Арт.)* 4. Ҫын хуйхине ҫын пӗлмест, ӑш темле ҫулӑмпа ҫунать пулин те, тӗтӗм тухни курӑнмасть. *(Илп.)* 5. Пеття, вӑйпитти ҫын пулсан та, хӑраса ӳкрӗ. *(Кр.-Асли.)* 6. Ҫичӗ ют пусмӑрӗнче кун курмасӑр тарӑхса пурӑннӑ пулсан та, вырӑс халӑхӗ ҫӑлнине пула, чӑваш хӑй пайтине ҫухатман, чӗлхине те, йӑлине те, ӗҫченлӗхне те, таса та ҫивӗч ӑсне те хастарлӑн усранӑ, упранӑ, малашне вара ҫавсене усраса ҫеҫ мар, чунтан пикенсе хӑй кун-ҫулне ӳстерме те аталантарма ҫунатланса ӗмӗтленет. *(Илп.)* 7. Ҫерҫи, аялтан-аялтан вӗҫет пулин те, ҫӗр ҫинче мӗн пулса иртнисене кӑвак пӗлӗтри ӑмӑрткайӑк чухлӗ курмасть. *(Я. Ухс.)*

Хӑшпӗр чухне хирӗҫлеве пӗлтерекен союз вырӑнне **тесен те** союзлӑ сӑмах тӗл пулать.

Театрта пьеса курас **тесен те,** ачасен, вӑрра ҫӳренӗ пек, педагогсене систермесӗр хулана вӑрттӑн тухса каймалла пулнӑ. *(Я. Ухс.)*

К и л т е  т у м а л л и  ӗ ҫ: 55 §, 116-мӗш хӑнӑхтару тата пирке обстоятельствипе (16 §) пиркене пӗлтерекен предложенилле обстоятельствӑсем (72 §) ҫинчен аса илме хушса ямалла. «Эпӗ йывӑҫ лартни» темӑпа сочинени ҫырма хушмалла, унта ку таранччен вӗреннӗ пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисене кӗртсе ҫырма каламалла.

## ПИРКЕНЕ ПЕЛТЕРЕКЕН ПӐХӐНУЛЛӐ ПРЕДЛОЖЕНИ.

Çак темӑна ӑнлантарас умӗн пирке обстоятельствипе пиркене пӗлтерекен предложенилле обстоятельствӑсем çинчен аса илмелле. Вӗренекенсем вӗсене аса илнӗ май пирке обстоятельстви пӗлтерӗшӗпе ыйтӑвӗ пиркене пӗлтерекен предложенилле обстоятельствӑпа çывӑх тӑнине асӑрхаççӗ. Çавӑнпа пӗрлех паянхи темӑна ӑнланса илме ансатланать.

Пирке обстоятельствипе пиркене пӗлтерекен предложенилле обстоятельство иккӗшӗ те пӗр тӗп пӗлтерӗше кӑтартаççӗ: ӗç мӗн пирки пулнине, унӑн сӑлтавне уçса параççӗ, иккӗшӗ те глагол-сказуемӑя ӑнлантарса пӑхӑнса тӑраççӗ. Пӗри глагола пӗр-ик сӑмахпа ансӑрӑн ӑнлантарса парать, тепри ӑна анлӑн, уйрӑм предложенисемлӗ сӑмахсемпе уçса кӑтартать.

**Савӑннипе Сетнерин чӗри кӑлт-кӑлт сикет-çке.** *(К. Ив.)* **Ӑнӑçлӑ ӗçпе савӑннипе Иван Моторин татах хавхаланса ӗçлерӗ, çитӗнӳсем турӗ.**

Иккӗшиншӗн те ыйтӑвӗсем пӗррех: **мӗншӗн? мӗн пирки?**

Пиркене пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенисем те пӗлтерӗшпе ыйтӑвӗ енчен пирке обстоятельствипе те, пиркене пӗлтерекен предложенилле обстоятельствӑпа та пӗр евӗрлӗ, анчах, предложенисен тытӑмӗ (структури) енчен илсен, вӗсем пачах расна.

Пирке обстоятельствипе пиркене пӗлтерекен предложенилле обстоятельство тухупа пӗрлелӗх падежӗнче хытса ларнӑ формӑра причастипе наречирен е причасти майлашӑвӗпе хыççӑмахран пулаççӗ пулсан, пиркене пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенисем икӗ тулли сӑпатлӑ предложение **мӗншӗн тесен** союз пӑхӑнтарса çыхӑнтарнипе пулнӑ. Тӗп предложени малти вырӑнта тӑрать, ӑна пӑхӑнса таракан предложени — иккӗмӗш вырӑнта, вӑл тӗп предложенипе **мӗншӗн тесен** союзпа çыхӑнать.

**Мӗнпур çӗршывсенчи халӑхсем атом хӗçпӑшалне сӑнаса пӑхас ӗçе чарма ыйтаççӗ, мӗншӗн тесен çав сӑнавсем çӗр атмосферине сиенлӗ радиоактивлӑхпа пӑсаççӗ.** *(Н. Хрущёв.)*

— Мӗн пирки атом хӗçпӑшалне сӑнаса пӑхас ӗçе чарма ыйтаççӗ?

Тӗп предложенин ыйтӑвӗ çавӑн пек. Ана пӑхӑнакан предложени хуравлать: **мӗншӗн тесен çав сӑнавсем çӗр**

**атмосферине сиенлĕ радиоактивлăхпа пăсаççĕ.** Çапла, пăхăнуллă предложени чарма ыйтнин сăлтавне уçса парать, ăнлантарать. Тĕп предложенипе пăхăнуллă предложенире тĕп членсемпе кĕçĕн членсем те пур, вĕсем, уйрăммăн илсен, калуллă, тулли, сăпатлă предложенисем пулса тăраççĕ. Тĕп предложенире подлежащи — **сăнавсем, пăсаççĕ** — сказуемăй. Ытти пăхăнуллă предложени пек пиркене пĕлтерекен пăхăнуллă предложени малти вырăнта тăмасть, вырăс чĕлхинчи пекех, тĕп предложени хыççăн тăрать. Çакна уйрăммăнах палăртса хăвармалла.

Кун йышши пăхăнуллă предложенире **мĕншĕн тесен** союзсăр пуçне **ма тесен, ма тесессĕн** союзсем те пулаççĕ.

> Чечеклен, Узбекистан!
> Узбексем — пире тăван,
> **Ма тесессĕн** узбексем—
> Совет çĕрĕн çыннисем. *(Хус.)*

Ку тепĕр тытăмлă пиркене пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложенисем. **Узбексем — пире тăван** — тĕп предложени. **Ма тесессĕн узбексем — совет çĕрĕн çынnисем** — пиркене пĕлтерекен пăхăнуллă предложени. Кунта **ма тесессĕн** союз **мĕншĕн тесен** союзпа пĕр виçерех тăрать. **Ма тесен** союз калаçу чĕлхинче ытларах тĕл пулать.

Темăна ăнлантарнă чухне учитель схемăпа та усă курать.

Т ĕ с л ĕ х:

**Коммунизмла юхăма нимĕн те пĕтерсе лартма пултараймасть, мĕншĕн тесен çав юхăма пролетариатпа ĕççыннисен класс кĕрешĕвĕ пуçласа янă.** *(Н. Хрущёв.)*



Çак предложение разбор туса ӑнлантарнӑ май учитель чарӑну палли лартас пирки те каласа паратъ. Пиркене пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложенире тӗп предложени хыççӑн, **мӗншӗн тесен** союз умӗн запятой лартмалла.

**Советсен планӗ пурнӑçа кӗрет, мӗншӗн тесен вӑл революци хыççӑн иртнӗ хӗрӗх çул хушшинче пухнӑ опыт çинче никӗсленсе тӑрать.** *(Н. Хрущев.)*

Пиркене пӗлтерекен пӑхӑнуллӑ предложени тӗп предложенипе союзсӑр çыхӑннӑ чухне двоеточи лартмалла.

**Пӳрт умӗнче çын нумай: килнӗ вӗсем туй курма.** *(К. Ив.)* **Купӑс сасси çывхарсах килет: кӗвви уçӑмлӑ илтӗнме пуçларӗ.** *(Арт.)* **Салампишӗн яланах тупӑшма пултаратӑп: нихçан та ятне ярас çук вӑл.** *(Арт.)*

Темӑна вӗрентнӗ май синтаксисла разбор туса иртермелле, ӑна çак йӗркепе тумалла.

1. Мӗнле пӑхӑнуллӑ предложени. 2. Тӗп предложенипе пӑхӑнакан предложение уйӑрса кӑтартасси. 3. Тӗп предложени мӗнле ыйтупа ыйтӑнать? 4. Пӑхӑнакан предложени тӗп предложенипе мӗнле союзпа çыхӑннӑ. 5. Пӑхӑнакан предложени тӗп предложенири хӑш сӑмаха ӑнлантарса пӑхӑнса тӑрать. 6. Тӗп предложенипе пӑхӑнакан предложенири тӗп членсемпе кӗçӗн членсене тупса памалла. 7. Хутлӑ предложение кӗрекен кашни хутсӑр предложение малалла уйӑммӑн-уйӑммӑн разборламалла.

Разбор валли тӗслӗхсем.

1. Павел Петровичпа вӑл текех тавлашмарӗ, мӗншӗн тесен лешӗ вӑл пур чухне хӑйне хӑй ытлашши аристократла тыткаларӗ. *(Тург.)* 2. Липӑн та шухӑшӗсем сапаланчӑк, мӗншӗн тесен Ятман килетӗп тенӗ çӗртенех килеймерӗ. *(Турх.)* 3. Халӗ К. Ивановӑн Чӗмпӗртен тухса каяс килмест, мӗншӗн тесен чӑваш çырулӑхӗпе культурин çулне уçса пама урӑх ниçта та вырӑн пулман. *(Я. Ухс.)* 4. Çӑмӑл бетонран тунӑ изделисемпе анлӑрах усӑ курмалла, мӗншӗн тесен вӗсем ыттисенчен усӑллӑрах. *(Н. Хрущев.)* 5. Эпир пӗтӗм тӗнчери миршӗн кӗрешетпӗр, мӗншӗн тесен эпир çынна вӑл мӗнле наци çынни пулнине, вӑл мӗн тӗслӗ ӳтлине тата мӗнле тӗне ӗненнине пӑхмасӑр хаклатпӑр. *(Н. Хрущев.)*

К и л е  в а л л и  ӗ ç: 58 §-а вуласа ӑнланмалла, 117-мӗш хӑнӑхтарӑва туса килмелле.

## ĔÇ ХЫÇÇАН МЕН ПУЛНИНЕ (СЛЕДСТВИЕ) ПĔЛТЕРЕКЕН ПĂХĂНУЛЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

Ĕç вĕçлевне (следствине) пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисемпе вĕренекенсем пуçласа паллашаççĕ. Ытти пăхăнуллă хутлă предложенисене вĕрентнĕ чухне пĕр пĕлтерĕшлĕ обстоятельствăсемпе предложенилле обстоятельствăсем çине таянса ĕçлеме тивет. Ĕç вĕçлевне, следствине кăтартакан пăхăнуллă хутлă предложенисене вĕрентнĕ чух ун пек никĕс çине таянса ĕçлеме çук. Çав никĕс (основа) çуккипе вĕрентӳ материалне ăнлантарма йывăртарах.

Учитель ку урокра хăй ĕçне иртнĕ урокра вĕреннĕ материала аса илнипе пуçласа ярать. Унтан çĕнĕ тема çине куçать. Вĕрентмелли т ĕ с л ĕ х с е м:

1. Хĕвеланăç Германие атом бази туса хураççĕ, çавăнпа та вăрçă тухас пулсан, унти халăх пуринчен малтан инкек курма пултарать. *(Н. Хрущев.)* 2. Вăрçă пуçлас шутпа ăссăр ĕçсем тума майсем ытларах пулаççĕ, çавăнпа халăхсен яланах сыхă пулмалла. *(Н. Хрущев.)* 3. Шупуççынни вĕреннĕ чухнех сăвăсем çырма юратнă, çапла вара Ивановпа Шупуççынни чăваш литературин çулне уçса ярас пирки калаçма тытăнаççĕ. *(Я. Ухс.)* 4. Пирĕн агрокружока çӳреме пуçлăр, вара эсир чăхчĕпсене, выльăх-чĕрлĕхсене пăхма вĕренетĕр. 5. Вăраххăн тăкăнать пилеш, вара илем юлмасть вăрманăн. *(Алка.)* 6. Вĕренекен çине тăрса уроксене хатĕрленнĕ — пĕлӳ унăн çирĕп пулнă.

Плакатри тĕслĕхсемпе ĕçлесси. Панă тĕслĕхсенчен çакна куратпăр: ĕç вĕçлевне, тухăмне (следствие) пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложенисем тĕп предложенири ĕç мĕнле вĕçленнине, мĕнпе пĕтнине кăтартса параççĕ. Тĕп предложени ĕç пуçланса аталаннине, унăн малтанхи пĕр тапхăрне пĕлтерет. Çав ĕç мĕнпе вĕçленнине, унăн тухăмне, пĕтмĕшне (результатне), пăхăнуллă предложени каласа парать. Ку ĕçĕн иккĕмĕш пайĕ вĕçленӳ тапхăрĕ. Калакан ĕçĕн малтанхи пуçламăшпе аталану тапхăрне мĕнле пулса иртнĕ, çавăн пек пĕлтерет. Ана валли вăл пурнăçри пулса иртекен фактран илсе парать.

**Хĕвеланăç Германие атом бази туса хураççĕ.** Калакан пурнăçри çак факта мĕнле пулнă, çавăн пек пĕлтерет, хăйĕнчен вăл нимĕн те хушмасть, пĕтĕмлетӳпе тишкерӳ

те тумасть. Анчах пăхăнуллă предложение йĕркеленĕ чухне вăл пурнăçри факта мар, хăйĕн пĕтĕмле шухăшне пĕлтерет. Калакан пурнăçран илнĕ малтанхи факт мĕнпе вĕçленнине е вĕçленессине лайăх курса тăнăран çакăн пек пĕтĕмлетӳ (вывод) тăвать. Ана эпир ĕç вĕçлевне, тухăмне пĕлтерекен пăхăнуллă предложенире куратпăр. **Çавăнпа та, вăрçă тухас пулсан, унти халăх пуринчен малтан инкек курма пултарать.**

Ку ĕç пурнăçра пулман-ха; калакан, малтанхи факта пĕтĕмлетсе, çакăн пек шухăш, вывод патне пырать. Кунпа вăл пулма пултарассине пĕлтерет. Ĕç вĕçлевне пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисем тĕп предложенипе **çавăнпа, çавăнпа вара, вара** союзсемпе çыхăнса тăраççĕ. Тĕп предложени малта пулать, ун хыççăн — пăхăнуллă предложени. Ĕç вĕçлевне пĕлтерекен пăхăнуллă предложени, тĕп предложенири глагол-сказуемăя пăхăнса, ăна ăнлантарса парать. Предложени схеми:

Вăрçă пуçлас шутпа ăссăр ĕçсем тума майсем ытларах пулаççĕ.

↑ çавăнпа

халăхсен яланах сыхă пулмалла.

Çакна та палăртмалла: хăшпĕр ĕç вĕçлевне пĕлтерекен пăхăнуллă предложени пурнăçри факта мĕнпе вĕçленнине е тепĕр фактпа пĕтнине кăтартса парать.

1. Чĕмпĕрти чăваш шкулне кĕнĕ чух конкурса таçти чăваш ачисем те килсе тулнăччĕ, çавăнпа экзаменра чылаях тăрăшмалла пулчĕ. *(Я. Ухс.)* 2. Пĕр шухăш ăна иртенпех канăç памарĕ, çавăнпа каннă-канман вăл уя тухса утрĕ. *(Арт.)*

Материала ăнлантарнă чух вĕренекенсене çакна та асăрхаттармалла: вара ĕç вĕçлевне пĕлтерекен пăхăнуллă предложенири союза сыпăнуллă хутлă предложенипе хутсăр предложенире тĕл пулакан наречипе е татăкпа пăтраштарма кирлĕ мар. **Вара** союз сыпăнуллă хутлă предложенисенче ытларах тĕл пулать.

**Вара эсĕ пирĕн пата кил!** Ку предложенире **вара** тени **кайран** наречи вырăнĕнче тăрать.

Степановран уйрӑлсассӑн,
Юманов ман сывларӗ ассӑн,
Вара пӗр ансӑр сукмакпа
Ҫул тытрӗ ҫивӗч шухӑшпа. *(Алка.)*

Кунта та вара сӑмахпа **кайран е ун хыҫҫӑн** наречи вырӑнне усӑ курнӑ.

**Вара** — вӑйлатакан татӑк пулни.

**Юрласса юрлать вара — чӑн-чӑн артист тейӗн.**

**Тӗттӗм сирӗлсен вара, пӑхатӑн та куратӑн, ҫутӑ ире чӗрепе, чунпа туятӑн.** *(Долг.)*

Ҫакӑнтах чарӑну палли лартас пирки те каласа хӑвармалла.

Тӗп предложени хыҫҫӑн, пӑхӑнакан предложенири союзсем умӗн запятой лартмалла.

1. Иван Российйӑри революци мӗнле пынине пӗлесшӗн ҫунать, ҫавӑнпа вӑл ыйту хыҫҫӑн ыйту парать. *(Элк.)* 2. Пӗр ӗмӗтсӗр пуян ҫук ҫын анине туртса илнӗ, ҫавӑнпа вара вӗсен хушшинче урӑм-сурӑм тавлашу тухса кайнӑ. *(Я. Ухс.)* 3. Кӑмпи пултӑр — кунтӑкӗ тупӑнӗ. 4. Пурте вӑранчӗҫ, пурин те хаваслӑх, пурте ҫӗнелчӗҫ — ҫӗршыв савӑнать! *(Элк.)* 5. Ҫак урокра вӗреннине ҫирӗплетес тесен, синтаксисла разбор е ҫыру ӗҫӗ туса irттермелле.

Синтаксисла разбор валли т ӗ с л ӗ х с е м:

1. Халӑхӑн йышлӑ пайӗ юлашки ҫулсенче хӑйне ирӗке кӑларассишӗн кӗрешме ҫав тери пысӑк хӑвӑртлӑхпа хутшӑнса пырать, ҫавӑнпа та, ҫак енчен пӑхсан, тӗнчери кӗрешӗвӗн татӑклӑ ҫӗнтерӗвӗ мӗнле пулас пирки нимӗнле иккӗленӳ те пулма пултараймасть. *(Н. Хрущев.)* 2. Вӑйсен ҫӗнӗ шайлашӑвӗ витӗрех курӑнса тӑракан пулӗ, вара чи хытӑ ҫамкаллӑ империалистсем те социализм лагерьне хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫласа яма ҫуккине ӑнланӗҫ. *(Н. Хрущев.)* 3. Ку вырӑнта ӗлӗк Емӗлкке ятлӑ этем вилнӗ, ҫавӑнпа ӑна халӑх хушшинче Емӗлкке варӗ тенӗ. *(Я. Ухс.)* 4. Андрей алӑка тимӗр ҫекӗлпе ҫаклатрӗ, алӑк хӑлӑпӗ айне лумне чиксе хучӗ, вара каллех унка ярса тытрӗ. *(Н. Остр.)* 5. Ҫак ыйхӑсӑр каҫ вӑл мӗн туйса irттернине сӑмахпа каласа пама ҫук, мӗншӗн тесен телей мӗн иккенне сӑмахпа каласа та, ӳрнепе кӑтартса та ӑнлантараймӑн: ӑна пурнӑҫра хӑвӑрӑн курса пӑхас пулать. *(Арт.)* 6. Юлташсем хирӗҫ калаҫрӗҫ пулин те, виҫҫӗмӗш кунне каҫалапа разведкӑна хам тухса кайрӑм. *(Уяр.)* 7. Ҫав кран вӗҫӗнчи пӗчӗк урапана ҫеҫ тытса пӑрмалла — крантан насус кӗпҫинчен пӗрӗхекен шыв пек вӑйлӑ шыв юххи персе тухать. *(Элк.)* 8. Саккине вара, кӗрешекенсене курма лайӑх пултӑр тесе, карта хӗрринех вырнаҫтарчӗҫ. *(Илп.)* 9. Атя, атте, килӗшер, вара анне те ман ҫине кӑшкӑрма пӑрахӗ. *(Н. Остр.)* 10. Станцирен пирӗн яла вӑтӑр ҫухрӑма яхӑн, ҫавӑнпа та колхозран атте мана хирӗҫ лашапа тухнӑ. *(Арт.)* 11. Ҫынни хӑй ниҫта та курӑнмасть, анчах ӗҫӗ пур ҫӗрте те палӑрать. *(Арт.)* 12. Советсем хӑйсен ӗҫне ӑнӑҫлӑрах туса пыма пултарччӑр тесен, вӗсен волокитапа бюрократизма татӑклӑн пӗтерсе пымалла, ӗҫҫынниcен ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме ытларах тӑрӑшмалла. *(Н. Хрущев.)*

Пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен вĕренсе пĕтернĕ хыççăн пĕтĕмлетӳ урокĕ туса ирттермелле. Пĕтĕмлетӳ урокĕ вăл анлă темăна вĕреннĕ тăрăх пĕтĕçтерсе кăтартма пулăшать. Вĕреннĕ темăра хăш пайĕ чи кирлипе сахалтарах кирлине, ытти темăран мĕнпе уйрăлса тăнине, синтаксисри уйрăмлăхне, чарăну паллисем лартассине палăртмалла.

Пĕтĕмлетӳ урокне эвристикăлла меслетпе те, урăх меслетсемпе те ирттерме пулать. Вĕренекенсен ĕçлес тимлĕхне ӳстерес тесен, паллах, эвристикăлла меслетпе ытларах ирттерме кирлĕ.

Пĕтĕмлетӳ урокĕнче çакăн пек тĕп ыйтусем çинче чарăнса тăмалла.

1. Пăхăнуллă хутлă предложени сыпăнуллă хутлă предложенирен мĕнпе уйрăлса тăрать? 2. Пăхăнакан предложени тĕп предложенипе мĕнле майпа çыхăнать? 3. Тĕп предложенипе пăхăнакан предложени пĕр-пĕринчен мĕнле уйрăлса тăраççĕ? 4. Пăхăнуллă предложенисем пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен мĕнлисем пулаççĕ? 5. Обстоятельствăна кăтартакан пăхăнакан предложенисем предложенилле обстоятельствăсенчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ? 6. Пăхăнуллă хутлă предложенисенче мĕнле чарăну паллисем пулаççĕ? 7. Пăхăнуллă хутлă предложенисенчи союзсем, çыхăну сăмахĕсем миçе тĕп пая пайланаççĕ. 8. Пăхăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисен тĕсĕсем.

Пĕтĕмлетӳ урокĕнче учитель çав ыйтусем çинче чарăнса тăрать, вĕренекенсене материала лайăхрах ăнланса илме пулăшать. Синтаксисла разбор та туса ирттерет. Вĕренекенсем темăна мĕн чухлĕ ăнланнине пĕлме разбор пулăшать.

Пĕтĕмлетӳ урокне урăх меслетпе ирттерме те пулать. Учитель вĕренекенсене хăйсен тĕллĕн ĕçлемелли ĕç парать, ачасем ĕçе тунă хыççăн тĕрĕслет те е вĕренекенсене пĕтĕмлеттерет, е хăй пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен пĕтĕмлетсе калать.

Тĕрĕслев çыру ĕçĕ çыртармалла.

Çак çыру ĕçĕ тăрăх учитель вĕренекенсем пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисене тĕрĕс лартма пĕлнипе пĕлменнине шута илет.

Тĕрĕслев çыру ĕçĕнчи йăнăшсене тишкерсе тухмалла, çав йăнăшсене пĕтерес тĕлĕшпе малашнехи уроксенче те тăтăшах ĕçлемелле.

## Тĕрĕслев диктанчĕсем валли текстсем:

### Паттăр салтак.

Ирхи хĕвел мĕнле çутатса ячĕ, унăн ылтăн хĕлхемĕсем сăрт тӳпине çапла çитсе ăшăтрĕç. Аçта хĕвел çути çитет, унта вăл ырлăхпа сиплĕх кӳрет. Сăрт тӳпинче те çапла пулчĕ пулас:. çĕрлехи çапăçури снаряд çурăлнипе ăнсăр пулнă Геннадий Ушаков ăшă çапнипе пуçне çĕклерĕ. Пуçĕ хĕссе ыратрĕ пулин те, вăл тăрса ларчĕ, тавраналла пăхса çаврăнчĕ, мĕншĕн тесен хăй ăçта выртнине пĕлесшĕн пулчĕ. Вăл ăçталла кăна пăхмарĕ, анчах пĕр чĕрĕ çынна та курмарĕ. Унта-кунта вилесем выртнине çеç асăрхарĕ.

— Аçта ман юлташсем? Аçта Петька, Илюш? — шухăшларĕ вăл.

Çавăнтах Геннадий, ура çине тăрас тесе, çĕкленме пикенчĕ — пуленкепе çапнă пек,. çавăнтах персе анчĕ. Каллех вăл тăнне çухатрĕ.

Чылай вăхăт иртсен, унăн хăлхине ют сасăсем илтĕнсе кайрĕç. Геннадий куçне уçса пăхать — сăрт çинелле виçĕ фашист пĕшкĕнсе çĕкленеççĕ. Шухăшласа тăма вăхăт çук ĕнтĕ. Вăл епле автомата çавăрса илет, çаплах тăшман çине шатăртаттарма пуçлать. Çавапа çулнă пек, лешсем виççĕшĕ те тĕшĕрĕлсе анаççĕ.

Унтан каллех темиçе тăшман салтакĕ курăнса кайрĕç.

«Аçта совет салтакĕ пур, унта тăшман валли вырăн çук!» — терĕ те Ушаков, автоматран кĕрлеттерме тытăнчĕ. Хамăр чаçсем çитичченех çак сăрта хӳтĕлерĕ.

Текстра 150 сăмах, пăхăнуллă хутлă предложенисем—8.

II

1. Карапсем тĕлĕреççĕ пулин те, вĕсен хурçă чĕрисем вирлĕн тапаççĕ. *(Бурн.)* 2. Эсир кăларнă миноносец çул çинче ан путтăр тесен, тата икĕ понтон хушас пулать. *(Бурн.)* 3. Сывалса тухсан, старшинана курас тесе, темиçе çĕре те çитрĕм, анчах ниçта та тупаймарăм. *(Бурн.)* 4. Флота юрăхлă пулас тесен, шывран кăкăр таран тухса, икĕ енне выртса, çивĕччĕн ишме пĕлмелле. *(Бурн.)* 5. Ача хăй тăрăшмасть пулсан, мĕнле вĕрентес-ха ăна? *(Айз.)* 6. Тӳпе кăн-кăвак пулсан та, тăри юрлани илтĕнмест. *(Ухли.)* 7. Унăн пурнăçĕ инкеклĕн татăлман пулсан, таланчĕ туллинрех палăрнă пулĕччĕ. *(Н. Хрущев.)* 8. Пур писатель те пĕр пекех çырас пулсан, ун чухне вĕт начар кĕнекесем те, лайăххисем те пулман пулĕччĕç. *(Н. Хрущёв.)* 9. Милĕкпе çапăнни вара — начар ĕç мар, мĕншĕн тесен тир тасалать, ӳт лайăхрах сывлама пуçлать, пурăнма çăмăлланать. *(Н. Хрущёв.)* 10. Автор лайăх геройсене тĕрĕс кăтартса парать пулсан, çакнашкал произведени паха, кирлĕ произведени мар-и вара? *(Н. Хрущёв.)* 11. Эпĕ писатель мар пулсан та, хама хăшпĕр таран çак ушкăна кĕртетĕп *(Н. Хрущёв.)* 12. Ун пек çапăçусем пулаççех, мĕншĕн тесен идейăлла, политикăлла кĕрешӳ пырать. *(Н. Хрущев.)* 13. Этемĕн хастарлăх пулман пулсан, эпир малалла кайма пултарайман пулăттăмăр. 14. Талант тăруках çуралмасть, вăл майĕпен аталанса пырать. *(Н. Хрущёв.)* 15. Кашниех малтан мĕнле те пулин пысăк мар ĕç тăвать, кайран унăн пултарулăхĕ сарăлсах пырать, вăл пысăк, лайăх произведенисем çырать, вара вăл талантлă иккенне йышăнаççĕ. *(Н. Хрущёв.)* 16. Вăл хăй çиленсе тарăхнă, хăй тарăхнине произведенисенче палăртнă, çапла вара миллионшар çынсене тарăхма, лайăх пурнăçшăн кĕрешме хистенĕ, *(Н. Хрущёв.)*

### III

1. Ҫам кукурузăна ҫисе курман, ҫав ҫын вăл мĕн тери тутлă апат пулнине пĕлмест. *(Н. Хрущёв.)* 2. Уя акнă кукуруза халĕ шăтса тухайман-ха, анчах вăл шăтса тухать, вăйланса пырать, унăн тухăҫĕ лайăх пулать; теплицăсенчен куҫарса лартнă кукуруза вара имшерленсе пырать, унăн тухăҫĕ начар пулать, мĕншĕн тесен ун калчине теплица условийĕсенче ҫитĕнтернĕ. 3. Ҫамрăксене хăйсен пултарулăхне аталантарма пулăшмалла, ҫамрăксене ватă писательсенчен нумайăшĕ мĕнле пулăшнă, вĕсемшĕн Горький мĕнле тăрăшнă, ҫавăн пек пулăшас пулать. *(Н. Хрущёв.)* 4. Ҫын шывра ишме вĕрентĕр тесе, ăна пĕрмаях мĕнпе те пулин пулăшса тăрсан, вăл ишме нихҫан та вĕренеймест. Ишме вĕренес пулсан, шыва кĕрсе каяс пулать, хăвăрăн вăйпа ишме тăрăшса пăхмалла, ишме вĕренмелле. Ишме вĕренекен ҫын путма пуҫлать пулсан, ăна пулăшăр, ун хыҫҫăн вара ăна хăй тĕллĕн ишме вĕрентĕр. Халĕ ҫеҫ ҫырма пуҫланă писателе хăйĕн вăйĕпех хăйĕн талантне аталанма май парăр. *(Н. Хрущёв.)* 5. Некрасов пирĕн вăхăтра пурăнас пулсан, совет ҫыннисем виҫĕ-тăватă ҫул хушшинче 36 миллион гектар ҫерем уҫни ҫинчен пĕлнĕ хыҫҫăн мĕн каланă пулĕччĕ-ши вăл? *(Н. Хрущёв.)* 6. Сирĕнтен нумайăшĕ ҫапăҫусенче пулса курнă, ҫавăнпа та эсир пехота артиллерисĕр тăшман укрепленийĕсене ҫынсем нумай пĕтермесĕр ҫĕмĕрсе кĕме пултарайманнине пĕлетĕр. *(Н. Хрущёв.)* 7. Паллă ĕнтĕ, пирĕн ҫĕршывра хваттершĕн илекен тӳллев тĕнчере чи пĕчĕкки; ку вăл символла тӳлев тейĕттĕм эпĕ, мĕншĕн тесен хваттершĕн илекен укҫа-тенкĕ ҫав ҫуртри дворника тытса усрама та ҫитмест пулĕ. *(Н. Хрущёв.)*

## ТЕМИҪЕ ПĂХĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕН ПУЛĂВĔ.

Темиҫе пăхăнуллă хутлă предложенисем тĕрлĕрен пулаҫҫĕ. Эпир кунта виҫĕ майпа пулакан темиҫе пăхăнуллă хутлă предложенисене пăхса тухăпăр.

1. Темиҫе пăхăнуллă предложени, пĕр ыйтурах тăрса, тĕп предложенин пĕр членнех ăнлантарса параҫҫĕ, пĕр пек пăхăнуллă ҫыхăнурах тăраҫҫĕ. Кун пеккине пĕр йышши пăхăнуллă предложенисем теҫҫĕ.

**Пулса иртнĕ йăнăшсене ҫĕнĕрен тăвас мар тесе, пăнтăх шăршине туйса тăни киввинчен пистертĕр тесе, иртнĕ вăхăтра пулнă йăнăшсене вĕҫне ҫитиех уҫса кăтартмалла пулнă.** *(Н. Хрущёв.)*

2. Темиҫе хутлă предложени, тĕрлĕ ыйтура тăрса, тĕп предложение тĕрлĕ енчен ăнлантарать, тĕп предложенири тĕрлĕ сăмахпа ҫыхăнать. Кун пеккине пĕр йышши мар пăхăнуллă предложенисем теҫҫĕ.

**Ҫапах та кĕнекене вуласа тухас тесе, хăш чухне хăвна ху йĕппе чиксе илетĕн, ҫапла вара кĕнекене вĕҫне ҫитиех вуласа тухма кăмăла ҫĕклетĕн.** *(Н. Хрущёв.)*

3. Умлă-хыҫлă ҫыхăнури темиҫе хутлă пăхăнуллă предложени. Тĕп предложение пĕрремĕш пăхăнуллă хут-

лă предложени пăхăнса ăнлантарса тăрать, пĕрремĕш пăхăнуллă предложение иккĕмĕш пăхăнуллă предложени пăхăнса ăнлантарса парать, иккĕмĕшне — виççĕмĕш пăхăнăхуллă предложени т. ыт. те. Ăна пĕр тĕслĕ в ĕ ç е-в ĕ-ç ĕ н çыхăну теме пулать: пĕри теприне пăхăнса çыхăнса тăрать, иккĕмĕшĕ пĕрремĕшĕнчен килет.

**Пире вара хамăр ĕç валли юрăхлă çын кирлĕ, çавăнпа çак çынна тĕрĕс çул çине тăратас тесен, ун çине урăхла пăхмалла.** *(Н. Хрущёв.)*

Темăна тĕрлĕрен меслетпе ăнлантарма пулать, анчах нумай çул ĕçленĕ учительсен практики çакна кăтартса парать: малтанхи темăсемпе çыхăнтармасăр учитель сăмахпа çеç каласа пани питĕ çителĕксĕр — ачасем чылайăшĕ ăнланаймасăрах юлаççĕ. Çавăнпа та темăна çакăн пек майпа ăнлантармалла.

Хутсăр предложенири пĕр йышши тата пĕр йышши мар определенисен çыхăнăвĕ çинчен аса илмелле, вĕсен çыхăнăвне кăтартакан схемăна класа çакса ямалла. Вĕренекенсем кун тăрăх предложенири сăмахсем, уйрăмах пĕр йышши членсем, хăйсене тытса тăракан сăмахпа пăхăнса çыхăнса тăнине аса илеççĕ. Ку мĕн тума кирлĕ-ши?

Темиçе хутлă предложенисем те, пĕр йышши членсем пекех, тĕп членри пĕр-пĕр сăмаха пăхăнса ăнлантарса тăраççĕ, пĕр йышши çыхăнура пулаççĕ.

**1. Улăхра кăвак, сарă, кĕрен тата хĕрлĕ чечексем ӳсеççĕ. 2. Инçетри шупка кăвак тусем хушшинчен тĕтре çĕкленет. 3. Ирхине ирех тӳпене самолёт хăвăрт çĕкленчĕ.**

Çак предложенисен çыхăнăвне схемăпа кăтартмалла. Вĕренекенсем ăна хăйсем те тума пултараççĕ. (168 стр. пах).

Схемăсенчен вĕренекенсем хутсăр предложенири сăмахсен виçĕ тĕрлĕ çыхăнăвне кураççĕ. Пĕрремĕш схемăра пĕр йышши определенисем **чечексем** подлежащие тĕс енчен кăтартса панă, примыкани çыхăнăвĕпе çыхăннă.

Иккĕмĕшĕнче — **çĕкленет** сказуемăй пилĕк сăмаха тытса тăрать, анчах кашни сăмахĕ умлă-хыçлă çыхăнупа çыхăннă. **Çĕкленет** сказуемăя **тусем хушшинчен** япала ячĕпе туху падежĕнчи хыççăмах пăхăнса ăнлантараççĕ, малалла вăл мĕнле ту пулнине виçĕ пĕр йышши мар определенисем умлă-хыçлăн ăнлантарса тăраççĕ.

Виççĕмĕшĕнче — **çĕкленчĕ** сказуемăя предложенири обстоятельствăсем виçĕ енчен пăхăнса ăнлантарса параççĕ, пĕр йышши мар çыхăнупа çыхăнаççĕ· **ирхине ирех** —




вăхăт обстоятельстви тата **хăвăрт** —мĕнлелĕх обстоятельстви примыкани йĕркипе çыхăннă, **тӳпене** — пару падежĕнчи япала ятĕнчен пулнă вырăн обстоятельстви управлени йĕркипе çыхăнать.

Хутсăр предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ çинчен аса илнĕ хыççăн учитель темиçе пăхăнуллă хутлă предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ çине куçать. Çак хутсăр предложенири уйрăм сăмахсен çыхăнăвĕ майлах темиçе пăхăнакан предложенисем те хăйсен тĕп предложенийĕпе пăхăнса çыхăнса тăраççĕ. Вĕсен çыхăнăвне каллех схемăпа кăтартмалла. Хутсăр предложенири сăмахсен çыхăнăвĕн схемипе темиçе пăхăнуллă хутлă предложенисен схемине илсе танлаштарса пamaлла. Икĕ тĕрлĕ предложенири сăмахсем хушшинчи пĕрпеклĕхе вĕренекенсем те ăгăрхама пултараççĕ.

Схема валли тĕслĕхсем.

1. Эпир хамăрăн актива идеологи ĕçĕн ыйтăвĕсем çине тимлĕрех çаврăнса пăхтарас тетпĕр пулсан, кунта йĕрке туса хурас тетпĕр пулсан, ĕçре уçăмлăн çул кăтартса парас тетпĕр пулсан, эпир идео-

логи ĕçĕнчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене совет çыннисене тивĕçлĕ пек, большевиксене тивĕçлĕ пек критиклесе тухма тивĕçлĕ. *(А. Жданов.)* 2. Алешка хăй манран аслă пулсан та, пĕвĕ унăн лутраччĕ, çавăнпа та ăна манран çамрăк тетчĕç. *(Д. Чалдун.)* 3. Япони империализмĕ Китая çавăрса илес тесе тем пек тăрăшрĕ пулин те, Китай халăхĕ хăйĕн çĕршывĕнчен Япони захватчикĕсене тасатрĕ, мĕншĕн тесен Япони захватчикĕсемпе кĕрешме пĕтĕм Китай халăхĕ çĕкленчĕ. 4. Рабочисен, ĕçрен «ирĕке тухнă» нумай çынсен шутне кĕрсе ўкес мар тесе, капиталист патне, условисем кирек мĕнле пулин те, тара кĕрĕшме тивет. *(Н. Хрущёв.)*

Малтан учитель çак темиçе хутлă предложени тĕсне пăхса тухтарать, унти тĕп предложенипе пăхăнуллă предложенисене туптарать, вĕсем хушшинчи çыхăну çинчен ыйтать.

Пĕрремĕш предложение илсен, условие пĕлтерекен темиçе пăхăнуллă хутлă предложени, тĕп предложени — **эпир идеологи ĕçĕнчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене совет çыннине тивĕçлĕ пек, большевиксене тивĕçлĕ пек критиклесе тухма тивĕçлĕ:** ăна пăхăнса тăракан условие пĕлтерекен виçĕ пăхăнуллă предложени пĕр йышши çыхăнура тăрать. Ăна схемăпа кăтартса памалла.




Условие пĕлтерекен виçĕ пăхăнакан предложени те тĕп предложенипе **пулсан** союзла сăмахпа çыхăнса тăрать, кашни пăхăнакан предложени хыççăнах запятой лартмалла. Условие пĕлтерсе пăхăнакан предложенисем тĕп предложенири **критикăласа тухма тивĕçлĕ** хутлă глагол-сказуемăя пăхăнса ăнлантарса тăраççĕ, **мĕнле условире?** ыйтупа ыйтăнаççĕ.

Вĕренекенсене чарăну палли лартасси çинчен каланă чухне çакна асăрхаттармалла: пĕр йышши пăхăнакан предложенисем хушшинче сыпăнтаракан **тата** союз пулсан запятой лартмаççĕ.

**Ан тив, Ленинград активĕ, ĕçе лайăхрах та хăвăртрах тӳрлетес тата пирĕн идея ĕçне малалла ярас тесе, хăйĕн йăнăшĕсене пĕр каялла çаврăнса пăхмасăр, «дрессировка» туса хăтланмасăр, хăюллă анализ туса тухтăр.** *(А. Жданов.)*

**Тата** союзпа пĕрлех уйăракан союзсем тĕл пулаççĕ пулсан, вара вăл иккĕмĕш хут калана чух ун умĕн запятой лартаççĕ.

**Çапла шутлаççĕ: производствăра брак тунă пулсан е ширпотреб туса кăлармалли производство программине тултарман пулсан, е тата вăрман хатĕрлемелли плана тултарман пулсан — çакăншăн выговор панине, чăннипех, вырăнлă ĕç тесе шутлаççĕ...** *(А. Жданов.)*

Икĕ пăхăнуллă предложенирен пĕрремĕшĕ союзсăр, вĕсем хушшинче сыпăнтаракан **тата** союз çук пулсан, запятой лартмалла.

**Совет государствин индустри хăватне тата ытларах вăйлатас, производствăн техникăлла шайне чылай ӳстерес тесе, пирĕн нумай тăрăшса ĕçлеме тивет.** *(Н. Хрущёв.)*

II. Иккĕмĕш предложение илсен, пĕр йышши мар темисе пăхăнуллă хутлă предложение куратпăр. Кунта тĕп предложени — **пĕвĕ унăн лутраччĕ,** ăна икĕ пăхăнакан хутлă предложени икĕ енчен ăнлантарса тăраççĕ, пĕрремĕшĕ тĕп предложенири шухăша хирĕçлет — **Алешка хăй манран аслă пулсан та** — хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени, иккĕмĕшĕ тĕп предложенири ĕç мĕнпе вĕçленнине, унăн результатне пĕлтерет — **çавăнпа та ăна манран çамрăк тетчĕç** — ĕç вĕçлевне (следствие) пĕлтерекен пăхăнуллă предложени. Икĕ пăхăнакан предложени те тĕп предложенири **лутраччĕ** сказуемăя пăхăнса ăнлантарса тăраççĕ.

Учитель ачасене схема туса ăнлантарать.

Вĕренекенсене чарăну палли лартас пирки те каласа хăвармалла. Ку предложенире хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени хыççăн, следствине пĕлтерекен пăхăнуллă предложени умĕн запятойсем лартмалла; кĕскен каласан, тĕп предложение икĕ енчен те запятойпа уйăрмалла.







3. Виççĕмĕш тĕслĕхпе пăхăнуллă предложенисем умлă-хыçлă çыхăнупа тăнине кăтартса памалла. Чăваш чĕлхинче пăхăнакан предложенисем, ытларах тĕп предложени умĕн тăрса, ăна умлăн-хыçлăн ăнлантарса параççĕ. Виççĕмĕш предложенире тĕп предложени — **Китай халăхĕ хăйĕн çĕршывĕнчи Япони захватчикĕсене тасатрĕ.** Ун умĕнче икĕ пăхăнакан предложени тăраççĕ: пĕри — **Япони империализмĕ Китая çавăрса илес тесе,** тепри — **тем пек тăрăшрĕ пулин те;** анчах тĕп предложение ун умĕнче тăракан — **тем пек тăрăшрĕ пулин те** — хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени пăхăнса ăнлантарса тăрать. Çак пăхăнуллă предложение вара ун умĕнче тăракан — **Япони империализмĕ Китая çавăрса илес тесе** — тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени пăхăнса ăнлантарать. Çавна май умлă-хыçлă çыхăну тăваççĕ. Юлашкинчен çак тĕп предложение тата тепĕр енчен пиркене пĕлтерекен пăхăнуллă предложени уçса парать, ăна пăхăнса тăрать.

Пĕтĕмĕшпе илсен, ку предложени хутăш çыхăнупа йĕркеленнĕ: малтанхи икĕ пăхăнакан предложени тĕп предложенипе умлă-хыçлă çыхăнупа çыхăнаççĕ, виççĕмĕшĕ — тĕп предложение тепĕр енчен ăнлантарса парать.

Хутăш çыхăнупа йĕркеленнĕ предложени схеми:

Япони империализмĕ Китая çавăрса илес

тесе ↓

тем пек тăрăшрĕ

пулин те ↓

Китай халăхĕ хăйĕн çĕр-шывĕнчи Япони захватчикĕсене тасатрĕ

мĕншĕн тесен ↓

Япони захватчикĕсемпе кĕрешме пĕтĕм Китай халăхĕ çĕкленчĕ

Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени

тесе ↓

Хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени

пулин те ↓

Тĕп предложени

↓

Пиркене пĕлтерекен пăхăнакан предложени.

Чарăну палли лартас пирки çакна каламалла. Тĕллеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложени, хирĕçлеве пĕлтерекеннин глагол-сказуемăя ăнлантарса парса, унпа таччăн çыхăнса тăнăран вĕсен хушшине запятой лартса уйăрмаççĕ, хирĕçлеве пĕлтерсе пăхăнакан предложени хыççăн тата пиркене пĕлтерсе пăхăнакан предложени умĕн уйрăм чарăнса (пауза туса) калатпăр, çавăнпа та запятой лартмалла.

Вăхăт çитсен, тăваттăмĕш предложение те пăхса тухмалла. Уйрăмах ку предложение разбор тунă май учитель çакна палăртать: икĕ пăхăнакан предложени те тĕп предложени варринче тăраççĕ, çавна май кашни пăхăнакан предложение икĕ енчен те запятой лартса уйăрнă, Тĕп предложенипе пăхăнакан предложенисем пĕр-пĕринпе умлă-хыçлă çыхăнупа **тесе** тата **пулсан** та союзлă сăмахсемпе пĕрлешнĕ.

| Есре «ирĕке тухнă» нумай çынсен шутне кĕрсе ӳкес мар |
|---|

тесе ↑

| условисем кирек мĕнле |
|---|

пулин те ↑

| рабочисен капиталист патне тара кĕрĕшме тивет (Н. С. Хрущев) |
|---|

Пăхăнакан предложенисем тĕп предложенире мĕнле вырнаçса тăнине кăтартса парас тесен, доска çине графикла схема туса кăтартма пулать.




**Рабочисен, ĕçрен «ирĕке тухнă» нумай çынсен шутне кĕрсе ўкес мар тесе, капиталист патне, условисем кирек мĕнле пулин те, тара кĕрĕшме тивет.**

Пĕр пăхăнуллă предложени ăшне тепĕр пăхăнуллă предложени кĕрсе ларма пултарать.

**Чĕмпĕрти чăваш шкулне ун чухне чăваш ялĕсенче пур çĕрте те пĕлнĕ, çавăнпа та, унта вĕренес, çын пулас тесе, ĕмĕтленсе, поездпа та, пăрахутпа та, ахаль шăлтăр-шăлтăр урапапа та, çуран та ачасем нумай пынă.** *(Я. Ухсай.)*

**Америкăри хăшпĕр генералсем хальхи вăхăтра вĕсен территорине тивме май çук тесе шутлаççĕ пулсан, вĕсем вăрçă пуçлама майлă самант çитрĕ тесе вывод тума пултараççĕ, çав вăрçăра вара акăлчансен, французсен, итальянецсен, нимĕçсен, туркăсен тата Америкăри ытти союзниксен юнĕ юхмалла, вĕсен пурнăçĕ пĕтмелле пулать, мĕншĕн тесен, вăрçă пуçлас пулсан, вĕсен территорине инçете тата çывăха вĕçекен ракетăсем пушă хир туса хăварнă пулĕччĕç.** *(Н. Хрущёв.)*

Вĕреннине çирĕплетес тĕлĕшпе хăнăхтару ĕçĕ — синтаксисла разбор туса ирттермелле. Кун пек ĕç темиçе пăхăнуллă хутлă предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнура тăнине лайăхрах ăнланса илме те, пăхăнакан хутлă предложенипе тĕп предложенисем хушшине чарăну паллли лартма вĕренес çĕрте те витĕмлĕ пулăшать.

1. Оппозицилле выляма тата эпир анлă дискусси тума май пулмасть тесе ўпкелеме юратакан юлташсем çав дискуссие хутшăнма кăмăл тумарĕç пулсан, куншăн вĕсем хăйсем айăплă. *(В. И. Ленин.)*

2. Шултра производство лайăхрах пулнине эпир ĕçре кăтартса пама пултараймарăмăр, мĕншĕн тесен çав шултра хуçалăх арканнă, мĕншĕн тесен унăн хăйĕн те мĕскĕнле çеç пурăнма тивет, ăна каллех çав вак çĕрĕçпе пурăнакансен вăйĕпе çеç ура çине тăратма тивет. *(В. И. Ленин.)*

3. Апла-тăк итлĕр, хаклă тусăмăрсем, кам та пулин çитменлĕхсемпе пăсăксене уçса палăртать пулсан, çакăнпа пĕрлех унăн алли чĕтремест пулсан, çак ĕçе ĕнтĕ парти тăвать, çакна ăна унăн Центральнăй

Комитечĕ тăвать. (*Н. Хрущев.*) 4. Пирĕн çĕршыври халăхсем хастар ĕçленипе пĕрлех, мире сыхласа хăварас тесе, мĕнпур çĕршывсем пĕр-пĕринпе туслă çыхăнусем тытса, пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлеччĕр тесе, яланах çине тăрса кĕрешеççĕ. (*Н. Хрущев.*) 5. Капитализм çĕрщывĕсенчен хăшпĕрисенче пенси парса тăрас йĕрке пур пулсан, ăна, тĕпрен илсен, ĕççыннисем хăйсен шучĕпе пурнăçласа пыраççĕ, мĕншĕн тесен фондсене пуринчен ытларах рабочисен хăйсен ĕç укçинчен уйăрса илекен укçа шучĕпе тăваççĕ. (*Н. Хрущев.*) 6. Эпир сире хăйĕн интересĕсене хӳтĕлеме хушнă обществăна хирĕç тăратпăр, мĕншĕн тесен эпир унăн тата сирĕн нихçан килĕшмен тăшманăрсем, çавăнпа та эпир çĕнтериччен пирĕнпе сирĕн хушăра килĕшӳ пулма пултараймасть. (*М. Г.*) 7. Пирĕн Ульяна, атте ӳсĕрме пуçласан, макăрма пикенетчĕ, мĕншĕн тесен пирĕн анне те çапла ӳсĕрсе ларнă çĕртенех ӳксе вилчĕ. (*Д.-Чалд.*)

## ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ЧЛЕНЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

Чăваш чĕлхинче предложенилле членлă предложенисем пăхăнуллă хутлă предложение çывăх тăраççĕ. Чĕлхе ăслăлăхĕнче ку ыйтăва тĕплĕн татса паман-ха. Çавăнпа ăна, шкулсем валли çырнă учебникри пекех, хутлă предложенисен шутне кĕртсе пăхса тухатпăр[1].

Предложенилле членлă предложенисем предложенири членсенчен хăйсен анлăшĕпе, пуринчен ытла глагол форминчен пулнипе уйăрăлса тăраççĕ. Тĕрĕсрех каласан, предложени членĕсен тытăмне тăвакан тĕп сăмахсем причастипе деепричастирен пулаççĕ. Ытти сăмахсем вара çак сăмахсене пăхăнса тăраканнисем, вĕсене ăнлантарса параканнисем пулаççĕ.

Предложенилле членсем те предложенири членсем пек пĕр пĕлтерĕшре пулаççĕ, ыйтăвĕсем те пĕр пек ыйтăнаççĕ.

---

[1] Предложенилле членсем çинчен 8 çул вĕренмелли шкулта ачасене пĕтĕмĕшле пĕлӳсем памалла. Çĕнĕ программа тăрăх предложенилле членлă предложенисене пăхăнуллă хутлă предложенисемпе пĕрле вĕренмелле. «Малтан пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен ăнлантармалла, вĕсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсене кăтартса памалла. Предложенилле членсен подлежащийĕпе сказуемăйĕ пуррине, вĕсен сказуемăйĕ причасти, деепричасти форминче пулнине ăнлантарса хăвармалла. Пăхăнакан предложенисен тĕсĕсем çинчен вереннĕ чухне пĕр вăхăтрах предложенилле членсен тĕсĕсем çинчен, вĕсем тĕп предложенипе мĕнле çыхăнса тăнине кăтартса хăвармалла» тенĕ программăра. Предложенилле членсем çинчен 8 çул вĕренмелли шкулта ачасене пĕтĕмĕшле пĕлӳсем çеç памалла. Çапла пулин те, учительсене ку ыйту тăрăх эпĕ тĕплĕрех кăтартусем парасшăн. Мĕншĕн тесен хăшпĕр шкулсенче халлĕхе кивĕ программăпах тата халиччен уса куракан учебникпа вĕренме тивет.

*Автор.*

Танлаштарса пăхар:

Çуркунне *юр* ирĕлет. (Мĕн?)

Çуркунне *юр ирĕлни* савăнтарать? (Мĕн?)

*Кăвак лаша* урамра тăрать. (Мĕнле лаша?)

*Эпĕ кӳлнĕ кăвак лаша* урамра тăрать. (Мĕнле лаша?)

*Kaçчен* туристсем сăрт тăррине улăхса *çитрĕç*. (Хăçан çитрĕç?)

*Kaç пуличчен* туристсем сăрт тăррине улăхса çитрĕç. (Хăçан?)

Темăна вĕрентме тытăниччен подлежащи çинчен аса илмелле, ун пĕлтерĕшĕпе ыйтăвне туптармалла. Малалла предложени евĕрлĕ подлежащипе паллаштармалла, унăн пулăвĕпе ыйтăвĕ çинче чарăнса тăмалла.

Предложенилле подлежащи пулăвне ăнлантарма малтан икĕ хутсăр предложени илмелле.

**Хĕлле юр нумай çурĕ. Вăл çĕре хытă шăнасран сыхларĕ.**

Пĕрремĕш предложени глагол-сказуемăйне иртнĕ причастипе ылмаштармалла та палăрту аффиксĕ **-и** хушмалла, иккĕмĕш предложенин подлежащине кăларса пăрахмалла, вара икĕ предложение пĕрлештернипе предложенилле подлежащиллĕ предложени пулса тăрать.

**Хĕлле юр нумай çуни çĕре хытă шăнасран сыхларĕ.**

Çапла вара пĕрремĕш предложени пĕтĕмĕшпех предложенилле подлежащи составне кĕрет: **Хĕлле юр нумай çурĕ — хĕлле юр нумай çун(ă)и.**

Иккĕмĕш предложенири **вăл** подлежащи вырăнне пĕрремĕш предложенирен пулнă предложенилле подлежащи йышăнать, иккĕшĕ те **мĕн?** ыйтупах ыйтăнаççĕ.

Предложенилле подлежащи палăрту аффиксĕ йышăннă паллă ятĕнчен те пулать. Т ĕ с л ĕ х:

**Совет çĕршывĕ вăйлă та тĕреклĕ. Çакă тăшмансене çĕнĕ вăрçă кăларма чарса тăрать.**

Пĕрремĕш предложенири сказуемăйсем — **вăйлă** та **тĕреклĕ** — мĕнлелĕх паллă ятĕнчен пулнă: вĕсен çумне палăрту аффиксĕ **-и** хушатпăр та иккĕмĕш предложенири кăтарту местоименирен пулнă **çакă** подлежащие кăларса пăрахатпăр, малтанхи икĕ предложение пĕрлештеретпĕр, вара каллех предложенилле подлежащирен тăракан предложени пулать.

**Совет çĕршывĕ вăйли те тĕрекли тăшмансене çĕнĕ вăрçă кăларма чарса тăрать.**

Предложенилле подлежащи **-скер** аффикс йышăннă

паллă ячĕпе причастирен те пулать. Причастипе паллă ячĕ çумне **-скер** аффикс хушăнсан, сăмахĕ те япала ятне тухать, ĕçне тăвакан çынна пĕлтерет, **кам?** ыйтура тăрать.

Тĕслĕхрен: **Эпир хисепленĕ çын, çавă пирĕн шкулта доклад турĕ. Вăл сăвă калама ăста. Шкулти литература каçĕнче пурне те тĕлĕнтерчĕ.**

Пĕрремĕш предложенири сказуемăйсем çумне **-скер** аффиксем хушатпăр, иккĕмĕш предложенири подлежащисене кăларса пăрахатпăр, вара предложенисене пĕрлештерсе, предложенилле подлежащиллĕ предложенисем тăватпăр.

**Эпир хисеплекенскер** пирĕн шкулта доклад турĕ. **Сăвă калама ăстаскер** шкулти литература каçĕнче пурне те тĕлĕнтерчĕ.

Вĕренекенсем ăнланччăр тесе, класра ĕçлеме çакăн пек хăнăхтару памалла: мăшăрлă панă хутсăр предложенисенчен предложенилле подлежащиллĕ предложенисем тутармалла.

Çуркунне хĕвел хытă хĕртсе пăхрĕ. Вăл уй-хирти юрсене час çисе ячĕ. Пирĕн халăх ĕçчен те паттăр. Çакă пур йывăрлăхсене те çĕнтерсе пыма пулăшать. Вăл ĕçре пултарать. Паян вăл колхозăн тракторне юсарĕ.

Учебник тăрăх класрах 68-мĕш хăнăхтарăва тутармалла. Ачасем килте 69-мĕш хăнăхтарăва тăваççĕ.

## ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ОПРЕДЕЛЕНИ.

Темăна вĕрентнĕ май предложенири определени çинчен аса илмелле.

Предложенири япала паллине кăтартакан кĕçĕн членăн — определенин ыйтăвĕçем: **мĕнле? камăн? мĕнĕн? ăçта? хăçанхи? миçе? миçемĕш? хăш?**

Вĕренекенсене тĕслĕхсем туптармалла. Малалла предложенилле определенисемпе паллаштарма çакăн пек предложенисем илмелле.

1. Эпĕ вĕреннĕ. Шкул аякранах курăнать.
2. Юлташ хулана каять. Шоссе пирĕн ялпа иртет.
3. Хĕвел анас вăхăт. Эпир яла çитрĕмĕр.
4. Эпир улмуççисем лартатпăр. Вĕсем кĕçех панулми тума тытăнĕç.

Предложенисене мăшăрăн парса пынă. Вĕсенчен пĕрремĕш предложенисем анлă определенисем, е тепĕр тĕрлĕ каласан, предложенилле определенисем пулаççĕ, ик-

кĕмĕш предложенири пĕр-пĕр япала ятне ăнлантарса тăма тивĕç. Пĕрремĕш предложенири глагол-сказуемăя çав вăхăтра тăракан причастипе ылмаштармалла, иккĕмĕш предложенири япала ятне **мĕнле? хăш?** ыйтупа тăрса ăнлантарса паракан тумалла.

мĕнле?
1. **Эпĕ вĕреннĕ шкул** аякранах курăнать.

мĕнле?
2. **Юлташ хулана каякан** шоссе пирĕн ялпах иртет.

мĕнле?
3. **Хĕвел анас** вăхăтра эпир яла çитрĕмĕр.

Тăваттăмĕш тĕслĕхрен предложенилле определениллĕ предложени мĕнле тумалла-ха? Пĕрремĕш предложенири дополнени — **улмуççисем** — иккĕмĕш предложение **вĕсем** подлежащи вырăнне куçармалла. (**Вĕсем** местоимени кунта **улмуççисем** сăмах вырăнĕнче тăрать.) Пĕрремĕш предложенири хальхи вăхăтри **лартатпăр** глагол-сказуемăя хальхи причастие куçармалла. Вăл **улмуççисем** япала ятне ăнлантаракан сăмах пулать. Ытти сăмахсене çаплипех хăвармалла. Çапла май хутсăр икĕ предложенирен пĕр предложени — предложенилле определениллĕ предложени пулса тăрать.

мĕнле?
**Эпĕ лартакан улмуççисем кĕçех панулми тума тытăнĕç.**

Илнĕ тĕслĕхсенче предложенисен пулăвĕ тĕлĕшĕнчен мĕн куртăмăр-ха?

Предложенилле определенин хăйĕн подлежащипе сказуемăйĕ пур, анчах сказуемăйĕ причастие куçнăран определение тухса каять, çапах та предложенилле определенишĕн сказуемăй пĕлтерĕшне çухатса çитерейместь. Уйрăмах иртнĕ причастирен тăракан предложенире вăл аванах курăнать.

**Эпĕ вĕреннĕ шкул аякранах курăнать.**

Предложенилле определенин тĕп членĕсем — **эпĕ вĕреннĕ**—хăйсен предложенири пелтерĕшне çухатман тесен те йăнăш пулмасть: **эпĕ** — подлежащи, **вĕреннĕ**—сказуемăй, çав вăхăтрах определени пĕлтерĕшĕнче тăраççĕ. Çавăнпа та хальхи вăхăтра вĕсене определени пулакан пăхăнуллă хутлă предложени шутнех кĕртеççĕ.

Тата çакăн пек предложенисене мĕнле пăхмалла-ши?

1. Ахаль чĕнмесĕр ларакан Ярмуш пушшех пуçне чикрĕ те аллинчи патакĕпе умĕнчи хăйăра вĕçĕмсĕр чакаларĕ. *(Турх.)* 2. Ĕçрен самантлăха çеç чупса килнĕ Тимĕр

çăвăнасса та вăр-вар çăвăнса кĕчĕ. *(Ĕçх.)* 3. Ашшĕ-амăшĕ сăмахне итлемен ача-пăча хăйнех сиен тăвать. *(Ват.с.)* 4. Ĕçлесе тупнă укçа виличченех тăрантарать. *(Ват. с.)*

Малтанхи виçĕ предложенири причастипе çыхăннă определенисем анлă определени çеç тăваççĕ. Мĕншĕн-ха вĕсене предложенилле определени теме çук?

Мĕншĕн тесен ку определенисенче подлежащи вырăнĕнчи сăмахĕ çук, вĕсем хăйсем те, подлежащи умĕн тăрса, ăна анлăн çеç ăнлантарса параççĕ.

Пĕрремĕш предложение илер.

— Кам ахаль чĕнмесĕр ларать?

— Ярмуш.

— Вăл тата мĕн турĕ?

— Чакаларĕ.

Икĕ ĕçе те пĕр подлежащи — **Ярмуш** тунă. Анчах малтанхи сказуемăйĕ **ларакан** причастие куçнă та **Ярмуш** подлежащишĕн анлă определени çеç пулса тăнă.

Малалла тăваттăмĕш предложение пăхăпăр. Кунта предложенилле определени пур-и? Пирĕн шутпа, пур, вăл **ĕçлесе тупнă — укçа** сăмахшăн предложенилле определени пулса тăрать.

Кунта каллех подлежащи вырăнĕнчи сăмах çук. Халĕ ун пулăвĕ çинче чарăнса тăрăпăр.

**Ĕçлесе тупнă. Укçа виличченех тăрантарать.** Икĕ уйрăм предложени: пĕрремĕшĕ — паллă мар сăпатлă предложени (кунта тĕрлĕрен местоимени лартма пулать: **ху, эс, эсир т. ыт.**), иккĕмĕшĕ — сăпатлă предложени. Çапла май икĕ шухăш, икĕ предикат центрĕ: пĕри — ху **ĕçлесе тупнă,** тепри — **укçа виличченех тăрантарать.** Пĕрремĕш предложенин глагол-сказуемăйĕ причасти функцине йышăнать те предложенилле определени тăвать.

Çапла предложенилле определенисене кӳлепине (формине) кура анчах мар, шухăшне, пулăвне, вĕсенче подлежащипе сказуемăйне кура, уйарса илме хăнăхтарса пымалла.

Темăна ăнлантарнă хыççăн вĕренекенсене çак тĕслĕхсенче предложенилле определенисене туптармалла, унăн пулăвне калама хушмалла.

Микула чавакан çăлтан сивĕ шыв сăрхăнтарать. *(Турх.)* 2. Кăмпа коллекцине пуçтарас ĕçе Ярмуш Нинăна хушрĕ. *(Турх.)* 3. Ярмуш колхоз садĕнче ĕçлекен аслашшĕне апат леçсе килетчĕ. *(Турх.)* 4. Çтаппан крыльца юпи çумне çакса янă саватри шывпа питне çурĕ.

*(Еçх.)* 5. Тимĕрсен пӳрчĕ ларакан çĕнĕ урам вара шăпах çав сăртлăхăн тӳрчĕпе тăсăлса иртет. *(Еçх.)* 6. Вĕсем хăйсем пулă тытма çӳрекен вырăна çитсе чарăнчĕç. 7. Ял çумĕпе авкаланса иртекен Пăла та алтупанĕ çинчи пекех курăнать. 8. Митрахван мучи кăтартнă вырăнсене ачасем нумаййчен тăрăшса чаврĕç. *(Турх.)* 9. Кĕнеке нумай сутакан киоскра эпĕ икĕ хут пултăм. 10. Пичче каймалли çул çине эпĕ малтанах тухса тăтăм. Суялăха юратман çамрăк çын пурне те тĕрĕс-тĕкĕл каласа панă, пытарман. *(Я. Ухс.)* 12. Чипер утса пыракан лашасем çавăнтах тапса сикрĕç. *(Асл.)*

## ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ДОПОЛНЕНИ.

Предложенилле дополнение вĕрентиччен ахаль дополнени çинчен аса илмелле.

**Япалана кăтартакан ят мар падежри кĕçĕн члена дополнени теççĕ.**

Дополнени ыйтăвĕсене вĕренекенсем каласа параççĕ те, учитель предложенилле дополнени çине куçать, ун пулăвĕпе паллаштарать. Предложенилле дополненин, хăйне май, подлежащи вырăнĕнчи сăмах ят падеж форминче тăрать, сказуемăй вара ят мар падежĕнчи причастирен пулать, ăна тепĕр предложенири сказуемăй управлени йĕркипе пăхăнтарса тытса тăрать. Çак ят мар падежсенчи причастисемпе палăрту аффиксне йышăннă паллă ячĕсем дополнени ыйтăвĕсемпе ыйтăнаççĕ.

**Эпĕ кĕнеке вулатăп. Анне ăна юратса итлет.**

Пĕрремĕш предложенири **вулатăп** глагол-сказуемăйран причасти тумалла: **вуланă**, ун çумне палăрту аффиксĕ **-и** хушмалла та иккĕмĕш предложенири **ăна** местоимени вырăнне çав падежах, çав хисепрех лартса çырмалла, местоименине кăларса пăрахмалла. Е тепĕр тĕрлĕ каласан, пĕрремĕш предложенири сказуемăй-причастие иккĕмĕш предложенири сказуемăя управлени йĕркипе çыхăнтарса пăхăнтармалла. Çав майпа вара предложенилле дополнени пулать.

**Эпĕ кĕнеке вуланине анне юратса итлет.**

Пĕрремĕш предложенири глагол-сказуемăйран **пулнă** причасти, иккĕмĕш предложенири **итлет** глагол-сказуемăя пăхăнса, тăву падежĕнче тăрать. Предложенилле дополненисем хăйне тытса тăракан предложени варринче те тăма пултараççĕ. Ун пулăвĕ çакăн пек. Иккĕмĕш предложени пĕрремĕш предложенин подлежащийĕ хыçне кĕрсе ларать.

**1. Ашшĕ вĕрентсе каланă. Петюк çакна лайăх ăнланнă.**

мĕнле?

Петюк **ашшĕ вĕрентсе каланине** лайăх ăнланнă.

**2. Ку калаçу мĕнпе пĕтĕ. Ачасем ăна интересленсе кĕтрĕç.**

Ачасем **ку калаçу мĕнпе пĕтессине** интересленсе кĕтрĕç. *(Турх.)*

Предложенилле дополнени паллă мар сăпатлă предложенирен те пулма пултарать.

**Магазинта пулă сутаççĕ. Атте ăна пĕлсе килнĕ. Магазинта пулă сутнине** атте пĕлсе килнĕ.

Предложенилле дополненисем хыççăмахлă та пулаççĕ.

**Нина амăшне килте каласа пачĕ. Ăна вожатăя суйланă. Нина хăйне вожатăйне суйлани çинчен** килте амăшне каласа пачĕ.

Предложенилле дополненисем палăрту аффиксне йышăннă паллă ятĕнчен те пулаççĕ.

**Умри хула илемлĕ. Эпĕ ăна аякранах туйса илтĕм.**

**Умри хула илемлине** эпĕ аякранах туйса илтĕм. **Хĕллехи çанталăк тирпейлине** пурте пĕлеççĕ.

Темăна ăнлантарнă хыççăн вĕренекенсене çакăн пек творчество ĕçĕ памалла: хутсăр предложенисенчен суйласа илсе предложенилле определениллĕ предложенисем тумалла.

Т ĕ с л ĕ х с е м: 1. Эпĕ сăвă каларăм. Вечерти халăх ăна кăмăллăн итлерĕ. 2. Тĕмсем лутра пулнă. Мăйăрне татма пит ансат. 3. Килти ĕçе мĕнле тумалла. Нина ăна лайăх ăнланчĕ. 4. Çĕрмамăк нумай туса илеççĕ. Совхоз вĕсене пысăк преми пачĕ. 5. Çурхи вăрман симĕс тумлă. Ачасем уя тухсанах ăна асăрхарĕç. 6. Кашни пионера шкул садĕнче ĕç панă. Эсĕ ăна çырса пыр.

Суйласа илнĕ диктант валли текст:

1920 çулхи кĕркунне çинчен темшĕн асра юлнисем нумай. Тепре çакна астăватăп. Вырсарникунсенчен пĕринче Владимир Ильич Çурçĕр çулĕпе Мускавран çитмĕл çухрăмра вырнаçнă Монино ялне машинăпа кайрĕ. Монинăра пурăнакан паллă сунарçă каланă тăрăх, ял çумĕнчи вăрман кĕркуннехи вăхăтра мулкачсемпе ăсансем тытмалли чи лайăх вырăн шутланать.

Эпир Монинăна малтанхи хут каятпăр. Пире паллакан сунарçă тĕл пулчĕ те ял варринче ларакан питĕ тирпейлĕ пĕчĕк пӳрте илсе кайрĕ.

Хуçи пире кăмăллăн кĕтсе илчĕ, килти пекех вырнаçма сĕнчĕ. Вăл кĕрнеклĕ ватăрах арçын, хăй пĕрре те хресчен пек мар, учитель е агроном евĕрлĕскер. Çӳлĕк çинче кĕнекесем туллиех. Владимир Ильич калаçма юратнине пирĕн тараватлă хуçа та килĕштерчĕ. Ленин çынсемпе калаçма юрататчĕ, хăйĕнпе пуплекене уççăн калаçтарма ăстаччĕ.

— Ну, каласа пар-ха, Предтечин юлташ,— ыйтрĕ Ленин,— сирĕн хресченсем мĕнле пурăнаççĕ, совет влаçне епле йышăнчĕç, шухăшкăмăлĕсем мĕнле?

Предтечин революцичен епле пурăннине, вĕсем совет влаçĕ çинчен мĕн шухăшланине хаваслансах каласа пачĕ. Ун хыççăн ялхуçалăхĕ çинчен, хресченсем мĕнле тертленсе пурăнни, совет ялĕн пуласлăхĕ çинчен калаçрĕç. Çакна май пирĕн хуçа хресчен пурнăçĕнчи йăласене лайăх пĕлнине палăртрĕ. Ленин ялхуçалăх çинчен лайăх шухăшсем каласа пачĕ.

*(С. К. Гиль* «У л т ă ç у л В. И. Л е н и н п а» *кĕнекерен.)*

Текстра 165 сăмах, предложенилле определенисемпе дополненисем — 8.

Вĕренекенсем çак диктант текстĕнчен предложенилле определенипе дополнени пулакан предложенисене хăйсен тетрачĕсем çине суйласа çырса илеççĕ.

Тепĕр сехетĕнче предложенилле подлежащи, сказуемăй, определени тата дополнени темăсем тăрăх тĕрĕслев диктанчĕ çыртарма юрать.

1. Совет халăхĕн пурнăçне малалла лайăхлатмалли плансем ăнăçлă пурнăçланса пыраççĕ. Йывăр участокра — пурăнмалли çуртсем лартас ĕçре уйрăмах пысăк çитĕнӳсем тунă. 2. Кăçал ытти ялхуçалăх продукчĕсем туса илесси те ӳсрĕ. 3. Халĕ тĕп ыйту — ĕнесен йышне ӳстересси. 4. Коминтерн ячĕпе хисепленекен колхоз аш-какайпа сĕт туса илни Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи хальхи шайран чылай иртсе кайнă. 5. Пухури çынсем пурте кураççĕ — Петров паян сăмах тухса каласси пулас çук. 6. «Пирĕн таврари тискер кайăксем» текен пая пăхма Марк Васильевич аслăрах классенче вĕренекен арçын ачасене пачĕ. Ана вĕсен йĕркелемелле, ӳлĕмрен вĕсенех пуянлатса пымалла. «Пирĕн таврари вĕçен кайăксем» текен пая та арçын ачасенех илмелле пулчĕ: кайăк тытма та вĕсемех ăста. Ун вырăнне хĕрачасем вара музейăн этнографи кĕтессине кăмăлласах илемлетме тытăнчĕç. Чăваш тĕррисене, авалхи кĕмĕл тенкĕпе нухрат тавраш пуçтарасси — вĕсен ĕçĕ. *(Турх.)* 7. Пирĕн ĕç — çĕмĕресси мар, тӳрлетесси те тăвасси. *(Алка.)* 8. Манăн ĕçĕ çавă — тавралăха сăнасси, тинкересси. *(Алент.)* 9. Этем ĕмĕрĕ — тĕнчери чи вăрăм ĕмĕр пулмалла. *(Алент.)*

Текстра 136 сăмах, ăнланман сăмахсем çук.

## ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВАСЕМ.

Предложенилле обстоятельствăсем çинчен пĕтĕмĕшле калани.

Предложенилле обстоятельствăсем миçе тĕслĕ пулнине схема тăрăх ăнлантармалла.




Ун хыççăн предложенилле обстоятельствăсен пулăвне çакăн пек таблица тăрăх ăнлантарма пулать.

| Мĕнле майпа | Хыççăмахсемпе аффикссем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1. Деепричастиллĕ | -сан, -сен, -сассăн, -сессĕн, -иччен, -массерен, -мессерен | Çĕр типсе кайсан, удобренисем ирĕлмеççĕ. Халăха çураçтарсассăн, епле пулĕччĕ унта. *(Хус.)* Эпĕ хулана каймассерен çĕнĕ кĕнекесем туянатăп. Хĕвел аниччен ачасем яла çитрĕç. |
| 2. Хыççăмахлă | умĕн, хыççăн, тăрăх, пирки, пек, май, чухлĕ, çемĕн | Пуху уçас умĕн халăха лекци вуласа пачĕç. Митинг пĕтнĕ хыççăн колхозниксем ĕçе тытăнчĕç. Нумай вуланăçемĕн пĕлӳ ӳссех пырать. |
| 3. Падеж аффикслĕ | -па, -пе, -ран, -рен, -ранпа-ренпе | Вăйлă çил вĕрнипе йывăçсем хумханса лараççĕ. Çанталăк ăшăран ачасем кĕпе вĕççĕн çӳреççĕ. Совет влаçĕ пулнăранпа хĕрĕх виçĕ çул тултарчĕ. |
| 4. Инфинитивран | -ма, -ме, -машкăн, -мешкĕн | Тăшман пуçне пĕтерме вĕри вут пек çилли пур. *(К. Ив.)* Вăл пурнăç умĕнче чи хаклă тивĕçе тăвассишĕн вут-çулăм ăшĕнче шăранать. *(Алентей.)* |

Вĕренекенсем таблицăна хăйсен тетрачĕсем çине çырса илеççĕ. Малалла предложенилле обстоятельствăсемпе тĕслĕхсем туптармалла, вĕсен пулăвне калаттармалла. Класрах учебник тăрăх 74-мĕш хăнăхтарăва тутармалла. Предложенилле обстоятельствăсем яланах предложенири глагол-сказуемăя пăхăнса ăнлантарса параççĕ.

## ВАХАТА ПЕЛТЕРЕКЕН ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВАСЕМ.

Вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельетво предложенири вăхăт обстоятельстви пекех пĕр-пĕр ĕç мĕнле вăхăтра пулнине кăтартса парать, **хăçан? хăçанччен? хăçантанпа? хăш вăхăтра?** ыйтусем çине ответлет.

Вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсен пулăвне çакăн пек таблицăпа усă курса ăнлантармалла.

| Мĕн хушăнса пулни. | Ыйтăвĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| -сан, -сен, -сассăн, -сессĕн, -массерен, -мессерен | хăçан | Ятман фронта кайсан, Куçма ăна яланах ырă ятпа аса илнĕ. *(Турх.)* Çырма хĕрне ансассăн та, кули ура йĕпенмест. Чăвашра çĕнĕрен сăвăç çуралмассерен, ман тăпрам çине саркайăк пытăр ир çинче. *(Ç. М.)* |
| -иччен | хăçанччен | Тул çутăличченех вăрманти шăпчăксем юрă пуçларĕç. |
| чух, чухне | хăçан? | Чĕри çине шурă бинт хунă чух шăп пирĕн ума пырса тăчĕ хĕрарăм. *(Алка.)* Вăрçă пуçланнă чухне эпир аннепе Ленинградра пулнă. *(Турх.)* |
| умĕн, хыççăн, çĕре, çемĕн, май | хăçан? хăш вăхăтра? хăш вăхăт тĕлне? | Ятманпа Левентее ăсатса ярас умĕн вăл Кăтра Михаляна аса илчĕ. *(Турх.)* Вĕсем çывхарнă çĕре Карачăм тракторне пур енчен те ĕçе хатĕрлесе ситернĕччĕ. *(Турх.)* Атăл патне çывхарнăçемĕн çынсем ытларах калаçма тытăнчĕç. *(Турх.)* |

| Пулăвĕ | Ыйтăвĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| -па, -пе, -ранпа, -ренпе | хăш вăхăтра? хăçантанпа? | Çĕнĕ ĕçе кĕнĕренпе Ятман хăй те Левентей патĕнче сайра-хутра çеç пулкаларĕ. *(Турх.)* Тĕттĕм пулнăранпа нумай вăхăт иртрĕ. |

Малтанах учитель ачасене предложенири обстоятельствăсем çинчен аса илтерет. Унтан предложенилле обстоятельство пулăвĕпе паллашать. Учебникра предложенилле обстоятельство пулăвĕ çинче тĕплĕ чарăнса тăнă, кунта çакна çеç хушса хăварма пулать.

Хăшпĕр вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем **вăхăтра, самантра, тапхăрта, май, кун** сăмахсем хушăннипе те пулаççĕ. Тĕслĕхрен:

Никандр килте пурăннă вăхăтра (хăçан?) Арçук пĕр эрне хушши Ярмушсен килĕнчен тухма та пĕлмерĕ темелле. *(Турх.)*

Бригада ĕçе тытăннă кун (хăçан?) Карачăм тракторĕ хирти пĕччен çăка айĕнче пĕр хускалмасăр ларчĕ. *(Турх.)* Хĕвел çӳлелле хăпарнă май (хăçан?) кун ăшăтрĕ. *(Аслан.)*

Малалла учитель предложенисем парать, вĕсен çумне вĕренекенсем вăхăта кăтартакан предложенилле обстоятельствăсем шутласа тупса лартаççĕ.

1. Çуркунне çывхарать. 2. Шăнкăрчсем юрă шăратма тытăнчĕç. 3. Урам тăрăх шывсем юхма тытăнчĕç. 4. Ача-пăча пĕвесем тăваççĕ. 5. Ыттисем те кунта пухăнаççĕ. 6. Хĕвел тата хытăрах пĕçертме тытăнать. 7. Ачасем урамра хăйсене ирĕклĕн тытаççĕ. 8. Эпĕ урана йĕпетсе киле кĕретĕп. 9. Атте те мана сиввĕн кĕтсе илет.

Темăна вĕреннĕ май чарăну палли лартассипе те паллаштармалла.

1. Вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельство **-сан,-сен** тата **-сассăн,-сессĕн** аффикссемпе тăнă чух яланах запятойпа уйăрмалла.

Шăпăр сасси чарăнсан, туй юррийĕ пуçланать... *(К. Ив.)* Тухман çын тухсан, тăман тухать, тет. *(Ват. с.)* Çумри тус шанчăклă пулсассăн, асап та, хĕн те хăруш мар. Çапах та Арçук чăтаймарĕ, кăшт тăрсан, çырăва вăрттăн вуласа пăхрĕ. *(Турх.)*

2. Предложенилле обстоятельствăсем, предложени варринче тĕп членсемпе кĕçĕн членсене уйăрса тăраççĕ пулсан, вĕсене ик енчен те запятойпа уйăраççĕ.

Сехре Иванĕ, конюхран кăларнă хыççăн, пĕр вăхăт хушши колхозра нимле ĕçе те хутшăнаймарĕ. *(Турх.)* Çакăн пек вăхăтра, тĕнчере пурнăç чĕрĕлнĕ чух, савăнса кăна пурăнмалла та. *(Илп.)* Çутăлсан вара, каç пуличчене, ним палăртмасăр, шăппăн, лăпкăн выртма тиврĕ. *(Алент.)*

Вăхăт юлсан, синтаксисла разбор тумалла. Т ĕ с л ĕ х с е м:

1. Укахви комсомолка, Ятман секретарьте ĕçленĕ чух, вăрçă умĕн çеç кĕнĕччĕ. *(Турх.)* 2. Каç кӳлĕм Кĕтерне фермăна кайсан, Михала вулама тесе сĕтел сунтăхне пуçтарса хунă хаçатсене пăхса тухрĕ. *(Турх.)* 3. Тĕттĕм пулас умĕн çемьери çынсем пурте сĕтел хушшине ларчĕç. *(Турх.)* 4. Электростанци тунă çĕре халăх пухăннăçемĕн пухăнса пырать. 5. Ярмуш таврăннă чухне амăшĕ килте çукчĕ... *(Турх.)* 6. Ятман каçхи апат вăхăчĕ çитиччен пĕр канмасăр ĕçлерĕ. 7. Ял патне çывхарса пынăçемĕн унăн илемĕ куç умне ытларах тухса пырать. 8. Тинĕс хĕррине эпир каç пулас умĕн çитрĕмĕр. *(Алент.)* 9. Изотов пуç тайнă чухне халăх пуç тайса илет... *(М. Ухс.)* 10. Кулаксем, вăрах ĕçсе сĕрлесе ларнă хыççăн, пасар урамне килсе тухрĕç. *(М. Ухс.)* 11. Вăйлă çумăр çунăранпа виçĕ кун иртрĕ. 12. Малтин библиотекăна çитиччен çырăвне кĕсъинчен кăларса тепĕр хут вуласа тухрĕ. *(Кр.-Асл.)* 13. Хĕрлĕ хăмачпа витнĕ сĕтел умне виççĕн тухса тăрсан, шкул тулли халăх çĕлĕкĕсене хывса ура çине тăчĕ. *(Кр.-Асл.)* 14. Иртенпех ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн ирĕклĕн выртса канма ытла та лайăх. *(Аслан.)*

## ТĔЛЛЕВЕ ПĔЛТЕРЕКЕН ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВАСЕМ.

Тĕллев обстоятельствине аса илнĕ хыççăн çак тема çине куçмалла. Темăна ăнлантарнă чух усă курмалли тĕслĕхсем:

1. Ирĕклĕ кун-çул тумашкăн
   Тăрăр пурте харăс! (Ç. М.)
2. Ман çĕршывăн анлăшне тухмашкăн
   Çăмал мар çунатлă кайăка. *(Хус.)*
3. Коммунизмăн çуртне хăвăртрах тăрлама
   Кун-çĕре шăнăçми ĕç эп илнĕ. *(Хус.)*
4. Çак пурнăçра çын çутăрах çунасшăн,
   Вăл тинĕсре маяк пек курăнасшăн,
   Кам тиркĕ пархатарлă ĕмĕте? *(Хус.)*

Плакатри тĕслĕхсене ăнлантармалла, унта тĕл пулакан тĕллеве пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсене туптармалла, вĕсен пулăвĕпе ыйтăвне уçса памалла.

Тĕллеве пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем инфинитивран тата **-шăн, -шĕн** хыççăмахлă причастирен пулаççĕ, **мĕншĕн? мĕн тума?** ыйтусем çине ответлеççĕ.

— Мĕн тумашкăн тăрăр?

— **Ирĕклĕ кун-çул тумашкăн** тăрăр пурте харăс! *(Ç. М.)*

Тĕллеве пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсене аялтан хĕрлĕ сăрпа туртса паллă тумалла. Шухăш енчен тĕллев обстоятельствви калаканăн ĕмĕт-шухăшне, ĕмĕт-туртăмне, тĕллевне, пулакан е пулас ĕçе уçса парать. Илнĕ предложенире поэт ирĕклĕ кун-çул тума чĕнсе каланине кăтартать.

Класрах, материала ăнлантарнă май, 76-мĕш хăнăхтарăва тутармалла та тĕллеве пĕлтерекен обстоятельствăсене туптармалла. Е хăйсене çак темăпах тĕслĕхсем туптармалла, вĕсен пулăвĕпе ыйтăвне уçса партармалла. Е урăх тĕрлĕ ĕçсем те тутарма пулать. Ун пек ĕçсенчен: карточкăпа ĕçлесси, предложенисене разбор тутарасси, пысăк мар изложени е сочинени, ăнлантару е творчество диктанчĕсем çыртарасси.

Класра разбор тума панă тĕслĕхсем.

1. Мăрсипе Ваçли хăйсен телейне тупассишĕн ирĕксĕрлĕхпе кĕрешме тăрăшнă. *(Кр.-Асл.)* 2. Çитмĕл çулхи асаннен пукан пек çеç мăнукĕ хăйĕнчен пысăк чула йăвантарасшăн тĕрмешет. *(Тукт.)*

3. Атте пачĕ мана вĕри вутлă чунне
Сынçиен тăшмана пĕтермешкĕн.
Эпĕ тăтăм унпа урнă йытă умне
Аттерен вĕренсе çĕнтермешкĕн.

4. Çичĕçуллăх планра халăх сывлăхне сыхлас тата халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçе малалла лайăхлатса пыма палăртнă. 5. Савăнăçлă хыпар пĕлтернĕшĕн сана чунтанах тав тăватăп. 6. Шерккейпе Пикмăрса малти ретре пулас ĕмĕтпе хăйсем патĕнче йĕрке пăхакансем пулма килĕшрĕç. *(Илп.)*

## ПИРКЕНЕ ПĔЛТЕРЕКЕН ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВАСЕМ.

Пирке обстоятельствине аса илмелле те пиркене пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсен пулăвĕ çине куçмалла.

Тĕслĕхсем:

1. **Ăшăран** курăксемпе калчасем часах симĕсленчĕç
2. **Калаçнипе** вĕсем яла çитнине те сисмерĕç.
3. Ача **хăратнăран** пĕр сăмах та калаймарĕ.

Тĕслĕхсенчи **ăшăран, калаçнипе, хăратнăран** сăмахсем

предложенири ĕç мĕнле сăлтавпа пулнине пĕлтереççĕ, вĕсем **мĕн пирки? мĕншĕн?** ыйтусем çине ответлеççĕ. Кусем пурте пирке обстоятельстви пулаççĕ.

Пирке обстоятельствине анлăлатсан, предложени форми парсан, вĕсенчен предложенилле обстоятельствăсем тума пулать.

1. **Çурхи çанталăк ăшăран** курăксемпе калчасем часах симĕсленчĕç.

2. **Çичĕ çуллăх план çинчен калаçнипе** вĕсем яла çитнине те сисмерĕç.

3. **Тулта такам хăратнăран** ача пĕр сăмах та калаймарĕ.

Кашни предложенилле обстоятельствăрах подлежащи вырăнĕнчи сăмах пур, сказуемăй вырăнĕнчи сăмах вара (вăл причастипе паллă ятĕнчен пулать), пĕрлелĕх тата туху падежĕнче тăрса, тепĕр предложенин сказуемăйне пăхăнса, сăлтавне уçса парать.

мĕншĕн?

**Çурхи çанталăк ăшăран** курăксемпе калчасем часах симĕсленчĕç.

Пиркене пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăра сказуемăй вырăнĕнчи иртнĕ причасти хыççăн **пирки, тăрăх** хыççăмахсем те пулаççĕ.

**Концерт пуçланнă пирки** зала кĕмелли алăка хупнă. *(Арт.)* **Шухăша вĕçме чаракан сас-чӳ пулман пирки** Николай хурал пӳрчĕ умĕнче выртакан тарăн кĕрт патне çитиччченех иртсе кайнисене асе илсе пычĕ. *(М. Ухс.)* Директор кăтартнипе шкул ачисем сад йĕри-тавра чăрăшсем лартрĕç.

Синтаксисла разбор валли панă тĕслĕхсем:

1. Юнашарах сад пулнăран кунта панулми шăрши кĕрет. 2. Алăкĕ аял пулнăран эпĕ пĕшкĕне-пĕшкĕне пӳрте кĕретĕп. 3. Юр тултарнипе вăрман çав тери чăтлăх пек туйăнать. 4. Ватăлнипе асатте вăйран тайăлнă. 5. Хырăмĕ пирки çурăмсăр юлнă, тет. 6. Чĕркуççине питех чăнкă çĕклейменнипе вăл сылтăм урипе кăштах такăнса ӳкмерĕ. *(Илп.)* 7. Ху пĕлетĕн: кăçал çумăр пулманран утă-çаран типсе, çунса кайрĕ, тырпула пăр çапса çĕмĕрчĕ. *(Арт.)* 8. Шурă тутăр çыхнăран унăн шуранкарах пичĕ пушшех шуранка курăнать... *(Арт.)* 9. Çемйи те, ачи-пăчи те пулманран, вăл кашни студентах е студентканах тăван ачи вырăнне хума хатĕр... *(Арт.)* 10. Архитектор палăртнă тăрăх пирĕн колхоз икшер хутлă çуртсем тума тытăнать. 11. Сăмахран, колхозниксем хăйсен хуçалăхĕнчен государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас ĕç пирки пирĕн мĕн тумалли çинчен Маркс е Энгельс произведенийĕсенче кăтартусем шырани вăл кулăшла ĕнтĕ. *(Н. С. Хрущёв.)* 12. Хумккана арăмĕ хăйнс ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн Сăпани кăмăлĕ пăртак уçăлчĕ. *(Асл.)*

## МĔНЛЕЛĔХЕ ПĔЛТЕРЕКЕН ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВĂСЕМ.

Плакат çинче çакăн пек тĕслĕхсем панă:

1. Ачасем, **ывăçласа сапнă пăрça пек,** чăл-пар саланса пĕтрĕç. *(Асл.)*

2. **Вăрман шавне хуплас пек,** пыратъ Сетнер юрласа. *(К. Ив.)*

3. Лаç алăкĕ патне кайса выртнă Кампур, **кантур çыннисем паллана пекех,** пĕрре те вĕрмерĕ. *(Асл.)*

4. **Хур кĕтĕвĕ килсе капланнă евĕрлех** шавласа тăрать пасар. *(Асл.)*

5. Чăнах та, **кăçал сĕт-çу туса илнĕ чухлĕ** пирĕн колхоз вицĕ çул каялла туса илеймен.

Плакатри тĕслĕхсемпе ĕçленĕ май уйрăммăнах хулăн саспаллипе пичетленĕ сăмахсем çинче чарăнса тăраççĕ.

Çак хулăн саспаллипе палăртнă сăмах ушкăнĕсем, предложени евĕрлĕ пулса, сказуемăя ăнлантарса параççĕ тата **мĕнле? мĕн чухлĕ?** ыйтусемпе ыйтăнаççĕ.

Учитель: Предложенири мĕнле кĕçĕн член çав ыйтусемпе ыйтăнать-ши?

Вĕренекен: Определенипе мĕнлелĕх обстоятельстви.

Учитель: Тĕрĕс. Анчах кунта определени пулма пултарать-ши?

Вĕренекен: Çук. Кунта глагол-сказуемăйне ăнлантарса параççĕ. Çавăнпа та кусене мĕнлелĕх обстоятельстви теме пулать.

Учитель: Çапла, кунта мĕнлелĕх обстоятельстви пулать, анчах çак обстоятельство ытти обстоятельствăсенчен мĕнпе уйрăхларах.

Вĕренекен: Ку анлă тата предложени евĕрлĕ.

Учитель: Тĕрĕс. Плакатри аялтан туртнă сăмах ушкăнĕсем — мĕнлелĕхе пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем пулаççĕ.

Пĕрремĕш предложенире — **ывăçласа сапнă пăрçа** — ят предложени пулса тăрать, ун çумне **пек** хыççăмах хушатпăр та мĕнлелĕх пĕлтерĕшлĕ тăватпăр, çак мĕнлелĕхе пĕлтерекен предложенилле обстоятельство **саланса пĕтрĕç** глагол-сказуемăя мĕнлелĕх енчен ăнлантарса парать, **мĕнле?** ыйту çине ответлет.

Мĕнле саланса пĕтрĕç — **ывăçласа сапнă пăрçа пек.**

Иккĕмĕш предложенире **вăрман шавне хуплас тени** — сăпатсăр предложени, **хуплас** причасти-сказуемăй хыççăн каллех **пек** хыççăмах хутшăнать те предложенилле обстоятельство тăвать, тепĕр предложенири **пырать** глагол-сказуемăя мĕнлелĕх енчен ăнлантарса пăхăнса тăрать, çав ыйту çинех ответлет.

Виççĕмĕш предложенире — **кантур çыннисем паллансă** — сăпатлă предложени: **çыннисем** — подлежащи, **паллансă** — сказуемăй, иртнĕ причастирен пулнă, ун хыççăн каллех **пек** хыççăмах хутшăннă, вăл **-ех** вăйлатакан татăкпа тăрать.

Çак меслетпех ытти предложенисенчи предложенилле обстоятельствăсен пулăвĕпе пĕлтерĕшне уçса памалла. Юлашкинчен, плакатри тĕслĕхсем тăрăх мĕнлелĕхе пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем çинчен пĕтĕмлетмелле, вывод тутармалла. Вĕренекенсене хăйсене тĕслĕхсем тутармалла, аванрах тĕслĕхсене доска çине çыртарса разборламалла. Класрах учебникри 78-мĕш хăнăхтарăва тутармалла та унтах тĕрĕслемелле, ответне кура, журнал çине паллăсем лартса хакламалла.

Малалла учитель мĕнлелĕхе пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсенче чарăну палли лартассипе паллаштарать те ăнлантару çыру ĕçĕ ирттерет. Т е к с т:

1. Çынсем, карташне васкавлă кĕнĕ пекех, урамалла та хăвăрт тухса кайрĕç. *(Илп.)* 2. Халăх, самантлăха сывлама чарăннă пек, мăштах, унтан тин, тĕлĕннĕ майлă, ахлатса илчĕ. *(Илп.)* 3. Çунакан вучаха кĕрсе кайнă пек вĕтеленсе ӳкрĕ Макар амăшĕ. *(Асл.)* 4. Темĕнле вăрахăн сăрăлтатса пĕçерсе таракан çан-çурăмĕ, çемçе кăпăк çине кĕрсе выртнă евĕр, çепĕççĕн тĕлкĕшет. *(Асл.)* 5. Серепене лекнĕ кайăк пек тăр-пĕччен тăрса юлнă Мики кунсерен тăраниччен çывăрать. *(Асл.)* 6. Макар телейне тенĕ пекех, ку чăваш вырăсла чухлаканскер пулчĕ. *(Асл.)* 7. Арăш-пирĕш шăв-шав пуçланчĕ пек, арманĕсем шăтăр та шатăр шатăртатрĕç. *(Асл.)* 8. Кăнтăрлахи хĕрӳ хĕвелпе типсе кайнă улăмсем, краççын сапнă пек, парлатса хыпса илеççĕ. 9. Машинăсем тăвасси, иртнĕ вăхăтри пекех, хăвăрт аталанса пымалла. *(Н. С. Хрущёв.)*

## УСЛОВИЕ ПЕЛТЕРЕКЕН ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ОБСТОЯТЕЛЬСТВАСЕМ.

Ку темăпа вĕренекенсене пуçласа паллаштаратпăр, мĕншĕн тесен условие пĕлтерекен кĕçĕн член — обстоятельство çук.

Условие пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем пулăвĕпе пĕлтерĕшне уçса пама плакат çинчи çак тĕслĕхсемпе усă курмалла:

1. Нумая хапсăн, сахалли те пулаймĕ, теççĕ.
2. Кашкăртан хăрасан, вăрмана та каяймăн. *(Ват.с.)*
3. Пулă çиес тесессĕн, шыва кĕрес пулать. *(Ват. с.)*
4. Вăй хурсан, ĕç пулать. *(Ват. с.)*

Тĕслĕхсемпе ĕçленĕ май вĕренекенсем **хапсăнсан, хăрасан, тесессĕн, хурсан** сăмахсем çинче ытларах чарăнса тăраççĕ.

Пулăвĕ енчен илсен, вăл сăмахсем глагол тĕпĕ çумне **-сан, -сен, -сассăн, -сессĕн** аффиксем хушăнса пулнă деепричастисем. Форми тĕлĕшĕпе вĕсене вăхăта кăтартакан деепричастисем теме пулать, анчах ун пек вывод тума иртерех-ха. Учитель малалла вĕсен пĕлтерĕшне предложенин тĕп шухăшĕ урлă çеç пĕлесси çинче чарăнса тăрать.

Акă пĕрремĕш предложение илер.

**Нумая хапсăнсан, сахалли те пулаймĕ, теççĕ.**

Предложенилле обстоятельство — **нумая хапсăнсан,** вăл **пулаймĕ** глагола пăхăнса ăнлантарса парать, **мĕнле майпа?** ыйту çине ответлет.

Кунта вăхăт обстоятельствинчи пек **хăçан?** ыйтăва лартма май та çук.

Сахалли те пулаяс çукки ĕç условинчен — нумая хапсăнниничен килнĕ, анчах вăхăтĕнчен мар. Çакна май ку условие пĕлтерекен предложенилле обстоятельство.

Условие пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăна вăхăта пĕлтерниничен тата тепĕр майпа та уйăрса илме пулать: вĕсен глагол-сказуемăйсем пурлă формăра тăраççĕ пулсан, çуклă формăри глаголпа ылмаштармалла та тӳнтерле пĕлтерĕшлĕ предложени пулса тăрать.

**Нумая хапсăнмасан, сахалли те пулайĕ, теççĕ.**

**Кашкăртан хăрамасан, вăрмана та кайăн.**

Вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем кун пек ылмашăнмаççĕ.

**Пĕчĕк юханшыва курсан, вĕсем ытла та пăшăрханчĕç.**

Çакăнти глаголсене çуклă формăна куçарсан, шухăш пачах пăтравлă пулать.

**Василий Петрович вулама чарăнсан, пӳртре пĕр кана шăпах пулчĕ.** *(Аслан.)*

Малалла вĕренекенсен пĕлĕвне çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлемелле, ăна валли условие пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсемпе тĕслĕхсем памалла.

1. Çăвартан тухсан, алăкран тухать, теççĕ.
2. Хĕрхенсен, хĕрлĕ йытă çиет, теççĕ.
3. Çамрăка чармасан, ватта вăй килет. *(Ват. с.)*
4. Пĕр куна кайма тăрсан, çичĕ кунлăх хатĕрле *(Ват. с.)*
5. Пуçĕнчен вĕçертсен, хӳринчен ярса тытас çук. *(Ват. с.)*
6. Патакпа çапсан, упа та ташлама вĕренет, теççĕ.
7. Ялан ăспа çӳресен, ялти ватă ятламĕ. *(Ват. с.)*
8. Еçлемесен, нимĕн те пулмасть. *(Асл.)*
9. Урасем утсан, алăсем тăрантараççĕ. *(Ват. с.)*
10. Вырăссемпе пĕрле тăрсан, вăрçăра та çĕнтерĕн, пурнăçра та пултарăн. *(Арт.)*

## ТЕМИÇЕ ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ЧЛЕНЛА ПРЕДЛОЖЕНИ.

Пĕр хутсăр предложени тытăмĕнчен темиçе предложенилле член пулнине палăртмалла. Синтаксисри çакăн пек явлени вăл тăван чĕлхе стройĕ кăткăссипе пуяннине кăтартса парать.

Чăваш çынни темиçе шухăша пĕр предложенире кăтартса пама пултарать, ăна ун пек тума предложенилле членсем пулăшаççĕ.

**Павел, тарăн шухăшпа, пысăк ĕмĕтпе калама вĕреннĕ сăмаха каласа янă хыççăн, хăйĕн чĕри çапăçу савăнăçĕпе тулнине туйса илчĕ.** *(М. Г.)*

Çак предложенире темиçе вак шухăш.

Пĕрремĕшĕ — **Павел тарăн шухăшпа, пысăк ĕмĕтпе калама вĕреннĕ**; иккĕмĕшĕ — **вăл сăмаха каласа янă**; виççĕмĕшĕ — **унăн чĕри çапăçу савăнăçĕпе тулнă**, тăваттăмĕшĕ — **ăна вăл туйса илчĕ.**

Çак уйрăм шухăшсене пĕрлештерсе пĕр предложенире каланă. Кашни вак шухăшĕ хăйне май предложени. Вĕсене пĕр предложение кӳртес тесен, тĕрлĕрен майпа çыхăнтарса пĕрлештермелле пулнă. Кашни вак предложени çак предложение предложенилле член пулса кĕнĕ.

Кунта тĕп шухăша кăтартакан предложени — **Павел туйса илчĕ.**

а) Мĕн туйса илчĕ? — **хăйĕн чĕри çапăçу савăнăçĕпе тулнине** — дополнени пулакан предложенилле член.

ă) Хăçан туйса илчĕ? — **сăмаха каласа янă хыççăн** — вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельство.

б) Мĕнле сăмаха? — **тарăн шухăшпа, пысăк ĕмĕтпе**

**калама вěреннě** (сăмаха) — определени пулакан предложенилле член.

Кунта пěр предложенире виçě предложенилле член, вěсем предложение тěрлě енчен ăнлантарса параççě.

Малтанхи икě предложенилле член **мěне?** тата **хăçан?** туйса илни çинчен каласа парать, виççěмěшě вара иккěмěш предложенилле члена мěнлелěх енчен кăтартать. Кун пеккине хутăш предложенилле членлă предложени теме пулать.




Пěр йышши предложенилле членсем, тěрлě çыхăнуллă предложенилле членсем, умлă-хыçлă çыхăнуллă предложенилле членсем пулаççě.

Темăна ăнлантарма çакăн пек тěслěхсем памалла.

1. Çурхи тěнче вăраннă чух,
Хаваслă кун шăраннă чух
Чун савăнать. *(Тукт.)*

2. Ыраш лайăх пулнă çěрте вырса илнě ывăçа туртса кăларнă чух ыраш улăмěн сарă тутăхěпе пěрле вěри сывлăш пите сěртěнет. *(М. Ухс.)*

3. Автансем тěрлесе тунă питшăллипе витсе çыхнă уйран пуракне тытса ларакан Иркка çул тăршшěпе пěр сăмах та чěнмерě. *(М. Ухс.)*

Кашни предложени çинче чарăнса тăмалла; вěсенче предложенилле членсем туптармалла та предложенири пěр-пěр члена епле ăнлантарса çыхăнса тăнине паллă тумалла, схема туса кăтартмалла.

Пěрремěш предложение илсен, мěн куратăр-ха? **Чун савăнать** предложение вăхăта пěлтерекен икě предложенилле обстоятельство **хăçан?** ыйтура тăрса, **савăнать** глагол-сказуемăя вăхăт енчен ăнлантарса параççě, пěр йышши предложенилле членсем пěр енлě çыхăнура тăраççě.




Малалла иккĕмĕш предложение илетпĕр.

Тĕп предложени вырăнĕнче — **ыраш улăмĕн сарă тутăхĕпе пĕрле вĕри сывлăш пите сĕртĕнет.**

Пĕрремĕш ыйту: **хăçан сĕртĕнет? вырса илнĕ ывăçа туртса кăларнă чух** — вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельство.

Иккĕмĕш ыйту: **ăçта сĕртĕнет? — ыраш лайăх пулнă çĕрте** — вырăна пĕлтерекен предложенилле обстоятельство.

Çапла май прадложенири **сĕртĕнет** глагол-сказуемăя вăхăта тата вырăна пĕлтерекен предложенилле обстоятельствăсем тĕрлĕ енчен ăнлантарса параççĕ. Учитель схемăра çак предложенин çыхăнăвне туса кăтартать.

Унтан виççĕмĕш предложение илмелле. Кунта определени пулакан предложени членĕсем, пĕр-пĕрне ăнлантарса парса, умлă-хыçлă çыхăнура тăраççĕ. Ку предложенин схемине те доска çине çырса памалла.

Ирккa çул тăршшĕпе пĕр сăмах та чĕнмерĕ
Мĕнле Ирккa?
уйран пуракне тытса ларакан
↑ мĕнле уйран пуракне?
питшăллипе витсе çыхнă
↑ мĕнле питшăллипе?
автансем тĕрлесе тунă

Юлашкинчен, пĕр предложенилле член тепĕр предложенилле член составне кĕрекен тĕслĕхсемпе паллаштармалла.

**Социализм вăхăтĕнче производство ӳснĕ чухне халăх массисен ыйтăвĕсене тивĕçтересси чакса пыма пултараймасть.** *(Н. Хрущёв.)*

**Рабочисене Майăн пĕрремĕш праçникне уявлама чĕнекен листовкăсем ирсеренех хӳмесем çинче çыпçăнса тăни курăнать.** *(М. Г.)*

Хăшпĕр чухне çакăн пек тĕслĕхсем те курма пулать: предложенилле членсем предложенири тĕрлĕрен сăмаха ăнлантарса тăраççĕ.

**Таврăннă чухне каснă пӳрни туртса ыратнипе Иркка лаша çине утланаймарĕ, ăна ана çине çавăтсах çитерчĕ.** *(М. Ухс.)* **Çырма хĕррине лаша шăварма аннă кӳршĕ ачи, пĕррехинче, çаралса кайнă çĕлĕк пылчăк ăшĕнче выртнине курнă.** *(Уяр.)* **Шыв ăсма каякан хĕрсем, хитре каччă курсан, хĕрелсе каяççĕ.** *(Уяр.)*

Вĕреннине çирĕплетес тĕлĕшпе учитель учебник тăрăх 86-мĕш хăнăхтарăва класрах тутарать. Ачасене тĕрĕс сасăпа кирлĕ чарăну туса вулама хăнăхтарать.

Юлашкинчен вăл тепĕр хут темиçе предложениллĕ членлă предложенисем пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ çинче чарăнса тăрать, çыхăнăвне палăртать, пĕтĕмлетсе хăварать.

Килте тумалли ĕç. Çак предложенисен схемине туса килмелле, вĕсен çыхăнăвне ăнлантарса памалла. Вăл предложенисене кирлĕ сасăпа, чарăну туса вулама вĕренмелле.

1. Халăх çисе тăраннă çĕре ачасем яла каймалли çул çине пушăсемпе кайса тăчĕç. *(Уяр.)* 2. Те ирпе тăраниччен апат çименрен, те çул çинче шăрăх пуснăран, унăн *(Макарăн)* вăйĕ пĕтĕмпех пĕтсе çитрĕ. *(Аслан.)* 3. Макарпа учитель çапла майĕпен калаçса ларнă вăхăтра вĕсем патне аслă урамра пурăнакан Савалей пырса кĕчĕ. *(Аслан.)* 4. Сывлăм хытă ӳкнĕрен çан-çурăма сивĕ çапсан, вăл, Андрей çумнерех шуса ларса, шинель аркипе пĕркенчĕ... *(Арт.)* 5. Ирех вăраннă акăшсем çырансене хупласа тăракан тĕмĕсем хушшинчен мăнкăмăллăн ярăнса тухнă. *(Пушк.)* 6. Çурçĕртен вĕрекен çилсемпе аманса хутланнă йывăçсемпе витĕннĕ тусем, хăйсен тӳписене картах сулса, пĕлĕтри сенкер пушхирелле çĕкленнĕ... *(М. Г.)* 7. Слободкăра кăвак чернилпа çырнă листовкăсем пăрахса çӳрекен социалистсем çинчен калаçнă. *(М. Г.)*

## ТЕМИÇЕ ПРЕДЛОЖЕНИЛЛЕ ЧЛЕНЛА ПРЕДЛОЖЕНИСЕНЧЕ ЧАРĂНУ ПАЛЛИСЕМ ЛАРТАССИ.

Вĕренекенсене ку темăна хăйнех уйрăм сехетре вĕрентмелле, мĕншĕн тесен темиçе предложенилле членлă предложенисен пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен ăнлантарма чылай вăхăт кирлĕ.

Темăна плакат тăрăх е ăнлантару диктанчĕ иртternĕ май вĕрентме аванрах.

Плакат тăрăх ăнлантарма çакăн пек тĕслĕхсем сĕнетпĕр.

1. Юлташу герой пулсассăн,
Героя çĕршыв савсассăн,
Ан кĕвĕç. *(Юрă.)*

2. Тăван хулинче пурăннă чухне Долбиловпа Ананьева хăйсене иккĕшне пĕр шкула е, ун пек май килмесен, çывăхрах шкулсене вырнаçтармалла тутарас пирки чылай тăрăшса пăхнă. *(Элк.)* 3. Çырма тăрăх пыракан çул, хуралса ларакан лутра хăвалăхсем хĕррипе пынă хыççăн, сăрт çине хăпарчĕ. *(М. Ухс.)* 4. Гимназирен тухнă хыççăн Изосим Онисимович малалла мĕнле çулпа каяссп пирки ашшĕпе нумайччен канашласа ларнă. (*М. Ухс.*) 5. Иркка алăкран кĕнĕ чухнех Изотова хирĕç пукан çинче ларакан çынна асăрхарĕ. *(М. Ухс.)*

Тĕслĕхсене разбор тунă май чарăну палли лартни çинче чарăнса тăмалла.

Кунта чарăну палли лартасси çакăн пек виçĕ тĕп правилăпа çыхăнса тăрать: 1) пĕр йышши предложенилле членсене пĕр-пĕринчен те, вĕсем предложени варринче тăнă чухне ытти членсенчен те запятойпа уйăраççĕ. (1-мĕш предложение пăх.) 2) Предложенире темиçе пĕр йышши мар предложенилле член пулсан е деепричастилле сăмах çаврăнăшĕ пулсан, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси хăйсен правилисене пăхăнать. (2—3-мĕш предложенисене пăхăр.) 3) Пĕр предложенилле член тепĕр предложенилле член составне кĕрет пулсан, вĕсене пĕр-пĕринчен запятойпа уйăрмаççĕ. (4—5-мĕш предложенисене пăхăр.)

Е чарăну палли лартма вĕрентес тĕлĕшпе ăнлантару диктанчĕ çыртармалла, ăна çыртарнă май чарăну палли лартассипе паллаштарса хăнăхтарса пымалла.

Диктант валли тĕслĕхсем.

1. Пÿрт умĕнче çаралса юлнă сирень тĕмĕ ăшĕнче хĕвел анас умĕн çерçи ушкăнĕ чĕриклетет, çул хĕрринчи çÿп-çап çинче кăсăясем хÿрисене вылятса чупкалаççĕ. 2. Хура сăранпа тыттарнă пысăк та йывăр алăка уçсанах, Иркка умне анкарти пек сарлака пÿлĕм тухса тăчĕ. *(М. Ухс.)* 3. Изосим Онисимович нихçан та хăй ашшĕне урлă пулса курман, унăн сăмахĕсенчен тухман, вăл мĕн каланине асран яман, ăс çивĕчлĕхĕпе вăй-хал тĕрекĕ илес енчен те ашшĕ вĕрентнине çирĕп тытса пынă... *(М. Ухс.)* 4. Чÿречерен анакан хĕвелĕн каçхи çути ÿкнĕ вăхăтра Тимахви тÿшек çинче вăранса кайрĕ, урайĕнче çÿçне сапаласа пăрахса çывăракан Лявука курчĕ. *(М. Ухс.)* 5. Илемлĕ калаçса тĕлĕнтерме тăрăшакан çăмăлттай Лявука çиленсе, Тимахви ним тума пĕлмен енне пÿрте йĕри-тавра пăхса ларчĕ. *(М. Ухс.)* 6. Юлашки сăмах илтсен, Бурцев пит-куçне йÿççĕн пĕркелесе, сăмсипе тулхăрса илчĕ. *(Элк.)* 7. Иртнине хĕрхенни, уншăн пăшăрханни усăсăр вăл. Кăмăла хавшатни, чĕрене йăшăклатни этемшĕн çав тери сиенлĕ *(Элк.)* 8. Вăрман тĕлне çитсен, вăл тĕтре ластăкĕсем пĕр тапхăра

чарăнса тăнă пек, унтан, ерипен хусканса, таçта çанталăк хĕрринех анса ларнă пек туйăнаççĕ. 9. Лайăх палласа çитсен, çав сынĕ лайăх иккенне пĕлсен, уншăн вара хăй чунне кăларса пама та хатĕрех. *(Элк.)* 10. Ку ĕç пĕтĕм уйри халăх чунне, аçа çапса кисретнĕ пек, хаяррăн çӳçентерсе ярать. 11. Хваттерелле кайнă чух Долбилов Вера Ивановнăна хăйсен кружокĕ çак кĕртен пуçласа вăйлăн ĕçлеме пуçласси çинчен каласа пачĕ тата Сормовăран Бурцев ятлă рабочи килни çинчен, вăл, революци çине рабочи класс енĕпе пăхса, уншăн çирĕппĕн тăни çинчен пĕлтерчĕ. *(Элк.)* 12. Пысăк Унтюк, Кавĕрле тата ытти çĕрлĕ хресченсем те, хăйсене майлă вăхăт çитессе кĕтсе, ку тапхăра чунсăр пек, ниçта тухмасăр, курăнмасăр пурăнаççĕ. *(Элк.)* 13. Шухăш-ĕмĕтсене малалла ярсан, иртнишĕн кулянасси вăл хăех сирĕлсе каять. *(Элк.)*

Тĕслĕхсене йышлă панă, учителĕн вĕсенчен хăйне ытларах кирлине суйласа илсе çыртармалла.

## СОЮЗСĂР ХУТЛА ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Союзлă хутлă предложенисене ачасем вĕреннĕ ĕнтĕ, вĕсенче чарăну паллисем лартассине те пĕлеççĕ. Халĕ вĕренекенсене союзсăр хутлă предложенисенче чарăну палли лартма хăнăхтарса пымалла. Ку ĕçе индукципе дедукци меслечĕпе усă курса тумалла. Союзсăр хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси вăл предложенисен пĕлтерĕшĕпе тата интонаципе çыхăннă. Хутлă предложение кĕрекен кашни хутсăр предложениех калань сасса антарса пырса, кăштах чарăнса тăмалла, малалла тепĕр предложение каламалла. Çак предложенисем хушшинчи чарăнса тăнă тапхăра çыру ĕçĕнче, предложенин шухăшне кура, пĕр-пĕр чарăну палли лартса палăртас пулать. Союзсăр хутлă предложенире чарăну паллисем тĕрлĕрен пулаççĕ: запятой, точка запятой, двоеточи тата тире.

### ЗАПЯТОЙ ТАТА ТОЧКА ЗАПЯТОЙ ЛАРТАССИ.

Тĕслĕхсем:

**а) Хĕл иртрĕ, çуркунне çитрĕ, колхозниксем хирти ĕçсене тытăнчĕç.**

**ă) Сарай сулхăнĕнче кăшт юр юлнă, вăл та тĕл-тĕл таткаланнă, йĕлтĕр йĕрĕ çаплах сад урлă каçать-ха...**

**б) Вăрмансенче мăйăр, йĕкел тула пуçларĕ, пилеш хĕрелчĕ; садсенче панулми тутланса çитрĕ, чие çырли пиççе хăмăрланчĕ, тăкăнма тытăнчĕ, китайкăна хĕрлĕ тĕс çапрĕ; пахчасенче купăста пуçĕ чăмăртанчĕ, çĕрулми чăх çăмарти пысăкăш çитĕнчĕ, хĕвелçаврăнăш сарă пуç кăшăлĕ тăхăнчĕ...** *(Арт.)*

в) **Ватă йăмрасем сивĕпе шартлатни, таçта çуна сасси кăчăртатни илтĕнет; каç еннелле сулăннă хĕвел икĕ хăлхаллă; йывăçсем çинче юр пĕрчисем ёлка çинчи пĕчĕкçеç лампочкăсем евĕр йăлтăртатаççĕ; пăрсăмсаран вичкĕн çил вĕрет.** *(Арт.)*

Хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе шухăш тĕлĕшĕпе тачăрах çыхăннă тата вĕсен хушшинчи чарăнăва кĕскерех туса каланă чухне запятой лартса уйăраççĕ.

Учитель малтанхи икĕ тĕслĕхе илет. Пĕрремĕш предложенире пĕр ĕç хыççăн тепĕр ĕç пулса пынине кăтартать. Предложенисем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнура тăраççĕ, кашни предложени хыççăнах пысăк мар чарăну пулать. Çавăнпа та вĕсен хушшине запятой лартнă.

Иккĕмĕш предложенире автор çурхи юрпа çыхăннă картинăна кăтартса парасшăн: ăна валли вăл виçĕ предложени илет, виççĕшĕ те пĕр-пĕринпе шухăш тĕлĕшĕпе те, интонаци енчен те таччăн çыхăнса тăраççĕ, каллех вĕсен хушшине запятой лартнă. Малалла, виççĕмĕшпе тăваттăмĕш предложение пăхнă май, кунта предложенисем хушшине мĕншĕн точкăпа запятой лартни çинчен ăнлантарса хăвармалла.

Виççĕмĕш предложенире автор çимĕçсем пулса çитни урлă кĕркунне сăн-сăпатне пĕр анлă союзсăр хутлă предложенипе кăтартса парать, чарăну паллисенчен виçĕ çĕре точкăпа запятой лартса уйăрать.

Çак точкăпа запятоя автор ăнсăртран лартман. Автор кĕрхи çимĕçсене виçĕ пая пайлать: малтан вăрманта пулакан мăйăр, йĕкел, пилеш çинчен калать, ăна вăл икĕ предложенире çырса парать те вĕсем хыççăн точкăпа запятой лартать; унтан садра ӳсекен панулми, чие çырли, китайка çинчен сăнласа парать, вĕсене кашнинех уйрăм предложенире çырса кăтартать те вĕсем хыççăн точкăпа запятой лартать; юлашкинчен вара пахчари купăста, çĕрулми, хĕвелçаврăнăш пирки каллех виçĕ предложенипе çырса кăтартать.

Пĕтĕмĕшпе сакăр хутсăр предложени, вĕсем пĕр-пĕринпе союзсăр çыхăннă, пĕтĕмĕшпе тăваттăмĕш хутсăр предложенисенче пĕр йышши членсене уйăрма кăтартакан запятойсем пур.

Çак хутлă предложенире запятой ахалех нумай, хутсăр предложенипе пĕр йышши членсене уйăрса тăнă çĕр-

те вăл çичĕ хутчен тĕл пулать. Çавна май автор пĕр пĕлтерĕш сĕмĕнчен (вăрман çимĕçĕнчен) тепĕр пĕлтерĕш сĕмне (садри тата пахчари çимĕçсене) уйăрса кăтартас çĕрте çырура точкăпа запятой лартса палăртать, вулакана ăнланмалла уçăмлă тăвать.

Тăваттăмĕш предложение илсен, автор кунта каç еннелле сулăннă хĕллехи çанталăка сăнласа парать. Автор кашни предложенипех хĕллехи сăнăн уйрăм ӳкерчĕкне кăтартать, шухăш тĕлĕшпе те кашни предложени вĕçленсе çитнĕ, кашниех хăйне уйрăм тăма та пултарать, çавăнпа та вĕсен хушшине точкăпа запятой лартать. Анчах автор, вĕсене пĕр пысăк картинăра кăтартасшăн пулнипе предложенисене пĕрлештерсе, пĕр союзсăр хутлă предложени тăвать.

Точкăпа запятой лартассине пĕтĕмлетсе çапла калама пулать: тачă çыхăнман союзсăр анлă хутлă предложенисенче ытти правилăпа çыхăннă запятой лартасси тĕл пулать пулсан, кашни хутсăр предложени хыççăн е пĕр пĕлтерĕшлĕ сĕме кăтартса кĕрекен предложенисем хыççăн точкăпа запятой лартаççĕ.

Правилăна çирĕплетме çакăн пек тĕслĕхсем пама юрать:

1. Тимĕр кăмака кĕрлесе çунать, унăн аяккисем хĕрсе, хĕрелсе кайрĕç; кăвак кушак урай варрине шăппăн тухса выртрĕ. *(Арт.)* 2. Çак садри кашни йывăçа çывăх паллать вăл (Çемен); кашнин вĕсен уйрăм ячĕ, паха енĕпе начар енĕ е тĕрлĕрен паллисем пур; хăшĕ миçе çултине, мĕнпе мухтавлине, мĕнле чирпе чирленине, мĕне юратнине, мĕнтен хăранине пахчаçă лайăх пĕлет. *(Арт.)* 3. Кунсем тар пек типĕ тăраççĕ, тӳпере пĕр саплăк шурă пĕлĕт те çук, хĕвел ирĕлтерсе ярас пек пĕçертет; уйра тырпул кашласа ларать, сарала пуçланă ыраш хӳми çийĕпе ăрша выляса юхать; садсенче панулмисем пысăкланнă, ир пулса çитекеннисене тутă кĕре пуçланă, хурăн çырли пиççе çитнĕ; çăка çурăлнă, ун таврашĕнче пыл хурчĕсем сĕрлеççĕ. *(Арт.)*

Çак темăпах чарăну палли лартма хăнăхтарас тĕллевпе ăнлантару е асăрхаттару диктанчĕ çыртармалла.

1. Карта хĕрринчи тирексенчен мамăк тăкăнать; сирень çеçкин тĕсĕ пĕтнĕ, халĕ вăл шупкаланса çĕтĕле пуçланă тутăра аса илтерет; акаци хутаçĕ тулса çитнĕ; панулмисем măйăр пысăкăш пулнă. 2. Улмуççи, чие, çĕмĕрт çеçкисем, шултра тăман çунă пек, çилсĕрех тăкăнса пĕтрĕç, кая юлса çурăлакан палан çеç шурă ларать-ха, анчах вăл та паян-ыранах çеçкине тăкмалла ĕнтĕ; çĕр çырли, хăмла çырли чăмăртана пуçланă, хура хурлăхан çырли чăмăртанса çитнĕ, симĕс шăрça пек, витĕр курăнать; ачасем юратса чăмлакан йӳçĕ кĕпçе ватăлнă, сарă чечеке ларнă, кантăр вăрри пек вĕтĕ çеçкисем аякран

пĕр-пĕтĕм сарă çеçке еверлĕ курăнаççĕ; çаран ӳссе кайнă, часах çулма тухмалла; çĕрулми купаламалла пулнă; пĕкĕрен çӳлĕ ыраш шăркана ларнă... *(Арт.)*

Юлашкинчен тĕрĕслев ĕçĕ ирттерме пулать. Текст:

### ХĔРӲЛЛĔ УТÇИ КУНĔСЕМ ИРТРĔÇ.

Турикассем утта тирпейлĕ çулса пуçтарчĕç; Выл улăхĕ тăрăх çатан карта тытса çавăрнă йĕкĕр капансем ларса тухрĕç. Хытă анасем çинче çӳренĕ выльăх кĕтĕвĕсем симĕс каюллă улăха анчĕç.

Тырă вырма тухас умĕн, çумăрлă кунсенче, ялйыш килти вактĕвек ĕçе пуçтаркаларĕ, йĕрки-йăлипе ĕçкĕ-çикине те туса ирттерчĕ; уяр кунсенче — çĕртме пуссине тислĕк тăкрĕ.

Çанталăк шăрăхланнăçемĕн шăрăхлатрĕ. Хуратулпа пăрça тахçанах чечеке ларчĕç; çăка çурăлчĕ; сулхăн çăкалăха кĕрсен, пыл шăршине туятăн, пыл хурчĕсем сĕрленине итлесе киленетĕн; пахчара çĕмĕртпе хурлăхан çырли хуралчĕç; чие, хăмла çырли, пилеш хĕрелчĕç, палан çырли çеç шуррипех ларать-ха; ир пулакан панулмисене тутă кĕчĕ. Паян-ыранах ĕнтĕ ыраш вырма тухмалла.

Çемен садри тимофеевкăна, карта хĕррипе ӳснĕ куракă çулса пуçтарчĕ, улмуççисем таврашĕнчи çума çумлаттарса, çĕрне катмаксемпе кăпкалаттарчĕ.

Лидия Филипповна вăхăтлăха хулана кайнă пирки шкул ачисене колхоз садĕнче Родин Романович хăй ĕçлеттерчĕ.

Çак кунсенче Коля Кумаркин Çеменрен уйрăлма пĕлмерĕ. Ача сад ĕçне пĕтĕм чунтан юратнине кура, Çемен ăна пикенсех вĕрентрĕ, хăйĕн пултарулăхĕпе пушшех хавхалантарчĕ. *(Арт.)*

## СОЮЗСĂР ХУТЛА ПРЕДЛОЖЕНИРЕ ДВОЕТОЧИ ЛАРТАССИ.

Союзсăр хутлă предложенисенче двоеточи лартма вĕрентес çĕрте çакăн пек майсемпе ĕçлемелле.

1. Пиркене пĕлтерекен пăхăнуллă хутлă предложени **мĕншĕн тесен** союзсăр тăнă чухне тĕп предложенипе пăхăнуллă хутлă предложени хушшине двоеточи лартаççĕ. Вĕренекенсене ăнлантарма икĕ предложени илсе танлаштарса кăтартмалла: сулахай енче союзпа, сылтăм енче — союзсăр пулмалла.

| Союзпа | Союзсăр |
|---|---|
| **Кĕнекене юратса вула, мĕншĕн тесен вăл сан пурнăçăн прожекторĕ пулать.** | **Кĕнекене юратса вула: вăл сан пурнăçăн прожекторĕ пулать.** |

2. Ытти правилисемпе двоеточи лартассипе тĕслĕхсем илсе памалла. Кашни тĕслĕхне пăхса тухнă май мĕншĕн двоеточи лартнине кăтартмалла.

а) **Левентей ӑнланчӗ: акӑ мӗн ҫинчен калаҫасшӑн иккен ҫӗнӗ парторг унпала.** *(Турх.)*

Ку предложение анализ тунӑ май мӗн куратпӑр-ха?

Каллех союзсӑр хутлӑ предложени: пӗрремӗш предложение вуланӑ хыҫҫӑн тӳрех **мӗне?** ыйту тухса тӑрать, **ҫак** ыйту ҫине иккӗмӗш предложени ответлет.

Левентей (мӗне?) ӑнланчӗ: **акӑ мӗн ҫинчен калаҫасшӑн иккен ҫӗнӗ парторг унпала.**

Е тепӗр тӗслӗх илсе паратпӑр.

**Пӗрре** пӑхса илсех **Ятман ҫакна** (мӗне?) **асӑрхарӗ: Гариф ҫак ҫулталӑк ҫурӑ хушшинче сӑнран ытла ватӑлса кайнӑ пек...** *(Турх.)*

Иккӗмӗш предложенисем пӗрремӗш предложенисен, тӑву падежӗн **мӗне?** ыйтӑвӗ ҫине ответлесе, дополнени пулаҫҫӗ.

Е, тепӗр чухне, иккӗмӗш предложени пӗрремӗш предложенин пӗр-пӗр членне ӑнлантарса парать, вара предложенисем хушшине двоеточи лартмалла.

ӑ) **Сехрė Иванӗн пӗр ӗҫ: вӑл килте те, колхозра та выльӑх пӑхать.** *(Турх.)*

**Сехре Иванӗн халӗ ӗнтӗ пӗр ӗҫ** пулнине иккӗмӗш предложени ӑнлантарса парать: **вӑл килте те, колхозра та выльӑх пӑхать.** Иккӗмӗш предложени пӗрремӗш предложенири **пӗр ӗҫ** сӑмахсен пӗлтерӗшне кӑтартса парать.

**Унӑн йӑли ҫапла** (мӗнле?): **пухусенче кам мӗн калаҫнине, киле килсен, арӑмне каласа кӑтартать.** *(Арт.)*

Унӑн йӑли мӗнле? — **ҫапла.**

Мӗнле ҫапла? — **пухусенче кам мӗн калаҫнине, киле килсен, арӑмне каласа кӑтартать.**

Кунта та иккӗмӗш предложени пӗрремӗш предложенири **ҫапла** сӑмаха мӗнле пӗлтерӗшпе каланине ӑнлантарса парать.

б) **Пӑхатӑп: таврари ту тӑррисене шӗвек ҫутӑ ҫапнӑ.** *(Элк.)*

Хӑш чухне тӗп предложенире **кур** глагол тухса ӳкнипе **пӑх** глагол хыҫҫӑн двоеточи лартаҫҫӗ.

Ку предложение ҫапла каламалла пулнӑ: **пӑхатӑп та куратӑп: таврари ту тӑррисене шӗвек ҫутӑ ҫапнӑ.**

Вӗренекенсене двоеточи лартма хӑнӑхтармалли тӗслӗхсем:

1. Пирӗн ҫакӑн пек йӗрке: ҫын сана хисеплесен, эсӗ ӑна вунӑ хут ытла хисепле. *(Илп.)* 2. Ҫӗршывра халӗ ҫамрӑксем хӑйсем ҫине пы-

сăк ĕç илчĕç: вăтам шкултан тухсанах, производствăна е колхоза каяççĕ. 3. Крепость гарнизонĕ парăнма шутламасть: пур енчен те хамăран пăшал-пулемĕт сасси, таçта урра кăшкăрни илтĕнет. *(Арт.)* 4. Пĕр йышăну çеç пулчĕ: тăшмана парăнмалла мар, кашни патрон пĕтиччен, юлашки сывлăш тухиччен, юлашки çын юлмиччен юратнă Таван çĕршывшăн çапăçмалла. *(Арт.)* 5. Танк ăшĕнче вĕри, пăчă: броня хĕрсе кайнă. *(Арт.)* 6. Хулăн чул хӳме ишĕлчĕкĕ хыçĕнче выртакан Гаврилов хăйĕн салтакĕсем çине пăхса илчĕ: вĕсем винтовкăсемпе кăна, хăшин-пĕрин винтовки те çук, ун пеккисем аллисене граната çыххи тытнă. *(Арт.)* 7. Çĕрĕпе тинĕс хĕрринче çӳрерĕмĕр, çăвар туллин калаçрăмăр: чăвашла калаçманни нумай пулатчĕ. *(Арт.)* 8. Лена ташă-юрă пĕтермесĕрех киле таврăнчĕ: унăн урăх çи-пуç тăхăнмалла та часах пăрусем патне каймалла. *(Арт.)* 9. Çамрăксем, яланхи пекех, ыттисенчен маларах хире кайнă; вăйă сасси пĕтĕм таврана илтĕнет. *(Илп.)*. 10. Çăмăллăн вуламалла çыракан çынна уйăрса лартăр та задани парăр: кашни кун ирех сводка çырса çаптăр. *(Турх.)*

## СОЮЗСĂР ХУТЛА ПРЕДЛОЖЕНИРЕ ТИРЕ ЛАРТАССИ.

Материала ăнлантарма çакăн пек таблицăпа усă курма юрать.

| | Союзсăр хутлă предложенисем | **Вĕсен пĕлтерĕшĕ** |
|---|---|---|
| 1. | Аçа çапрĕ — çурт хыпса тухрĕ. Сунарçă персе ячĕ — мулкачă тирĕнчĕ. Сисмен те — шурăмпуç кăвакарма тытăннă. | Пĕр ĕç хыççăн тепĕр ĕç питĕ хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулни. |
| 2. | Паян эпĕ миçе çĕре çитмерĕм — ниçта та, никам та çук. Хума инçе — илме çывăх, теççĕ. | Пĕр шухăша тепĕр шухăш, пĕр ĕçе тепĕр ĕç пысăккăн хирĕçлени. |
| 3. | Кĕнеке кирлĕ пулать — килсе ил. Тăрăшса ĕçлетĕн — ырă ятлă пулатăн. | Еçе вăхăт енчен пĕлтерет. |
| 4. | Сăмах патăн — ăна пурнăçла. Еçе тытăнтăн — ăна тĕплĕн тума тăрăш. | Пĕрремĕшĕ иккĕмĕш предложенин условине кăтартать. |
| 5. | Маруç инкĕшне пĕр-пĕр çĕнĕ хыпар пĕлтер кăна — вăл йĕпрен пĕрене тума пултарать. *(Арт.)* Тăрăшса вĕрен — пĕлӳ çирĕп пулĕ. | Еç хыççăн мĕн пулнине — следствине кăтартать. |

Таблицăри кашни тĕслĕхе пăхса тухмалла, вĕсен пĕлтерĕшне тата мĕншĕн тире лартнине уçса памалла.

Пĕр ĕçпе шухăша иккĕмĕш предложенири ĕçпе шухăш пысăккăн хирĕçленине кăтартакан тĕслĕхсем çинче чарăнса тăнă чух **анчах** союз лартма май пуррине палăртса хăвармалла.

**Хума инçе, анчах илме çывăх теççĕ.**

Çавăн пек вăхăта, условие, следствине кăтартакан союзсăр хутлă предложенисенче те союзла сăмахсемпе союзсем лартма май пуррине асăрхаттармалла.

**1. Хăçан кĕнеке кирлĕ пулать, çавăн чухне килсе ил.**

**2. Сăмах патăн пулсан, ăна пурнăçла.**

**3. Маруç инкĕшне пĕр-пĕр çĕнĕ хыпар пĕлтер кăна, вара вăл йĕпрен пĕрене тума пултарать.** *(Арт.)*

Тире лартма йышăннă хутлă предложенинче çакă паллă: малтанхи предложение каланă чух сасса хăпартса пыратпăр та предложени вĕçĕнче ăна тӳррĕн тататпăр, вара пысăк чарăну туса тăратпăр, иккĕмĕш предложение каланă чух сасса антаратпăр.

Каланă чух пысăк чарăну (пауза) туса тăнине çырура тире лартса палăртаççĕ.

Темăна ăнлантарнă хыççăн класрах 166-мĕш хăнăхтарăва вулаттармалла, мĕншĕн тире лартнине каласа пама хушмалла. Ун хыççăн пысăках мар хăнăхтару çыру ĕçĕ ирттермелле. Т е к с т:

1. Вăрман улаланнă: симĕс чаршав çине тĕллĕн-тĕллĕн сарă саплăк лартнăн туйăнать. 2. Коля малтан пысăк конверта уçрĕ — шăрçа пек илемлĕ çырнă йĕркесем курăнса кайрĕç. 3. Лена çамрăксем çине пăхса илчĕ — пурте шăпах, тĕлĕннĕ пекрех лараççĕ. 4. Вăл атăпа эпĕ çур Европа чухлĕ çуран утса тухрăм — ура мăкăлтанман! 5. Элекĕн чĕлпĕрĕ çук — таçта та çитет, тытса чараймăн. *(Арт.)* 6. Эпир тăрăшса вĕренме тытăнатпăр — отличниксем пулатпăр. 7. Калаçсан — сăмах, кассан — турпас. *(Ват. с.)* 8. Тахăшĕ кăмака алăкне уçса ячĕ — урай варрине икĕ качака путекки сиксе тухрĕç. *(Арт.)*. 9. Хăвăрт иртет-çке хĕр ĕмĕрĕ — карта тытса та картлаймăн, чаршав карса та чараймăн. *(Арт.)* 10. Пĕр-ик-виç минут иртет те — кимĕ шарт çеç çурăлать. *(Хус.)*

Вĕренекенсене çак темăпах киле сочинени çырма парса ямалла. Темăсем: «Кукуруза ӳстерни», «Колхозferминче», «Хулана экскурсие кайни», «Çурхи шыв-шурпа кĕрешни», «Кроликсем ĕрчетни», «Пионерсен сборе», «Эпир урама тата çырмана йывăçсем лартни».

# ПРЕДЛОЖЕНИРИ ÇЫХĂНУСĂР СĂМАХСЕМ.

Ку таранччен вĕреннĕ предложенисенче кашни сăмах унăн мĕнле те пулин членĕ пулнине куртăмăр, вăл пĕрпĕр сăмахпа е согласовани, е управлени, е примыкани йĕркипе çыхăнни çинчен те пĕлтĕмĕр. Предложенире пĕрпĕр член пулнă май сăмах уйрăм ыйтура тăни те пирĕншĕн паллă. Шухăш тĕлĕшĕнчен илсен те, предложенире кашни сăмахах темелле ытти сăмахсемпе таччăн çыхăнать, калаканăн шухăшне уçса пама пулăшать.

Анчах чĕлхере предложенири членсемпе çыхăнса тăман сăмахсем, сăмах майлашăвĕсем тата уйрăм предложенисем те тĕл пулаççĕ.

Вĕсем предложени членĕсемпе нимĕнле грамматикăлла çыхăнура та тăмаççĕ, çавăн пекех предложенин членĕсем те пулмаççĕ, анчах пĕтĕм предложенипе шухăш тĕлĕшĕнчен çыхăнаççĕ. Ун пек сăмахсен шутне çаксем кĕреççĕ: а) обращени, ă) вводнăй сăмах, б) междометисемпе (чĕвĕсемпе) евĕрлев сăмахсем.

Ку сăмахсем шутне диалогра (калаçура) тĕл пулакан йӳнеçӳллĕ **çапла,** хирĕçле **çук** сăмахсемпе палăрту сăмахсем те кĕреççĕ. Вĕсем çинче кайрантарах чарăнса тăрăпăр.

1. **Ира,** эпир сана пулăшаç терĕмĕр. 2. **Çук,** вилмĕп эп йалтах — ман чунăм юлĕ чĕрĕ. *(Пушк.)* 3. **Атьăр,** тăрăр юнашар умлă-хыçлă, вырса пăрахнă ыраша йăтма пуçлар. *(Тукт.)* 4. **Чăн та**, часах вĕсен хушшинче çапăçу пуçланчĕ. *(Бурн.)*

Илнĕ тĕслĕхсенче предложенири çыхăнса тăман сăмахсем çаксем пулаççĕ: **Ира, ну, çук, атьăр, чăн та.** Вĕсем шухăш тĕлĕшĕнчен çеç пĕтĕм предложенипе мĕнле те пулин çыхăну тытаççĕ, анчах предложенин членĕсем пул-

маççĕ. Çавăнпа та çакăн йышши сăмахсене предложенири çыхăнусăр сăмахсем теççĕ.

Предложенири çыхăнусăр сăмахсене вĕрентме тытăниччен предложени членĕсене аса илмелле.

Малалла предложенире тĕл пулакан хăшпĕр сăмахсем грамматика тĕлĕшĕнчен нимĕнле çыхăнура тăманнине уйрăм тĕслĕхсемпе кăтартса памалла, ачасене разбор тутарса пăхмалла. Вĕренекенсем разбор тунă май предложенири çыхăнусăр сăмахсемпе паллашма тытăнаççĕ. Учитель кун пек предложенисем çинчен пĕтĕмĕшле пĕлӳ парать те кашни темăна уйрăммăн вĕрентсе ăнлантарать. Вĕсенчен чи йышлăрах тĕл пулаканни тата çăмăлтараххи обращени (чĕнӳ) пулса тăрать. Малтанах çавăн çинчен вĕрентме тытăнмалла.

## ОБРАЩЕНИ.

Вĕренӳ ĕçне индукци меслечĕпе туса пымалла. Обращенисем пуринчен ытла çынсем пĕр-пĕрне чĕнсе калаçнă чухне тĕл пулаççĕ. Апла пулсан, вĕренекенсене пĕр-пĕринпе чĕнсе калаçтармалла, çавна доска çине çырса хумалла.

Тĕслĕхрен: **Верук Анюкран кĕнеке пама ыйтать. Анюк, эсĕ мана «Кăра çилсем» кĕнекене пар-ха.**

Çак предложение доска çине çырмалла та ачасемпе синтаксисла разбор тумалла.

Предложенири подлежащипе сказуемăйне, дополненипе определение те ачасем тупаççĕ, анчах **Анюк** сăмах предложенире мĕнле член пулнине калаймаççĕ.

Учитель, ачасене пулăшу ыйтăвĕсем парса, **Анюк** сăмах предложенири çыхăнусăр сăмах — обращени (чĕнӳ) пулнине кăтартса парать. **Анюк** — ятран хисеплесе чĕнсе каланă ят сăмах, вăл, ытти обращенири сăмахсем пекех, ят падежĕнче, анчах предложенири ытти сăмахсемпе грамматика çыхăнăвĕнче тăмасть, шухăш тĕлĕшпе çеç пĕтĕм предложенипе çыхăннă.

Обращение (чĕнĕве) подлежащи пулакан сăмахпа ачасем ан пăтраштарччăр тесен, икĕ предложение танлаштарса кăтартмалла.

**1. Анюк мана «Кăра çилсем» кĕнекене пачĕ.**

**2. Анюк, мана «Кăра çилсем» кĕнекене пар-ха.**

Нумай чухне обращениллĕ предложенире подлежащи пулмасть, анчах вăл мĕнле сăмах пулма кирлине глагол-сказуемăйран ăнланса илетпĕр.

Обращенисем ят падежĕпе тăву падежĕнчи япала ятĕнчен (пайăр тата пайăр мар ятсенчен те), причастирен, **-скер** аффикс йышăннă паллă ячĕпе причастирен, 3-мĕш сăпат аффиксне йышăннă йĕрке хисепĕнчен пулаççĕ.

Тĕслĕхсем:

1. Çапла вара, **Нарспиçĕм,** çук-ши манăн ăраскал? *(К. Ив.)*

2. Вăт, **ачам,** пурнăçра Михаил Алексеевич пек хастар пулмалла. 3. **Малтисем,** хывăр çĕлĕксене! — кăшкăрчĕ пери. *(Алент.)* 4. Юрĕ, **хисеплĕ вулакансем,** халлĕхе калава вĕçлетпĕр. *(Алент.)* 5. **Каяканнисем,** пухăнăр пĕр çĕре! 6. **Çиччĕмĕшĕ,** виç утăм малалла! — команда пачĕ командир. 7. **Чарусăр,** шывсăр хăвартăн вĕт пире!—ятла пуçларĕç вĕсем ачана.

Вĕренекенсене малтанах обращенисем пайăр япала ятĕнчен, унтан пайăр мар япала ятĕнчен пулнипе паллаштармалла.

Тĕслĕхсем:

1. **Сетнер,** таврăн хăвăртрах,
Шыва анать пĕр арăм. *(К. Ив.)*

2. **Хĕрĕм,** аптека кĕрсе тухма ан ман. 3. **Чăваш ачи,** сассуна пар! *(Ç. М.)*

Халăх творчествипе илемлĕ литературăра çутçанталăкри чĕрĕ мар япала ячĕсем те чĕнӳ сăмахĕсем, обращенисем пулаççĕ.

Халиччен эс, **аслă Атăл,** никама та пăхăнман. *(Хури.)* Кама кĕтен эс, **уй-хир?** Ӳс, **çĕршыв,** хăватлан, пурăнма пултăр тулăх. *(Тукт.)* Юх эс, **юрă,** янра, пурнăç чапĕ санра. *(Тукт.)*

Е синекдохăпа калани те обращени пулма пултарать.

Эх, **кăвак сухал,** мĕнрен тĕлĕнетĕн? *(Тукт.)*

Тепĕр чух тăрăхласа, чĕнсе калани те обращени пулать. Иронилĕ обращени темиçе тĕрлĕ те пулать: пĕри юлташла тăрăхласа чĕнни, иккĕмĕшĕ — тĕртсе тăрăхласа чĕнни т. ыт. те.

I. Юлташла тăрăхласа чĕннин тĕслĕхĕсем.

1. «Ну, **Пожарский**, мĕн тăватпăр?—
Терĕ Виктора Энтри,—
Тен, сан Невский Александр
Пулма вăхăт çитмер-и?» *(Хус.)*

2. «Ну, **Пожарский**, то есть Басов!»
Тет Энтри хăй юлатшне... *(Хус.)*

3. Эй, **качака путекки**, хăвăртрах!

4. Сурбанов (Бодрова юлташла тăрăхласа): Ну, **маэстро**, кам çĕнтерчĕ? *(Айзм.)*

II. Тарăхса, питлесе тăрăхласа чĕнни.

1. Тăр, **ариец!** Каярах
ўкетĕн-çке, ара,
Мĕн мана халь пуççапма?—
тет Энтри,— эп Геббельс мар...
Ут, **ариец!** Эс ан ман:
Хушамат ман — Аптраман. *(Хус.)*

2. **Нехвут атте**, сăваплă пуп,
Тиртен тухса ан суп,
Хуп çăварна эс, хуп. *(Шав.)*

3. **Мадам,**
Канлĕхĕре кăшт хускатам.
Çиленĕр те, кўренĕр те —
Сатира хуллипе хĕртем. *(Шав.)*

4. **Волокитчик**, чул чĕре! — тарăхса сурать пĕри. *(Н. Васильев.)*

**Сетнер, йытă, кĕççе пит,**
Пуян хĕрне ан хапсăн. *(К. Ив.)*

III. Тĕртсе тăрăхласа чĕнни. Кусен шутне кашни этемĕн уйрăм кăлтăкĕсене ытарлăн тăрăхлани, кулни кĕрет.

1. Эсĕ, тейĕн, **пăшатан.** 2. Эпĕ сăвăçă, **тиек юлташ!** Çаплалла ĕçлен-и-ха? *(Шав.)* 3. **Профессор,** парах эсĕ сăра ланккама! Карланку кĕрĕк çанни мар пулĕ-çке санăн! *(Арт.)*

Кунта чăн профессор çинчен калаçу пымасть, хăйне профессор вырăнне шутлакан çынна тăрăхланă.

Çакăнтах юптарура ытарлă каланă сăнарсем те кĕреççĕ.

1. **Упа тус**, ан пул ытла тўрккес.
Ху çине малтан пăхса ил эс. *(Н. Васильев.)*

2. Туятăп çав, туяп, **хураçка тус!**
Шеллеп сана... Анчах пуçна ан ус.
Куç паянах ман чата! *(Кăлк.)*

3. Мĕнле пурăнатăн эс, **Куян,**
Ыратмасть-и шăлу сан? *(Юптару.)*

Обращенисем предложенин пуçламăшĕнче те, вĕçĕнче те, варринче те пулаççĕ.

а) **Хура лаша,** ан хартлат, хурамаран ма хăран? *(Фед.)*

ă) **Ырă Нарспи аппаçăм,** ăçта санăн телейӳ? *(К. Ив.)*

б) Чăтăмлă пул ĕнтĕ пăртак, **мучи.** *(Уяр.)*

Юлашкинчен вĕренекенсене хисеплесе, ачашласа каланă обращенисемпе те паллаштарма кирлĕ. Ку сăмахсемпе ачашланине, юратнине, ырланине, хисепленине кăтартас чух усă кураççĕ. Ун йышши сăмахсем çакăн пек пулаççĕ. Пуçламăш формăри ят сăмахсем çумне пĕрремĕш сăпатри камăнлăх аффиксĕ **-ăм, -ĕм,** нумайлă хисепре **-ăмăр, -ĕмĕр** хушăнать. Ку формăпа анатри калаçура тата литература чĕлхинче анлă усă кураççĕ. Учителĕн те хăй вĕрентекен ачасене çак формăпа çырура, калаçура усă курма хăнăхтарса пымалла.

Тĕслĕхсем. Эй, **ырă хуçам,** эй, **Çтаппан хуçам!** *(Лерм.)*

Этем хавалне те, тĕнче илемне те
Туллин эп туятăп, **çĕршывăм-анне!** *(Волгин.)*

Пĕлтер мана, **тăван çĕршывăм,**
Хăçан кăтартăн халăхна
Ху чĕлхӳне хăват кĕртмешкĕн
Тĕнчене килнĕ ывăлна? *(Ç. М.)*
Пурнăçра телей халаллана пек,
Йăлкăшса тăран эс, **Мускавăмăр!**
*(Тукт.)*

Эх, **ачамсем,** кăвакарчăн чĕпписенни пек чĕлхĕрсемччĕ...

Вĕрентнĕ чухне ачасене çакна асăрхаттармалла: сăпат местоименийĕсем обращени пулмаççĕ.

Эсĕ çавна, **Çеçпĕл,** шанатăн,
Халăх паттăр иккенне,
Малалла чĕнсе янратрăн
Вилĕмсĕр юррусене. *(Хус.)*

**Эсĕ** тени чĕнсе каланă пекех, обращени пекех туйăнать, анчах вăл обращени мар. Ку предложенире **Çеçпĕл** тени обращени пулать. Сăпатлă местоимени хыççăн приложени тăма пултарать, çавăн чухне сăпатлă местоимени хыççăн чарăну палли тăрать пулсан та, пурпĕрех обращени, чĕнӳ сăмахĕ шутланса тăмасть.

Эсĕ, **çавтер усал хĕр,**
Хура пӳртрех тип эппин! *(К. Ив.)*

Обращенин хăйĕн ăнлантару сăмахĕсем пулма пултараççĕ, ун пеккине анлă обращени теççĕ.

**Совет çĕршывĕн паттăрĕсем,** малалла, çĕнĕ рубежа!

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
**Çĕршывăн хастар ачисем,**
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
Ан юлăр кун-çул уттинчен. *(Ç. М.)*
**Кăмăллă çĕршывăн кăмăллă чĕлхиçĕм!**
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху. *(Ç. М.)*

Вăйлăн кăшкăрса каланă, хыттăн чĕннĕ обращенисем пулаççĕ. Вĕсем предложени пуçламăшĕнче тăраççĕ. Вĕсем хыççăн кăшкăру палли лартмалла. Ун пек обращенисем йышлă халăха хавхалантарма, пĕр-пĕр ĕçе тума çĕклентерме, пĕрлешме пулăшаççĕ. Е ытла та ăнсăртран пулнă пысăк хыпарсене каланă чухне сăмаха кăшкăруллă обращенипе пуçлаççĕ.

— **Катер çинчисем!**— кăшкăрчĕ вăл. — Ункăрсене тăхăнса халех шыва сикĕр.*(Бурн.)* **Юлташсем!** Шуррисем пирĕн хыçа ӳкнĕ. *(Кр.-Асли.)*—**Ваттисем!**—терĕ Ванюк. — Çулма ăçтан тытăнатпăр!?— Эй, **малтисем!** Васкатăр хăвăртрах... *(Аслан.)*—**Данилов!**—кăшкăрса ячĕ старшина.— Кил-ха кунта!— **Хура халăх!** Пупсене хирĕç каяс мар. Виçĕмçулхи пек, каллех казаксем илсе килĕç те, кăçал тырă пулман майĕпе, пĕтетпĕр вара, пĕтĕм тырра çисе кайĕç,— терĕ пĕр яка тумланнă кĕре çын, куç айĕн пăхса илсе.*(Мучи.)* Эй, **малти, малти-и!** çунтар хытăрах! *(Уяр.)*

Мухтаса е саламласа, е сивлесе вăйлăн хумханса каланă обращенисем те пулаççĕ. Вĕсем хыççăн та кăшкăру палли лартаççĕ.

1. Салам, **çамрăк рабочи класс!** Ну, епле çĕмĕрттеретĕр? 2. Эсĕ ху суятăн, **предатель!** 3. Сывпул, **чунăм!** 4. **Саттур ачасем!** Тăрăшăр, тăрăшăр! Чăн-чăн партизансемех пулатăр. 5. Тавтапуçах сире, **тăвансем.** Мана ура çине тăма пулăшрăр. 6. Салам сана, **юратнă Шупашкарăм!**

Предложенилле обращенисем те пулаççĕ. Унта подлежащи тата ят сказуемăй пĕлтерĕшĕнчи сăмахсем пур, анчах вĕсем ытти предложенипе çыхăнса тăмаççĕ.

1. **Ачамăрсем — çурхи сар чечексем!**
Ялан эсир хаваслăн выльăр, кулăр!
*(М. Дж.)*

2. **Çамрăк йышăм — комсомолăм,**
Шавлă çамрăклăх чěри... *(Малкай.)*

3. **Тăван çěршыв — тăван аннемěр,**
Чун-чěререн сана савса,
Вăя хурса эпир ěçлетпěр. *(Малкай.)*

Обращенири сăмаха уйрăммăнах логика ударенийě тунă чух ик-виçě хутчен калаççě.

Обращенири пěр сăмахах иккěмěш хут каланă чух вăйлăрах сасăпа пусăм туса каламалла.

1. Эй, Россия! **Россия!** Хăватлă, чипер çěр,
Эсě аслă та вěççěр — çак пěлěт пекех. *(Алимджан.)*
2. Вăрман, **вăрман,** пит йывăр-çке шăпам... *(М. Дж.)*
3. Двина! **Двина!** Чěрвилěм кěтнě май
Ай-хай асап-çке канăççăр чуна. *(М. Дж.)*
4. Анне, **анне,** часрах кил-ха кунта, эпě пичче панă кěнекене вуласа кăтартам.

Вěрентнě чухне çакна астутармалла: предложени пуçламăшěнче обращени евěрлě ят падежěнчи асилў сăмахěсем пулма пултараççě. Калакан çав япала çинчен аса илет те ăна хăйěн ячěпе асăнать, кунта нимěнле чěнсе калани те палăрмасть. Асаилў сăмахěсене обращенипе, чěнў сăмахěпе пăтраштарма кирлě мар.

1. Парти! Ун умěнче чун яр уçă:
Вăл тěпчет, вăл пěлет, çул сěнет. *(Хус.)*
2. Шинель! Чапна пěлсе пăхатăп
Ěç хушшинчен эп сан сăнна. *(Хус.)*

Пěр йышши членсен пулăвě çинчен, вěсен синтаксисри уйрăмлăхě çинчен пěтěмлетнě хыççăн çавнах вěрене-кенсенчен ыйтмалла та ěç парса ямалла. 33 §-а вуласа ăнланмалла, 81-мěш хăнăхтарăва туса килмелле.

## ОБРАЩЕНИЛЛЕ ПРЕДЛОЖЕНИСЕНЧЕ ЧАРĂНУ ПАЛЛИ ЛАРТАССИ.

Малтан обращенисем çинчен аса илмелле, килти ěçе тěрěслемелле. Чарăну палли лартма вěрентессине обращени предложени пуçламăшěнче тăнинчен тытăнмалла.

Çěршыв, янăра çурхи май юррипе. *(Дж.)*
Тěнчемěр, эсě питě аслă,
Хаваслă та çап-çут. *(М. Дж.)*

Обращение лăпкăрах каланă чухне ун хыççăн запятой лартаççĕ.

Çакăнтах учитель, предложени пуçламăшĕнчи обращенисене вăйлăн палăртса, пауза туса каланă чухне вĕсем хыççăн кăшкăру палли лартнă тĕслĕхсемпе те паллаштарать.

**Чăваш!** Çĕклен те çунатлан!
Куçна тĕлле хĕвел çине. *(Ç. М.)*
**Тăван ачамăрсем!** Эпир сире
Чун-чĕререн, хĕрӳллĕн юрататпăр. *(М. Дж.)*
**Тусăмçăм!** Паттăр вилсе чапа тух—
Паттăрăн ячĕ çĕрмест нихăçан та. *(М. Дж.)*

Обращени умĕнче тĕрлĕрен междометисем тăма пултараççĕ. Ун пек чухне междомети хыççăн запятой е кăшкăру палли лартаççĕ, обращенисене икĕ енчен те запятойпа уйăраççĕ.

Эй, **ваттисем!** Эй, **ват çынсем!**
Авал чăваш асаплă пулнине
Çамрăксене каласа парăр... *(Ç. М.)*
Эй, **юррăм,** вĕçсем аултан аула. *(Дж.)*
Эй, **маттур каччăсем,** кунта тухăр-ха! *(Лерм.)*
Ай, **ачисем, юрлăр-ха,** кĕслĕрсене майласа! *(Лерм.)*
Ой, **анлă Атăлăм!** Мĕн чухлĕ юрă хунă пулĕччĕ вăл сан çинчен. *(И. Ивн.)*

Икĕ обращени умĕнче те междометисем тĕл пулаççĕ пулсан, междометисемпе обращенисене те запятойпа уйăраççĕ.

Эй, **аслă патша,** эй, **Иван ĕмпӳ,**
Сан çинчен эпир юрă хутăмăр. *(Лерм.)*
Эй, **ырă хуçам,** эй, **Çтаппан хуçам!**
Халиччен пулманнине каласа парам. *(Лерм.)*
Эй, **çутă хĕвелĕм,** эй, **ырă çыннăм,**
Е вĕлер мана, е итле мана! *(Лерм.)*

Обращени предложени варринче тăнă чух ăна икĕ енчен те запятой лартса уйăрмалла.

Асту, **Нарспи,** йĕвенӳ
Ман алăра малашне. *(К. Ив.)*
Чуп-чуп, **лашам,** чуп, **лашам,**
Çитес çĕре çит, лашам. *(Н. Шупуç.)*
Çапла вара, **Нарспиçĕм,**
Çук-ши манăн ăраскал? *(К. Ив.)*

Обращени предложени вĕçĕнче те тăма пултарать, ун умĕн запятой лартмалла, предложенин интонацине кура,

ун хыççăн точка та, кăшкăру е ыйту палли те, многоточи те лартаççĕ.

Вăй пар мана, **мухтавлă çĕршывăм.**
Тыт арăмна, **Тăхтаман!** *(К. Ив.)*
Сывă пул, **юлташăм, тусăм...** *(Тукт.)*
Тавтапуç сана, **çĕршыв,**
Тавтапуç, **аннемĕрĕм!** *(Тукт.)*
Ăçта-ши дисциплина, **тăвансем?**
Мĕскер çитмест сире, **шереметсем?** *(Шав.)*
Эс килетĕн-им, эс килетĕн-им, **ачамçăм?**
*(М. Дж.)*

— Сывă-и, **юлташсем?**— ыйтрăм эпĕ каллех.

Обращени предложенире кирек хăш вырăнта тăрсан та, интонацине кура, предложени вĕçĕнче точкăпа многоточи, кăшкăрупа ыйту паллисем пулма пултараççĕ.

Шавла, шавла, **çиле итлен шур парăс,**

Хумхан ман айăмра, **салхуллă океан.** *(П.)*

Ĕçлер-ха, **тусăм,** пĕтĕм чун хăвачĕпе тăван çĕршывшăн!

Эй, **манăн сассăмçăм,** çын чĕрине тивсенччĕ! *(П.)*

**Ĕмĕртенхи ăссем,** сиртен канаш ыйтатăп! *(П).*

**Кăвар чĕре! Кăвар чĕлхеллĕ чăваш ачи,** сассуна пар. *(Ç. М.)*

**Кăвар чĕлхеллĕ чăваш ачи,** ăçта эс, ăçта? *(Ç. М.)*

Мĕншĕн эс, **чăрсăр аквилон,** кӳлĕри хăмăшсене таятăн? *(П.)*

**Юратнă мăшăрăм, пикем,** пит йывăр пуль чунна? *(М. Дж.)*

Юлашкинчен мĕн вĕреннине пĕтĕмлетме ăнлантару диктанчĕ е творчество диктанчĕ туса ирттермелле.

Анлантару диктанчĕн тексчĕ.

1. Эп юрататăп сана, Марс хирĕ. *(П.)* 2. Савап сана, Петĕр мухтавĕ, сан капăр, кăмăллă сăнна. *(П.)* 3. Шуçăмпа эп таврăнăп, аннеçĕм, манмăп, манмăп эс пилленине. *(М. Дж.)* 4. Эй, çĕршывăм, çитĕ кĕтнĕ кун, йăлтăркка хĕвел хаваслăн кулĕ. *(М. Дж.)* 5. Юррăмсем, эсир шăтса хăпартăр, ӳсрĕр манăн ăшă чĕрере. *(М. Дж.)* 6. Çĕн тĕнче! Эй, çĕнĕ кунăм, каялла ан кай, ан чак! *(Ç. М.)* 7. Тăван сăмах! Нимрен чечен паха çак тĕнчере эс маншăн. Аста поэтăн аллинче эс хĕç те, арфа та пулатăн. *(И. Вазов.)* 8. Эй, аттеçĕм, аттеçĕм, мĕншĕн мана çиетĕн? *(К. Ив.)* 9. Мĕншĕн, хĕрĕм, мĕн пуртан юрататăн Сетнере? *(К. Ив.)* 10. Ах, аннеçĕм, пысăк-çке ман тертĕм, аллуна тăссамччĕ ывăлна! *(М. Дж.)* 11. Вăрансам, аттеçĕм, вăран ĕмĕр хурлăх пуснă ыйхăран. *(Тукт.)* 12. Йĕнерле утна эс, каччă! Урхамах çине утлан. *(Тукт.)* 13. Эй, çĕршыв, тăван аннемĕр, ырлăх патăн эс пире! *(Тукт.)* 14. Эй, аннемĕр-çĕршыв! Вăй-хăватлăн та сыв.

вăн алла-аллăн утать сан патвар халăху. *(Тукт.)* 15. Эй, çĕкленĕр, ут йĕнерлĕр, вут чĕреллĕ йĕкĕтсем! *(Тукт.)* 16. Эй, савнă кил, эй, савнă ялăм! *(Митта.)*

Творчество диктанчĕ валли çакăн пек ĕç пама пулать. Предложенири подлежащисене обращени туса çырмалла. Çавна май сказуемăйсене те кирлĕ формăна куçарса çырмалла, чарăну паллисене те обращенири правилăсене пăхăнса лартмалла.

1. Ачасем шкулта вĕренеççĕ, ĕçлеççĕ тата колхозсене пулăшаççĕ. 2. Тăван çĕршыв кунсерен ӳсет, хăватланать. 3. Ман юлташ вĕренӳре ыттисене те пулăшать. 4. Çамрăксем ĕçре яланах хастар. 5. Тăван чĕлхе кашни çыншăн çав тери паха та хаклă. 6. Ĕмĕтпе эс ăçта кăна çитместĕн-ши? 7. Тĕнчери пур халăхсем те миршĕн кĕрешме тухрĕç. 8. Вĕренекенсем кĕнекисене нимрен ытла хаклама тивĕç. 9. Ачасем паян тумалли ĕçе ырана хăвармĕç. 10. Пионер пур ĕçре те малта пырать. 11. Совет çĕршывĕ пек тараватлă çĕршыв ăçта пур-ши урăх? 12. Ачасем ĕçрен хăрамаççĕ, вĕсем ĕçе часах хăнăхаççĕ. 13. Аслă Лăпка океанри хаяр çил-тăвăла çĕнтернĕ тăватă паттăра Совет çĕршывĕ мухтавлăн кĕтсе илет. 14. Пирĕн шкул ачисем те Асхат Зиганшин, Анатолий Крючковский, Филипп Поплавский тата Иван Федотов пек шиксĕр хастар пуласса шанатпăр.

## ВВОДНĂЙ СĂМАХСЕМПЕ ВВОДНĂЙ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Вводнăй (кĕртсе лартнă е кĕртĕм) сăмахсем çинчен вĕрентесси те шкул ачисемшĕн çĕнĕ тема.

Малтанах вĕренекенсене яланах тĕл пулакан вводнăй сăмахсемпе тĕслĕхсем памалла, вăл тĕслĕхсенче предложенири пур членсене те тупнă хыççăн, кĕрселаракан сăмахсем нимĕнле член пулманнине вĕсем хăйсемех туйса илессĕ.

Ытларах тĕл пулакан вводнăй сăмахсем: **паллах, чăн та, çук, тет, тен, эппин, ара, çапла, çапла вара, тĕслĕхрен, сăмахран, ман шутпа, эс калашле, пĕрремĕшĕнчен, иккĕмĕшĕнчен виççĕмĕшĕнчен, юлашкинчен, имĕш, иккен, пулас.**

1. Паллах, кирек мĕнле ĕçе те юратса тумалла.
2. Чăнах та, Совет влаçĕшĕн кĕрешни сая каймарĕ.
3. Ара, кунта кĕпер пурччĕ-çке...
4. Çук, пуçăма çийиччен, тăшманăма пĕтерем. *(К. Ив.)*
5. Тен, чипер пăхма пĕлмерĕм. *(Уйăп М.)*
6. Шел, питĕ аван ачаччĕ. *(Тург.)*
7. Çапла, чĕрери курайманлăхĕпе хĕмленсе çапăçрĕ Никифор Терентьев. *(Долг.)*
8. Ахăр, кунти чăвашсен мулĕ пур-тăр çав вĕсен. *(К. Ив.)*

9. Икĕ пуян пĕрлешсен, шеп те пулĕ туй, теççĕ. *(К. Ив.)*

10. Ман шутпа, кашни çыннăн юрлама пĕлмелле.

Предложенисене пăхса тухнă май вĕренекенсене кашни вводнăй сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантармалла, вĕренекенсене çавăн пек вводнăй сăмахпа тĕслĕхсем туптармалла.

Синтаксис кĕнекинче нумай вводнăй сăмах пĕлтерĕшне ăнлантарса панă. Учебника кĕртмен хăшпĕр вводнăй сăмахсене илĕпĕр, учитель вĕсемпе те усă курма пултарать[1].

**Ахăр, ахăртне, ахăртнех** вводнăй сăмахсем пулма пултараççĕ, пулмалла пĕлтерĕшпе çӳреççĕ, вĕсемпе анатри калаçура тата литература чĕлхинче усă кураççĕ.

1. **Ахăртнех,** тăхлан пульли те
   Çав йĕрпех çаврăнать. *(Хус.)*
2. Пĕр-пĕрне вĕсем пăрахмĕç
   Виличчен те, **ахăрах.** *(Хус.)*
3. **Ахăр,** кунти чăвашсен
   Мулĕ пур-тăр çав вĕсен. *(К. Ив.)*

**Ваçка** (тури калаçура), **ами** (анатри калаçура) сăмахсемпе çывăхрах çынна чĕнсе каланă чух усă кураççĕ, вăл пиччем, тусăм, юлташăм пĕлтерĕшĕпе çӳрет. Хăшпĕр чухне пысăк пултаруллă çынна та çапла калаççĕ.

Тавай, **ваçка,** паян çавна тăвар! Вăл, **ваçка,** хăлхана кĕрсен, çынна та вĕлерет. *(Ашм.)*

**Ехер, ехер те мехер** вводнăй сăмахсем анатри калаçура тĕл пулаççĕ, **енчен, пулин, пулсан** пĕлтерĕшĕсемпе çӳреççĕ.

**Ехер** тата икĕ кунтан кантура куланай илсе килмесен, эсĕ арăмлă иккенне те пăхмăп. *(Ашм.)*

**Е, ехер те мехер,** çакăн евĕр хĕсĕнсех-пĕсĕнсех пурăнсан, нумаях-ха пирĕн, этсемĕр, хуçкаланĕç курпун çурăмсем. *(Митта.)*

Э, **йăхăр-махăр,** тем мар вăл пире. *(Илп.)*

**Ыçмаллин — исмасса, ычмасса, иçмасса** вводнăй сăмахсем **мĕн те пулин, çавна та пулин** пĕлтерĕшне кăтартаççĕ, ку сăмахсемпе калаçу чĕлхинче ытларах усă кураççĕ. Тури калаçура вĕсен вырăнне **ытти-маси, ыти-маси** вводнăй сăмахсем тĕл пулаççĕ.

---

[1] Малалла хăшпĕр вводнăй сăмахсен пĕлтерĕшне Н. И. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекипе» усă курса ăнлантаратăп.
*Автор.*

1. **Ыçмалин,** сурăхсене пăхтăрччĕ, вăл та мана пулăшни пулĕччĕ. 2. **Ычмасса,** ача-пăчасем çерçи чӳкĕ тумаççĕ. Çерçи чӳкĕ тусан, çумăр çăваканччĕ, теççĕ. *(Ашм.)* 3. Кирлĕ мара калаçса лариччен, **иçмасса,** кĕнекесем вуласа ларăр. 4. **Исмасса,** ахаль ларса пыриччен, хаçат вуласа пырăп. *(Ашм.)* 5. **Иçмасса,** Иван та мана хирĕç. *(Ашм.)* 6. **Иçмасса,** амăшĕ килинччĕ. *(Ашм.)*

**Имĕш** вводнăй сăмахпа **пулать, калашле, каланă тăрăх** вводнăй сăмахсемпе пĕр шайра усă кураççĕ. Калаканĕ çынран илтнине иккеленсе пĕлтернĕ чух çак вводнăй сăмахсемпе усă кураççĕ. Калаканĕ пĕлтерекен хыпара çын çине ярать, тепринчен илтнипе çирĕппĕнех шантарса калаймасть.

**Ваттисем каланипе,** сăвăр пуян ачисенчен пулса кайнă **имĕш.** *(Ашм.)* 1. Тупписем те темĕн чухлĕ **пулнă, имĕш,** нимĕçсен. *(Хус.)* 2. Çамаккан аслашшĕ-и, мăн аслашшĕ-и, хăй вăхăтĕнче таврари çулсен çĕрлехи тискер хуралçи пулнă **пулать,** вăл усал вăрă-хурахсене çывăх курнă **имĕш,** пуян сутăçсене чееленсе юранă, тет, çавăнтан вара хăй те пит пуйса кайнă пулать. *(Илп.)* Усал чунлă автансем çунатсемпе хӳмесем çине сиксе лараççĕ **имĕш,** çунат çапса авăтаççĕ те çумăр пĕлĕчĕсене хăваласа яраççĕ. *(Я. Ухс.)*

**Тупата** — çирĕплетсе, пат татса каланине пĕлтерет. Ку вводнăй сăмах **чăнах та** вводнăй сăмаха çывăх тăрать.

1) **Тупата,** ăçта кайса кĕмелле ĕнтĕ ман пек чакăр куçлисен? *(Илп.)* 2) — Мишер вĕт ку, **тупата,** ăçтан тупанчĕ вăл паянхи кун? — илтĕнчĕ Тăнкăш Селиванĕн сасси. *(Илп.)* 3) **Тупата,** мĕн кăна шухăшласа кăлармасть пуль тăнăçсăр ачу-пăчу *(Илп.)* 4) Ах, çак Алимĕн чĕлхи-çăварĕ, **тупата,** чĕлхи-çăварĕ — пыл та çу. *(Илп.)*

**Шет** — анатри калаçура тĕл пулакан вводнăй сăмах, вăл **пулма пултарать, пулĕ, пулмалла** сăмахсен пĕлтерĕшĕпе çӳрет, ăна литература чĕлхине те кĕртсе пыраççĕ.

1. Шет, вăл та халех кĕресшĕн марччĕ пуль? *(Илп.)*

2. «Юрĕ, юрĕ» тенĕ пулсан та, выранлă пулнă пулĕччĕ, шет, ăна та пулин калаймарĕ. *(Илп.)*

**Ытахальтен** — вводнăй сăмахăн пĕлтерĕшĕ: **нимĕн тума çукран.**

1. Е, **ытахальтен,** алли-урине амантсан, мĕн тутăр вара вăл? Мĕн тăвайтăр алăсăр тимĕрçĕ? *(Илп.)*

2. Пирĕн кăçал сӳс-кантăр шывра пăрпа шăнса юлчĕ, **ытахальтен,** çуркунне кăларас пулать. *(Ашм.)*

**Пасса** — тутар чӗлхипе ҫывӑх калаҫу уйрӑмлӑхӗнче ҫак вводнӑй сӑмах тӗл пулать, вӑл кӳреннине, тарӑхнине, хӗрхеннине пӗлтерет. Ытларах **-ҫке** татӑкпа тӑракан сӑмах хыҫҫӑн пулать.

Ҫавсене тусах кун иртрӗ-и, **пасса?** Ху асӑнтармасан, ҫавна та тумаҫҫӗ-ҫке, **пасса.** *(Илп.)*

Ҫапла-ҫке, **пасса,** укҫа ҫукки хуплать. Хуть вӑл та пулин каламарӗ-ҫке, **пасса.** *(Ашм.)*

**Чӑнласах та** вводнӑй сӑмахпа иккӗленӳллӗ шухӑша сирсе яма ҫирӗплетсе каланӑ чухне усӑ кураҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех пӗр-пӗр шухӑша ҫирӗплетсе каланӑ чух та усӑ курни тӗл пулать. **Чӑнласах та** вводнӑй сӑмах **чӑнах та** вводнӑй сӑмаха ҫывӑх.

Хусан тутарӗ, **чӑнласах та,** кӗрешме пит ӑста пӗлет иккен. *(Илп.)* Е, **чӑнласах та,** тӑванла хута кӗрсе, вӑхӑтра инкекрен хӑтарас ӗмӗтпе каларӗ пулас. *(Илп.)*

**Пӗр енчен — тепӗр енчен** мӑшӑр вводнӑй сӑмах калакан шухӑша икӗ енчен кӑтартнӑ чухне витӗмлӗ уҫса пама пулӑшать. Ку вводнӑй сӑмахпа ораторсем хӑйсен чӗлхинче анлӑ усӑ кураҫҫӗ. Вӑл хаҫатпа литература чӗлхине Октябрьти революци хыҫҫӑн кӗнӗ.

Кукуруза, **пӗр енчен,** выльӑх-чӗрлӗх валли чи кирлӗ те тухӑҫлӑ апат, **тепӗр енчен,** ӗнесен сӗт тухӑҫлӑхне хӑвӑрт ӳстерет. Ҫакӑн пек туса пырсан,— **пӗр енчен,** сире халӑх юрататчӗ, **тепӗр енчен,** тата ун пек террорла ӗҫсемпе эпир ытти сывӑ улпутсемпе чиновниксенне те сехрисене хӑптаратпӑр... *(Элк.)*

**Сӑмахран, тӗслӗхрен** вводнӑй сӑмахсемпе калакан чарӑнса тӑрса, хӑйӗн шухӑшне уйрӑм тӗслӗхпе илсе, ҫирӗплетсе кӑтартнӑ чух усӑ курать. Вӑл ытларах публицистикӑра, калаҫу чӗлхинче тӗл пулать.

Акӑ, **тӗслӗхрен,** США промышленноҫӗ аталаннине илсе пӑхар-ха. Илӗпӗр, **сӑмахран,** США государство секретарӗ мартӑн 4-мӗшӗнче пресс-конференцире тухса каланине. *(Н. Хрущёв.)* Мӗншӗн-ха Азири социализмла ҫӗршывсене, **сӑмахран,** Китай халӑх республикине, Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн членне йышӑнмаҫҫӗ-ха? *(Н. Хрущёв.)* Шерккейпе Пикмӑрса, **сӑмахран,** ҫакӑнта килмен те пулӗччӗҫ, ҫав Шӑрттан Имечӗ кӗрешнине курас тесех килчӗҫ. *(Илп.)*

**Кӗскен каласан, пӗтӗмлетсе каласан, пӗр сӑмахпа каласан** — вводнӑй сӑмахсем шухӑш вӗҫленнине кӑтартаҫҫӗ. Калакан пӗтӗмлетсе парас шухӑш умӗн ҫакӑн пек

вводнăй сăмахсемпе усă курать. Ку вводнăй сăмахсем калаçупа çыру чĕлхинче час-часах тĕл пулаççĕ.

**Кĕскен каласан,** эпир мирлĕ пурăнассишĕн, мĕнпур государствăсем хушшинчи мирлĕ ăмăртушăн тăратпăр. *(Н. Хрущёв.)* **Пĕр сăмахпа каласан,** Америкăри чи ăссăр та ытлашши чăрсăр генералсем чăн-чăн вăрçа хатĕрленесси çинчен, çынсене вĕлерсе пĕтересси, пурлăха пĕтересси çинчен калаçаççĕ. *(Н. Хрущёв.)*

**Урăхла каласан, тепĕр тĕрлĕ каласан** — вводнăй сăмахсемпе калакан пĕтĕмлетсе те пĕр ят парса кĕскен калană чухне усă курать. Ун пек вводнăй сăмах публицистикăпа ăслăлăх кĕнекисенче ытларах тĕл пулать.

Политикăлла строй, общество йĕркисем, идеологи, **урăхла каласан,** эпир мĕне пурнăç йĕрки тесе шутлатпăр, çавă пĕтĕмпех вăл кашни çĕршыв халăхĕн шалти ĕçĕ, унăн прави пулса тăрать. *(Н. Хрущёв.)*

Европа икĕ блок хушшинче çар енĕпе пыракан ăмăрту плацдармĕ пулма пăрахсан, ют çĕршыв çарĕсем вара хăйсен килĕсене таврăнсан, вăрçă хăрушлăхне пĕтерсен, **урăхла каласан,** Европăра хăрушсăрлăх туса хурсан, çакăнтан ĕнтĕ пур халăхсене те усă кăна пулать. *(Н. Хрущёв.)*

**Калас пулать, палăртас пулать, пĕлтерес пулать, асăрхаттарас пулать** — вводнăй сăмах майлашăвĕсем шухăша уйрăмах палăртса калană чух тĕл пулаççĕ.

Паллах, **калас пулать,** кунта та шутласа пăхмалли тивĕçлĕ майсем пулман пирĕн. *(Ленин.)* Çынсем лайăхрах аталанма тата тумланма пуçларĕç. Анчах, **калас пулать,** ку ĕçре хăшпĕр йывăрлăхсем пур, вĕсене пĕтермелле. *(Н. Хрущёв.)* **Калас пулать,** интеллигенци хушшинче халиччен пирĕн ĕçшĕн кĕрешĕве активлă хутшăнман, унтан вара юрăхсăр ĕçсем тума тытăннă çынсем те тупăнчĕç. *(Н. Хрущёв.)*

**Пачах урăхла** — малтанхи шухăша хирĕçлесе калană чух усă куракан вводнăй сăмах, вăл публицистикăра, ораторсен чĕлхинче ытларах тĕл пулать.

Тăватă çул хушшинче эпир чикĕ леш енчи хамăр туссенчен никама та çухатман çеç мар, **пачах урăхла,** вĕсемпе туслă пурăнассине татах лайăхлатрăмăр тата çĕнĕ туссем тупрăмăр. *(Н. Хрущёв.)*

Анчах, **пăшăрханмалла ĕнтĕ,** хĕвеланăçĕнчи çĕршывсен влаçра тăракан ушкăнĕсем лару-тăрăва çăмăллатасшăн мар, «сивĕ вăрçа» пĕтересшĕн мар, васкаса хĕçпă-

шалланма чаранасшан мар. **Пачах урăхла,** сӳтсе явма вĕсем, чи малтан, килĕшӳ тума йывăртарах е килĕшӳ тума май та çук ыйтусене кăларса тăратаççĕ... *(Н. Хрущёв.)* Вĕренӳ усăллă ĕçпе çыхăнни вĕренсе илнĕ пĕлӳсен пĕлтерĕшне чакармасть, **пачах урăхла,** ӳстерет кăна. *(Н. Хрущёв.)*

**Чи малтан, юлашкинчен, юлашки шутран** — вводнăй сăмахсем тĕп шухăшпа кĕçĕн шухăша палăртса калама пулăшаççĕ.

Анчах паянхи кун условийĕсенче мĕнле ыйту-ха вăл Германи ыйтăвĕ? Ку вăл, **чи малтан,** Германи территорине вырнаçнă общество тĕлĕшĕнчен тĕрлĕ системăллă икĕ уйрăм государство хушшинчи çыхăнусем çинчен тăракан ыйту. **Юлашкинчен,** ку ыйту пĕтĕм Европăри халăхсен пуласлăх мирлĕ пурнăçĕпе таччăн çыхăннă. *(Н. Хрущёв.)* Хĕвеланăçĕнчи державăсем, **чи малтан,** США-па Англи, араб государствисене пĕр-пĕрипе хирĕçтерсе яма тăрăшаççĕ. *(Н. Хрущёв.)*

Калакан шухăш камăн пулнине кăтартакан вводнăй сăмахсем те йышлă тĕл пулаççĕ. Калакан çав шухăш çине мĕнле пăхнине, мĕнле кăмăлланипе кăмăлламаннине, сивленине, хисепленине т. ытти енсене çак вводнăй сăмахсем урлă уçса парать.

**Пирĕн телее,** çанталăк ăшă пулчĕ. Ырă ĕç тăвас шухăшпа эпир Турцие сĕнӳ патăмăр, анчах, **шел пулин те,** вăл халлĕхе çавна кирлĕ пек ăнланса илни пулмарĕ-ха. *(Н. Хрущёв.)* **Пирĕн шутпа,** тĕнчери çĕршывсем хушшинче хальхи тапхăрта татса памалли ыйтусем çаксем пулаççĕ. *(Н. Хрущёв.)* **Халăх каларĕш,** выçă çынна тĕлĕкре кулачă курăнать. *(Н. Хрущёв.)* **Паттăрсем каланă тăрăх,** кĕрешнĕ чух чи хăрушши — халиччен кĕрешсе курман çынпа кĕрешесси имĕш. *(Илп.)* Пирĕн батарея командирĕ, **кайран хăй каласа панă тăрăх,** пĕр хушă хытнă пек пулса тăнă. Чухăн хресченсем, **аслă вырăс поэчĕ Некрасов каларĕш,** тĕрмере, хирти урапа айĕнче, авăн вучахĕнче, таçта таçта та ахлатнă. *(Я. Ухс.)*

Хăшпĕр местоименисенчен, уйрăмах **мĕн** ыйту местоименирен **мĕн, мĕн-ха, мĕн-ха çав** тата **тем** паллă мар местоименирен **тем, темĕн, темĕн-çке** вводнăй сăмахсем пулаççĕ, калас шухăш чăрмавлă, уçăмлă маррине, тăхтавлине кăтартса параççĕ.

Лавçи, **тем,** куçа курăнмарĕ... **ахăрнех,** çывăратчĕ пулмалла. *(Илп.)* Çемьем, **мĕн-ха,** тĕрĕс-тĕкелех пурă-

нать-ха. *(Илп.)* Паян тесен, вал, **тем,** пĕрех май Çтаппан Иванччă çине пăхкалать. *(Илп.)*

Учебникра асăнман вводнăй сăмахсем те вĕрентӳ ĕçĕнче тĕл пулаççĕ. Вĕренекенсене çав вводнăй сăмахсемпе усă курма хăнăхтарса пымалла, вĕсен пĕлтерĕшне уçса памалла.

Вĕрентнĕ чухне çакăн пек йывăрлăх тĕл пулать: **паллă ĕнтĕ, çапла, çапла вара, паллах, йăлтах урăхла, пачах урăхла, ытахальтен, чи малтан, юлашкинчен, юлашки шутран** сăмахсем вводнăй сăмахсем пулаççĕ. Вĕсем тата наречисем те пулма пултараççĕ. Наречисем пулнă чух вĕсем предложенире сказуемăй е обстоятельство пулаççĕ, вводнăй сăмах чухне — нимĕнле член та пулманни паллă ĕнтĕ.

**Сăмахран, тĕслĕхрен** — вводнăй сăмахсем те, туху падежĕнчи япала ячĕсем те пулаççĕ. «Атте сăмахран татăлмасть. Юлташ ман тĕслĕхрен темшĕн кулчĕ.» Ку предложенисенче **сăмахран, тĕслĕхрен** сăмахсем япала ячĕсем. Вĕсем предложенире дополнени пулаççĕ.

**Калас пулать, пĕлтерес пулать, палăртас пулать** — вводнăй сăмахсемпе тăракан омонимсем глагол-сказуемăйсем те пулма пултараççĕ. Ку вĕсем предложенире хăш вырăнта тăнинчен тата предложенири ытти членсемпе мĕнле çыхăнура тăнинчен килет. Предложени пуçламăшĕнче е варринче тăрса, унпа шухăш тĕлĕшĕнчен çеç çыхăнса тăнă чухне, вĕсене вводнăй сăмах тетпĕр. Çав сăмахсемех предложени вĕçĕнче тăрса подлежащи ĕçне кăтартаççĕ пулсан, хутлă глагол-сказуемăй пулаççĕ.

**Пухура хамăн шухăша калас пулать. Пирĕн класри йĕрке лайăхланни çинчен палăртас пулать.**

Çак предложенисенчи вводнăй сăмахсем сăпатсăр предложенири хутлă глагол-сказуемăйсем пулаççĕ.

**Çук** вводнăй сăмах татăк пулнă чух сказуемăй пулать.

**Çук, эпĕ йĕркене пăсмастăп. Икĕ вĕренекен класра çук.**

**Çитменнине** вводнăй сăмах пару-тăву падежĕнчи причасти чухне дополнени пулать. Çаксене уйăрса илме хăнăхтармалла. Çитменнине вводнăй сăмах пĕр-пĕр ĕçе вăйлатса, анлăлатса кăтартса парать.

**Хĕре, выльăх пекех, тупăксăр-мĕнсĕрех пыгарнă, çитменнине — вăрттăн, ял çыннисем сисиччен...** *(Агаков.)*

**Ачасем радиотехника енĕпе пĕлӳ çитменнине лайăхах туяççĕ.**

**Пулĕ, пулать, пулас, пулмалла** пулăшу глаголĕсем те, **иккен** татăк та пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен вводнăй сăмахсем пулаççĕ. Анчах кунта уйрăмлăх та пур. Çак сăмахсем, сказуемăй хыçĕнче тăрса, унăн пĕлтерĕшĕ уçăмлă маррине ытларах палăртаççĕ, **иккен** татăк кăна глаголăн ĕçне уçăмлă кăтартать.

Эпир пулла каятпăр **пулĕ?** Хамăр вăйпах ку ĕçе майлаштаратпăр **пулмалла**. Эсир килти ĕçе туман **пулмалла?** Эсир килти ĕçе туман **иккен**. Çырлана упа та çӳрет **иккен**. *(Харл.)* **Иккен**, Селиме, ара, кĕрсе кайман пулнă **иккен-ха**. *(Илп.)*

**Тен** (тетĕн) вводнăй **сăмах** калакан хăй шухăшне иккĕленсе каланине кăтартать.

Кам пĕлет, **тен**, малтанах ăна никам та илтмен... *(Элк.)* **Тен**, ытти планетăсем çинче те чĕрчунсем пурăнаççĕ. Ку кĕнекене, **тен**, хăвăрах тишкерме пултаратăр? «**Тен**, ку çуне эсĕ ĕç çине валли усратăн пуль, атте?»— ыйтрĕ Ухтиван. *(Уяр.)*

Юлашкинчен, вĕренекенсене вводнăй сăмахсем хăйсен пĕлтерĕшне кура пилĕк ушкăна пайланни çинчен каламалла, вăл вĕреннине пĕтĕмлетме пулăшать, асра тытма çăмăллатать.

1. Калакан шухăш чăн пулнине çирĕплетсе параканнисем (**паллах, паллă ĕнтĕ, тупата, чăн, чăнах, чăн та, ара, чăнласах та**), ун пирки иккеленнине, пулма пултарассине (**ахăртне, ехĕр-мехĕр, иçмасса, иçмалин, шет**) вводнăй сăмахсем кĕреççĕ.

2. Эмоциллĕ туйăм-кăмăла палăртакан вводнăй сăмахсем. Пĕлтерекен шухăш калаканăн чун-чĕринче мĕнле кăмăл-туйăм çуратнине кăтартса паракан вводнăй сăмахсем: **ман телее, пирĕн телее, шел, шел пулин те, тархасшăн.**

3. Калаçăва майлама пулăшакан, шухăша йĕркелеме, майлаштарма пулăшакан вводнăй сăмахсем. Ун пек вводнăй сăмахсем йышлă, вĕсем калаçу стильне йĕркелес çĕрте паллă вырăн йышăнаççĕ. Вĕсен шутне: **калас пулать, мĕнле калас, кĕскен каласан, çакăн пек каласан, урăхла каласан, тепĕр тĕрлĕ каласан, чăннипе каласан, тӳррĕн каласан, куç умĕнче каласан, пĕр сăмахпа каласан, калама кулăш** т. ы. те кĕреççĕ.

4. Каланă шухăш камăн пулнине, шухăшсем пĕр-пĕринпе çыхăннине, йĕркине кăтартакан вводнăй сăмахсем.

Хăшпĕр вводнăй сăмахсем калакан шухăш камăннине,

ăçтан тухнине, кам урлă пĕлнине кăтартаççĕ: **ман шутпа, сирĕн шутпа, унăн шучĕпе, юлташ калană тăрăх, радио пĕлтернĕ тăрăх, тет, теççĕ,** ваттисем калашле, эс калашле, халăх каларĕш, имĕш.

Шухăша палăртса, уйăрса е пĕтĕмлетсе, е вĕсен çыхăнăвĕн йĕркине кăтартакан вводнăй сăмахсем: **сăмахран, тĕслĕхрен, çапла, эппин, çапла ĕнтĕ, уйрăмах, чи малтан, малалла, юлашкинчен, чи кирли, пачах урăхла, пĕрреххут, пĕррремĕшĕнчен, иккĕмĕшĕнчен, виççĕмĕшĕнчен, юлашкинчен** т. ыт.

5. Тепĕр çынна итлеме чĕнекен вводнăй сăмахсем. Ун пек вводнăй сăмахсемпе итлеме чĕнсе калană чухне усă кураççĕ, вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ: **астăватăр-и, пĕлетĕр-и, пĕлетĕн-и (пĕлетне), пăхăр-ха, ак тĕлĕнтермĕш, ваçка, ами** т. ыт.

Вĕреннине çирĕплетнĕ чух усă курмалли тĕслĕхсем. Вĕсене учитель доска çине çыртарса разбор тутарма пултарать. Е асăрхаттару çыру ĕçĕ вырăнне туса иртгерме те юрать.

1. Палюк пичче çарăк акнă, тет. *(К. Ив.)* 2. Ахăртнех, хăватлă çулăм двигателе чĕртсе яма та канăçлăрах. 3. Тен, Ульянов ывăлĕ тĕрĕслĕхшĕн тăрăшать. 4. Эппин, чипер çитсе вырнаçмалла пултăр. 5. Шывăн турачĕ çук, теççĕ. *(Ват. с.)* 6. Çитменнине, эпĕ ун патнелле хыçалтан, тĕттĕм çĕртен пытăм-çке. 7. Ара, ку санăн чăваш çĕршывне кайса килнĕ пекех пулчĕ вĕт. 8. Тухтар çĕнĕ шкап туса пĕтернĕ иккен. Тупата, ăçтан кăна ĕлкĕрет, ĕççĕр чунĕ чăтмасть çав унăн. *(Илп.)* 9. Чысĕ, чăн, пысăк мар та, хисеп тăвас кăмăлĕ пысăкçке унăн. *(Илп.)* 10. Юрĕ, пĕрреххут Лаша Шерккийĕ тетчĕр-ха, ют çăвара тутăрпа хуплаймăн. 11. Кай, тупата, çын тени тем те шухăшласа кăларĕ çав. (Илп.) 12. Вăл, тем, кăçал кăштах йăша пуçларĕ-ха: каç пулсанах выртса çывăрать. *(Илп.)* 13. Кĕçтенюкăн, сăмахран, ялта пĕр тáванĕ те юлман. *(Илп.)* 14. Каласан та, тепĕр тесен, хисепрен ытлашшийĕ пулас çук. *(Илп.)* 15. Унта, хам астăвасса, тапса тăран çăл пурччĕ. *(Илп.)* 16. Ара, халĕ пирĕн хăвăртрах таврăнмалла. *(Илп.)* 17. Çапла, çавăн пек сăмах пулчĕ çав хамăр хушăмăрта *(Илп.)* 18. Каçар, тархасшăн, урăх ун пек хăтланмăпăр... *(Илп.)* 19. Кĕскен каласан, эпир мирлĕ пурăнасшăн, мĕнпур государствăсем хушшинчи мирлĕ ăмăртушăн тăратпăр. *(Н. Хрущев.)* 20. Истори опычĕ вĕрентнĕ тăрăх, пĕр-пĕр государство ытти государствăсен шалти ĕçне хутшăнни пурпĕрех хирĕçӳсем, вăрçăсем патне илсе пырать. *(Н. Хрущёв.)* 21. Шел те пулин, усалли кăштах пумайрах, ырри кăштах сахалрах пулчĕ. *(Ленин.)* 22. Дискусси пире çакна ăнланса илме пулăшмалла пулнă: пĕррремĕшĕнчен, пирĕн парти, çур миллионран кая мар, çур миллионран та ытларах членсем хисепленекен массăллă парти пулса тăчĕ, иккĕмĕшĕнчен, влаçа тытса тăракан парти пулса тăчĕ. *(Ленин.)* 23. Пĕр енчен, Толстой вырăс пурнăçĕн танлаштарма çук паха картинисене панă кăна мар, пĕтĕм тĕнчери литературăн чи паха произведенийĕсене те çырнă генилле художник, тепĕр енчен, Христос ячĕпе урмăшса çӳрекен помещик. *(Ленин.)*

## ВВОДНĂЙ CĂМАХСЕМПЕ ВВОДНĂЙ ПРЕДЛОЖЕНИСЕНЕ ЧАРĂНУ ПАЛЛИСЕМПЕ УЙĂРАССИ.

Вĕренекенсене вводнăй сăмахсемпе вводнăй предложенисенче мĕнле чарăну паллисем лартассипе ятарласа паллаштармалла. Вводнăй предложенисем çинчен вĕрентме пĕр сехетре вăхăт çитеймест. Çавăнпа тепĕр сехетĕнче ун çинчен те каласа ăнлантармалла, çавăнтах чарăну паллисем лартасси пирки те чарăнса тăмалла.

Вĕренӳ материалне ăнлантармалли тĕслĕхсенче вводнăй сăмах предложенин тĕрлĕ вырăнĕнче тăни те пултăр, запятой лартса уйăрман вводнăй сăмахсемпе те тĕслĕхсем кирлĕ. Юлашкинчен, вводнăй сăмах майлашăвĕсемпе вводнăй предложенисенче мĕнле чарăну паллисем лартмалли çинчен ăнлантармалла.

Вĕренӳ материалне ăнлантарнă чухне плакатпа, схемапа усă курмалла.

Урокра усă курмалли тĕслĕхсем.

1. Паллах, кашни ĕçех юратса тумалла. 2. Çук, хавшак чунлă пулмастпăр эпир! 3. Халăх творчествине, ман шутпа, çĕр айĕнчен тапса тухакан çăлкуçĕпе танлаштарма пулать. *(Агаков.)* 4. Паттăр хĕр-юрăçă çинчен, тупата, çав тери хăватлă поэма çырнă пулăттăм. *(Агаков.)* Ӳркенмен ăста пулнă, тет. *(Ват. с.)* 6. Пирĕн телее, ял хыçĕнчи çил арманĕ вут-çулăмран темле майпа çăлăнса юлнă. 7. Çĕрулминчен темĕн те тăваççĕ иккен! 8. Ача пурне те килĕшрĕ. (Урăхла пулма пултарайман та!) 9. Кăвак тӳпене — унăн çавăн пек пулмалла та ĕнтĕ — август уйăхĕ пăртак сивĕтрĕ, анчах вăл кăваккăн йăлтăртатни çапах куçа йăмăхтарать-ха. 10. Хĕвел вара (ăна куçăхтарас марччĕ) ярмăркăна çатма çинчи пекех ăшалать, хĕртет. *(Ю. Яновский.)*

11. Лий хăй те сисмерĕ, тыткăнри паттăра сылтăм аллинчи пуç пӳрнине тăсса кăтартрĕ (ку паллă китаецсен йăлипе, пĕр-пĕр çынна мухтанине, хисепленине, ăна сывлăх суннине пĕлтерет). *(Арт.)*

12. Ак çак çын *(Семен Ильич ман еннелле кăтартрĕ)* сан çинчен хаçата çырасшăн пулмалла. *(Г. Кр.)*

Материала ăнлантарас ĕçе вĕренекенсене тимлĕ явăçтармалла, панă тĕслĕхсене вуласа тухма, чарăну паллисем мĕншĕн лартнине сăнама хушмалла. Унтан кашни предложение вулаттармалла та вводнăй сăмахсене туптармалла, чарăну палли лартнине калаттармалла.

Вĕренекенсем пур предложение те вуласа, разбор туса тухнă хыççăн пĕтĕмлетме пултараççĕ.

Пĕтĕмлетнĕ чухне çакăн пек ыйтусем пама пултараççĕ.

1. Вводнăй сăмахсене çырура мĕнле палăртаççĕ.

2. Хăш вводнăй сăмахсене чарăну паллисем лартса уйăрмаççĕ?

3. Вводнăй сăмах майлашăвĕпе вводнăй предложенисене тата мĕнле чарăну паллисемпе уйăраççĕ?

4. Хăçан вводнăй сăмахсемпе вводнăй предложенисене скобка е тире лартса уйăраççĕ?

Вĕренекенсем пĕтĕмлетме пултарсан, учитель вводнăй сăмахсемпе вводнăй предложенисенче мĕнле чарăну паллисем лартмаллине тепĕр хут хăй ăнлантарса парать.

Вводнăй сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене запятойпа уйăраççĕ. Вводнăй сăмах предложени пуçламăшĕнче тăнă чухне ун хыççăн запятой лартаççĕ, вводнăй сăмах предложени варринче пулсан, ăна икĕ енчен те запятойпа уйăраççĕ, предложени вĕçĕнче чухне — умĕн запятой лартаççĕ.

Анчах хăшпĕр вводнăй сăмахсене запятой лартса уйăрмаççĕ, вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ: **иккен, пулĕ, пулас, пулать, пулмалла, эппин** (предложени вĕçĕнче тăнă чух). Çак вводнăй сăмахсем, ытларах сказуемăй составне кĕрсе, ăна ăнлантарса пăраççĕ. Ку вводнăй сăмахсене каланă чух вĕсен умĕн нимĕнле пауза та тумастпăр, сасса та улăштармастпăр. Çавăнпа та вĕсене чарăну палли лартса уйăрма кирлĕ мар.

Ытти вводнăй сăмахсене каланă чухне сасса кăшт хăпартаççĕ те калас умĕн е каланă хыççăн чарăнса тăраççĕ.

Ана вĕренекенсене схемăпа кăтартма пулать.

↓
Паллах юратса
ĕçе тумал
кашни ла
↓
те
темĕн тăваç кен!
Çĕрулминчен çĕ ик —

Пĕрремĕш схемăра **паллах** вводнăй сăмаха каланă чух сасса хăпартса, палăртса калаççĕ, каланă хыççăн чарăну тăваççĕ, иккĕмĕш схемăра **иккен** вводнăй сăмах умĕн нимĕнле чарăну та тумалла мар, сасса та хăпартас çук. Çавна шута илсе, **иккен** умĕн чарăну палли — запятой лартмаççĕ.

Вводнӑй сӑмах майлашӑвӗпе вводнӑй предложенисем тӗп предложенин шухӑшӗпе пачах ҫыхӑнман чухне вӗсене скобка ӑшне илеҫҫӗ, предложени шухӑшӗпе хӑш енчен те пулин ҫыхӑнарах тӑнӑ чухне запятойпа е тирепе уйӑраҫҫӗ.

Вӗсен йышӗ пысӑк пулман: Унтри, ашшӗ, амӑшӗ тата ашшӗн шӑллӗ Ехрем—тӑваттӑн пурӑннӑ вӗсем аслашшӗ лартса хӑварнӑ кивӗ хура пӳртре. *(Элк.)*

Предложенин тӗп шухӑшӗпе вводнӑй предложени — **тӑваттӑн пурӑннӑ вӗсем аслашшӗ лартса хӑварнӑ кивӗ хура пӳртре** — шухӑшӗ ҫыхӑнса тӑрать, ҫавӑнпа та вӗсен хушшине автор тире лартса уйӑрнӑ. Акӑ тепӗр тӗслӗх илер:

— Қуратӑн-и, унта авӑ мӗн?— (ямшӑк пушшипеле хӗвелтухӑҫ еннелле кӑтартрӗ).

Малтанхи предложени шухӑшӗпе вводнӑй предложени шухӑшӗн хушшинче нимӗнле ҫыхӑну та ҫук. Малтанхи предложенире улпутпа ямшӑк калаҫнин сыпӑкне илсе панӑ. Ҫав калаҫӑва автор хӑй шухӑшне кӗртсе лартать, калаҫаканӗсем мӗн тунине асӑрхаттарса хӑварать. Ҫав вводнӑй предложение икӗ енчен те скобка ӑшне илнӗ.

Чарӑну паллисем ҫинчен вӗреннине ҫирӗплетмелли хӑнӑхтару тӗслӗхӗсем:

1. Эпир ун чух Медвежья Падь текен ялта канаттӑмӑр. (Чӑвашла вӑл ял Упа варӗ тени пулать.) *(Уяр.)* 2. Ҫитсе тӑтӑм, хайхискер, пӗр пысӑк кӑна ҫурт тӗлне. (Ҫитсе тӑтӑм тесе сӑмах ҫавӑрнӑшӗпе каларӑм. Тӑма мар, эп ун чух хырӑм ҫинче аран-аран йӑпшӑнкаласа выртнӑ.) Ахӑртнех, пуян хуҫа килӗ пулас. Кил картишӗ — анкарти пысӑкӑш. *(Уяр.)* 3. Амӑшӗ шучӗпе, Совет Ҫарӗ ҫав енчен килмелле пулнӑ. 4. Ара, ытла та шултра, ытла та пылак мар-и-ха ҫӗр ҫырлийӗсем! *(Г. Кр.)* 5. Пирӗнпе танлашсан, лётчик-герой юрласа ячӗ. 6. Пӗрремӗш пилот — урӑхла ӑна карап командире теҫҫӗ — мана курсан, аллинчи штурвалне иккӗмӗш пилота парӗ те ура ҫине тӑчӗ. 7. Мана вӑхӑтра ӑса кӗртмен пулсан, тен, эпӗ халиччен те нимӗн тума пӗлмен услап пулса юлнӑ пулӑттӑм. 8. Ҫулталӑк хушшинче эпир, Алешӑпа иксӗмӗр, тем ҫинчен те калаҫнӑ пулӗ. 9. Тепре куриччен сывӑ пулӑр эппин! 10. Паллах, пӗр ӗнине колхоза паратӑп. Ҫитменне, ӗнисем манӑн ахаль йышшисем мар, симментальски ӑратлӑ, ун пеккисене курман-ха эсӗ, Қирук мучи! 11. Апла эппин, пирӗн колхоз кӑҫал та малти вырӑна тухать. 12. Тӗрӗссипе, йӗкӗт мана пирӗн дивизи ӑҫта-ӑҫта пулнине каласа кӑтартрӗ. 13. Ҫанталӑкӗ акӑ, хӑвӑрах куратӑр, епле ахӑрать. 14. Пушкӑрт алӑк янаххи урлӑ аран-аран каҫрӗ (ун урисене сӑнчӑрланӑ пулнӑ), вӑрӑм ҫӗлӗкне хывса, алӑк патне тӑчӗ. *(Пушк.)* 5. Чӑнах та, пире ҫул кӑтартнӑ ҫын Пугачёвпа пӗр сӑнлӑччӗ. *(П.)* 16. Эпӗ мӗн калассине Пугачев ҫилӗллӗн кӗтсе ларать. Аранах вара (ҫав саманта эпӗ халӗ те канӑҫлӑн аса илетӗп) манӑн ӑшӑмра чӗре сисӗмӗ этем имшерлӗхне ҫӗнтерчӗ. *(П.)* 17. Пугачёв, эпӗ свидетельсем умӗнче каласа парасшӑн мар тесе

пулас, хăй юлташĕсене тухма хушрĕ. *(П.)* 18. Пĕри (эпĕ ăна каярах пĕлтĕм) таркăн капрал Белобородов иккен, иккĕмĕшĕ Афанасий Соколов (ăна Хлопуша тесе чĕннĕ), Çĕпĕр рудникĕсенчен виçĕ хут тарнă, унта пуçĕпех янăскер пулнă. *(П.)*

Тепĕр сехетĕнче асăрхаттару диктанчĕ туса ирттермелле, ăна валли панă текст.

### АЧАСЕМ ЙЫВĂÇ ЛАРТНИ.

Петĕрпе Çирук хăйсен хыçĕнчи çырмара йывăçсем ӳстерме шутлаççĕ.

Паллах, çак вунă çулхи ачасемшĕн çăмăл ĕç пулмáн. Вулакан ăнланать ĕнтĕ, ку ĕçе вĕсен пуçласа тумалла пулнă.

Часах икĕ ĕçчен ача çак ĕçе тимлесе тытăнаççĕ. Вĕсене телей, кӳршĕ çынни Савук мучи ирхине кăна йăмра турачĕ иртнĕ пулнă. Калас пулать, йăмра турачĕсем Савук мучие выльăхсене çитерме кирлĕ-мĕн. Петĕрпе Çирук (вĕсем пĕр шутлă пулнă тата ĕçе тума васканă) Савук мучи патне йăмра турачĕсем патне пынă. Вĕсем хăйсен шухăшне, пĕр пытармасăрах, Савук мучие каласа панă. Тен, ачасен кăмăлне хуçас мар тесе, мучи çавăнтах килĕшнĕ.

— Эппин, лартса пăхăр. Ахăртнех, усси те пулĕ,— тенĕ.

Петĕрпе Çирук кĕреçесем илнĕ те çырмана аннă. Вĕсем васкасах шăтăксем чавнă, кашни шăтăкнех йăмра турачĕсене чике-чике лартнă, тăпра ярса таптанă. Каç пуличчен вара (пит васкавлă ĕçленĕрен пулас) вĕсем вăтăр йывăç лартма ĕлкĕрнĕ. Вĕсене кашнинех (унсăрăн качака-сурăх кăшлама пултарать) курăс хуппипе хупласа çыхнă.

Кунта йывăç ӳстерни, пĕр енчен, çыр куçасран сыхлать, тепĕр енчен, хуçалăхра пысăк усă кӳрет. Çапла, икĕ ĕçчен çамрăк ача ку чухне çырма тулли йывăç ӳстереççĕ.

Текстра 144 сăмах, вĕсенчен вводнăй сăмахсем — 7, вводнăй сăмах майлашăвĕсемпе вводнăй предложенисем — 6.

### МЕЖДОМЕТИСЕМПЕ ЕВĔРЛЕВ САМАХЕСЕН ПРЕДЛОЖЕНИРИ ВЫРАНĔ.

VI-мĕш класра грамматикăн морфологи пайне вĕреннĕ чухне ачасем междометипе тата евĕрлев сăмахсемпе паллашаççĕ. Вĕсем междометипе евĕрлев сăмахĕсем çуйçанталăкри тĕрлĕ сас-чĕвĕсене, тĕрлĕ туйăм-кăмăла кăтартнине пĕлеççĕ. Халĕ ку темăна вĕренме пуçличчен ачасене çавна аса илтермелле. Çакăн пек ыйтусем памалла:

1. Мĕн вăл междомети?
2. Эсир мĕнле междометисене пĕлетĕр?
3. Пĕр междометиех миçе пĕлтерĕшлĕ пулма пултарать?
4. Мĕне эпир евĕрлев сăмахĕ тетпĕр?

5. Евĕрлев сăмахĕсем мĕнле пулаççĕ?

6. Евĕрлев сăмахĕсен предоженири вырăнĕ.

Междометисем предложенире ытти сăмахсемпе çыхăнса тăманнине, вĕсем калаканăн кăмăл-туйăмне çеç кăтартса панине, предложенин уйрăм членĕ пулманнине тата вĕсем хыççăн чарăну палли лартса уйăрнине кăтартса памалла.

Усă курмалли тĕслĕхсем:

1. Эй, пах-ха кунталла, Киребей чурам! *(Лерм.)* 2. Ах, телейĕм çук-тăр çав. *(К. Ив.)* 3. Эх, çыру çырма май пулсанччĕ! 4. Ух, ывăнтăм... 5. Ы-ых, путсĕрсем! Эх! Хăçан шăпи тулĕ... 6. Ха! Хăвала та пуçларăн иккен мана? *(Илп.)* 7. Ай! Кам унта? *(Арт.)* 8. Пĕлĕсĕнччĕ эс ылтăн пулă çинчен, Салтан патша çинчен, эх, унта тем çинчен те каланă. *(Илп.)* 9. Ха-ха-ха! Тем кĕперрисем çинчен калаçать тата. Суя япала вал. 10. Шалт та шалт! хупăнать тимĕр алăк! *(М. Дж.)* 11. Чак! Чак! тăрăнать сивĕ юр çине йĕлтĕр туйи... *(Арт.)* 12. Акă тахăш хĕрĕ çари! çухăрса ячĕ. *(Арт.)* 13. Шĕпĕр-шĕпĕр ўккелерĕ çумăр вĕçтерсе. *(Тукт.)* 14. Вăш-вăш, вăш-вăш, ай çил вĕрет. Каш-каш, каш-каш вăрман кашлать. *(Тукт.)*

Предложенисене пăхса тухмалла, вĕренекенсене междометипе евĕрлев сăмахĕсене туптармалла, вĕсем предложенире мĕнле те пулин член пулнипе пулманнине паллă тумалла.

Малтанхи предложение илсе пăхар. Кунта **эй** междомети тĕл пулать.

1. **Эй** междометипе тепĕр çынна пăхтарас тĕллевпе чĕнсе каланă чух усă курнă. Вăл предложенири ытти сăмахсемпе нимĕнле çыхăнура та тăмасть, ун хыççăн пауза тăваççĕ, çавна çырура запятой лартса паллă тăваççĕ.

2. Тепĕр чухне междометие хыттăн палăртса е хумханса калаççĕ, ун пек чухне вара междомети хыççăн кăшкăру, ыйтса каласан — ыйту палли лартаççĕ, междомети хыççăн малалли сăмаха пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ. **Ах!** Çакланчĕ пуль... *(Элк.)* **Э?** Мĕн терĕм сана эпĕ, мĕн терĕм? *(Илп.)*

3. Междомети предложени варринче тăнă чухне ăна икĕ енчен та запятойпа уйăраççĕ. Колхоз çаранĕнче, **ай**, виç паккус, пĕрне хамах та çулнăн туйăнать. *(Тукт.)*

4. Предложени варринчи междометие сасăпа хытă палăртса каланă чухне ун умĕн запятой, хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ. Вăл ман çине сив куçпа пăхрĕ те, **ах!** хăратса пăрахрĕ.

5. Евĕрлев сăмахĕсене запятойпа уйăрмаççĕ, вĕсем предложенин мĕнле те пулин членĕ пулма пултараççĕ.

Еверлев сăмахсем ытларах мĕнлелĕх обстоятельстви пулаççĕ. **Шалт та шалт! хупăнать тимĕр алăк! Шалт та шалт** еверлев сăмахĕ **хупăнать** глагол-сказуемăя мĕнлелĕх енчен ăнлантарса пăхăнса тăрать, мĕнлелĕх обстоятельстви пулать. Еверлев междометие палăртса каланăран ун хыççăн кăшкăру палли лартнă, малалли сăмаха пĕчĕк саспаллипех пуçласа çырнă. Еверлев междометисене çырура çапла çырма йышăннă. Қаçхи çиçĕм ялтăрт! çутатрĕ.

6. Еверлев междометисене палăртса каламан чухне кăшкăру палли лартмасăрах çыраççĕ. Қаш-каш, каш-каш вăрман кашлать. *(Тукт.)*

Çак сехетрех ăнлантару çыру ĕçĕ туса ирттермелле. Вăл мĕн вĕреннине çирĕплетме пулăшать, вĕренекенсем междометисемпе еверлев сăмахсем хыççăн чарăну паллисем лартма хăнăхса пыраççĕ.

Паллах, çыру валли пысăк текст илме кирлĕ мар. Тĕслĕхрен, çакăн пек текст сĕнме пулать.

1. Тăван çĕршывăм ӳсет. Эх, епле савăнать-çке чĕре! *(Тукт.)* 2. Ах! Епле хăрамасть вăл! *(Кăлк.)* 3. Ах, Иркка хĕрĕм, эсĕ килтĕн-и? *(М. Ухс.)* 4. Лена пĕр алтăр шыв ăсрĕ те йĕпеннĕ кĕпине ы-ых! текелесе силлекен Виктор çиҫелле чашт! тутарчĕ. Лешĕ тулли витрине ярса илчĕ те Лена тăрăх шалл! ячĕ. *(Арт.)* 5. Вăштăрах та вăштăр, ай, лăпкă çил, тантăшăмăртан салам илсе эс кил. *(Тукт.)* 6. Шăвик! шăхăрать çын пекех, мăкăль-мăкăль юмахлать, шăтăр-шатăр тутарать. *(Фед.)* 7. Ирхине эпĕ пĕр-пĕччен кашкăра куртăм та, ай! шиклентĕм вара. 8. Марш! Мĕншĕнне кайран пĕлĕн,— тесе, уретник Андрей Павловича тытса кайма хăтланчĕ.

Юлашки сехетре предложенири çыхăнусăр сăмахсем çинчен вĕренсе пĕтернĕ май е асаилӳ, е çыру урокĕ туса ирттермелле. Асаилӳ урокĕнче вĕренекенсене уйрăм ыйтусем, карточкăсем памалла, вĕсем ответ панă хыççăн мĕн ăнланманнине тепĕр хут ăнлантарса хăвармалла, синтаксисла разбор тутармалла. Е тĕрĕслев диктанчĕ туса ирттермелле. Вăл вĕренекенсем темăна ăнланнипе ăнланманнине кăтартса парать. Ана валли çыхăнуллă текст аванрах.

### ВАРМАНТИ АЧАСЕМ.

Ачасем чарăнчĕç те, пуçĕсене тайса, таврари сасăсене итлеме тытăнчĕç. Вăрманта (вĕсем виççĕшĕ те шикленме пуçланă) кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетнисĕр пуçне нимĕн те илтĕнмест. Ахăртнех, ытлашши шала кĕрсе кайнă. Çук, кун пек юрамасть. Хĕвел тăрăх çул тупас пулать.

Ачасем утнă май ура айĕнчи хăрăк туратсем шатăрт! туса ăнсăртран хуçăлаççĕ те шиклентере-шиклентере илеççĕ.

Петя — аслăраххи. Вăл чăтăмлă. Марукпа Павăл пĕчĕккĕ. Ах, епле вĕсем чăткалĕç? Марукăн тата тутăрĕ те вĕлтĕр-вĕлтĕр çӳхескер çеç. Анчах вăл хăйне аслисем пек тыткалама тăрăшрĕ. Ара, хăй ачашраххине систерсен, ăна пиччĕшĕсем урăх ниçта та илсе тухман пулĕччĕç.

— Эй, пичче, час çитетпĕр-и Маккассине? — ыйтрĕ Марук.

— Чăт-ха тата пăртак, йăмăкăм, чăт,— терĕ Петя.

Сасартăк çумăр çума тытăнчĕ. Эх, чашлаттарчĕ те вара çумăрĕ! Ачасем васкасах пĕр йывăç хӳттине пытанчĕç.

Хăвăрах пĕлетĕр, çуллахи çумăр хăвăрт иртет. Ачасем каллех малалла çул тытаççĕ. Кăшт тĕртĕнсенех туратсенчен тумла шăпăрр! тăкăнать. Ачасем виççĕшĕ те тăр-тăр чĕтреççĕ. Сивĕ. Эх, çакăнта пĕрер стакан вĕри сĕт е чей пуласчĕ! *(Г. Краснов, «Сталинград тусĕсем».)*

Текстра 142 сăмах, вĕсенчен обращенисем — 2, вводнăй сăмахсем — 6, междометисемпе евĕрлев сăмахĕсем— 8. Вĕренекенсем ăнланман сăмахсем çук.

## ЫРА КАМАЛЛА ÇЫН.

Манăн аппа Маша Журавлёва Чехов çемйинче апат-çимĕç пĕçерсе тăнă. Эпĕ вăл ĕçлекен кухньăра час-часах пулаттăм.

— Эсĕ миçе çулта, Андрюша? — ыйтрĕ пĕррехинче Чехов.

— Тăххăрта.

— Эсĕ çитĕнсе çитнĕ ĕнтĕ. Шкула кайма та вăхăт.

Эпĕ пуçа усрăм. Килте çиме нимĕн те çукки çинчен калама мана аван мар пек туйăнчĕ. Вĕренесси çинчен, паллах, шухăшламалли те çук. Эпĕ ун чухне çара уранччĕ, çĕтĕк кĕпепеччĕ. Антон Павлович ман çине тинкерсе пăхрĕ. Унтан вăл хăйĕн пӳлĕмне кĕрсе кайрĕ.

Ирхине Маша киле чупса пычĕ.

— Андрей, Андрей! Сана Антон Павлович чĕнет.

Эпĕ каллех Чеховсем патне кайрăм. Писатель мана ăшшăн кулса кĕтсе илчĕ:

«Хале эсĕ шкула çӳреме тытăнатăн. Çамрăк çыннăм, вĕренме вăхăт ĕнтĕ»,— терĕ. Унтан Антон Павлович мана пенал, кĕнекесемпе тетрадьсем чикнĕ сумка тыттарчĕ. Çавăнтах мана çĕнĕ кĕпе-йĕм те пачĕ.

Эх, мĕн тери савăнтăм вара!

Хăвăрах ăнланатăр, эпĕ пĕр сиктермесĕр шкула çӳреме тытăнтăм.

*«Çамрăк коммунист» хаçатран.*

## САЛТАК БАЯНĔ.

Сĕтел хушшинче арçынпа хĕрарăм чей ĕçсе лараççĕ.

Шăплăхра калитке чĕриклетни илтĕнет. Хăвăрах ăнланмалла, чей ĕçекенсем чӳрече енне пăхса илчĕç. Тĕлĕннипе Михаил Андреевич (арçынне çапла чĕнеççĕ) аллинчи стаканне урайне ӳкерет. Ун умĕнче салтак тумĕпе, аллине икĕ чăматан тытнă ывăлĕ тăра парать. Ашшĕ ывăлĕ еннелле утăм турĕ, хĕрӳллĕн ыталарĕ. Ун хыççăн амăшĕ — Мария Михайловна таваскарĕ.

Часах Михаил Андреевичӑн пысӑк пӳрчӗ шавлӑ хӑнасемпе тулчӗ. Василий алла баян тытрӗ, пӳрнисем хӑйсемех клавишсем тӑрӑх выляса кайрӗҫ.

— Вася, унта баян ҫине мӗн ҫырнӑ? — ыйтрӗ кӳршӗ хӗрӗ Валя.

— Вӑрӑм истори,— кулчӗ баянист.— Пӗлес килет пулсан, каласа парӑп.

— Тархасшӑн, каласа парсамччӗ...

Ку ӗҫ Демократиллӗ Германи республикинче пулса иртрӗ. Ҫуркунне. Эльба шывӗ те ҫырантан тухса кайрӗ. Пӗр ача шыва ӳкнӗ пулнӑ. Василий стройран виҫӗ боеца чӗнсе илет те ҫыран хӗррине ыткӑнать. Вӗсем чупса ҫитнӗ ҫӗре ача пуҫӗ вӗлтлетсе илчӗ те ҫавӑнтах путса ҫухалчӗ. Салтаксем шыва сикрӗҫ. Василий ачана ҫӳҫрен ярса илчӗ, ҫырана туртса кӑларчӗ. Часах хӑраса ӳкнӗ, шуралса кайнӑ амӑшӗ чупса ҫитрӗ. Паллах, вӑл совет салтакӗсене чӗререн тав турӗ.

Тепӗр кунне чаҫе хула бургомистрӗ пычӗ. Ачана ҫӑлнӑшӑн вӑл Василие баян парса парнелерӗ.

(*„Ҫамрӑк коммунист“ хаҫатран*).

# УЙРӐМТӐРАН КӖҪӖН ЧЛЕНСЕМ.

## УЙРӐМТӐРАН КӖҪӖН ЧЛЕНСЕМ ҪИНЧЕН ПӖТӖМӖШЛЕ КАЛАНИ

Уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем чӑваш чӗлхинче хутлӑ е хутсӑр предложенире те тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсем предложенири кӗҫӗн членсене ҫывӑх, анчах вӗсенчен нумай енӗпе уйрӑлса тӑраҫҫӗ: 1) предложенири сӑмахсен вырӑнӗпе, 2) анлӑ тата ансӑр пулассипе, 3) вӗсем хӑйсен умӗнчи сӑмаха ӑнлантарса парассипе, 4) вӗсене палӑртса, чарӑнса калассипе, 5) пусӑмпа, сасӑ кӗвӗлӗхне тунипе, 6) предложенире чарӑну паллисем лартассипе.

Чӑваш чӗлхинче уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем виҫӗ тӗрлӗ пулаҫҫӗ: уйрӑмтӑран определени, уйрӑмтӑран дополнени тата уйрӑмтӑран обстоятельствӑсем. Хӑйне май уйрӑмтӑран определенин тата уйрӑмтӑран приложени пур. Вӑл тӗрлӗ майпа пулать, ун ҫинчен кайрантарах чарӑнса тӑрӑпӑр. Уйрӑмтӑран обстоятельство та хӑйне май темиҫе тӗрлӗ пулма пултарать: вырӑна пӗлтерекен уйрӑмтӑран обстоятельство, вӑхӑта пӗлтерекен уйрӑмтӑран обстоятельство, пиркене пӗлтерекен уйрӑмтӑран обстоятельство.

**1. Мишшан ашшӗ — тракторист, пире ҫӗнӗ машинӑсем ҫинчен каласа пачӗ. 2. Ҫӗр юлташӗ — пирӗн виҫҫӗмӗш спутник — пӗтӗм тӗнчене тӗлӗнтерчӗ. 3. Ҫӳлте, пӗлӗт айӗнче, тӑри юрри илтӗнет.** *(К. Ив.)* **4. Ав, унта, сӑртра, шкул ҫурчӗ.** *(Алка.)* **5. Каҫхине, ҫичӗ сехетре, пирӗн шкулта чӑваш литератури каҫӗ пулать.**

Ҫак тӗслӗхсенчен мӗн куратпӑр-ха?

Предложенири уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем хӑйсем ӑнлантарса паракан сӑмах хыҫҫӑн тӑраҫҫӗ. Тытӑмӗ енчен илсен, вӗсем пӗр сӑмах та, темиҫе сӑмах та, фразеологил-

ле сăмах майлашăвĕ те пулма пултараççĕ. Уйрăмтăран дополненисемпе приложенисем хăйсен умĕнче тăракан сăмаха тепĕр ят парса витĕмлĕрех ăнлантарса параççĕ.

Тĕслĕхсем:

1. Çĕр юлташĕ — **пирĕн виççĕмĕш спутник** — пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерчĕ. 2. В. И. Ленин — **пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхсен çулпуçĕ** — 1870-мĕш çулта Чĕмпĕр хулинче çуралнă. 3. Совет çĕршывĕ сире, **çамрăксене,** чи телейлĕ пурнăç пиллерĕ.

Уйрăмтăран обстоятельствăсем хăйсен умĕнче тăракан анлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене ансăр, конкретлă пĕлтерĕшпе хушса ăнлантарса параççĕ.

Çӳлте, **пĕлĕт айĕнче,** тăри юрри илтĕнет. Каçхине, **çичĕ сехетре**, чăваш литератури каçĕ пулать.

Чăннипех те, **çӳлте** тени анлă пĕлтерĕшлĕ тата уçăмлă, конкретлă мар. Аçта **çӳлте** пулнине **пĕлĕт айĕнче** япала ячĕпе пулăшу ячĕ пĕрле уçăмлă, конкретлă кăтартса ăнлантарса параççĕ. **Çӳлте** обстоятельствăпа танлаштарсан, **пĕлĕт айĕнче** уйрăмтăран обстоятельство ансăр, уçăмлă пĕлтерĕшлĕ.

Уйрăмтăран кĕçĕн членсене калас умĕн те, каланă хыççăн та чарăну тăватпăр, уйрăмтăран кĕçĕн членсене каланă чухне сасă кăштах анать, вĕсене уйрăм интонаципе калатпăр, çавна çырура е икĕ енчен те запятой, е тире лартса палăртатпăр.

1. Мучар, пĕчĕкскер, çарран, кĕпе вĕççĕн çăмăл чупса, Михаляна çитсе пырать. *(Труб.)* 2. Анчах Семен Шапшинский — Унтрин тăван пиччĕшĕ вырăнĕнчи хӳтлĕхĕ — Воробьев патĕнче нумай пурăнаймасть. *(Элк.)*

Уйрăмтăран кĕçĕн членсем япала ятĕнчен, паллă ятĕнчен, хисеп ятĕнчен, причастирен, наречирен, япала ячĕпе пулăшу ятĕнчен е хыççăмахран пĕрлешсе пулаççĕ.

1. Тавралăхăм, чăваш çĕршывĕ,
Хăватлă пулчĕ, çунатланчĕ. *(Я. Ухс.)*

2. Писатель, этем чунĕн инженерĕ, пурнăçа яланах вĕренсе пырать. Чечексем — йăм хĕрлĕ-шурă — пуç таяççĕ таврара. *(Алка.)* Вĕсем, виççĕшĕ те, вĕренӳ отличникĕсем. Пирĕн йышшисене, колхозшăн çунакансене, вăл колхозран сивĕтсе хăварчĕ. *(Труб.)* Атăл хĕрринелле, пĕлĕт уççăн курăнакан çĕрелле, хăпартланса вĕççе каяс килет. *(Труб.)* Кайăк хурсем вĕçеççĕ инçе çĕре, ăшшалла.

*(Давыд.)* Клуба, репетицине, ачасем, Палюксăр пуçне, пурте пухăннă.

**-и, -скер** аффикссем йышăннă паллă ятĕнчен е причастирен уйрăмтăран определенисем — приложенисем пулаççĕ.

Яка Петĕрĕн ывăлĕ, чи кĕçĕнни, Шупашкарта артиста вĕренет. 2. Мучар каланине вăл, вĕренменскер, чĕререн йышăнчĕ. (*Труб.*)

Уйрăмтăран кĕçĕн членсем çинчен вĕрентессине çакăн пек пайлама юрать.

1. Уйрăмтăран кĕçĕн членсем çинчен ăнлантарасси. 2. Уйрăмтăран определенисем, приложенисем. 3. **-и, -скер** аффикссемпе пулнă приложенисем. 4. Уйрăмтăран дополненисем. 5. Çыру ĕçĕ. 6. Уйрăмтăран обстоятельствăсем. 7. Тĕрĕслев çыру ĕçĕ.

Малтанхи сехетре уйрăмтăран кĕçĕн членсем çинчен пĕтĕмĕшле пĕлÿ памалла. Çак темăна вĕренме пуçличчен предложенири тĕп членсемпе кĕçĕн членсем çинчен аса илмелле.

1. Предложенире мĕнле членсем пур?. 2. Мĕнле членсене эпир кĕçĕн членсем тетпĕр? 3. Мĕн вăл определени? 4. Мĕнле члена дополнени теççĕ? 5. Обстоятельствăсем мĕне кăтартаççĕ тата миçе тĕрлĕ пулаççĕ?

Темăна уçса панă чух предложенири кĕçĕн членсемпе уйрăмтăран кĕçĕн членсем мĕнпе уйрăлса тăнине кăтартса ăнлантармалла. Доскана пурăпа çÿлтен аялалла туртса — икке пайламалла. Унăн сулахай енне предложенири кĕçĕн членсемпе предложенисем памалла, сылтăм енче— çав предложенисемех уйрăмтăран кĕçĕн членсемпе пулчăр.

Т ĕ с л ĕ х р е н:

| | |
|---|---|
| 1. Вĕренекенсем уйрăмах кăçал лартнă йывăççене тăрăшса пăхаççĕ. | Вĕренекенсем йывăççене, **уйрăмах кăçал лартнисене,** тăрăшса пăхаççĕ. |
| 2. Сирĕн кашни ĕçех юратса тумалла. | Сирĕн, **вĕренекенсен,** кашни ĕçех юратса тумалла. |
| 3. Ирхине ачасем Шупашкара экскурсие тухса кайрĕç. | Ирхине, **сакăр сехетре,** ачасем Шупашкара экскурсие тухса кайрĕç. |
| 4. Ял çывăхĕнче колхоз ферми вырнаçса ларать. | Ял çывăхĕнче, **сăрт çинче,** колхоз ферми вырнаçса ларать. |

Вĕренекенсемпе малтан сулахай енчи пĕрремĕш предложение пăхса тухмалла та кĕçĕн члена туптармалла. Кунта тăву падежĕнчи **йывăççене** тӳрĕ дополнени пулать, ун умĕнче тăракан сăмах майлашăвĕ — **уйрăмах кăçал лартнă** — предложенилле определени. Унтан вĕренекенсене сылтăм енчи предложение вулаттармалла, унтан мĕн те пулин çĕннине асăрхани çинчен ыйтмалла.

Сылтăм енчи предложенире уйрăмтăран определени пур — **уйрăмах кăçал лартнисене** сăмахсем, ку определени **йывăççене** дополнение мĕнлелĕх енчен ăнлантарса парать.

— Çак предложение мĕнле вулатăп, уйрăмах уйрăмтăран кĕçĕн членсене: эсир, вĕренекенсем, çавна лайăх сăнăр.

Учитель илемлĕ, тĕрĕс сасăпа, кирлĕ чарăнупа пусăм туса вулать. Ăна схема туса ăнлантармалла.

**Вĕренекенсем йывăççене, уйрăмах кăçал лартнисене, тăрăшса пăхса ӳстереççĕ.**

Каланă чухне сасă хăпарма тытăнать, **йывăççене**—дополнение каланă чухне сасă хăвăрт хăпарать те татăлать, пысăк чарăну пулать. Малалла уйрăмтăран определени калама тытăнсан, сасă кăштах анать, **кăçал** — çинче çĕкленет, **лартнисене** сăмах çинче каллех анать те татăлать, чарăну тăватпăр. Предложенири юлашки сăмахсене каланă май сасă пĕчĕккĕн анса пырать те майĕпен татăлать. Ку предложенире логикăлла ударени (пусăм) икĕ çĕрте: **вĕренекенсем** тата **кăçал** сăмахсем çинче тăватпăр.

Уйрăмтăран кĕçĕн членсене тĕрĕс интонаципе пауза туса вулассипе учителĕн тăрăшса ĕçлемелле. Унсăран вĕренекенсем уйрăмтăран кĕçĕн членсене уйăрса илме те, хăвăрт тупса пама та пултараймаççĕ. Тепĕр енчен, ку грамматика темине тĕрĕс те илемлĕ вулассипе таччăн çыхăнтармалла.

Малтанхи икĕ предложение пăхнă май учителĕн çакна лайăххăн ăнлантарса хăвармалла. Уйрăмтăран определенисем хăйсен умĕнчи сăмахпа падеж тата хисеп тăрăх килĕшсе тăраççĕ. (Тĕслĕхсене пăх.)

Юлашки икĕ предложенипе ĕçленĕ чухне уйрăмах çакна палăртмалла: вăхăта е вырăна пĕлтерекен уйрăмтăран обстоятельствăсем хăйсен умĕнче тăракан çав йышши обстоятельствăсенех уçăмлăх, конкретлăх кĕртсе ăнлантарса параççĕ. (Сулахай енчи предложенисене сылтăм енчисемпе танлаштарса ăнлантарăр.)

Анлантарнӑ чухне ҫакӑн пек ӳкерчӗк-схемӑпа усӑ курма юрать:



Ял ҫывӑхӗнче, сӑрт ҫинче, колхоз ферми вырнаҫнӑ.

Уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсем ҫинчен вӗрентнӗ чухне ачасене чарӑну палли лартассипе те паллаштармалла. Чарӑну палли лартасси ҫак уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсене уйӑрса каланипе ҫыхӑннӑ. Ҫавӑнпа та уйрӑмтӑран кӗҫӗн член темиҫе сӑмахран тӑрать пулсан, вӑл сӑмахсене пурне те ҫак йыша кӗртмелле, уйӑрса хӑвармалла мар. Ачасем нумай чухне уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсене пӗрле илсе вулама пӗлмеҫҫӗ, чарӑну лартас чухне те йӑнӑшсем тума пултараҫҫӗ. Учителӗн яланах ҫакна асра тытас пулать.

Уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсене, вӗсемпе ҫыхӑнса тӑракан мӗнпур сӑмахсемпе пӗрле, предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа, хӑшпӗр чухне тирепе уйӑраҫҫӗ.

Ярук, нимӗнле мар пулса кайнӑскер, пуҫне усса каласмасӑр тӑчӗ. (*И. Мучи.*) Ҫав япала таҫта—«чӗре тӗпӗнче»— темиҫе ҫулсем хушши выртнӑ. (*М. Г.*) Чӑваш халӑхӗ, юратнӑ юрӑҫине сума суса, хӑй республикин тӗп хулинче — Шупашкарта, Атӑл хӗрринчи илемлӗ ҫӳлӗ сӑрт ҫине — палӑк лартрӗ (*Я. Ухс.*)

Вӗренекенсене класра тума ӗҫ памалла. Тетрадьсем ҫине тӗслӗхсем ҫыртармалла, тӗслӗхсенче уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсене аялтан икӗ кукӑр-макӑр йӗрпе туртма хушмалла, кирлӗ чарӑну палли лартмалла. Уйрӑмтӑран кӗҫӗн члена тытса тӑракан сӑмаха аялтан татӑклӑ йӗрпе туртмалла.

Тӗслӗхсем:

1. Пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен чаплӑ уявне — Майӑн пӗрремӗшне— «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» колхоз ҫыннисем ҫурхи тӗштырӑсене акса пӗтернипе кӗтсе илчӗҫ. (*Аслан.*) 2. Ку ачисене те, апат ҫиекен пулнисене, маннӑ пӑтти ҫитерчӗҫ. (*Труб.*) 3. Сахрун Петӗрӗн, Кавалкассинчи хыткукарӑн, шӑпийӗ те ҫаплах пулнӑ. (*Я. Ухс.*) 4. Хӑй вӑл, вырӑс, ырӑ ҫын,

ӳснĕ Питĕр хулинче. *(Дав.)* 5. Унта, хĕрарăмсен ушкăнĕнче, пĕри Лида сăнлăрах. *(М. Ухс.)* 6. Сĕм вăрманăн варринче, тарăн варăн тĕпĕнче, тапса тăнă пĕчĕк çăл. *(Г. Кр.)* 7. Инçе уйра, пĕр айлăмра, пытанса ларнă ват йăмра. *(Кăлк.)* 8. Музей картишĕнче, кив ăпăр-тапăр хушшинче, Турчкапала Кусар чакаланаççĕ. *(Кăлк.)* Кăнтăрла, икĕ сехетре, аслатиллĕ çумăр кĕрлесе иртрĕ.

Вĕреннине пĕтĕмлетнĕ хыççăн киле ĕç парса ямалла. Учебникра нимĕнле ĕç те кăтартман, çавăнпа та учителĕн мĕнле ĕç парассине малтанах палăртса хумалла. Пирĕн шутпа, вĕренекенсене М. Трубина çырнă« Мучар» повеç-рен уйрăмтăран кĕçĕн членсемпе 5—6 предложени тупса çырса килме, вĕсене кирлĕ сасăпа, чарăну туса, илемлĕ вулама вĕренме хушмалла.

## УЙРĂМТĂРАН ОПРЕДЕЛЕНИСЕМПЕ ПРИЛОЖЕНИСЕМ.

Уйрăмтăран определенисемпе приложенисем пĕр-пĕринпе çывăх тăраççĕ, анчах вĕсем хушшинче уйрăмлăх çук мар. Уйрăмтăран определенисем хăйсене тытса тăракан сăмаха мĕнлелĕх енчен ăнлантарса параççĕ, вĕсем **мĕнле?** ыйтура тăраççĕ. Уйрăмтăран определенисем мĕнлелĕх паллă ятĕнчен пулаççĕ.

1. Каспи тинĕсĕ, кăн-кăвак та лăпкă, таçта çитиех сарăлса выртать. 2. Çырлисем, пит тутлă та сĕтеклĕ, илĕртеççĕ куçсене. *(Алка.)* 3. Чечексем — йăм хĕрлĕ-шурă — пуç таяççĕ таврара. *(Алка.)*

Мĕнлелĕх паллă ячĕсем, хăйсене тытса тăракан япала ячĕ хыçĕнче тăрса, ăна тĕрлĕ енчен ăнлантарса параççĕ. Тĕслĕхсене пăхăр. Уйрăмтăран определенисене каланă чухне икĕ енчен те чарăну (пауза) тумалла, сасса антарса, уйăрса каламалла.

Уйрăмтăран определени çинчен вĕрентессине определенисем çинчен аса илессипе çыхăнтармалла, вĕсене икĕшне танлаштарса кăтартмалла, вара уйрăмтăран определенисем мĕн енчен пĕр пеккипе уйрăммине вĕренекенсем лайăххрах тавçăрса илме пултараççĕ.

Çак сехетрех приложенисем çинчен аса илмелле те уйрăмтăран приложенипе паллаштармалла. Уйрăмтăран приложение ахаль приложенипе танлаштарсан, мĕнле уйрăмлăхпа пĕрпеклĕхе куратпăр-ха?

Вĕсен пĕрпеклĕхĕ: ахаль приложени те, уйрăмтăран приложени те хăй умĕнчи япалана тепĕр ят парса ăнлантараççĕ, çав вăхăтрах япала ячĕшĕн определени пулаççĕ.

Танлаштарма тĕслĕхсем памалла.

1. Кăçалхи çул сунарçă-**комсомолец** виçĕ кашкăр тытрĕ.

Кăçалхи çул сунарçă, **комсомолец**, виçĕ кашкăр тытрĕ.

2. Пирĕн шкулти учитель-**биолог** çĕнĕ сортлă улмуççисем ӳстерет.

Пирĕн шкулти учитель, **биолог**, çĕнĕ сортлă улмуççисем ӳстерет.

3. Ирхине ирех хĕр-**агроном** колхоз уй-хирне тухать.

Ирхине ирех хĕр, **агроном**, колхоз уй-хирне тухать.

Танлаштарнă хыççăн çакăн пек уйрăмлăха та асăрхаççĕ: ахаль приложенисене хăй ăнлантаракан сăмахпа пĕрле, пĕр чарăнмасăр, сасса улăштарса тăмасăр калаççĕ. Уйрăмтăран приложенисене вара хăй ăнлантарса таракан сăмахран уйăрса, чарăнса, сасса кăштах антарса калаççĕ. Ăнланмалларах пултăр тесен, схема туса памалла.

Тепĕр уйрăмлăх: уйрăмтăран приложени, хăй ăнлантаракан сăмахпа килĕшсе, пĕр сăпатра, пĕр падежра тăрать.

Эпир депутата, **халăх тарçине**, кăмăлласа йышăнтăмăр.

**Тарçине** приложени хăй ăнлантарса тăракан **депутата** сăмахпа 3-мĕш сăпатри тăву падежĕнче килĕшсе тăрать.

Ахаль приложени ят мар падежра тăнă чух хăй ăнлантаракан сăмахпа килĕшсе тăмасть, тытса тăракан сăмахĕ ят падеж форминчех юлать, приложени çеç улшăнса тĕрлĕ падежра та тăма пултарать.

Т ĕ с л ĕ х:

Кăçалхи çул сунарçă-комсомолец виçĕ кашкăр тытрĕ.
Кам. п. Сунарçă-комсомолецăн икĕ кĕпçеллĕ пăшал пур.
Пар. п. Кашкăрсене тытнăшăн сунарçă-комсомолеца преми пачĕç.
Тăв. п. Эпĕ вăрманта сунарçă-комсомолеца куртăм.
Пĕрл. п. Ман юлташ сунарçă-комсомолецпа çӳрет.
Выр. п. Пичче йĕлтĕрĕ сунарçă-комсомолецра.
Туху п. Вăл хыпара эпĕ сунарçă-комсомолецран илтрĕм.

Уйрăмтăран приложенисем хăй ăнлантарса тăракан сăмахпа пур падежра та килĕшсе тăнине кăтартма çак тĕслĕх илсе вĕçлесе кăтартмалла.

Ят. п. Ӑçалхи çул сунарçӑ, комсомолец, виçӗ кашкӑр тытрӗ.
Кам. п. Сунарçӑн, комсомолецӑн, икӗ кӗпçеллӗ пӑшал пур.
Пару п. Кашкӑрсене тытнӑшӑн сунарçа, комсомолеца, преми пачӗç.

Приложенисене тытса тӑракан сӑмахсем япала ятӗнчен анчах мар, местоименирен те, палӑрту аффиксӗ йышӑннӑ паллӑ ячӗпе причастирен те пулма пултараççӗ.

1. Эсир, çамрӑксем, пирӗн пуласлӑх. 2. Эс, тар тумламӗ, чӳнупа хӗрсе, чӑнне каларӑн пӗтӗмпех пире. *(Лахути.)* 3. Пире, малта пыракан совет литературин представителӗсене, совет патриочӗсене, буржуалла культура умӗнче пуç тайни е вӗсенчен вӗренекенсем пулни килӗшет-и-ха ӗнтӗ? *(А. Жданов.)* 4. Эпир, рабочисем, хисепсӗр пысӑк машинӑсенчен пуçласа ача-пӑча теттисем таранах йӑлт хамӑр вӑйпа тӑвакан çынсем. *(М. Г.)* 5. Иван Петровичӑн виçӗ ывӑл: чи асли, Хӗлип, Шупашкарти педагогика институтӗнче вӗренет, кӗçӗнни, Никифор, колхозра бригадирта ӗçлет. 6. Финиша малтан чупса çитекенни, Петӗр Бойков, пирӗн класра вӗренет.

Приложенисем хӑйсем ӑнлантарса тӑракан сӑмахсемпе союзпа е союзла сӑмахсемпе çыхӑнса тӑма пултараççӗ.

а) Акӑ **е** союза илер, ун вырӑнне **урӑхла каласан** сӑмах çаврӑнӑшӗ те тӑма пултарать. Ку йӗркепе приложени пулакан япала ятне хӑшпӗр чухне ытларах тӗл пулакан урӑх сӑмахпа — япала ячӗпе ӑнлантараççӗ.

**Вӗренекенсем хӳреллӗ пӑнчӑ, урӑхла каласан запятоя, пур чухне те тӗрӗс лартма пӗлмеççӗ.**

**Учительсем, е халӑха вӗрентекенсем, пирӗн колхоза лекци вулама çӳреççӗ. Писательсем, е этем чунӗн инженерӗсем, пурнӑçа лайӑх сӑнама пӗлеççӗ.**

б) Приложени пулакан пӗр-пӗр япалана ытти япаласенчен уйӑрса кӑтартас çӗрте çакӑн пек сӑмахсемпе усӑ кураççӗ: **пуринчен ытла, сӑмахран, çав шутран, иксӗмӗр** т. ыт. те. Ку сӑмахсем приложенисемпе пӗрле тӑраççӗ, вӗсем приложенисем çине логикӑлла ударени туса палӑртма пулӑшаççӗ. Паллах, приложенисемсӗр ку сӑмахсем уйрӑм тӑма пултараймаççӗ. Вӗсен тепӗр пӗлтерӗшӗ — приложенисене тытса тӑракан сӑмахсемпе çыхӑнса тӑма пулӑшаççӗ.

Совет çĕршывĕн тăшманĕсем, пуринчен ытла нимĕç фашисчĕсем, пирĕншĕн чи хăрушши пулнă. Искусство çыннисем, вăл шутра писательсем те, тăван халăх культурине ÿстересшĕн тăрăшаççĕ. Шывра путман хытă йывăççем, сăмахран, лим, карапсем тунă çĕре каять. *(Ком. ял.)* Эсир, шăялупа иксĕр те, çырмана кÿлĕ тума анăр.

Учитель çак тĕслĕхсемпе ĕçлет, унта приложенипе пĕрле тăракан союзла сăмахсен пĕлтерĕшĕпе вырăнне кăтартса парать, вĕсене приложенипе пĕрле илсе икĕ енчен те запятой лартасси çинчен те асăрхаттарса хăварать.

Темăна ăнлантарнă хыççăн вĕренекенсене уйрăмтăран определенисемпе, приложенисемпе хăйсене тĕслĕхсем туптармалла, вĕсене тĕрĕс интонаципе паузăпа калама хăнăхтармалла, приложенисемпе çыхăнса тăракан сăмахсене туптармалла, приложени мĕнле сăмаха ăнлантарса панине кăтартса пама ыйтмалла. Юлашкинчен, уйрăмтăран определенипе приложенирен тăракан предложенире чарăну палли хăçан лартасси çинче чарăнса тăмалла.

1. Уйрăмтăран определенисемпе приложенисене вĕсемпе çыхăнса тăракан сăмахсемпе пĕрле запятойпа уйăрса çыраççĕ.

**Урампа пыракан маттур çынсене, орденлă геройсене, куç хупмасăр тенĕ пек пăхса тăтăмăр. Пире, лайăх вĕренекенсене, Мускава экскурсие илсе кайрĕç. Социализмла çĕршывсем, вăл шутра Китай та, хăвăрт ÿссе пыраççĕ.**

2. Уйрăмтăран определенисемпе приложенисем анлă пулсан тата вĕсене пысăк чарăну туса калатпăр пулсан, тире лартса уйăрса çырмалла.

**Совет государстви экономикăна — пирĕн стройăн пурлăх никĕсне — малашне аталантарас енĕпе тата тимлĕрех ĕçлеме пултарать.** *(Н. Хрущёв.)* **Унтри ашшĕ — вăрăм шурă кĕпепе кăвак йĕм тăхăннă, пĕчĕк хăмăр сухаллă, имшер куçлă мужик — тăсланкă Матижев умĕнче сасартăк каялла чакса тăрать те мĕскĕнленсе каять.** *(Элк.)* **Вăл — ытлашши калаçма юратман пысăк пÿллĕ штангист — сăнран пăхсан, темле ырхан пек курăнать.** *(Бурн.)* **Пире контратакăна илсе каякан тинĕс пехотин лейтенанчĕ — мана, аманнăскерне, вилĕмрен çăлса хăваракан çын — хам куç умĕнче тăрать.** *(Бурн.)*

Вĕреннине çирĕплетес çĕрте творчествăллă ĕç памалла. Вĕренекенсене тĕслĕхсем çыртармалла, унта япала ячĕсене çеç çырнă, анчах вĕсене ăнлантаракан определенисемпе приложенисене çырман, çавсене тупса çырмалла.

1. Гера Свинцов... шкул умне çитсе чарăнчĕ. Ана хирĕç Нина Чамжаева ... утса пырать. Вĕсем иккĕшĕ те ... шкула вăхăтра çитессипе, уроксене лайăх хатĕрленессипе пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Нихăшĕ те пĕр-пĕринчен кая юласшăн мар.

— Эсĕ, Гера, пур предметпа та ... туса килтĕн-и?

— Çапла. Физикăпа та задачăсем шутларăм.

— Ху тата мĕнле, Нина, пĕтĕмпех турăн-и?

— Тума ĕлкĕртĕм, анчах физикăпа пĕр задачи пулсах çитмерĕ пулмалла.

— Юрать, пĕрле пăхса тухăпăр,— юлташне пулăшас шутпа каларĕ Гера Свинцов.

Вĕсем... васкасах шкула кĕрсе кайрĕç.

Темăна вĕренсе пĕтернĕ хыççăн киле ĕç памалла. Учебникра ку темăпа хăнăхтару паман, çавăнпа та учителĕн хăйĕн ĕç парса ярас пулать. Çакăн пек ĕç сĕнме юрать.

а) Уйрăмтăран определенисемпе тата приложенисемпе кашни вĕренекен ултшар предложени тупса çырса килет.

ă) Çак предложенисене синтаксисла разбор тумалла, кирлĕ чарăну паллисем лартмалла, мĕншĕн лартнине ăнлантарса памалла. (Учитель тĕслĕхсене чарăну паллисене каламасăр вуласа çыртарать.)

1. Атăл хăватлă та мăнкăмăллă, вăл нихçан та никама парăнман. 2. Пирĕн, кунти чăвашсем, пит нумаях тухса çӳремеççĕ, çавăнпа революци мĕн иккенне те уççăн пĕлмеççĕ-ха. *(Элк.)* 3. Пынă хресченсенчен иккĕшĕ — Сала çыннисемех, пĕри — Уйкас ял çынни пулнă. *(Элк.)* 4. Ку — Михаил, вăтамми, Хусанти семинаринче вĕренсе тухнă та халь пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ учительре ĕçлесе пурăнать. *(Элк.)* 5. Вăл хăйĕн çамрăк тусĕсемпе — Павăлпа, Ванеçпе — тĕттĕм каçсем, лаша кӳлсе, ытти ялсене кайрĕ. *(Элк.)*

## -И, -СКЕР АФФИКССЕМ ЙЫШАННА ПАЛЛА ЯТЕНЧЕН Е ПРИЧАСТИРЕН ПУЛНА ПРИЛОЖЕНИ.

Вĕренекенсем уйрăмтăран приложенисем çинчен пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та **-и, -скер** аффикссем паллă ячĕпе причасти çумне хушăнса пулнă приложенисем çинчен вĕрентесси йывăрах мар. Ку темăна вĕрентесси паллă ячĕпе тата причастипе çыхăннă, çавăнпа та малта-

нах вёсем çинчен кёскен аса илмелле. Морфологие вёреннё хыççăн паллă ячёпе причасти **-и, -скер** аффикс йышăнма пултарни вёренекенсемшён çёнё япала мар ёнтё, анчах вёсен синтаксисри пёлтерёшне пур енчен те уçса паман-ха. Çаксенчен пёри вăл **-и, -скер** аффикс йышăннă паллă ячёпе причасти предложенире уйрăмтăран приложени тума пултараççё. Учителён çакна асăрхаттармалла: паллă ячёпе причасти **-и, -скер** аффикссем йышăнсан, вёсем предложенире ытларах тёп членсем пулаççё.

1. **Ытти ачасенчен çӳлёреххи пуринчен те хăвăрт чупать.** 2. **Кёнеке çыраканскер пирён колхоз фермине килсе курчё.** 3. **Социализмран коммунизма куçасси вăл — нумай вăхăта пыракан питё кăткăс процесс.** *(Н. Хрущёв.)* 4. **Пирён ёç — вёренесси.** 5. **Çемьере вăл — чи асли.**

**-И, -скер** аффикс йышăннă паллă ячёпе причасти хăçан уйрăмтăран приложени пулаççё?

Пёр-пёр япала ячёпе местоимени хыççăн тăрса, ăна ăнлантарса параççё пулсан, **-и, -скер** аффикс йышăннă паллă ячёпе причасти уйрăмтăран приложени пулаççё. Уйрăмтăран приложенисем хăйсем ăнлантаракан сăмахсемпе падежпа хисеп тăрăх килёшсе тăраççё. Ун пек приложенисене те, вёсем пёр сăмахран е сăмах майлашăвёнчен тăраççё пулсан та, кирлё чарăнупа тата сасăпа палăртса калаççё.

Çакăн йышши уйрăмтăран приложенисен пулăвёпе пёлтерёшё çинчен калаçу меслечёпе ачасене ăнлантарса памалла. Темăна ăнлантарас çёрте çакăн пек предложенисемпе ёçлемелле.

1. Хуркайăк пек карталаннă хёрарăмсем — **ватти те, çамрăкки те** — ёмёртенпе пирчевленсе ларнă çереме кёреçепе хусăклаççё: хăяр акма хатёрлеççё. *(Аслан.)* 2. Анюк, **чăх-чёп пăхаканни,** районти хаçата яланах çырса тăрать. *(Ком. ял.)* 3. Çёнё çурт, **пысăкскер,** çапçутă кантăксемпе пăрахут пек курăнса ларать. *(Труб.)* 4. Унăн шăллё Зиновий, **Çирукран сакăр çул кёçёнскер,** 1944 çулта июлён 14-мёшёнче фашистсемпе паттăррăн çапăçса пуçне хучё. 5. Хумман тыррине, **курăк пусна́скере, кăмпаллăскерне,** çавапа кăна çулмалла. *(Труб.)* 6. **Юрлаканскер,** вăл колхоз клубёнче концерт иртерчё.

Малалла плакатри тёслёхсемпе ёçлеме тытăнмалла. Вёренекенсене предложение уйрăмтăран приложенисенче кирлё чарăнупа сасса улăштарса вулама хăнăхтармалла.

Ун хыççăн пĕрремĕш предложение илмелле те малтан предложение приложенисĕр, унтан приложенипе вулаттармалла, вĕсен хушшинче содержанипе форма (кӳлепи) тĕлĕшĕпе мĕнле уйрăмлăх пуррине ыйтса пăхмалла.

Тен, вĕренекенсем хăйсемех хуравлама пултараççĕ. Пĕрремĕш предложенири **хĕрарăмсем** подлежащие **ватти те, çамрăкки те** пулакан уйрăмтăран приложени уççăн ăнлантарса парать. Чăннипех те, **хĕрарăмсем** сăмах анлă, татăклă мар пĕлтерĕшлĕ. Хĕрарăмсем тĕрлисем пулма пултараççĕ: хитрисем те, нĕрсĕррисем те, ăслисем те, айваннисем те, ĕçченнисем те, кахаллисем те, пĕчĕккисем те, пысăккисем те, саррисем те, хурисем те т. ыт. те, анчах кунта калаканĕ вĕсене çулĕ тăрăх, çуралнăранпа мĕн чухлĕ пурăнни енчен кăтартса парасшăн пулнă. Çавна май çерем çĕтес ĕçе пур хĕрарăмсем те — **ваттисем те, çамрăккисем те** — хушăннине куратпăр. Калакан хĕрарăмсем сăмаха çак енчен уççăн, татăклăн ăнлантарса парас тĕллев лартнă. Приложени япалана тепĕр ят парса ăнлантарса парать пулсан, вара çак тĕслĕхре ытларах мĕнлелĕх енчен ăнлантарни витĕмлĕрех сисĕнет, çапла вара ăна уйрăмтăран определенисен шутне те кĕртме пулать, анчах С. П. Горский çырнă учебник кун йышши уйрăмтăрансене темшĕн уйрăмтăран приложенисен шутне кĕртнĕ. Çавăнпа пирĕн те уйрăмтăран приложенисен ячĕпех вĕрентме сĕнме тивет. Тĕрĕссипе каласан, паллă ячĕ çумне **-и, -скер** аффикс хушăнса пулнă сăмахсенче япала пĕлтерĕшĕ мар, мĕнлелĕх пĕлтерĕшĕ пысăк вырăн йышăнать. Причасти çумне **-и, -скер** аффикс йышăнса пулнă сăмахсем, чăннипех те, мĕнлелĕхе мар, япалана ытларах кăтартаççĕ. Вĕсем уйрăмтăран приложенисем пирки пачах иккĕленмелле мар.

Учителĕн çак уйрăмлăха та палăртмалла.

Уйрăмтăран приложенисем хăйсем ăнлантаракан сăмахпа падежпа хисеп тăрăх килĕшсе тăнине плакатри пиллĕкмĕш тĕслĕхе илсе ăнлантармалла, унтан вĕренекенсене, çав предложенири приложенипе ăна тытса тăракан сăмаха пур падежсене лартса, тĕслĕхсем тупма хушмалла.

Юлашки предложение разбор тунă чух вĕренекенсем мĕн кураççĕ-ха?

Паллă ячĕпе причасти çумне **-и, -скер** аффикссем хушăннипе пулнă уйрăмтăран приложенисем хăй ăнлантаракан сăмах умĕн тăма пултараççĕ. Ун йышши прило-

женисем предложени пуçламăшĕнче тăраççĕ, ун хыççăн ят падежĕнчи япала ячĕ е местоимени пулать.

Ватăскер, **Павăл Семенович,** колхоз ĕçне тухма парахман-ха.

Кам вăл Павăл Семенович?— **Ватăскер** — уйрăмтăран приложени, паллă ячĕ çумне **-скер** аффикс хушăнса пулнăскер, пайăр ятĕнчен пулнă япала ятне — **Павăл Семенович** сăмахсене ăнлантарса тăрать, ăна ватăлăхпа çамрăклăх тĕлĕшĕпе кăтартса парать.

Юлашкинчен уйрăмтăран приложенисене предложенири ытти членсенчен чарăну палли лартса уйăрни çинчен каламалла.

1. Уйрăмтăран приложение унпа çыхăнса тăракан ытти сăмахсемпе пĕрле предложенири ытти членсенчен запятойпа уйăраççĕ.

Ярмуш, **сĕтел хушшинче урок вĕренсе лараканскер,** йăл кулчĕ. *(Турх.)* Пурте, **хытă тĕлĕннĕскерсем,** кам та кам турра манни çинчен, хуласенчи пăлхавсем çинчен илтни-пĕлнисене кала-кала параççĕ. *(Элк.)*

2. Уйрăмтăран приложени хăй ăнлантаракан сăмах умĕн тăнă чухне ун хыççăн кăна запятой лартаççĕ.

**Чылай лутраскер,** Ивук час-часах пуçне каçăртса Ухтиван çине пăхать, вĕттĕн пускаласа, çулăн пĕр енчен тепĕр енне чупа-чупа каçать. *(Уяр.)* **Йывăр аманнăскер,** Богданов пăрпа витĕннĕ тундрăри нимĕç тылĕнчен хамăрăннисем патне лекес тесе, виçĕ талăк хушши хырăмпа шунă. *(Бурн.)*

3. Уйрăмтăран приложени анлă пулсан е пĕр йышши членсенчен тăрать пулсан, ун чухне ăна икĕ енчен те тире лартса уйăрмалла.

Макçăм, **тин çеç ўссе çитĕнекен вунçичĕ çулхи çамрăк, пĕвĕпе пысăк мар та, патвар — ашшĕ пекех чăмăр питлĕ те хура куçлăскер** — ку вăхăтри тĕттĕм ялта чылаях вĕреннĕ çын вырăнне шутланнă. *(Элк.)* Ăна пуринчен ытла хресченсем калаçни — **уйрăммăнах Иван Сидоров хĕрўллĕн тата ăслăн каласа пани** — тĕлĕнтерчĕ. *(Элк.)* Çав хушăксенчен час-часах Матюк амăшĕ Таиç карчăк — **вăрăм та кăштах курпунлăскер, чарăлса тăракан кăвак куçлăскер** — Муççа килхушшинелле тинкерсе пăхса, темскер сăнанă, унта кам мĕн тунисене асăрханă, мĕн калаçнисене итленĕ. *(Элк.)*

Темăпа паллаштарнă хыççăн хăнăхтару ĕçĕ туса ирттермелле, вĕренекенсене уйрăмтăран приложенисемпе

тĕслĕхсем туптармалла, вĕсен пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен ыйтмалла, кирлĕ чарăну паллисем лартма хăнăхтармалла. Учитель ачасене тетрадьсем çине уйрăм предложенисем çыртарать, предложенири уйрăмтăран приложение туптарать, мĕнле чарăну палли лартмалли çинчен ыйтать.

Вĕренекенсем хăйсем тĕллĕн уйрăмтăран приложенисене тупма тата вĕсене чарăну паллипе уйăрма пĕлсен, килте учебникри 81-мĕш §-а вуласа ăнланма, 155-мĕш хăнăхтарăва туса килме хушмалла.

Уйрăмтăран приложенисене вĕреннĕ май ăнлантару е асăрхаттару диктанчĕ туса ирттерме пулать, ăна валли çакăн пек текст сĕнме юрать.

1. Вĕсем, Етĕрнепе Кăрмăш хулисенчен ушкăнласа янăскерсем, хурлăхлăн та хаяррăн юрласа каятчĕç. *(Элк.)* 2. Пурнăçа куркаланăскер, халь ĕнтĕ вăл йĕркеллĕ калаçма та пултарать. *(Элк.)* 3. Анчах эсир, такам йышшисем, чăрмантарса пыратăр-ха унта. *(Аслан.)* 4. Пўртне кĕме çаврăнса кайнăскер, каялла çаврăнса, карта патне автан пек сиксе пычĕ. *(Труб.)* 5. Колхозник мар хресченсем те, йышлăраххисем, урпа вырса пĕтерсе пыраççĕ. *(Труб.)* 6. Хăмач кĕпеллĕ те шурă тутăрлăскер, ăна пуринчен те лайăх хĕрача пек туйăна пуçларĕ. *(Х. Ç.)* 7. Ахаль чухне те йывăр шухăшпа ытла пусăрăнса çўрекенскер, вăл ăнсăртран сăмах илтсе пушшех салхуланса, мĕскĕнленсе кайнă. *(Аслан.)* 8. Арçукăн, вĕренўре лайăх ĕлкĕрсе пыраканскерĕн, пĕр-пĕр инкек пулсан, ытлашши кулянса пуçа чиксе çўрес йăла çук, вăл кăшт тулашкалĕ те лăпланĕ. *(Турх.)* 9. Микула, шĕшкĕлĕхсене лайăх пĕлекенскер, ачасене çын сахал çўрекен чăтлăха илсе кайрĕ. *(Турх.)* 10. Тухтар, ĕçлеме юратаканскер, вăйпитти те чипер, ун пек çынна ялта хисеплемесен юрамасть, тетĕшĕн те хирĕçме сăлтав çук. *(Илп.)* 11. Умра тĕрлĕ тĕслĕ çаврашкасем — хĕрлисем, симĕссисем, саррисем, кăваккисем — хисепсĕр нумайăн килсе тухрĕç. *(Бурн.)* 12. **Акустик** — сасă итлекен аппарат умĕнчи çын — таврара мĕн пулса иртнине итлесех пыраканскер, капитан-лейтенанта хыпар парсах тăрать. *(Бурн.)* Çапăçăва кăтартса пыраканни, чăннипе, Наумов лейтенант мар, Волошин акустик пулчĕ. *(Бурн.)* 14. Анчах пире, шăлтах аптранăскерсене, боцман нумайччен шавлаттармарĕ. *(Бурн.)* 15. Питĕ пултараканскер, унăн сăнĕ — отличниксен хăми çинче. *(Бурн.)*

## УЙРĂМТĂРАН ОБСТОЯТЕЛЬСТВĂСЕМ.

**(Вырăна, вăхăта уйрăм тĕрĕслетсе палăртакан обстоятельствăсем.)**

Чăваш литература чĕлхинче уйрăмтăран обстоятельствăсем чылай. Вĕренекенсем уйрăмтăран обстоятельствăсене пĕр йышши членсемпе пăтраштараççĕ, чарăну паллисене тĕрĕс лартма пĕлмеççĕ.

Тĕслĕхрен: **Музее уçиччен ушкăнпа тата темиçе хут вăрмана, Кĕтне хĕрне, тип çырмасене çитсе килмелле пулчĕ.** *(Турх.)* Ку пĕр йышши членсенчен тăракан предложени кăна. Предложенире юнашар тăракан тĕрлĕ йышши обстоятельствăсем те уйрăмтăран обстоятельство пулмаççĕ, вĕсене чарăну паллипе уйăрмалла мар. **Улăхра иртенпех çава сасси янăрать. Ярмуш каникул хыççăн виççĕмĕш кун шкула пыманни класри ачасене те шухăша ячĕ.** *(Турх.)* **Вăл пĕчĕк ача чухне ашшĕ-амăшĕпе пĕрле чылай вăхăт хушши чăвашсем хушшинче пурăнса ӳснĕ-мĕн.** *(Аслан.)*

Çак темăпа паллаштарас умĕн малтан вĕреннине аса илмелле. Ун хыççăн доска çине çакăн пек тĕслĕхсем çырса памалла.

1. **Малта колхоз сачĕ курăнать.**

2. **Ирхине радио калаçма тытăнать.**

Вĕренекенсене тĕслĕхсене синтаксисла разбор тутармалла, обстоятельство пулакан сăмахсене туптармалла: **малта** — вырăн обстоятельстви **курăнать** глагол-скзуемăя анлăн ăнлантарса парать, **ирхине** — вăхăт обстоятельстви **калаçма тытăнать** хутлă глагол-сказуемăя пăхăнса тăрса ăнлантарать.

**Малта** тата **ирхине** обстоятельствăсем конкретлăрах пĕлтерĕшлĕ пулччăр тесе, ансăр, пĕр йышши пĕлтерĕшлĕ вырăнпа вăхăт обстоятельствисем тупса хушмалла. Тĕслĕхрен çакăн пек обстоятельствăсем илсе пама пулать: **сăрт çинче, çичĕ сехетре**.

Малта, **сăрт çинче,** колхоз сачĕ курăнать. **Малта** ăçта пулнине ансăр пĕлтерĕшлĕ **сăрт çинче** обстоятельство тĕрĕслетсе ăнлантарса парать.

Унтан иккĕмĕш предложение разбор тăваççĕ, тĕп членсемпе кĕçĕн членсене тупаççĕ. Уйрăммăнах учитель вăхăт обстоятельстви пулакан **ирхине** наречи çинче чарăнса тăрать. **Ирхине** — *хăçан?* ыйтупа ыйтăнать, вăхăта кăтартса парать, анчах çак ирхине обстоятельство радио миçе сехетре калаçма тытăннине конкретлă тĕрĕслетсе палăртса уçса параймасть, вăл анлă пĕлтерĕшлĕ: тават сехетрен пуçласа 10 сехет таранах ирхи вăхăт шутланать. Çавăнпа та **ирхине** сăмаха ăнлантарма вăхăта пĕлтерекен ытти обстоятельствăсем кĕртсе лартмалла. Ана валли тĕрĕслетсе палăртакан ансăр пĕлтерĕшлĕ вăхăт обстоятельствисем кĕртсе лартас пулать.

Кун йышши обстоятельствăсене вĕренекенсем хавхалансах тупса пама пултараççĕ.

Учитель: Ачасем, радио миçе сехетре калаçма тытăнать-ха?

Вĕренекен: Радио çичĕ сехетре калаçма тытăнать.

Учитель: **Ирхине** сăмах хыççăн **çичĕ сехетре** сăмах майлашăвне кĕртсе лартсассăн, предложенири шухăша витĕмлĕрех ăнланмалла пулать.

Ирхине, **çичĕ сехетре**, радио калаçма тытăнать.

Учитель: **Сăрт çинче** тата **çичĕ сехетре** мĕнле обстоятельствăсем-ши?

Вĕренекен: **Сăрт çинче** тата **çичĕ сехетре** уйрăмтăран обстоятельствăсем пулаççĕ.

Учитель: Уйрăмтăран обстоятельствăсен пĕлтерĕшне ăнлантарса пар-ха.

Вĕренекен: Ахаль обстоятельствăсем предложенири сказуемăя анлăн ăнлантарса тăраççĕ пулсан, уйрăмтăран обстоятельствăсем хăйсен умĕнчи обстоятельствăсене ансăртарах пĕлтерĕшпе тĕрĕслетсе, конкретлă, уçăмлă кăтартса параççĕ.

**Малта, сăрт çинче, колхоз сачĕ курăнать.** Аçта курăнать?— **Малта, сăрт çинче.**

**Ирхине, çичĕ сехетре, радио калаçма тытăнать.** Хăçан радио калаçма тытăнать? — **Ирхине, çичĕ сехетре.**

Пĕрремĕш вырăнта тăракан обстоятельствăсене иккĕмĕш вырăнта тăракан обстоятельствăсем ансăр пĕлтерĕшпе конкретлă тĕрĕслетсе палăртса уçса параççĕ.

Малалла учитель уйрăмтăран обстоятельствăсене каланă чух сасăпа интонаци мĕнле вырăн йышăнни çинче чарăнса тăрать.

**Малта, сăрт çинче, колхоз сачĕ ӳсет** предложениех илĕпĕр.

**Малта** — наречирен пулнă обстоятельствăна каласа пĕтернĕ çĕре сасă çĕкленсе илет те сасартăк таталать, унтан чарăнса тăрать. Малалла **сăрт çинче** уйрăмтăран обстоятельствăна аннă сасăпа калатпăр, анчах **çинче** хыççăмаха каланă чухне каллех сасă кăштах çĕкленсе илет те, пауза пулать. Ун хыççăн предложенири ытти сăмахсене малтанхи сасă виçипех калатпăр. Сасă татăлса чарăнса тăнă вырăна çырура запятой лартса çырмалла. Çавна май вăхăта, вырăна, ĕçе тĕрĕслетсе паракан уйрăмтăран обстоятельствăна икĕ енчен те запятой лартса уйăрмалла.

Уйрӑмтӑран обстоятельствӑсенчи сасӑсен вырӑнне кӑтартакан схема.

↓
та,

Мал                    че, колхоз сачӗ

сӑрт ҫин                    ӳс

ет.

Ачасене уйрӑмтӑран обстоятельствӑран тӑракан предложенисенче сасӑ мӗнле улшӑннине кӑтартакан схемӑна тума хӑнӑхтармалла. Ку ӗҫе илемлӗ вулассипе тата чарӑну паллисене пӗлсе лартассипе ҫыхӑнтармалла. Уйрӑмтӑран обстоятельствӑсем мӗнле пуплев пайӗнчен пулнине те каламасӑр иртмелле мар: вӗренекенсем обстоятельствӑсене пур чухне те наречирен пулать теме пикенеҫҫӗ.

Уйрӑмтӑран обстоятельствӑсем мӗнле пуплев пайӗсенчен пулнине вӗренекенсем уҫҫӑнрах ӑнланса илччӗр тесен, тӗслӗхсем памалла та морфологилле разбор тутармалла. Вӑхӑт сахал пулсан, обстоятельство пулакан сӑмахсене ҫеҫ разбор тумалла. Разбор тунӑ май ачасем уйрӑмтӑран обстоятельство пулакан сӑмахсем мӗнле пуплев пайӗсенчен пулнине тишкерсе илеҫҫӗ. Разбор валли ҫакӑн пек тӗслӗхсем сӗнме пулать.

1. Ав унта, сартра, шкул ҫурчӗ. 2. Пӳлӗмре, алӑк хыҫӗнче, темскер кӗмсӗртетсе илчӗ. 3. Сулахай енче, зал пеккинче, ҫичӗ парта. *(Элк.)* 4. Лере, аялта, вӗҫӗмсӗр шавласа тӑракан тӗксӗм те сенкер хумсем чӳхенеҫҫӗ. *(Лерм.)*. 5. Февралӗн ҫиччӗмӗшӗнче, ирхине ирех, фашистсем ҫине наступлени пуҫларӑмӑр.

Ку тӗслӗхсенчен мӗн курӑнать-ха?

Уйрӑмтӑран обстоятельствӑсем наречирен, ят мар падежӗнчи япала ятӗнчен, япала ячӗпе хыҫҫӑмахран пулаҫҫӗ. Ҫак тӗслӗхсемпе усӑ курса, уйрӑмтӑран обстоятельствӑсенче чарӑну палли лартассине те ӑнлантарса хӑвармалла.

### *ПУҪНЕ* ХЫҪҪӐМАХЛӐ УЙРӐМТӐРАН ДОПОЛНЕНИ.

Уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсен шутнех **пуҫне** хыҫҫӑмахлӑ уйрӑмтӑран дополнени кӗрет. Вӑл тӑван чӗлхере сахал тӗл пулать пулсан та, анчах ӑна ытти уйрӑмтӑран кӗҫӗн членсенчен уйӑрса илме пӗлмелле.

**Пуçне** хыççăмахлă уйрăмтăран дополнени хăй умĕнче тăракан сарлака ăнлавлă члена . уçса парать, анчах хăй çав ăнланăва кĕмест, вăл унтан уйрăммине пĕлтерет.

1. Пирĕн килйышра, пĕчĕк шăллăмсăр пуçне, пурте колхозра ĕçлеççĕ. 2. Çиччĕмĕш класри вĕренекенсем, Петюксăр пуçне, вырăс чĕлхипе лайăх вĕренеççĕ. 3. Пур кайăксем те, куккуксăр пуçне, чĕпписене хăйсем пусса кăлараççĕ. 4. Мĕнпур пурлăх, çӳпçери япаласемсĕр пуçне, 1160 тенкĕ пуçтарăнать. *(Кр.-Асли.)*

Учитель малтанхи предложение илет те вĕренекенсене ăнлантарса парать. Ăнлантарнă чухне çакна паллă тăвать: **пуçне** хыççăмахлă уйрăмтăран дополнени **пĕчĕк шăллăмсăр пуçне** тени пулать, вăл хăй умĕнче тăракан **килйышра** сăмаха ăнлантарса парать, анчах хăй çав ăнланăва кĕмест, уйрăммăн тăрать.

камсăр пуçне?

— **Пирĕн килйышра пурте колхозра ĕçлеççĕ.**

— **Пĕчĕк шăллăмсăр пуçне**.

**Пуçне** хыççăмахлă уйрăмтăран дополнени **камсăр** е **мĕнсĕр пуçне?** ыйту çине ответлет, çавăнпа та предложенире ăна, ытти уйрăмтăран кĕçĕн членсем пекех, паузăпа уйăрса тата интонаципе палăртса каламалла. Учитель каллех интонаци схемине туса кăтартать те вĕренекенсене тĕрĕс вулама вĕрентет.

**Пуçне** хыççăмахлă уйрăмтăран дополнение предложенири ытти членсенчен запятойпа уйăрса çыраççĕ.

Манăн туссем, **Павликсĕр пуçне,** кĕнеке вулама юратаççĕ.

Чарăну палли лартас çĕрте çакна та асăрхаттармалла: **пуçне** хыççăмахлă сăмах майлашăвĕ хăшпĕр чухне уйрăмтăран дополнени пулмасть, ун пек чухне запятой лартса уйăрмаççĕ.

**Ку пĕренесене ыйтмасăр илнисĕр пуçне эсĕ, Аргандеева, тепĕр йăнăш тунă.** *(Турх.)* **Юлташ кинона мансăр пуçне кайса курнă.**

Уйрăмтăран дополненипе обстоятельствăсене вĕренсе пĕтернĕ май синтаксисла разбор тумалла, чарăну палли лартма вĕрентессипе ăнлантару диктанчĕ çыртармалла.

Диктант валли хăшпĕр тĕслĕхсем:

1. Сĕтел хушшинчен тухнă Якравпа Ванеç алăк патне, Илле çумнелле, пырса ларчĕç. *(Элк.)* 2. Пĕр каçхине, садран таврăннă чух, Саламби Лепăна хăйсем патне пырса ларма чĕнче. *(Арт.)* 3. Манăн чĕрĕп пӳртре, ăшă çĕрте, хĕл каçрĕ. *(Харл.)* 4. Сĕтел умне, Тарье инке çывăхнех, Вера тухса тăчĕ. *(Турх.)* 5. Юлташĕсем Яр-

муша ку ыйтăва татса пама пулăшрĕç, тĕрĕссипе, Нинăсăр пуçне, ăна пăртак та пулин ӳкĕтлекен те пулмарĕ. *(Турх.)*

Юлашкинчен çак темăпа тĕрĕслев çыру ĕçĕ е изложени çыртармалла. Текст:

### ЯТМАН ҪИЛЕ ТАВРАННИ.

Ҫиле çитесси инçе ĕнтĕ. Ҫывăхрах йăмра тăррисем палăра пуçларĕç, ял вĕçĕнче, тӳрем вырăнта, ултă çунатлă çил арманĕ курăнса кайрĕ. Ятман икĕ çула яхăн курман тыр пуссине, улăха, çывăхри мĕнпур япалана тинкерсе пăхать.

Ял патне çывхарса пынăçемĕн унăн илемлĕхĕ куç умне ытларах туха пырать. Чăваш çĕршывĕнче илемлĕ ялсем татах нумай пулĕ, анчах Атăлкасси пеккине Ятман урăх ниçта та курман. Атăлкасси хитререн те хитре. Вăл икĕ çырма пĕрлешнĕ çĕрте, лапамра, ларать. Аякран пăхсан, Атăлкассине ял теме те йывăр, йăмрасем айне путнăскер, вăл вăрман кати пекех курăнать. Йăмрасене пурне те пĕр вăхăталла лартнă пулмалла, вĕсем пурте пĕр пек ӳссе çитĕннĕскерсем. Йăмрасемсĕр пуçне кунта сад нумай, кашни пахчарах улма йывăççи, чие, çĕмĕрт ӳсет. Панулми пулнă çул вара тулли çимĕçлĕ туратсем карта урлă урамаллах усăнса тăраççĕ — татса ил те çи. Шĕшкĕлĕх юнашарах пулсан та, нумайăшĕ пахчана шĕшкĕ йывăççисем лартса тухнă.

Атăлкасси пĕр вĕçĕнче, аслă çул хĕрринче, темиçе çухрăма тăсăлакан çамрăк вĕтлĕх кашласа ӳсет. Укăлча хапхи патне çывхарса пынăçемĕн Ятманăн чĕри хăвăртрах та хăвăртрах тапрĕ. *(К. Турхан.)*

Текстра 150 сăмах, ăнлантармалли сăмахсем çук. Уйрăмтăран приложенисемпе обстоятельствăсем — 5.

Юлашкинчен сочинени çыртармалла. Сочинени çырнă чухне вĕренекенсем уйрăмтăран кĕçĕн членсемпе уса курччăр. Сочинени валли çакăн пек темăсем сĕнме пулать: «Шкулти литкружок ĕçĕ», «Колхоз ĕçĕнчи хастарлăх», «Эпир, çамрăксем , пултаруллă», «Ҫӳлте, пĕлĕт айĕнче, тăри юрри илтĕнет», «Лере, тинĕс леш енче, урăх пурнăç, урăх тĕнче» т. ыт. те.

# УРĂХ ÇЫН CĂМАХЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

## КĔСКЕН ĂНЛАНТАРНИ.

Урăх çын сăмахлă предложенисене вĕрентесси йывăр тема. Уйрăмах урăх çын сăмахлă предложенисенче чарăну палли лартмалли йĕркесем питĕ йышлă та кăткăс. Вĕренекенсем ку темăпа IV-мĕш класрах паллашаççĕ. Унта вĕсене урăх çын сăмахĕ автор сăмахĕ хыççăн пулакан тĕслĕхсемпе паллаштараççĕ. Чарăну паллисенчен — урăх çын сăмахĕсене кавычкăпа уйăрма, вĕсен умĕн икĕ точка лартса тата урăх çын сăмахне пысăк саспаллипе пуçласа çырма хăнăхса пыраççĕ. Анчах та кайран çак ответлă та кирлĕ темăна VIII-мĕш класра кăна вĕрентеççĕ. Вĕренекенсем урăх çын сăмахлă предложенисемпе V—VII-мĕш классенче диктантсем, изложенисем тата сочиненисем çырнă чух нумай хутчен тĕл пулаççĕ, чылай йăнăшсем тăваççĕ.

Çавăнпа та, пирĕн шутпа, V-мĕш класра вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче, IV-мĕш класс программине аса илнĕ май, урăх çын сăмахлă предложенисенче чарăну палли лартассипе ытларах ĕçлемелле.

Урăх çын сăмахлă предложенисем хăйсен тытăмĕ енчен пит йышлă. Вĕсен шутне пĕр сăмахран тăракан предложенирен пуçласа темиçе пăхăнуллă хутлă предложени таранах кĕрет.

Урăх çын сăмахлă предложенисен т ĕ с л ĕ х ĕ с е м:

«Урра!» тесе кăшкăрчĕç. *(С. Михалков.)*

«Пирĕн паян пĕр ыйту,— терĕ президиума суйланă Левентей.— Вăл — ял Советĕнчи колхозсене пĕрлештересси çинчен. Урăх хушмаллисем çук-и?»

— Пур!— кăшкăрчĕ хыçалтан Марине. *(Турх.)*

«Арăм шкулта ĕçлет, вĕренӳ çулĕ пĕтмесĕр яла килме пултараймасть,— пĕлтерчĕ Огинов. — Хам пирки шантарса калатăп: колхозра тĕпрен улшăну пулмасăр кунтан каяссăм çук! Эпĕ кунта хăна мар, яланлăха килтĕм...» *(Арт.)*

Унсăр пуçне урăх çын сăмахлă предложенисем драмăлла произведенисенче кашни персонажăн сăмахĕнчех тĕл пулаççĕ. Прозăлла, сăвăлла произведенисенче геройăн монологĕнче е геройсен хушшинчи калаçура — диалогра та вĕсем сахал мар.

Ч а к к а. Капла ку иккен, чухăн çыннăн тĕнчи...
Таса çинченех татаççĕ пуçна!
Ах, шел-çке, пĕтет Тевенеш мучи:
Пытантăрччĕ вăл, каласчĕ ăна.
Ю к с а р. Эп куртăм ăна кунта килнĕ чух.
Каларăм. Теме чĕнмерĕ питех.
— Ват çын эп, тарса манран пулас çук,
Систер Чаккана,— тесе хучĕ çех. *(Элк.)*

Малалла çакна паллă тумалла: предложенисен тытăмĕ енчен илсен, урăх çын сăмахлă предложенисене хутлă предложенисен шутне те, хутсăррисен шутне те кĕртме пулмасть. Синтаксисра вĕсем уйрăм ырăн йышăнаççĕ. Урăх çын сăмахлă предложенире пĕр вăхăтрах икĕ предложенилле тытăм палăрать, ун пек пуплевре икĕ хуçа: пĕри — ĕçне тăваканĕ, калаканĕ, тепри — ун çинчен пĕлтерекенĕ. Пĕрремĕшне грамматикăра **у р ă х ç ы н с ă м а х ĕ** теме йышăннă, теприне — **а в т о р с ă м а х ĕ** теççĕ.

Урăх çын сăмахĕ урăхла калаканăн сăмахне пĕр улăштармасăр, гӳррĕн кăтартса парать. Вăл автор сăмахĕн кирек хăш вырăнĕнче те тăма пултарать.

«Ан хăра, анне, ятăма ярас çук, хама тытма пĕлетĕп»,— терĕ вăл хăй амăшне. *(Турх.)*

Кăтра Михала та çавнах каларĕ: «Кая юлсан, каю шăтать, тенĕ ваттисем».

«Ав мĕнле ĕçе тытăннă эсир!— хыттăн каларĕ Семенов, пурне те алă парса. — Пирĕн ялта çынсем «Атăлстрой» тума тытăннă теççĕ». *(Турх.)*

Тахçантанпах «Эх, çакăнта электростанци лартмаллаччĕ!» тесе ĕмĕтленетпĕр.

Урăх çын сăмахлă предложенире автор калаканăн сăмахĕсене пĕр улăштармасăр пĕлтерни çеç мар, вĕсене

мĕнле кăмăл-туйăмпа, мĕнле интонаципе калани те лайăх палăрать...

— Çапах та чи кирлине каламарăн!— терĕ Липа. *(Турх.)*

— Мĕн хăратать?— ялт çеç çаврăнса ыйтрĕ Левентей. *(Турх.)* «Хулсем ыратмаççĕ-и, Мĕтри?»—терĕ Сахрун çамрăкрах платнике. *(Турх.)*

«Ну, купăççă, Михала пичче ташшине пуçла-ха»,— терĕ Ятман. *(Турх.)*

«Кай, ан аташса тăр!— хĕрхенӳсĕр каларĕ бригадир.— Агроном пĕлмесĕрех хушас çук». *(Турх.)*

«Эх, Иван, Иван,— терĕ Марине.— Питĕ начар арçын иккен эсĕ, çав тери çемçе чунлă этем». *(Турх.)*

Урăх çын каланă сăмахсене улăштарса ахаль предложение кĕртсе каланă сăмахсем те тума пулать.

Урăх çын каланă сăмахсем калуллă е ыйтуллă пулсан, вĕсене улăштарса каланă сăмахсем хыççăмахлă предложенилле дополненисем пулаççĕ.

«Малалла çуран кайăп»,— терĕм эпĕ.

Эпĕ малалла хам çуран каясси çинчен пĕлтертĕм.

«Мĕншĕн харама кайтăр-ха ку ĕç?»— ыйтрĕ Кăтра Михала.

Кăтра Михала ку ĕç мĕншĕн харама каясси çинчен ыйтрĕ.

## УРĂХ ÇЫН САМАХЛА ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ ÇИНЧЕН ПЕТЕМЕШЛЕ АНЛАНТАРНИСЕМ.

Малтанхи урок пуçламăш классенче урăх çын сăмахлă предложенисем çинчен вĕреннине аса илнипе пуçланать.

Вĕренекенсене ăнланса илме çăмăлтарах пултăр тесен, доска çине икĕ тĕслĕх çырса памалла: пĕринче урăх çын сăмахĕсене предложенире сыхласа хăвармалла, тепринче урăх çын сăмахĕсене улăштарса памалла. Кун пек танлаштарнипе мĕн кăтартасшăн-ха учитель?

Çын сăмахĕсене, е ăна урăх çын сăмахĕсем теççĕ, ăна икĕ майпа пĕлтерме пулать иккен. Т ĕ с л ĕ х с е м:

«Лайăх вĕренесси вăл, Акчурин, çын пултарулăхĕнчен кăна килмест, пуринчен ытла çын мĕнле тăрăшнинчен килет»,— вĕрентсе каларĕ Марк Васильевич. *(Турх.)*

Марк Васильевич Акчурина лайăх вĕренесси вăл çын пултарулăхĕнчен кăна килмест, пуринчен ытларах çын мĕнле тăрăшнинчен килет тесе вĕрентсе каларĕ.

| | |
|---|---|
| «Çакăнта сад тăватпăр»,— терĕ Петĕр. *(П. Семенов.)* | Петĕр çакăнта сад тăвасси çинчен пĕлтерчĕ. |

Çак предложенисене тишкернĕ май вĕренекенсем урăх çын сăмахлă предложенипе улăштарса каланă предложени хушшинчи уйрăмлăха асăрхаса илеççĕ. Урăх çын сăмахлă предложенире ют çын сăмахне пĕр улăштармасăр, тӳррĕн каларса панă. Çавнах улăштарса панă предложенире, урăх çын сăмахĕсене автор сăмахĕсемваррине кĕртсе лартса, глагол-сказуемăйсене тепĕр формăра тунă. Кунта ют çын сăмахĕсен содержанине çеç пĕлтерме тăрăшнă. Çавăнпа пĕрлех çырура урăх çын сăмахлă предложенисене кавычкăпа уйăрса çырнине палăртмалла.

Вĕренекенсемшĕн ăнланмаллараx пултăр тесен, Иван Мучи çырнă «Чышкă тытăмĕ» ятлă юптаруллă калава илсе памалла. Ку калава вулаттариччен вĕренекенсене çакăн пек ыйтусем памалла.

1. Урăх çын сăмахĕсене мĕнле саспаллисемпе пуçласа çырнă? 2. Урăх çын сăмахĕсене автор сăмахĕсенчен мĕнпе уйăрнă? 3. Предложенире урăх çын сăмахĕсем хăш вырăнта тăма пултараççĕ? 4. Урăх çын сăмахлă предложенисен составĕ мĕнле? 5. Урăх çын сăмахлă предложенисем вĕçĕнче мĕнле чарăну паллисем лартнă? 6. Калавра автор сăмахĕсене мĕнле çырнă? 7. Чышкăпа тарçисем хушшинчи калаçу çинчен çырнă вырăнсенче мĕнле чарăну паллисем тĕл пулаççĕ?

Калава вуланă май вĕренекенсем çак ыйтусем çине ответлессипе ытларах ĕçлеççĕ. Вĕсем калава чĕлхе енчен тишкерме, сăнама тăрăшаççĕ. Çакăн пек меслет ачасене хăйсем тĕллĕн темăна лайăхрах ăнланса вĕренме пулăшать. Кунта учитель Чышкă сăмахĕсем урлă калавра вăл мĕнле персонаж пулнине уçса парать. Тепĕр тĕрлĕ каласан, урăх çын сăмахĕсем герой сăнарне тĕплĕн палăртса пама пулăшаççĕ.

Çак урокрах урăх çын каланă сăмахсем тĕрлĕ вырăнта пулма пултарнине пăхса тухмалла.

1. Лаши ĕçсе тăнăçем каччи калать сăмахне:

«Çаплах вара, Нарспиçĕм, çук-ши манăн ăраскал?» *(К. Ив.)*

Çаплах хĕр хыттăн янраттарчĕ, мĕн пурĕ илтрĕç çав

сасса: «Вилмешкĕн эпĕ хăрамастăп, хам халăхшăн вилни — телей...» *(Хус.)*

Ку тĕслĕхсемпе учитель урăх çын сăмахĕ автор сăмахĕсем хыççăн танине ăнлантарса парать.

Кун пек чухне урăх çын сăмахĕ ялан тенĕ пекех автор самахĕсенчи сказуемăйпа çыхăнса тăрать, ăна ăнлантарса парать. Интонаци тĕлĕшĕнчен тата синтаксис майлашăвĕ енчен ун йышши урăх çын сăмахлă предложенисем союзсăр хутлă предложенисене çывăх тăраççĕ.

2. «Çĕнтерӳ те вăй-хăват сирĕн пултăр малашне!» — тенĕ май алне парать хай Калинин инкене. *(Я. Ухс.)*

— Ну, сана вĕренӳре ăнăçлăх сунатăп,— чыслăн пуç тайрĕ колхоз председателе. *(Турх.)*

«Микки! Эх, Микки!»— кăшкăрчĕ Чакка. *(Элк.)*

Вĕренекенсем урăх çын каланă сăмахсем автор сăмахĕсем умĕн тăнă чухне мĕнле чарăну палли лартнипе паллашаççĕ.

3. «Ну, Пожарский, мĕн тăватпăр?—
Терĕ Виктора Энтри,—
Тен, сан Невский Александр
Пулма вăхăт çитмер-и?» *(Хус.)*

«Юлташсем,— терĕ конферансье,— эпир паян шкулсенче вĕренӳ çулĕ ăнăçлă вĕçленнĕ ятпа иртерекен пĕчĕк концерта пуçлатпăр». *(«Çамрăк коммунист».)*

Ку предложенисенче автор сăмахĕсем урăх çын сăмахĕсем варринче тăраççĕ. Вĕренекенсене чарăну палли лартассипе те паллаштарма юрать.

4. Михала; «Ăçта çавă? Манăн çавна курасчĕ» тесе, хыттăн утса пырать. (*Турх.*) Левентей ăна, «Кăна пухура калама манса ан кай, ку питĕ кирлĕ» тесе, асăрхаттара-асăрхаттара пычĕ. *(Турх.)*

Вăл кăтартрĕ аллипе:
«Лар, эппин, инкеçĕм, кил!»—
Чаплă Киров урампе
Вĕçтерет автомобиль. *(Я. Ухс.)*

Çак тĕслĕхсене тишкернĕ май вĕренекенсем лайăх асăрхаççĕ: урăх çын каланă сăмахсем автор сăмахĕсем варринче тăраççĕ, вĕсене икĕ енчен те кавычка лартса палăртнă.

Ку урокра вĕреннине çирĕплетессипе ĕçленĕ чух çакăн пек хăнăхтаруллă ĕçсем туса иртермелле.

1. Пĕр-пĕр текста вулаттарса, урăх çын сăмахлă предложенисене туптармалла, вĕсене тĕрĕс, кирлĕ сасăпа

вулама вĕрентмелле, мĕнле чарăну паллисем лартнине сăнаса калаттармалла.

2. Урăх çын сăмахлă предложенисене вĕренекенсене хăйсене туптармалла, майлăраххисене тетрадьсем çине çыртармалла.

3. Урăх çын сăмахĕсене лайăхрах асра тыттарас шутпа А. Кăлканăн «Хăравçă Мулкач» юптарăвне вĕренме памалла. Унта тĕл пулакан урăх çын сăмахĕсене разбор тумалла, тĕрĕс вулама вĕрентмелле.

4. Çак темăпа изложени çыртармалла. Вĕренекенсем çав изложение çырнă чух урăх çын сăмахĕсене кĕртсе çырма пултарччăр. Паллах, изложени текстĕнче урăх çын сăмахлă предложенисем йышлăрах тĕл пулмалла.

## УРĂХ ÇЫН СĂМАХЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИСЕНЧЕ ЧАРĂНУ ПАЛЛИ ЛАРТАССИ.

Малтан урăх çын сăмахĕсем автор сăмахĕсем умĕн тата хыççăн тăнă чух чарăну палли лартассине пăхса тухмалла. Темăна ăнлантарма доска çине çырса е плакат туса çакăн пек тĕслĕхсем памалла.

Сыснана калать автан:
«Тасалăха саван пулсассăн,
Эс ху таса пул чи малтан!» *(Кăлк.)*
«Çынсенчен ан юл, ан татăл»,—
терĕ вăл (Павăл), тата хушса. *(Я. Ухс.)*

«Çынсем ырлаччăр, эпир хамăра хамăр хурлар, вара тĕрĕс пулать!»— сассине çĕклерĕ Марине. *(Турх.)*

— Атте ăçта? Анушкапа Укахви ăçта?— терĕ ывăлĕ. *(Турх.)*

Ку предложенисене разбор тутармалла, вĕсенчи автор сăмахĕсемпе урăх çын сăмахĕсене уйăрса илтермелле те чарăну палли лартни çинчен чарăнса тăмалла. Пĕрремĕш предложение разбор тунă хыççăн вĕренекенсем чарăну палли лартнă пирки çапла пĕтĕмлетсе калаççĕ: а) автор сăмахĕсем хыççăн, урăх çын каланă сăмахсем умĕн двоеточи лартмалла, ă) урăх çын каланă сăмахсене пысăк саспаллипе пуçласа çырмалла, б) урăх çын каланă сăмахсене икĕ енчен те кавычка лартса çырмалла. Вара учебникра[1] туса панă схемăпа усă кур-

[1] С. П. Горский. Чăваш чĕлхин грамматики. II пайĕ (синтаксис), Чăвашгосиздат, 1959 ç., 124 стр.

малла. Автор сăмахне пĕр йĕрпе туртмалла та ун умĕн А саспалли лартмалла, урăх çын сăмахне У саспалли лартмалла та ун хыççăн икĕ йĕр туртмалла. Схемăра кавычкăпа чарăну паллисене те кăтартмалла. Халь разбор тунă предложение çакăн пек схемăпа кăтартса памалла.

А________________: „У________________!"

Малалла урăх çын каланă сăмах автор сăмахĕ умĕн пулнине кăтартакан тĕслĕхсене пăхса тухмалла та уйрăмах чарăну палли лартни çинче чарăнса тăмалла.

Вĕренекенсем, предложенисене разбор тунă май, чарăну палли лартас йĕрке пĕтĕмлетсе хăвараççĕ.

а) Урăх çын каланă сăмахсем калуллă пулсан тата вĕсем автор сăмахĕсем умĕнче тăраççĕ пулсан, урăх çын каланă сăмахсем хыççăн запятойпа тире лартаççĕ.

ă) Урáх çын каланă сăмахсем ыйтуллă е кăшкăруллă пулсан, вĕсем хыççăн ыйту е кăшкăру палли лартаççĕ.

б) Урăх çын каланă сăмахсене çĕнĕ йĕркерен çырсан, вĕсен умĕн тире лартмалла. (3-мĕш предложение пăх!)

Çаксене схемăпа кăтартса памалла.

„У______________", —а______________.

„У______________!" —а______________.

—У______________? ______________? —а________

Ку урокра вĕреннине çирĕплетме вĕренекенсене предложенисем вуласа памалла, урăх çын сăмахĕсене туптармалла та мĕнле чарăну паллисемпе уйăрса çырнине калаттармалла, вара тетрадьсем çине çыртармалла.

Хăнăхтару тĕслĕхĕсем.

1. Ахметăн шухăшĕ вĕçленсе те çитеймерĕ, сасартăк хыçалтан такам хаяр сасăпа кăшкăрса яни илтĕнчĕ: «Эй, каччă, лайăх тыткала! Шăйрăк хăваратăн!» *(Тукт.)* 2. Кĕске сăмах каланăччĕ ун чухне Василий Васильевич: «Эпир ку ялава хамăр алăра çирĕп тытăпăр». *(Тукт.)* 3. — Тахçанах çапла кирлĕччĕ! Начар çын хăйшĕн çеç пăшăхать, маттурри—колхозшăн тăрăшать,—терĕ вара Матĕрне савăннипе. *(Тукт.)* 4. «Вилĕмрен те хăрушши — тăшман мăшкăлĕ пуласси. Юлашки пуля хам валли»,— шухăшларĕ офицер, пистолетне хатĕр тытса». *(Арт.)* 5. «Самушков пирки мĕнле шутлатăр?» — куçран тинкерсе ыйтрĕ обком секретарĕ Огиновран. *(Арт.)* 6. — Атакăна! Ман хыçран! — кăшкăрчĕ майор, фашистсем çывăха çитсен. *(Арт.)*

Çак правилăсене вĕренсе тухнă хыççăн автор сăмахĕсем урăх çын каланă сăмахсем варринче тăнă чух, урăх çын каланă сăмахсем автор сăмахĕсем варринче тăнă чух тата диалогсенче чарăну паллисем лартассине пăхса тухмалла.

Материала ăнлантарма çакăн пек таблица памалла. Таблицăн сулахай енче урăх çын сăмахĕсенчен кăна тăракан предложенисем, сылтăм енче — урăх çын сăмахĕсем автор сăмахĕсемпе пĕрле.

| Урăх çын сăмахĕсенчен çеç тăракан предложенисем | Автор сăмахĕсемпе пĕрле |
|---|---|
| 1. «Паян машинăпа вырма тытăнтăмăр». | «Паян,— терĕ Самаков бригадир,— машинăпа вырма тытăнтăмăр». *(Тукт.)* |
| 2. «Паян пирĕн пысăк уяв: эпир çĕнĕ шкулта вĕренме тытăнтăмăр». | «Паян пирĕн пысăк уяв,— терĕ Иван Иванович,— эпир çĕнĕ шкулта вĕренме тытăнтăмăр». |
| 3. «Уншăн мар, манăн парторг пулмасан та, ытти колхозниксем çинчен, пĕтĕм çĕршыв интересĕсем çинчен шутламалла». | «Уншăн мар,— терĕ Ятман,— манăн парторг пулмасан та, ытти колхозсем çинчен, пĕтĕм çĕршыв интересĕсем çинчен шутламалла». *(Турх.)* |
| 4. «Вăл çĕр сирĕн питĕ тачка тăпраллă. Унта азот питĕ нумай». | «Вăл çĕр сирĕн питĕ тачка тăпраллă,— ăнлантарма пуçларĕ агроном.— Унта азот питĕ нумай». *(Тукт.)* |
| 5. «Тăван çĕршыв! Мĕскер эп сансăр? Сана чунтан-вартан савмасăр Юратăва эп тивĕç мар». *(Хус.)* | «Тăван çĕршыв! Мĕскер эп сансăр? — тесе вăл шухăшлать хастар.— Сана чунтан-вартан савмасăр Юратăва эп тивĕç мар». *(Хус.)* |
| 6. «Тĕрĕс! Халĕ вăрçă пĕтнĕ, инженера вĕренес пулать!» | «Тĕрĕс! — ырларĕ ăна Левентей.— Халĕ вăрçă пĕтнĕ, инженера вĕренес пулать!» *(Тукт.)* |

Ачасене малтан автор сăмахĕсемсĕр çырнине вулаттармалла, предложени миçе пайран тăнине, кашни пайĕ хыççăн мĕнле чарăну палли пуррине кăтартса хăвармалла. Унтан урăх çын сăмахĕсене автор сăмахĕсемпе пĕрле илнине пăхса тухмалла, çĕнĕрен мĕнле чарăну палли тата мĕншĕн хушăнни çинче чарăнса тăмалла.

Таблицăри тĕслĕхсем тăрăх урăх çын сăмахлă предложенисенче чăрăну палли лартас правилине пĕтĕмлетме хушмалла, унтан вĕсен схемине, малтан кăтартнă пек, доска çине çыртарса тутармалла. Çакăнтах урăх çын каланă сăмахсем автор сăмахĕсем варринче чухне мĕнле чăрăну палли лартассипе паллаштармалла.

Унтан икĕ е нумай çын калаçнине (диалога), çыру чĕлхинче кашнинех тире лартса пуçламаллине асăрхаттарса хăвармалла.

— Кашкăр,— пăшăлтатать Валя.

— Ну-у-у, кашкăр. Кашкăрăн куçĕ каçхи тĕттĕмре хунар пек çутă,— ăнлантарать Мĕтри.

— Эсĕ курнă-и? — ыйтать Калисса.

— Атте курнă. Пĕрре атте ĕнесем шырама кайнă. Пыратăп, тет, вăрман хĕррипе. Унта çутă курăнать, кунта... уланисем илтĕнме пуçлаççĕ. Атте вара хăвăртрах йывăç çине хăпарса кайнă. Ак кашкăрсем çитрĕç, тет. Улттăн...

— Ан кала,— тет Калисса.

— Хăратăп,— пăшăлтатать Валя.

— Мĕнрен? — хăраман пек пулать Мĕтри. *(П. Семенов.)*

Çак калаçăва пăхса тухмалла та кун пек чухне мĕнле чăрăну паллисем лартнине ачасене хăйсене калаттармалла.

## УРĂХ ÇЫН КАЛАНĂ САМАХСЕНЕ УЛĂШТАРСА КАЛАНĂ СĂМАХСЕМ ТУНИ.

Пĕр-пĕр çыхăнуллă текст содержанине калана чухне час-часах урăх çын каланă сăмахсене улăштарса калани кирлĕ пулать. Уйрăммăнах вăл вĕренекенсемшĕн питĕ кирлĕ ĕç. Ку ыйту стилистика ыйтăвĕпе çыхăннă. Вĕренекенсем нумай чухне урăх çын сăмахлă предложенисене улăштарса калама пĕлеймеççĕ. Вăл вуланă произведени содержанине каланă чух та уççăнах палăрать. Нумай чухне геройсем мĕнле предложенисемпе калаçаççĕ, вĕренекенсем те çавна пĕр улăштармасăрах каласа пама пикенеççĕ. Вăраммăн калаççĕ, вăхăта перекетлеме пĕлмеççĕ. Çавăнпа та вĕренекенсене урăх çын сăмахлă предложенисене улăштарса калама та, çырма та хăнăхтармалла.

1. Урăх çын каланă сăмахсем калуллă е ыйтуллă пулсан, вĕсене улăштарса каланă сăмахсем хыççăмахлă предложенилле дополнени пулаççĕ.

| | |
|---|---|
| 1. «Эпӗ килтӗм колхоза»,— терӗ вӑл бригадире. *(Я. Ухс.)* | Бригадире вӑл хӑй колхоза килни ҫинчен пӗлтерчӗ. |
| 2. «Каялла хӑҫан таврӑнӑпӑр?» — ыйтрӗ Серёжа. *(Остр.)* | Серёжа манран эпир каялла хӑҫан таврӑнасси ҫинчен ыйтрӗ. |
| 3. «Манӑн унта лайӑх юлташ пур»,— терӗ Людмила. *(Турх.)* | Людмила хӑйӗн унта лайӑх юлташ пурри ҫинчен пӗлтерчӗ. |

Ку предложенисенче пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн урӑх ҫын сӑмахӗсем мӗнле майпа улшӑннине вӗренекенсем хӑйсемех калама пултараҫҫӗ.

2. Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем хушу наклоненинче пулсан, вӗсене улӑштарса каланӑ сӑмахсем **-ма, -ме** аффикслӑ инфинитивлӑ предложенилле членсем пулаҫҫӗ. Ун пек чухне улӑштарса каланӑ сӑмахсенчен автор сӑмахӗсенчи **«терӗ»** сказуемӑй вырӑнне **«хушрӗ»**, **«сӗнчӗ»**, **«пӗлтерчӗ»** тата ытти сӑмахсем те пулма пултараҫҫӗ. Урӑх ҫын каланӑ предложенири местоименирен пулнӑ подлежащийӗ ят мар падежра (пару падежӗнче) тӑрать. Предложенири обращени те ят мар падежра пулать.

| Урӑх ҫын сӑмахлӑ предложенисем | Улӑштарса каланӑ сӑмахсенчен пулнӑ предложенисем |
|---|---|
| 1. «Шкула пурте вӑхӑтра килӗр!» — терӗ учитель. | Учитель пурне те шкула вӑхӑтра килме хушрӗ. |
| 2. «Павӑл шӑллӑм, колхоза ҫыр-ха!»—терӗ Петӗр. *(Я. Ухс.)* | Петӗр Павӑл шӑллӗне колхоза ҫырма ыйтрӗ. |
| 3. «Ульки мӗн-ма ытла хӑюсӑр?» — тин ыйтрӗ пиччӗш Санюкран. *(Алка.)* | Пиччӗшӗ Санюкран Ульки мӗн-ма ытла хӑюсӑрри ҫинчен ыйтрӗ. |
| 4. Эпӗ ҫулҫӳрене: «Хулана вӑрман хӗррипе тӳрех кай»,— терӗм. | Эпӗ ҫулҫӳрене хулана вӑрман хӗррипе тӳрех кайма сӗнтӗм. |

Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсенчен яланах улӑштарса каланӑ сӑмахсем тума май ҫук. Вводнӑй сӑмахсем, междометисем, деепричастиллӗ сӑмах ҫаврӑнӑшсем, кӑмӑл хусканӑвне кӑтартакан ытти хӑшпӗр сӑмахлӑ урӑх ҫын сӑмахӗсенчен улӑштарса каланӑ сӑмахсем пулаймаҫҫӗ.

«А, ку аттене мӗнле ҫӑласах?»—
Тесе ыткӑнать вӑл ашшӗ патне. *(Элк.)*

«Ну, ярӑр халех!»— тет вӑл кӑшкӑрса. *(Элк.)*

«Ҫук, хушаматсем ҫеҫ пӗр пек»,—тата ытларах хӗрелсе тавӑрчӗ Микула. *(Турх.)*

«Ӑнах, ара, куратӑн, кӗреҫе аври мӗнле вӑрӑм!»— парӑнмарӗ Микула. *(Турх.)*

«Айта, леш трамплин ҫинчен ярӑнатпӑр. Арҫук сикнӗ ҫӗртен»,—терӗ Нина. *(Турх.)*

Ҫак урокрах улӑштарса каланӑ сӑмахсенче чарӑну палли лартасси ҫинчен ӑнлантарса хӑвармалла.

1. Улӑштарса каланӑ сӑмахсене, предложенилле дополненисем пекех, предложенин ытти членӗсенчен запятойпа уйӑрмаҫҫӗ.

Эпӗ малалла хам ҫуран каясси ҫинчен пӗлтертӗм.

2. Урӑх ҫын каланӑ сӑмахсем **тесе, тесен, пулсан, пулин те** союзлӑ сӑмахсемпе ҫыхӑннӑ чухне, вӗсем сказуемӑй умӗнче пулсан, запятойпа уйӑрмаҫҫӗ, ытти вырӑнта пулсан — уйӑраҫҫӗ.

Вӑл килтен эпӗ вӗренме каятӑп тесе кайрӗ. Бригадир, ҫумӑр килет тесенех, ҫӗмелсем тума хушрӗ.

Урӑх ҫын сӑмахлӑ предложени темӑпа тӗрлӗрен ҫыру ӗҫӗ: ӑнлантару, асӑрхаттару, творчество, тӗрӗслев диктанчӗсем, изложенипе сочинени те ҫыртарма юрать.

Чарӑну паллисем лартма вӗреннине ҫирӗплетес ҫӗрте творчество диктанчӗпе изложени, ирӗклӗ ҫыру ӗҫӗ юрӑхлӑрах. Ҫак темӑпа вӗренекенсен пӗлӗвне шута илме тӗрӗслев диктанчӗпе сочинени ҫыртармалла.

1. Ӑнлантару диктанчӗ валли текст.

Каникула таврӑнсан, миҫе хут вуласа паман-ши ҫав «Нарспие» ватӑ ҫынсене, инке-аппасене, шӑллӑм-йӑмӑксене! Манӑн ҫичӗ ҫулхи йӑмӑкӑм Александра, шкула кайиччен вулама вӗреннӗскер, «Нарспие» пӑхмасӑр калама ӑсталанса ҫитнӗччӗ. Хӑйӗн янӑракан ачалла сассипе «Нарспие» уҫҫӑн вуласа, вӑл пӗр ватӑ ҫыннӑн кӑмӑлне ҫеҫ ҫӗклемен пулӗ. Кӗнеке килӗрен киле ҫӳретчӗ.

«Мӗнле ҫавӑн пек лайӑх ҫырма ӑсӗсем ҫитнӗ-ши? — тесе тӗлӗнетчӗҫ ват ҫынсем.— Кам шутласа ҫырнӑ-ши ку кӗнекене?» — ыйтатчӗҫ вӗсем.

— Вунҫичӗ ҫулхи чӑваш ачи ҫырнӑ. Вӑл Иван Яковлевич патӗнче пурӑнатчӗ,— тетӗп эпӗ.

— Э-эй-эй! Суятӑн кӑна, ӗненме ҫук. Ун пек япалана ватӑлса ҫитнӗ ӑслӑ ҫынсем кӑна ҫырма пултараҫҫӗ, — тет пӗр пичче.

— Иван Яковлевич хӑй ҫырнӑ пулӗ. Ӑҫтан ҫамрӑк ача ҫавӑн пек ҫырма пултарӗ,— тет анне те, калаҫӑва хутшӑнса.

— Ҫук, Иван Яковлевич мар, Константин Иванов ҫырнӑ,— тетӗп хирӗҫ.

— Пӗлмесӗр калатӑн пулӗ, ачам... (Анне те, ӗненмен пек пулса, мана йӗкӗлтем пекки тӑвать.)

— Ак, тупата эппин, вӑлах ҫырнӑ. Вӑл пире ҫырнӑ чухнех вуласа паратчӗ.

Ҫав тӗрлӗ ҫине тӑрса калаҫнине кура, анне: «Вӑл пулсан, ачи маттур, мухтав ӑна! Ашшӗ-амӑшне савӑнӑҫ пултӑр... Эсӗ ху хӑҫан

ҫавӑн пек хитре ҫыракан пулӑн-ха? Эсӗ те Иван Яковлевич патӗнче вӗренетӗн-ҫке»,— тет.

Эпӗ нимӗн те чӗнместӗп. Анне савса мана пуҫран шӑлать... (Ст. Лашманӑн «Чӑваш шкулӗ ҫитӗнтернӗ поэтсем — К. В. Ивановпа Н. В. Васильев (Шупуҫҫынни)» асаилӗвӗсенчен.)

## 2. Изложени тексчӗ.

### СВИНАРКАСЕМ.

Пӳрте чӑмӑр питлӗ, лутрарах хӗр кӗрсе тӑчӗ. Вӑл ман ҫинелле чакӑр хура куҫӗсемпе темле тӗлӗнерех пӑхса илчӗ те сарса хунӑ вырӑнпа юнашар пукан ҫине кайса ларчӗ.

«Тӑхта, ку хӗрачана паллатӑп вӗт-ха эпӗ. Хушамачӗ мӗнлеччӗ-ха?» Хӗр каллех ман еннелле темле ытарлӑн пӑхрӗ. Астурӑм!

— Санӑн хушамату Казакова мар-и?

— Ҫапла.— Хӗр вӑтанчӑклӑн йӑл кулчӗ.— Эпӗ те сире палларӑм. Тӑватӑмҫул-и ҫав, эсир пирӗн шкула пынӑччӗ.

— Эсӗ ун чухне вуннӑмӗш класра вӗренеттӗн мар-и?

— Ҫапла.

— Вӗренсе тухрӑн пулӗ-ҫке?

— Тухнӑ-ҫке.

— Халӗ вара кунта ӗҫлетӗн-и?

— Кунта.

— Свинарка-и?

— Свинарка... Сысна кӗтӳҫи,— сасартӑк хушса хучӗ вӑл. Ытла та чеен каларӗ.

Эпӗ пӳлӗнсе лартӑм. Мана тӗртсе каламарӗ-и ӗнтӗ вӑл ку сӑмахсене? Хам сисрӗм, эпӗ унран: «Свинарка-и?» — тесе тӗлӗнерех ыйтрӑм пулас ҫав.

Мӗн тӑвӑн: малтанхи хут паллашнӑ чухне калаҫӑвӗ те пирӗн урӑххи ҫинчен пулнӑ. Ман ӑна ун чухне театр институтне вӗренме ярас килнӗ-ҫке-ха...

— Сирӗн кунта вунӑ класс пӗтернисем тата пур-и? — ыйтрӑм эпӗ, хама аван мар пулнине пытарма тӑрӑшса.

— Пур. Астӑватӑр-и: Авдеева Раиса ятлӑ пӗр хӗрача пурччӗ. Ӑна та эсир хут парса хӑварнӑччӗ.

— Вӑл кунта-и халь?

— Кунта. Халех кӗрет.

Сӑмах ҫинех, алӑк уҫӑлчӗ те, пӳлӗме яштак пӳллӗ сарӑ хӗр килсе кӗчӗ. Раиса! Авдеева Раиса.

«Астӑватӑп, мӗнле астӑвас мар!»...

... Ку вӑл 1956 ҫулхи ҫуркунне пулса иртрӗ. Ун чухне эпӗ Культура министерстви хушнипе республикӑри чылай шкулсенче пултӑм, Муркашри вӑтам шкула та ҫитрӗм. Маӑн Мускаври А. В. Луначарский ячӗпе хисепленекен театр институчӗ ҫумӗнче уҫӑлакан чӑваш студине тин ҫеҫ вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ талантлӑ ҫамрӑксене суйласа илмеллеччӗ.

Вуннӑмӗш класри вӗренекенсене пухсан, эпӗ малти парта хушшинче ларакан чалтӑр куҫлӑ сарӑ хӗре куҫ хыврӑм. «Нарспие вылямалли артистка ҫакӑ мар-ши ӗнтӗ?»— шухӑшларӑм хам. Ҫав хӗрӗн ячӗ — Авдеева Раиса. Малтанах унпа ҫуммӑн ларакан Казакова Розӑн сассине тӗрӗслесе пӑхас терӗм. Розӑн сасси ҫирӗп, янравлӑ, уҫӑ. «Хӗрӳ туйӑмлӑ, характерлӗ рольсене выляма пултармалла»,—

çырса хутăм эпĕ хамăн тетрадь çине. Унтан Раисăна чĕнтĕм. «Чăнах та, Нарспи-çке ку!» шухăшларăм. Эпĕ савăнмаллипех савăнтăм.

Акă вăл юрласа ячĕ. Сасси те хăй пекех илемлĕ. Юрă шăранса юхать, чуна пырса тивет.

Эпĕ ун чухне Розăна та, Раисăна та тата улт-çичĕ ачана экзамена пыма чĕнекен хутсем парса хăвартăм. Пырасса шаннăччĕ.

Эпĕ чĕнсе хăварнисенчен, Розăпа Раисăсăр пуçне, пурте пулчĕç, çак икĕ хĕр-тантăша çеç кĕтсе илеймерĕмĕр.

Вĕсем иккĕшĕ те хăйсем кăмăллакан ĕçе — сысна фермине ĕçлеме юлнă пулнă.

*(А. Новиковăн «Çамрăк хĕр телейĕ» ятлă очеркĕнчен.)*

## ЦИТАТĂСЕНЕ ÇЫРСА ИЛМЕ ВĔРЕНТЕССИ.

Хăшпĕр вĕрентекенсем ачасене цитатăсемпе ирониллĕ сăмахсем çинчен вĕрентме кирлине пачах манса каяççĕ, вĕренекенсене ун пек сăмахсене мĕнле çырса илессипе пачах паллаштармаççĕ. Малтан эпир ытарлă каланă, хăй пĕлтерĕшне илмен сăмахсене е тăрăхласа каланă (ирониллĕ) сăмахсене кавычкăпа çырни çинче чарăнса тăрасшăн.

Кантур «хăватне» курнă Кушлавăш
Пĕр чунсăр паян ларать тĕмсĕлсе. *(Элк.)*

Кунта поэт «хăватне» сăмаха кавычка ăшне илнĕ. Мĕнле сăлтавпа-ши?

Кунта кантур çыннисен чăн хăватне мар, тискерлĕхне кăтартнă, çавăнпа та поэт, вĕсенчен тăрăхласа, хăватне сăмахпа усă курнă та кавычка ăшне илнĕ.

Курăнмасăр çывăхарчĕ
Хурçăланă ким хĕрне,
Вăрттăн çеç хурса хăварчĕ
«Кучченеç»—мĕн кирлине. *(Хус.)*

Ку сыпăкра Аптраман Энтри фашистсен хурçăланă кимми хĕрне сиктермелли япала — тол е взрывчатка хурса хăварать, ăна ытарласа поэт «кучченеç» тет. Вăл чăн кучченеç мар пирки ăна кавычкăпа палăртса çырнă.

Вĕренекенсене ăнлантарнă чухне учитель малта панă тĕслĕхсемпе усă курма пултарать.

Çапла, эпир çав «тăманасене» комендатурăна аванах илсе çитертĕмĕр. *(Алент.)*

Кунта автор пирĕн çĕршывăн чикки урлă каçса кĕнĕ шпионсене тытни çинчен калать. Çаксем тăманалла ўхлетсе пĕр-пĕринпе çыхăну тытаççĕ иккен. Çавăнпа та вĕсене тăрăхласа «тăманасем» тенĕ, чăн тăманасем мар пирки сăмаха ик енчен те кавычка лартса çырнă.

Ачасене докладсем тунă чухне сочиненисем, статьясем çырнă чухне цитатăсемпе пĕлсе усă курма вĕрентмелле. Вĕренекенсен пĕр-пĕр тĕп шухăша çирĕплетсе парас çĕрте чаплă çынсем (çулпуçсем, учĕнăйсем, писательсем, искусствăн паллă çыннисем) каланипе усă курмалла. Вара вăл шухăш тата витĕмлĕрех, ĕнентерӳллĕрех пулать.

Цитатăна илнĕ чух çакна асра тытмалла. Илекен цитата шухăша тĕплĕ çирĕплетсе парать пулсан, унта кирле палăртупа çирĕплетӳ пулсан çеç унпа хăвăн ĕçӳнте усă курмалла.

Цитатăна çырса илнĕ чух пĕр йăнăш та пулмалла мар. Кашни цитатăна тĕп кĕнеке çинчен пĕр улăштармасăр, кашни чарăну паллипе шрифта палăртнине упраса, çырса илмелле.

Цитата валли тулли предложение илетĕр пулсан, пуçламăшĕнчен вĕçне çитиех илмелле те икĕ енчен те кавычка лартмалла, кавычка хыççăн точка лартмалла. Унтан скобка ăшĕнче кĕнеке авторĕн хушамачĕпе инициалĕсене, кĕнеке ятне туллин çырмалла та каллех кавычка ăшне илмелле, кĕнеки ăçта, хăçан тухнине тата цитатăна хăш страницăран илнине кăтартмалла та скобка хупмалла.

1. «Çапла ĕнтĕ, халĕ 15 çул тултаракан ăру, тепĕр 10—20 çултан коммунизмла обществăра пурăнмалласкер, хăй вĕренĕвĕн пĕтĕм задачисене кашни кун, кашни ялта, кашни хулара çамрăксем пĕрлехи ĕçĕн çав-çав задачине,— ан тив, пит пĕчĕккине, ан тив, пит çăмăллине,— пурнăçа кĕртсе тăрассипе çыхăнтарса туса тăрăр». (В. И. Ленин. Сочиненисем, 31-мĕш том, 175-мĕш страница.)

Цитата валли предложенин пĕр пайне çеç илнĕ чухне пăрахса хăварнă вырăна пăнчăсем лартмалла (вăл предложенин кирек хăш пайĕнче те пулма пултарать).

Цитатăна илнĕ предложени пайне автор калаçăвĕнваррине те кĕртсе лартма юрать. Автор сăмахĕ варрине илнĕ цитатăсене (уйрăм пайне те е тулли предложенисене те) номерлесе палăртаççĕ те çав страницăн аял пайĕнче вĕçене ăçтан илнине пĕтĕмпех кăтартаççĕ. Ун пек чухне кĕнеке ячĕсене кавычка ăшне илсе çырмаççĕ: автор ячĕ хыççăн та, кĕнеке ячĕ хыççăн та точка, ăçта, хăçан тухнине кăтартнă хыççăн запятойсем лартаççĕ.

Хăй вăхăтĕнче Владимир Ильич Ленин Н. М. Охотникова университета вĕренме кĕме хатĕрленĕ. Охотников

«...чăвашчĕ, чăваш шкулĕнче преподаватель пулса ĕçлетчĕ. Математика вĕренес енĕпе вăл пит пултаруллăччĕ, çак предметпах вăл малалла ăсталанма тăрăшатчĕ. Математикăпа физикăна вăл гимнази курсĕшĕн экзамен тытмалăх хăй тĕллĕнех хатĕрленчĕ. Анчах университета кĕрес тесен,... авалхи чĕлхесене те пĕлмелле... Володя ăна пĕр тӳлевсĕрех вĕрентрĕ, мĕншĕн тесен Охотниковăн тӳлеме укçи те пулман».[1]

Çак ăста гимназист Охотникова ытти предметсемпе те вĕрентсе хатĕрленĕ. Ун пирки кĕнекере çапла каланă: «Владимир Ильич вырăс литературипе те Охотникова нумай пулăшнă. Мĕнле кĕнекесем вуламаллине те кăтартса панă»[2].

Цитатăсемпе усă курма вĕрентессипе уйрăм ĕçсем туса ирттермелле. Вĕсен шутне çакăн пек ĕçсем кĕреççĕ.

1. Цитатăллă плакатсем: а) аслă çынсем ăçта тата мĕнле ĕçре чăваш чĕлхи пуянлăхĕпе сăнарлăхĕ пирки калани, ă) К. В. Ивановăн творчестви пирки каланă ăста шухăшсем, б) паллă çынсем чăваш музыки пирки калани, в) кĕнекен этем пурнăçĕнчи вырăнĕ т. ыт. те.

2. Цитатăсене карточка çине çыртарасси (паллă çынсем чĕлхепе литература пирки калани тăрăх). 3. Сочиненисем çыртарнă чух усă курма хăнăхтарасси. 4. Тухса каланă чух цитатăпа усă курасси. 5. Статьясенче каллех цитатăпа хăçан тата мĕнле усă курасси. 6. Çунатлă сăмахсен викторинине ирттересси т. ыт. те.

Анчах çакна асăрхаттармалла: цитатăсене питĕ кирлĕ çĕрте кăна илме хăнăхтармалла, вĕсемпе ытлашши усă курма пикеннинче усси çук. Ун пек туни тепĕр чухне вĕренекенĕн чĕрĕ те аталанса пыракан шухăшне хупласа хума пултарать.

---

[1] А. И. Ульянова-Елизарова, Детские и школьные годы Ильича. Детгиз Министерства просвещения РСФСР, М.-Л., 1947 г., 25 стр.

[2] В. Долгов. Ĕмĕр пархатарлă туслăх. Чăвашгосиздат, 1958 ç. 23 стр.

## СИНТАКСИСЛА РАЗБОР ТĂВАССИ.

Грамматика разборĕн пĕлтерĕшĕ пысăк. Вăл вĕренекенсен тишкерӳлĕхне аталантарать, грамматика категорийĕсене часрах асăрхаса илме пулăшать.

«Грамматика разборĕ,— тет А. В. Текучев,— вĕренекенсен витĕмлĕ те хăй тĕллĕн палăракан шухăшлавне ӳстерес ĕçри чи вăйлă та шанчăклă пулăшаканĕ пулса тăрать»[1].

Грамматика разборне пула ачасем саспаллисене, пуплев пайĕсене, предложенисене пĕр-пĕринчен уйăрса илме вĕренеççĕ, кашни саспаллин, пуплев пайĕн, предложенин тĕп паллисене ăнланса илеççĕ, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнура тăнине те кураççĕ. Грамматика разборĕ вĕреннĕ темăна çирĕплетме, тарăнлатма пулăшать.

Грамматика разборĕ тунă чухне кашни ачан пĕлĕвĕнче мĕнле шăйрăксем пуррине çеç мар, пĕтĕм класăн вĕренӳ ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене асăрхама пултаратăн. Грамматика разборне кашни урокрах туса ирттерме пулать. Грамматика разборĕ тăвасси вĕренӳ материалĕнчен килет Темăна ăнлантарнă чухне йывăрлăхсем пулсан, каллех грамматика разборĕпе усă кураççĕ. Вăл вĕрентӳ материалне çирĕпрех те тухăçлăрах ăнлантарма пулăшать.

Тăван чĕлхепе ĕçленĕ чухне фонетика, морфологи, синтаксис, орфографи тата чарăну паллисен разборĕсем тума тивет.

Синтаксис вĕреннĕ чухне çырса тата сăмахпа каласа тунă разборсем пулаççĕ. Шкулсенче сăмахпа каласа тунă

[1] А. В. Текучев. «Методика грамматического разбора», Учпедгиз, 1952 г., стр. 15.

разборсене ытларах irrtтереççĕ. Çырулла разборпа творчество диктанчĕсенче тата тĕрĕслев диктанчĕсенче ытларах уса кураççĕ.

Чăваш пединститучĕн чĕлхе кафедринче синтаксис разборне çак йĕркепе ирттерме сĕннĕччĕ.

Предложение разбор тăватпăр пулсан, малтан вăл предложение вĕренекене кирлĕ сасăпа, тĕрĕс пусăм туса вулаттармалла.

Малалла схема[1] тăрăх калаттарас пулать.

Хутлă е хутсăр предложени (кăтартмалла).

## I. ХУТСĂР ПРЕДЛОЖЕНИ

Хутсăр предложени пулсан, çапла разбор тумалла.

1. Интонацине (мĕнле сасăпа каланине) кура мĕнле предложени пулнине (калуллă, ыйтуллă, кăшкăруллă) çирĕплетекен е хирĕçлекен предложени.

2. Тĕп членсене кура мĕнле член пулни (пĕр составлă е икĕ составлă; пĕр составлă пулсан, хăшĕ?).

3. Анлă е анлă мар.

4. Тулли е тулли мар.

Предложени членĕсем тата вĕсен çыхăнăвĕ.

1. Кашни тĕп членăн составĕ (пĕр йышши тĕп членсем пулсан, кашни составнех палăртмалла).

2. Тĕп членсем: п о д л е ж а щ и, вăл мĕнле пуплев пайĕнчен пулни; с к а з у е м ă й, унăн тĕпĕ, мĕнле пуплев пайĕнчен пулни.

3. Подлежащипе сказуемăй мĕнле çыхăнни.

4. Подлежащи составĕнчи кĕçĕн членсем тата сказуемăй составĕнчи кĕçĕн членсем.

а) Кĕçĕн член мĕнле ыйтура тăрать.

ă) Вăл хăш член пулать (определени, дополнени, обстоятельство).

б) Мĕнле пуплев пайĕнчен пулнă.

в) Тĕп сăмахпа мĕнле çыхăннă.

г) Вăл предложенири уйрăмтăран членсемпе предложенири çыхăнусăр сăмахсене палăртса хăварни.

## II. ХУТЛА ПРЕДЛОЖЕНИ.

а) Пĕтĕмĕшле калани.

1) Интонацине (мĕнле сасăпа каланине) кура мĕнле предложени пулни.

[1] Çак разбор схемине Чăваш педагогика институтĕнче вĕрентекен Павлов И. П. доцент туса хатĕрленĕ.

2) Пайёсем мёнле çыхăннине кура мёнле предложени пулни (сыпăнуллă, пăхăнуллă, хутăш, урăх çын сăмахлă).

### III. СЫПĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

а) Предложенисем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннă (союзпа е союзсăр, мĕнле союзпа).

ă) Сыпăнуллă предложенисем хушшинчи çыхăнăвăн пĕлтерĕшĕ.

б) Кашни предложение уйрăм разборлани.

### IV. ПĂХĂНУЛЛĂ ХУТЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

а) Тĕп предложенипе пăхăнуллă предложенин чиккисем. (Темиçе пăхăнуллă хутлă предложени пулсан, вĕсен составĕсене палăртмалла).

ă) Пăхăнуллă предложени тĕп предложенири хăш сăмахпа çыхăннă.

б) Пăхăнуллă предложени тĕсĕ.

в) Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе мĕнле майпа çыхăннă (союзпа, союзлă сăмахпа, сăмах майлашăвĕн мелĕпе).

### V. ХУТĂШ ПРЕДЛОЖЕНИ.

а) Сыпăнса çыхăннă предложенисен чиккисем.

ă) Вĕсем мĕнле çыхăннă (союзпа е союзсăр).

б) Малалла пăхăнуллă хутлă предложенисем пекех разбор тумалла.

### VI. УРĂХ ÇЫН САМАХЛĂ ПРЕДЛОЖЕНИ.

а) Автор сăмахĕсемпе урăх çын сăмахĕсене палăртни.

ă) Урăх çын сăмахĕ хăш вырăнта тăни.

Халĕ темиçе предложени илсе разбор туса пăхар.

1. Тинĕс тĕпĕнчен кимĕ аран йăтăнса хăпарчĕ. *(Бурн.)* Ку — хутсăр, калуллă, икĕ составлă, анлă, тулли предложени.

Предложенин тĕп членĕсем: *кимĕ* — япала ятĕнчен пулнă подлежащи, *хăпарчĕ* — хутсăр глагол-сказуемăй, вĕсем пĕр-пĕринпе хисеп, сăпат тĕлĕшĕнчен согласовани (килĕшӳ) çыхăнăвĕнче тăраççĕ.

Подлежащи составĕнче урăх сăмах çук, сказуемăй составĕнче предложенири ытти сăмахсем тăраççĕ.

Халĕ кашни кĕçĕн члена пăхса тухар.

Мĕнле хăпарчĕ?— йăтăнса: мĕнлелĕх обстоятельстви, ансăр, деепричастирен пулнă, глаголпа примыкани йĕркипе çыхăннă. Тата мĕнле хăпарчĕ?— аран: мĕнлелĕх об-

стоятельстви наречирен пулнă, глаголпа примыкани йĕркипе çыхăннă. Ăçтан хăпарчĕ?— тĕпĕнчен: вырăн обстоятельстви, туху падежĕнчи япала ятĕнчен, глаголпа управлени йĕркипе çыхăннă. Мĕн тĕпĕнчен?— тинĕс: определени, япала ятĕнчен пулнă, **тĕпĕнчен** япала ячĕпе управлени йĕркипе çыхăннă. (Ун пеккине изафетла çыхăну теççĕ.)

2. Чĕнтĕрлĕ хапха икĕ еннелле уçăлса кайрĕ те, килкартине хуплă çуналлă лав кĕрсе тăчĕ. *(Тукт.)*

Ку — сыпăнуллă хутлă предложени, икĕ калуллă хутсăр предложенирен тăрать, пĕр-пĕринпе сыпăнтаракан **те** союзпа çыхăннă, пĕр ĕç хыççăн тепĕр ĕç пулнине кăтартать. Малалла кашни предложение уйрăммăн разбор тумалла.

3. Çынтан чуна сивĕтме сăлтав нумай кирлĕ мар — тепĕр хут çывхарасси хĕнтерех. *(Тукт.)*

Ку каллех сыпăнуллă хутлă предложени, икĕ калуллă хутсăр предложенирен тăрать, пĕр-пĕринпе союзсăр çыхăннă, пĕрремĕш предложени шухăшне иккĕмĕшĕ вирлĕн хирĕçлет, çавăнпа та вĕсен хушшине тире лартнă.

4. Мĕн çитмест, ăна Левентей хăй те ăнлантарайман пулĕччĕ. *(Турх.)*

Пăхăнуллă хутлă предложени, тĕп предложени — ăна Левентей хăй те ăнлантарайман пулĕччĕ, пăхăнакан предложени — мĕн çитмест, вăл тĕп предложенири ăна сăмаха ăнлантарса парать, уншăн дополнени пулать, пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе **мĕн** союзла сăмахпа çыхăннă.

5. Дим Димович пирĕн нихçан та ытлашши калаçмасть, анчах екки (кăмăлĕ — С. Ю.) килнĕ чух мĕн те пулин каласа парать пулсан, яланах ăса вĕрентмелли халап калать. *(Тукт.)*

Пăхăнуллă предложени.

Тĕп предложени — яланах ăса вĕрентмелли халап калать. Мĕнле майпа? Е мĕнле условипе?

Дим Димович нихçан та ытлашши калаçмасть, анчах екки килнĕ чух мĕн те пулин каласа парать пулсан — условие кăтартакан пăхăнуллă предложени, тĕп предложенипе **пулсан** союзла сăмахпа пăхăнса çыхăннă.

Хăçан каласа парать? — екки килнĕ чух — вăхăта пĕлтерекен предложенилле обстоятельство пăхăнуллă предложенин сказуемăйне ăнлантарса парать. Çак пăхăнуллă предложенире сыпăнуллă предложение куратпăр,

вăл — Дим Димович пирĕн нихçан та ытлашши калаçмасть, ăна хирĕçлесе тăрать — анчах екки килнĕ чух мĕн те пулин каласа парать пулсан, яланах ăса вĕрентмелли халап калать, вĕсем пĕр-пĕринпе **анчах** хирĕçле союзпа çыхăннă.

Синтаксисла разбор тунă чух çакна асăрхаттармалла.

1. Темиçе сăмахран тăракан пайăр ятсене (Хĕрлĕ гварди, Авалхи Русь, «Хĕрлĕ çăлтăр» т. ыт. те), терминсене (япала ячĕ, паллă ячĕ, ăнлантару диктанчĕ, пĕр йышши членсем т. ыт. те), тĕрлĕрен ятсене (чĕкеç курăкĕ, хура çырла, нимĕç пăрçи, хĕрлĕ пăрăç, çĕлен пулă, чугун çул, çĕр кăмрăкĕ, хут купăс), сăмах пĕтĕçĕвĕсене, идиомăсемпе фразеологисене (хăнк та мар, сăмах чăпти, путь ухмаххи, йĕпе çине сапа, чун уççи, тĕшмĕш чăпти, ураса тытас, ал çемми, сехре хăппи т. ыт.) предложенин пĕр членĕ тесе шутламалла.

*Совет çарĕ тăван çĕршыва тимлĕн сыхлать.*

Кунта **Совет çарĕ** — подлежащи, вăл икĕ япала ятĕнчен пулнă.

Фразеологипе идиомăсем сказуемăйпа пĕрле тăнă чух сказуемăй составне кĕреççĕ.

*Эпĕ каланипе вăл хăнк та тумарĕ. Совет влаçне пула чăваш çынни те ура çине тăчĕ.*

2. Пĕтĕмĕшле разбор тунă чухне предложенилле членсене пĕр член шутне кĕртсе разборлаççĕ, тĕплĕн разбор тунă чухне кашни сăмахнех разборламалла.

*Кĕнеке нумай вулани вĕренекенĕн тавракурăмне ÿстерет.*

3. Вводнăй сăмахсене (кунта вводнăй предложенисем кĕмеççĕ), обращенисене, междометисене (предложенипе çыхăнманнисене) разбор тумаççĕ.

**Иккен, пулас** вводнăй сăмахсене сказуемăйпа пĕрле илсе разборламалла.

Усал сăмахсем пистолетран та хăрушă иккен! *(Гриб.)*

Синтаксис разборĕ валли тĕслĕхсем.

1. Тухăçри çÿçеллĕ пĕлĕтсем хĕрелме тытăнчĕç. *(Кипек.)* 2. Çанталăк сивĕтнĕçемĕн сивĕтсе пычĕ. 3. Кăнтăр енчи хурăнлăхра тураттсем шатăртатрĕç. 4. Мал енчи тÿпе сисĕнмеллех кăвакарчĕ, çăлтăрсем сÿнме тытăнчĕç, лăпкă вăрман тăрăх, такам ассăн сывланă пек хашлатса, касă çил вĕрсе иртрĕ. *(Кипек.)* 5. Тĕссĕрленнĕ тÿпе тăрăх упа кĕтĕвĕ евĕрлĕ хура пĕлĕтсем кунĕн-çĕрĕн чупаççĕ. Çурçĕр енчен вĕрекен сив çил çаралса юлнă уй-хирсемпе вăрмансем çине пĕрре çумăр чашлаттарать, тепре кĕрпеллĕ юр тăкать. *(Кипек.)* 6. Вăл Совет çамрăкĕсем пурнăçа, тăван çĕршыва, тăван халăха çав тери юратни çинчен, çав юрату вĕсене никам çĕнми вăй кÿни çинчен каласа пачĕ.

*(Тукт.)* 7. Эпĕ писатель пулас пулсан, ку калава, Степан, сана халалласа çырнă пулăттăм, мĕншĕн тесен эс, кирек хаш енчен илсен те, хамăр çын, аслă халăх хушшинче çуралса ӳснĕ теветкел каччă. *(Тукт.)*

## СĂМАХ-ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ [1].

Сăмах-предложенисем çинчен учебникра çырман. Анчах ачасене вĕрентнĕ чухне ун пек предложенисем тĕл пулаççĕ. Çавăнпа та вĕренекенсем интересленнĕ чухне предложенисем çинчен кĕскен те пулин ăнлантарма тивет.

Тĕслĕхсем илсе пăхар.

1. Ачасем кăшт çырнă хыççăнах кăшкăрса ячĕç:
— Ку — пурă, эпир шкулта çыракан пурă!
— **Тĕрĕс,**— терĕ учитель. (Турх.)
2. — Эсĕ йĕкĕр мăйăр тупрăн-и?— терĕ Ярмуш.
— **Çук.**
3. Çавăн чухлĕ ӳсентăран пур-ши вара пирĕн таврара?
— **Пур çав.** (Турх.)

**Тĕрĕс, çук, пур çав** сăмахсене синтаксисра мĕнле сăмахсем темелле-ши?

Вĕсем сăмах-предложенисем [1]. Сăмах-предложенисем пĕр сăмахран та, пайланман çыхăнура тăракан сăмах майлашăвĕнчен те, уйрăм кăмăл-туйăмпа чĕнсе каланă сăмахсенчен те пулаççĕ.

Сăмах-предложенисем хăйсем нимĕн çинчен те уççăн каласа памаççĕ, вĕсем ытларах малтанхи предложенири шухăшпа çыхăнаççĕ.

Ачасем класа шурă чул илсе кĕреççĕ те çырса пăхаççĕ: çырасса вăл шкулти чул пекех çырать иккен! Учитель ачасен шухăшĕпе килĕшнине пĕр сăмахпах çирĕплетсе парать: тĕрĕс, тет.

Çак **тĕрĕс** сăмах-предложени пулать.

Предложени тĕсĕ енчен илсен, ăна ят предложени те, сăпатсăр предложени те, тулли мар предложени теме те май çук. Çавăн пекех сăмах-предложенире нимĕнле член та (тĕп членсем те, кĕçĕн членсем те) пулмасть. Ун пек предложенисем çирĕплетсе каланине, килĕшнине кăтартаççĕ.

Тĕслĕх илнĕ иккĕмĕшпе виççĕмĕш предложенисенче

---

[1] Çĕçе çырнă чух Е. М. Галкина-Федорук профессор редакцилесе кăларнă «Хальхи вырăс чĕлхин синтаксисĕ» материалĕпе усă курнă. Мускав, 1957 çул, 313—320 стр.

те **çук, пур çав** сăмах-предложенисем хăйсен умĕнхи предложени шухăшĕ çине пĕрер сăмахпа ответленипе пулнă.

Сăмах-предложенисем диалогпа монологра йышлăрах тĕл пулаççĕ.

Пĕлтерĕшне кура, сăмах-предложенисене виçĕ ушкăна пайлама пулать: ç и р ĕ п л е т с е п а р а к а н н и с е м п е х и р ĕ ç л е к е н н и с е м, ы й т у л л и с е м, х и с е п л е с е к а л а к а н с ă м а х с е м.

1. а) Ы й т н и ç и н е о т в е т л е с е к а л а н ă ч у х н е çакăн йышши çирĕплетсе паракан сăмах-предложенисемпе усă кураççĕ: çапла, çапла эппин, чăн, чăнах, паллах, тĕрĕс, вăт, тупата. Ку сăмахсем хăйсен тӳрĕ лексика пĕлтерĕшне çухатса пырса, калаçупа грамматика йĕркине пăхăнса, урăхларах пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ.

Эпĕ мулкачне те куратăп, авă çывăхрах!— терĕ Ярмуш.
— **Чăнах та,** юлантан инçе те мар, юр çинче мулкач мĕкĕлтетет (Турх.)
— Çапла мар-и, халăх? — каллех çынсем еннелле çаврăнса кăшкăрчĕ Михха.
— **Çапла. Тĕрĕс.** (Мранькка.)
...Мĕн каламаллине малтанах шутласа хумасан, сăмах иккĕлле те тухĕ. Тӳре-шарасем çавна çеç кĕтеççĕ.
— Паллах ĕнтĕ, пĕр чĕлхеллĕ пулнине ним те çитес çук. (Мранькка.)

ă) Ку ушкăнах к а л а н и п е к и л ĕ ш н и н е к ă т а р т а к а н сăмах-предложенисем кĕреççĕ, вĕсем çак сăмахсемпе пулаççĕ: *юрĕ, юрать, аха, ăхă, ара, ия.*

Сăмах патăн пулсан, тумаллах ĕнтĕ.
— **Юрать.**
— Таврари çулпа кайрăмăр теес-и?
— **Ия.** «Пакăш ращи» патĕнчен иртсе кайма хăрарăм та таврари çулпа кайрăмăр, тейĕпĕр. (Мранькка.)
— Çулса парах,— терĕ ăна бригадир...
— **Юрать! Латнă! Латнă!** — мăкăртатрĕ Ильдеров. (Арт.)

б) Х и р ĕ ç л е к е н с ă м а х-п р е д л о ж е н и с е м малтанхи предложени шухăшĕпе килĕшменнине, ăна хирĕçленине кăтартаççĕ, вĕсем **çук, ни-ни, мар** сăмахсем тепĕр предложени умĕн тăнă чух пулаççĕ.

— Пире хаçат умстатьи кирлĕ, акă мĕн çырмалла санăн.
— **Çук,** умстатья çыраси вăл — сирĕн ĕç, эпĕ мĕн те пулин урăххи тупатăп. (Турх.)
«Вон мĕнле?!» — тесе тутар Ухтиван çумне куçса ларать.
— Кантуртийĕсем вырăссем пуль ĕнтĕ, паллах.
— Мар, чăвашсемех. (Уяр.).

**«Ни-ни,** кум!» — хăвăрттăн хирĕç тавăрса хучĕ Макçăм. (Мранькка.)

2. Ыйтуллă сăмах предложенисем çирсплетсе панине, килĕшнине, хирĕçленине кăтартакан сăмахсенех ыйту интонаципе каланă чух пулаççĕ.

Сан хĕрӳ мар-ши? Кайса пăх, рота командирĕнчен ыйт та...
— **Чăнах-и?**— хавхаланса ӳкрĕ Илья Кузьмич. (Сат.).
«Лайăх ĕçлесен, пĕремĕкрен те тутлăраххине тупса паратпăр. **Çапла-и,** Родион тете?» (Тукт.).

3. Хисеп туса каламаллисен шутне сывлăх сунса, ырласа, хисеплесе, сывпуллашса, тав туса калакан сăмах-предложенисем кĕреççĕ. Вĕсем те, хăйсен малтанхи лексика пĕлтерĕшне çухатса, грамматикăпа калаçури пулăшу пĕлтерĕшне (модаллĕхе) ытларах йышăннă. Вĕсем çакăн пек сăмахсенчен пулаççĕ: *аван-и, сывах-и, тав, тавах, тавтапуç, тавсъе, спаççипă, тархасшăн, сывпул, каçарăр, каçар, салам.*

**Салам, аван-и, сывах-и, сывă пул** сăмахсем ытти сăмахсемпе çыхăнса тăнă чух хăйсен тĕп лексика пĕлтерĕшĕпех юлаççĕ те сăмах-предложенисем пулмаççĕ. Хайсене тĕллĕн уйрăм тăнă чух кăна сăмах-предложенисем пулаççĕ.

— **Аван-и,** Çтаппан пичче? Сывлăхсем мĕнле? (Мранькка).
— **Каçарăр.** Эпир Ирина Петровна кунта пурăнмасть-ши тесе килтĕмĕр?— терĕ Гаврилов.
— **Тархасшăн.** Кунта-ха вал,— терĕ хуçа...
— Полковник юлташ, мана сире илме ячĕç,— терĕ комбинезон тăхăннă салтак...
— **Тавтапуç.** Апла пулсан кайăпăр.
«Ну, ну, **салам!»**— терĕ Шахов, полк командирне алă парса. (Сат.).
— Сывлăх сунатăп колхоз пикисене телей шырама!
— **Спаççипă,** Ваççук тете. Кил пире пулăшма. (Тукт.)

## МЕЖДОМЕТИ-ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Междомети-предложенисем междометисенчен (чĕвĕсенчен) тата еверлев сăмахĕсенчен пулаççĕ. Междомети предложенисем ытти предложени умĕн тăраççĕ. Ку предложенисем мĕн те пулин тума хистеççĕ, хавхалантараççĕ, хĕтĕртеççĕ, асăрхаттараççĕ, чĕнсе йыхăраççĕ, чараççĕ. Вĕсем çак сăмахсенчен пулаççĕ: *атя, айта, атьăр, айтăр, ну, ме, на, чим-ха, чим; тпру, мейĕр, чимĕр* т. ыт. те.

— **Атя,** хăвала, атте, лашуна (Уяр).
— **Ну,** чипер кай эппин, ачам,— тет старик. (Уяр.).

**Ме,** кěртсе хур çаксене. **Чим,** атти юрать мана, тăхăнса пăхам. (Илп.)

Междомети-предложенисем калаканăн тěрлě кăмăл-туйăмне кăтартса параççě: шикленнине (ой, ах, ай), хăранине (уй, ух, ай-уй, айтур, ахçырлах), хăрушшине (кăравул!, хурах!), тěлěннине (ак тамаша, ай-ай, ну, хă, ха), сивленине (ах-ти, тьфу, иш), тарăхнине (ну, вон!, марш!, фути!, ых, мур çиесшě!), асăрхаттарнине (ай, эй!, но, тсс!), хěрхеннине (эккей, эх), савăннине (эх, урра! эй, их) т. ыт. те.

**Эй!**— илтěнет Ивук сасси. — Эсир мěн халăха чарса тăратăр. (Уяр.)

**Тьфу!** Чăнах. Тупнă лěпěртетсе çӳремелли. (Уяр.)

Ак тамаша! Ăçтан пырса лекнě ман портрет хаçата?—кăшкăрса ячě Ахмет. (Тукт.)

**«Кăравул!..** Çтаппан кума вěлереççě. **Кăравул!..** — тесе, вăл сасси тухнă таран çухăрса ячě. (Мранькка).

**«Ах, мур çиесшě!»** — кăшкăрса ячě Марфа аппа. (Семенов).

**Ха!** Ялта урăх Нямаç та пур-и? (Илп.)

**Эккей, ара,** кум, ма унашкал ятлаçатăн?— Уçка хутне кěрсе сăмах хушрě Çтаппан. (Мранькка.)

— **Уй!** Хăратăп эпě çěрте çывăрма. (Х. Ç.)

— **Марш!.. Марш-ш** — тесе ачасене сылтăм аллипе сула-сула, хăмсара-хăмсара, алăкран кăларса ячě. (Х. Ç.)

Евěрлев сăмахěсенчен те çав майпах междомети-предложенисем пулаççě.

— **Чăнкăл-чăнкăл! Чăн-чăн-н!** чăнкăлтатса та ташласа пыраççě шăнкăравсем. (Х. Ç.)

**Ух-Ух-Ух!** — ӳке-ӳке çурăлчěç бомбăсем. (Сат.)

**Лап-лап-лап!** — ура сасси илтěнчě (Долгов.)

Сивě çил пěрмаях улать:
**У-у-у!**
Кашла вăрман!
— **Каш-каш!.. Каш-каш!..** (Х. Ç.)
— **Чип-чип! Чип-чип!** — йыхăрать Тарук чаххисене.
**Пěç! Пěç! Пěç!** Кил часрах, апат çитеретěп. (Уяр.)

## ВОКАТИВЛА ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ.

Вокативлă предложенисем калаканăн кăмăл-туйăмне — тарăхнине, юнанине питě вăйлăн палăртаççě. Пулăвě енчен илсен, ун пек предложени вăл — обращени евěрлě ят-сăмах. Анчах ăна, ахаль обращени чухнехи пек чěнсе çеç мар, ытти кăткăс туйăмпа, витерӳллěн калаççě, ун хыççăн яланпа пěрех кăшкăрупа ыйту палли лартаççě.

Ун пек предложенисенче синтаксис структури пур, весем ят падеж форминче, ят сӑмахсенчен тӑраҫҫӗ. Тытӑмӗ енепе вӗсем ят предложенисене ҫывӑх, анчах содержани тӗлӗшпе нумай уйрӑм. Ят предложени мӗнле те пулин шухӑш чӑнлӑхне, реальноҫне ҫирӗплетсе парать пулсан, вокативлӑ предложенисем, пуринчен малтан, кӑмӑл-туйӑма ҫеҫ палӑртаҫҫӗ. Ят предложенисен подлежащи составӗ пур, вокативлӑ предложенире вара нимӗнле член та ҫук.

Ахтупай. Чим! **Пинерпи?!** Кампа тухса ларнӑ эсӗ? Аҫу сӑмахӗнчен иртес терӗн-и? Ых, йыт ҫиесшӗ пуҫна! Час кӗрсе выртнӑ пултӑр! (Осипов.)

Кунта Ахтупай хӑйӗн хӗрне — Пинерпие чӗнсе ҫеҫ мар, ытларах ӑна вирлӗн тарӑхса, вӑрҫса каланине кӑтартнӑ.

Ҫтаппан. **Муҫҫа!** Тепре шӑл шуррине уҫатӑн пулсан, халех кӑларса перетӗп. (Павлов.)

Кунта **Муҫҫа** вокативлӑ предложени пулать. Ана вирлӗн тарӑхса, асӑрхаттарса каланӑ.

# ПРОГРАММĂРИ ТЕМĂСЕНЕ СЕХЕТСЕМ ÇИНЕ ПАЙЛАНИ.

VI класс

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИН СИНТАКСИСĔ.

**Хутсăр предложени çинчен пĕтĕмĕшле пĕлтересси*** (4 сех.)

1. Калуллă, ыйтуллă тата кăшкăруллă предложенисем. Предложени вĕçне чăрăну паллисем лартасси (аса илни) . . . 1 сех.
2. Логикăлла ударени çинчен ăнлантарасси . . . . . 1 сех.
3. Ансăр тата анлă предложенисем. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕсем (согласовани, управлени, примыкани) . . 2 сех.

**Икĕ тĕп членлă хутсăр (сăпатлă) предложенисем.**

**Подлежащи тата сказуемăй (8 сехет).**

1. Подлежащи, вăл мĕнле сăмахсенчен пулни . . . . 2 сех.
2. Хутсăр глагол сказуемăй. . . . . . . . . . 1 сех.
3. Хутлă ят сказуемăй. Ăнлантару диктанчĕ. . . . . 2 сех.
4. Подлежащипе сказуемăй хушшине тире лартасси. . . 1 сех.
5. Çыру ĕçĕсем. . . . . . . . . . . . 2 сех.

**Предложенин кĕçĕн членĕсем.**

1. Дополнени . . . . . . . . . . . 1 сех.
2. Определени . . . . . . . . . . 1 сех
3. Причастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ . . . . . . . 1 сех.
   -скер аффикс йышăннă причастиллĕ сăмах çаврăнăшĕсене запятойсемпе уйăрма пĕлесси . . . . . . . 1 сех.
4. Творчество диктанчĕ . . . . . . . . . . 1 сех.
5. Приложени. Пĕр сăмахран пулнă приложенисене хăшпĕр чухне дефиспа (кĕске йĕрпе) çыхăнтарасси. . . . . 1 сех.
6. Вырăн, вăхăт, мĕнлелĕх, пирке, тĕллев обстоятельствисем 3 сех.
7. Деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕ. Деепричастиллĕ сăмах çавранăшĕнчен пулнă обстоятельствăсене хăшпĕр чухне запятойпа уйăрасси . . . . . . . . . . 1 сех.
8. Асăрхаттару тата тĕрĕслев диктанчĕсем . . . . . 2 сех.

**Пĕр тĕп членлă хутсăр предложени** (6 сех.)

1. Паллă мар сăпатлă предложени . . . . . . . . 1 сех.
2. Сăпатсăр предложени . . . . . . . . . 2 сех.
3. Ят предложени . . . . . . . . . 1 сех.
4. Изложени . . . . . . . . . . . 2 сех.

---

* Çĕнĕ программăра кăтартнă практикăллă ĕçсем те çак сехетсем шутнех кĕреççĕ.

### Тулли мар предложенисем (2 сех.)

1. Тулли тата тулли мар предложенисем çинчен ăнлантарасси 1 сех.
2. Икĕ тĕп членлă тата пĕр тĕп членлă тулли мар предложенисем . . . . . . . . . . 1 сех.

### Пĕр йышши членлă предложенисем (8 сехет).

1. Пĕр йышши членсем çинчен ăнлантарасси . . . . 1 сех.
2. Пĕр йышши членсене çыхăнтаракан союзсем . . . 1 сех.
3. Пĕр йышши членсем хушшине запятойсем лартасси . . 1 сех.
4. Ăнлантару е асăрхаттару диктанчĕ . . . . . 1 сех.
5. Пĕр йышши членсене пĕтĕмлетекен сăмахсем. . . . 1 сех.
6. Пĕр йышши членсемлĕ предложенисенче двоеточи тата тире лартасси . . . . . . . . . 1 сех.
7. Çыру ĕçĕсем . . . . . . . . . 2 сех.

### Сыпăнуллă хутлă предложенисем (4 сех.).

1. Сыпăнуллă хутлă предложенисем çинчен ăнлантарасси 1 сех.
2. Сыпăнтаракан, уйăракан тата хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем . . . . . . . . 2 сех.
3. Çыру ĕçĕ . . . . . . . . . . 1 сех.

## VII класс

### Пăхăнуллă хутлă предложенисемпе предложенилле членлă предложенисем (16 сех.)

1. Пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен ăнлантарасси. Тĕп тата пăхăнакан предложенисем . . . . 1 сех.
2. Предложенилле членсем çинчен ăнлантарасси. Предложенилле членсем тĕп предложенисемпе грамматикăлла формăпа çыхăнса тăни. . . . . . . . . 1 сех
3. Пăхăнакан предложени тĕп предложенипе союзсемпе тата союзлă сăмахсемпе çыхăнса тăни. Каласу тата çыру ĕçĕ туса ирттересси. . . . . . . . . . . 1 сех.
4. Определени пулакан пăхăнакан предложенисемпе предложенилле членсем. . . . . . . . . . 1 сех.
5. Дополнени пулакан пахăнакан предложенисемпе предложенилле членсем. . . . . . . . . . 1 сех.
6 Каласу туса ирттересси тата творчество диктанчĕ . 1 сех.
7. Вăхăта тата вырăна пĕлтерекен пăхăнакан предложенисемпе предложенилле членсем. . . . . . . . 1 сех.
8. Мĕнлелĕхе пĕлтерекен пăхăнуллă предложенипе предложенилле членсем . . . . . . . . . . 1 сех.
Асăрхаттару диктанчĕ . . . . . . . . . . 1 сех.
9. Условие, пиркене пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисемпе предложенилле членсем. . . . . . . 2 сех.
10. Тĕллеве тата хирĕçлеве пĕлтерекен пăхăнуллă предложенисемпе предложенилле членсем. . . . . . 2 сех.
11. Обстоятельство пулакан пăхăнуллă хутлă предложенисемпе, предложенилле членсемпе каласура тата çырура усă курасси. . . . . . . . . . 1 сех.

12. Пăхăнуллă хутлă предложенисенче тата предложенилле членлă предложенисенче чарăну палли лартасси . . 1 сех.
13. Ăнлантару тата тĕрĕслев çыру ĕçĕ . . . . . . 2 сех.

**Союзсăр хутлă предложенисем** (4 сех.)

1. Союзсăр хутлă предложенисен составне кĕрекен хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе шухăш енчен çыхăнса тăни 1 сех
2. Союзсăр хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси. Хăнăхтару çыру ĕçĕсем . . . . . . . . 2 сех.
3. Тĕрĕслев çыру ĕçĕ . . . . . . . . . . 1 сех.

## VIII класс (35 сехет)

**VII класра вĕреннине аса илесси** (3 сехет)

**Предложенири уйрăмтăран кĕçĕн членсем** (8 сехет)

1. Уйрăмтăран членсем çинчен ăнлантарасси. Паллă ятĕнчен тата причастирен пулнă уйрăмтăран определенисем : . . . . . . . . . . 1 сех.
2. Уйрăмтăран приложени . . . . . . . . . 1 сех.
3. Ăнлантару диктанчĕ . . . . . . . . . 1 сех
4. Деепричастирен пулнă уйрăмтăран обстоятельствăсем . 1 сех.
5. Тĕрĕслетсе паракан обстоятельствăсем . . . . . . 1 сех.
6. Творчество çыру ĕçĕ . . . . . . . . . . 1 сех.
7. Уйрăмтăран дополнени. Уйрăмтăран кĕçĕн членсене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . . . . . . 1 сех.
8. Тĕрĕслев диктанчĕ . . . . . . . . . 1 сех.

**Обращенисем, вводнăй сăмахсем тата *пур, çук* сăмахсенчен пулнă предложенисем** (6 сехет).

1. Обращени. Обращенисене чарăну паллисемпе уйăрасси . 1 сех.
2. Асăрхаттару диктанчĕ . . . . . . . . . 1 сех.
3. Вводнăй сăмахсемпе вводнăй предложенисем . . . 1 сех.
4. Вводнăй самахсемпе вводнăй предложенисене чарăну, паллисемпе уйăрасси . . . . . . . . . 1 сех.
   Ăнлантару диктанчĕ . . . . . . . . . 1 сех.
5. *Пур* тата *çук* сăмахсенчен пулнă предложенисем. Ун пек предложенисене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . 1 сех.
6. Тĕрĕслев çыру ĕçĕ . . . . . . . . . . 1 сех.

**Урăх çын сăмахлă предложенисем** (5 сехет)

1 Урăх çын сăмахлă предложенисем çинчен ăнлантарасси 1 сех.
2. Диалог . . . . . . . . . . . . . . 1 сех.
3. Урăх çын сăмахлă предложенире тата диалогра чарăну паллисем лартасси . . . . . . . . . . 1 сех.
4. Асăрхаттару диктанчĕ . . . . . . . . 1 сех.
5. Тĕрĕслев диктанчĕ . . . . . . . . . . 1 сех.

## КĔНЕКЕНЕ ÇЫРНĂ ЧУХ УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА


1. Ашмарин Н. И. Опыт исследования чувашского синтаксиса, ч. I. Казань, 1903.
2. Ашмарин Н. И. Опыт исследования чувашского синтаксиса, ч. II. Симбирск, 1923 г.
3. Андреев И. А. Два типа безличных предложений в чувашском языке. Ученые записки, выпуск XVIII, Чувашгосиздат, 1958 г.
4. Андреев И. А. Еще раз о сложноподчиненных предложениях в чувашском языке, там же.
5. Андреев Н. А Чăваш чĕлхин стилистики, Чувашгиз, Чебоксары, 1958 г.
6. Былинский К. И., Никольский Н. Н. Справочник по орфографии и пунктуации для работников печати, Москва, 1957 г.
7. Былинский К. И. Практикум по современному литературному языку, ч. II, из-во МГУ, 1960 г.
8. Виноградов В. В. Из истории изучения русского синтаксиса, Москва, 1958 г.
9. Галкина-Федорук Е. М. Безличные предложения в современном русском языке, Москва, 1958 г.
10. Гвоздев А. Н. Современный русский литературный язык Часть II. Синтаксис, Москва, 1958 г.
11. Горский С. П. Грамматика чувашского языка. Синтаксис. Ч. II, Чувашгосиздат, 1959 и 1960 гг.
12. Горский С. П. Очерки по истории чувашского литературного языка, Чувашгосиздат, 1959 г.
13. Грамматика русского языка, т. II и III. Синтаксис под редакцией акад. Виноградова В. В. и др. Москва, 1954 г.
14. Дмитриев Н. К. Грамматика башкирского языка. Москва, 1948 год.
15. Дудников А. В. Пунктуация сложного предложения. Учпедгиз, 1958 г.
16. Егоров В. Г. Современный чувашский литературный язык. Ч. I, Чебоксары, 1954 г.
17. Ломизов А. Ф. Методика пунктуации в связи с изучением синтаксиса. Учпедгиз, 1959 г.
18. Ломтев Т. П. Очерки современного литературного языка, изд. МГУ, 1956 г.

19. Материалы по грамматике чувашского языка, часть I. Морфология. Чебоксары, 1957 г.
20. Методические разработки по русскому языку для V—VII классов. Под редакцией проф. Бархударова С. Г. Москва, 1956 г.
21. Пешковский А. М. Русский синтаксис в научном освещении. Учпедгиз, 1956 г.
22. Петров П. П. Диктант сборникӗ. II пайӗ. Синтаксис., Чӑвашгосиздат, 1959 ç.
23. Поздняков Н. С. Методика преподавания русского языка, изд. 3-ое. Учпедгиз, 1955 г.
24. Резюков Н. А. Сопоставительная грамматика русского и чувашского языков. Чувашгосиздат, 1959 г.
25. Современный русский язык. Синтаксис. Изд. МГУ, 1957 г. под редакцией проф. Галкиной-Федорук Е. М.
26. Текучев А. В. Методика преподавания русского языка в средней школе. Учпедгиз, 1958 г.
27. Ушаков М. В. О видах диктанта в семилетней и средней школах, Учпедгиз, 1954 г.
28. Чистяков В. М. Основы методики русского языка в нерусских школах, Учпедгиз, 1958 г.

## ТУПМАЛЛИ


Стр.

Умсăмах . . . . . . . . . . . . . . 4

**Хутсăр предложенин снитаксисĕ.**

1. Предложени çинчен пĕтĕмĕшле ăнлантарасси . . . 7
2. Логика ударенийĕ . . . . . . . . . . . 10
3. Ансăр тата анлă предложенисем . . . . . . 15
4. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ . . . . . . 17
5. Қалуллă, ыйтуллă, кăшкăруллă предложенисемпе практикăлла ĕç туса ирттересси . . . . . . . . 22

**Икĕ тĕп членлă хутсăр (сăпатлă) предложенисем.**

1. Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем . . . . 26
2. Хутсăр предложенин составĕпе унăн тĕсĕсем . . . . 28
3. Подлежащи мĕнле сăмахсенчен пулни . . . . —
4. Хутсăр сказуемăй . . . . . . . . . . 30
5. Хутлă ят сказуемăй . . . . . . . . . 31
6. Хутлă ят сказуемăйлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . . . . . . . . . . . . 33
7. Хутлă глагол сказуемăй . . . . . . . 35
8. Предложенин кĕçĕн членĕсем . . . . . . 39
   Дополнени . . . . . . . . . . . . 41
   Определени . . . . . . . . . . . 45
9. Причастиллĕ çăмах çаврăнăшĕсем . . . . . 48
10. Приложени . . . . . . . . . . . . 50
11. Обстоятельствăсем . . . . . . . . . 52
    Вырăн обстоятельстви . . . . . . . . 53
    Вăхăт обстоятельстви . . . . . . . . 55
    Пирке обстоятельстви . . . . . . . . 56
    Тĕллев обстоятельстви . . . . . . . . 57
    Мĕнлелĕх обстоятельстви . . . . . . . 59
12. Деепричастиллĕ сăмах çаврăнăшĕсем . . . . . 61
13. Инфинитивлă сăмах çаврăнăшĕ . . . . . . 66

**Хутсăр предложенин тĕсĕсем** . . . . . . 68

1. Сăпатсăр предложени . . . . . . . . . 69
2. Паллă мар сăпатлă тата пĕтĕмлетӳ сăпатлă предложенисем 72
3. Ят предложенисем . . . . . . . . . . 74
4. Тулли мар предложенисем . . . . . . . 77

**Пĕр йышши членлă предложенисем** . . . . . 79

1. Пĕр йышши членсене çыхăнтарса тăракан союзсем . 85
2. Пĕр йышши членлă предложенисенче запятой лартасси . 88
3. Пĕр йышши тата пĕр йышши мар определенисем . . . 90
4. Пĕр йышши членлă предложенисенчи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ . 98

**Хутлă предложенисен синтаксисě.**
Хутлă предложенисем . . . . . . . . . . 100

**Сыпăнуллă хутлă предложенисем.**
1. Сыпăнуллă хутлă предложенисем çинчен пěтěмěшле калани 102
2. Сыпăнуллă хутлă предложенисенчи союзсем . . . . 107
3. Сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . . . . . . . . . . . . 110

**Пăхăнуллă хутлă предложенисем**
1. Пăхăнуллă хутлă предложенисем çинчен пěтěмěшле ăнлантарни . . . . . . . . . . . . . . 115
Пăхăнуллă предложенисен тěсěсем . . . . . . . 125
2. Подлежащи пулакан пăхăнуллă предложени . . . 129
3. Дополнени пулакан пăхăнуллă предложени . . . 131
4. Определени пулакан пăхăнуллă предложени . . 138
5. Обстоятельство пулакан пăхăнуллă предложенисем . . 137
Вырăна пěлтерекен пăхăнуллă предложени . . . . 139
Вăхăта пěлтерекен пăхăнуллă предложени . . . . 140
Мěнлелěхе пěлтерекен пăхăнуллă предложени . . . 143
Тěллеве пěлтерекен пăхăнуллă предложени . . . . 145
Условие пěлтерекен пăхăнуллă предложени . . . . 148
Тěллевпе условие пěлтерекен пăхăнуллă предложени . . 152
Хирěçлеве пěлтерекен пăхăнуллă предложени . . . 154
Пиркене пěлтерекен пăхăнуллă предложени . . . . 158
Ěç хыççăн мěн пулнине пěлтерекен пăхăнуллă предложени 161
Темиçе пăхăнуллă хутлă предложенисен пулăвě . 166

**Предложенилле членлă предложенисем.** . 174
1. Предложенилле определени . . . . . . . . 176
2. Предложенилле дополнени . . . . . . . 179
3. Предложенилле обстоятельствăсем . . . . . . 181
Вăхăта пěлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . 183
Тěллеве пěлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . 185
Пиркене пěлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . 186
Мěнлелěхе пěлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . 188
Условие пěлтерекен предложенилле обстоятельствăсем . 189
1. Темиçе предложенилле членлă предложенисем . . . . 191
2. Темиçе предложенилле членлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси . . . . . . . . . . 194

**Союзсăр хутлă предложенисем.** . . . . . . . 196
1. Союзсăр хутлă предложенире двоеточи лартасси . 199
2. Союзсăр хутлă предложенире тире лартасси . 201

**Предложенири çыхăнусăр сăмахсем.** 203
1. Обращени . . . . . . . . . . . . 204
2. Обращениллě предложенисенче чарăну палли лартасси . 209
3. Вводнăй сăмахсемпе вводнăй предложенисем . . . . 212
4. Вводнăй сăмахсемпе вводнăй предложенисене чарăну паллисемпе уйăрасси . . . . . . . . . . 221
5. Междометисемпе евěрлев сăмахěсен предложенири вырăнě 224

**Уйрăмтăран кěçěн членсем** 229
1. Уйрăмтăран определенисемпе приложенисем . . 234

2. **-И, -скер** аффикссем йышăннă паллă ятĕнчен е причастирен пулнă приложени . . . . . . . . . . . . 238
3. Уйрăмтăран обстоятельствăсем . . . . . . . . . 242
4. **Пуçне** хыççăмахлă уйрăмтăран дополнени . . . 245

**Урăх çын сăмахлă предложенисем** . . . . . . . 248
Урăх çын сăмахлă предложенисенче чарăну палли лартасси 253
Урăх çын каланă сăмахсене улăштарса каланă сăмахсем туни . . . . . . . . . . . . . . . . 256
Цитатăсене çырса илме вĕрентесси . . . . . . . 260
**Хушса панă материалсем.**
Синтаксисла разбор тăвасси . . . . . . . . . 263
Сăмах-предложенисем . . . . . . . . . . 268
Междомети предложенисем . . . . . . . . 270
Вокативлă предложенисем . . . . . . . . . 272
Программăри темăсене сехетсем çине пайлани . . . 273
Кĕнекене çырнă чух усă курнă литература . . . . 276

---

**Сергей Павлович ЮШКОВ**

**МЕТОДИКА ОБУЧЕНИЯ ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ**

**Синтаксис**

**в VI—VIII классах**

Редактор **Н. Т. Васянка.** Технич. редактор **А. П. Петров.**
Худож. ред. **В. Ф. Солодовников.** Корректоры **Р. И. Белова, И. Р. Остроумов.**

НТ 01813. Сдано в набор 5/IX-1960 г. Подписано к печати 21/II-1961 г.
Формат 84×108/32. Объем 14,55 л. Уч.-изд. 17,75 л. Заказ № 1240.
Изд. № 199/60. Тираж 2000 экз. Цена 51 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
гор. **Чебоксары, Володарского, 5.**

## АСАРХАНА ЙАНАШСЕМ.

| *Стр.* | *йĕрке* | *ҫапăннă* | *вуламалла* |
|---|---|---|---|
| 9 | 16 аялтан | пырать. | ларать. |
| 11 | 1 ҫӳлтен | пултараҫҫĕ. | пултарать. |
| 14 | 11 ҫӳлтен | татăксенче | татăксенчен |
| 19 | 15 аялтан | ҫипчен | ҫинче |
| 37 | 19 аялтан | кĕреҫҫĕ. | кăтартаҫҫĕ. |
| 43 | 15 аялтан | япала | япалана пĕлтерекен сăмах |
| 56 | 15 ҫӳлтен | пуплев падежĕнче | **пуплев пайĕсенчен** |
| 92 | 5 аялтан | **илемĕ** | **илемлĕ** |
| 115 | 6 аялтан | ҫинчех — | ҫинчех шухăша |
| 122 | 16 аялтан | **фондсенче** | **фондсене** |
| 130 | 11 ҫӳлтен | предложенипе | подлежащипе |
| 132 | 7 аялтан | 6-мĕш | 7-мĕш |
| 135 | 10 ҫӳлтен | ӳсет | ҫирĕпленет |
| 257 | 12 ҫӳлтен | аффикслă | аффикс йышăннă |

---

**С. П. Юшков.** Чăваш чĕлхин синтаксисне вĕрентесси.

Цена 51 коп.